

Чăваш кĕнеке издательстви

ISBN 978-5-7670-2779-8

Галина МАТВЕЕВА

Мăшăр ҫунат

Галина МАТВЕЕВА

# МĂШĂР ҪУНАТ

**Галина МАТВЕЕВА**

# МĂШĂР ÇУНАТ

Повесть, калав



Шупашкар
Чăваш кӗнеке издательстви
2019

УДК 821.512.111-93
ББК 84(2=635.1)6-44
М 33

*Кĕнеке алçырăвĕ ачасемпе
çамрăксем валли чăвашла çырнă произведенисен
2018 çулхи конкурсĕнче çĕнтернĕ.
Конкурса Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ
2011 çулхи июнĕн 16-мĕшĕнче
йышăннă постановленипе килĕшӳллĕн йĕркеленĕ.*

**Матвеева Г.А.**
М 33 Мăшăр çунат: повесть, калав / Г.А. Матвеева. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2019. — 191 с.
ISBN 978-5-7670-2779-8

XX ĕмĕрĕн утмăлмĕш çулĕсенче наци шкулĕсене вырăс чĕлхи çине куçарма пуçлаççĕ. Халиччен тĕрлĕ предмета тăван чĕлхепех вĕреннĕ ачасене урăх кĕнекесем валеçсе параççĕ, хистесех вырăсла калаçтараççĕ. Чăвашла сăмахлакан халăх хушшинче пурăнас тесе Чĕмпĕр тăрăхĕнче çуралса ӳснĕ хĕр Шупашкара килет, пир-авăр комбинатне вырнаçать, каçхи шкула çӳрет. Чăвашла тухакан хаçат-журнал, кĕнекесем — ал айĕнче, чăваш театрĕсем — çывăхрах. Хавхаланса вĕренет, ĕçлет çамрăк хĕр, малашлăх çинчен ĕмĕтленет. Анчах хăрушă инкек унăн пурнăçне пач урăхла çавăрса ярать.

Йывăрлăхра шанчăка çухатмалла мар, алă усмалла мар — кĕнекере çак шухăш тĕпре тăрать.

**УДК 821.512.111-93**
**ББК 84(2=635.1)6-44**

© Матвеева Г.А., 2019
© Енькка Е.В., ӳкерчĕксем, 2019
© Чăваш кĕнеке издательстви, 2019

**ISBN 978-5-7670-2779-8**



# МĂШĂР ÇУНАТ

*Повесть*

## Пĕрремĕш сыпăк

Уçланкăра пиçекен çырла ĕмĕрĕ пек кĕске вăл, çамрăклăх. Çапах та хаклама пĕлместпĕр ăна. Пĕр шухăшсăр выляс-кулас, пурнăçăн чи илемлĕ тапхăрĕпе май килнĕ таран ытларах савăнса юлас чухне тем çитмест пире, тутлăн ĕмĕтленсе малалла пăхатпăр, ыран мĕн пуласса, умри кун-çул мĕнле çаврăнса тухасса, пурнăçа кампа пĕрле ирттерессе пĕлес килет. Малашлăхĕ вара чĕвен тăрса пăхсан та курăнмасть. Шăпамăрсем Турă аллинче.

— Паян Кивĕ Çĕнĕ çул каçĕ. Атьăр юмăç ярар, — сĕнчĕ хĕрсенчен аслăраххи, Галя. Вăл ку хваттере пуринчен маларах килсе вырнаçнă, Шупашкара та, пир-авăр комбинатне те хăнăхма ĕлкĕрнĕ, тĕрлĕ районти ялсенчен пуçтарăннă хĕрачасемшĕн, республика тулашĕнчи чăваш ялĕнчен килнĕ Нинăшăн та — аппăшĕ вырăнĕнче.

— Юмăçне мĕнле ярăпăр-ха тулĕк? Хула вăл — ял мар. Витене тухса сурăх ури тытаймастăн, автан е чăх йăтса кĕрейместĕн. Çăматă персе ярас... Ăна та пулин тăван кил хапхи урлă ывăтма хушаççĕ, кунта эпир килте мар, — калаçăва хутшăнчĕ Нина.

— Урăхларах меслетсем те пур вĕт. Эпĕ питĕ ансат мел пĕлетĕп: пирĕнтен кашни шурă хут листи илсе лӳчĕркет. Çав хутсене пысăк турилкке çине хурса пĕрерĕн-пĕрерĕн çунтаратпăр. Çулăм ĕмĕлки стена çине ӳксе мĕнле те пулин ӳкерчĕк кăтартать. Ну, мĕнле? Яратпăр-и юмăç?

— Ярас, ярас. Мĕнле те пулин вăхăта ирттермелле вĕт. Пурпĕр халех çывăрса каяймастпăр, — терĕ Чĕкеç. Ашшĕ-амăшĕ ăна çуралсанах икĕ ят хунă: килтисемшĕн вăл — Чĕкеç, хут çинчи ячĕ — Лидия. Хĕрсем те ăна хăйсем хушшинче Чĕкеç тесе чĕнеççĕ. Чăвашла ячĕ янăравлăрах, çепĕçрех пек туйăнать.

Хĕрсем чӳречене утиялпа хупларĕç. Мунчана çӳремелли тирĕке шыв ярса сĕтел çине лартрĕç. Сых ятне. Вут-кăвар — вылямалли япала мар. Тирĕк варрине пысăк турилкке вырнаçтарчĕç.

— Камран пуçлас? — шурă хут листи валеçнĕ май ыйтрĕ Галя. — Атя, Нина, хутна лӳчĕрке те çак турилкке çине хур. Сан кравать чи хĕрринчи — санран пуçлăпăр.

Хĕрсем сĕтел тавра шăкăрин пухăнса ларчĕç. Акă Нина чăмăртаса-лӳчĕркесе хунă хут татăкне çулăм ярса илчĕ. Юмăç яракансем темшĕн стена çинчи мĕлкене мар, турилкке çинче мĕн палăрнине сăнаççĕ. Çулăм аллине кĕрсе ӳкнĕ типĕ хут кĕçех асаплăн авкаланма пăрахрĕ те, хĕрсен куçĕ умне хуп-хура хĕрес курăнса кайрĕ, вил тăпри çинчи пек çĕкленерех тăрать тата хăй.

— А-ах-х! — терĕç хĕрсем пĕр харăсах. Хăй ячĕпе çунтарнă хут çине пăхса Нина пĕтĕм кĕлеткипе тăр-тăр чĕтренсе илчĕ. Тахăшĕ хыттăнрах сывларĕ-

ши, пĕр енчен çӳхе кăмрăк вĕçсе çĕкленчĕ те тирĕкри шыва анса ларчĕ. Уçăмлах мар пулин те вăл та хĕресе аса илтерет.

Хăраса ӳкнĕ хĕрсем тек никам ячĕпе те юмăç ямарĕç, тирĕкпе турилккене сĕтел çинчен шăкăр-шакăр пуçтарса хучĕç те вырăнĕсем çине кĕрсе выртрĕç.

— Эсĕ, Нина, ан кулян. Ним усалли те пулмасть. Юмăç яни вăл — вăйă çеç. Ахаль ларасран, — лăплантарма тăрăшрĕç вĕсем тантăшне.

— Çапла пултăрах, — терĕ Нина, хăйĕн пурпĕрех чĕри тапранчĕ. Аран-аран çывăрса кайрĕ çав каç. Тĕлĕкре кукамăшне курчĕ. Лешĕ таçта вăрăм çула пуçтараннă пек те, Нина хăйне те пĕрле илме ыйтса йăлăнать пек ăна. «Пĕчĕк-ха эс инçе çула кайма, юл килте», — тет пек ăна кукамăшĕ.

Тепĕр эрнерен килтен çыру çитрĕ. Кукамăшĕ яланлăхах куçне хупнă иккен. Шăпах вĕсем юмăç пăхнă каç. Нинăсăрах пытарнă ăна. «Кулянтарас темерĕмĕр сана. Пĕлтернĕ пулсан канăçна çухатăттăн, çула тухăттăн. Çанталăк сивĕ, тем курас пур. Тата санăн вĕренмелле те, ĕçе те çӳремелле — вăхăту ахаль те хĕсĕк. Халь тин кулянса нимĕн те тăваймăн, пĕр кайнă çынна куççуль тăкса тавăрма çук. Вĕрен. Хăвна йĕркеллĕ, тирпейлĕ тыт. Асту, шăнса ан пăсăл. Ăшăрах тăхăнса çӳре», — çырать амăшĕ.

— Ав мĕне пĕлтернĕ иккен юмăç пăхнă чух тухнă хура хĕрес, — тĕлĕнмеллипех тĕлĕнчĕç пĕрле пурăнакан хĕрсем, тантăшне лăплантарма тăрăшрĕç. Ун пек чухне сăмахпа пулăшаятăн-и вара?

Нина çырăва вуласа тухичченех макăрса ячĕ. Тек çук иккен унăн хаклă çынни. Мĕн çуралнăранпах хĕрачашăн вăл амăшĕнчен те çывăхрах пулнă. Сиккелесе выляса çӳренĕ чух алли-урине ыраттаратчĕ-и, хырăмĕ выçса каятчĕ-и — кукамăшĕн аркинчен пырса çакланатчĕ. Лешĕ йăпататчĕ, ачашлатчĕ ăна, хăй çиес татăка тыттаратчĕ. Мăянпа хутăштарнă

ҫăнăхран пĕҫернĕ ҫăкăр та кукамăш аллинчен илсен кулач пек туйăнатчĕ ачана. Амăшĕ, ялта ăна Виркка теҫҫĕ, яланах ĕҫре. Фермăра сыснасем пăхатчĕ вăл. Йывăр пулсан та — окоп чавасси мар ĕнтĕ. Вăрҫă вăхăтĕнче салтака янă пекех тытса янă тет ăна, икĕ ҫултан ҫеҫ каялла килнĕ. «Салтак пек ик ҫул стройпа ҫӳрерĕмĕр. Приказпа ĕҫе каяттăмăр, приказпа ĕҫрен килеттĕмĕр. Ху ирĕкӳпе ниҫталла та утăм тăваймастăн», — тесе аса илет амăшĕ ҫав хаяр ҫулсене. Каярахпа ăна пăру пăхма куҫарчĕҫ. Нина шкула ҫӳренĕ чух Виркка дояркăраччĕ, фермăра ĕне сăватчĕ. Лăштăр ывăнса таврăнатчĕ вăл каҫхине. Пĕтĕм ĕҫе алăпа тунă та-ха. Ĕнесене шăварма кăна витене аллă-утмăл витре шыв йăтма тивнĕ. Дояркăсене шалу вырăнне сĕт паратчĕҫ. Нина амăшĕ ҫав сĕте колхозрах хăварса пычĕ. Ҫапла перекетлесех сĕт укҫипе ҫĕвĕ машини туянчĕ. Пысăк ҫемьере унсăр та май ҫук.

Фермăран таврăнсан та пĕртен-пĕр тĕпренчĕкĕпе йăпанса ларма вăхăт пулман Вирккан. Килте ĕҫ тăкăнса тăрать. Тата... Качча кайса упăшкинчен уйрăлса килнĕ хĕр шутра-и вăл? Тăван килте пулсан та — тарҫă вырăнĕнче. Ун ҫине ҫеҫ мар, уйрăлнă хĕрарăмăн ачи ҫине те ялта чалăшшăн пăхатчĕҫ. Мĕншĕн уйрăлнă ашшĕпе амăшĕ? Куна хĕрача пĕлмест, амăшĕнчен е кукамăшĕнчен ыйтма хăяйман. Ҫакна кăна пĕлетчĕ вăл: унăн ашшĕ ялтах пурăнать, анчах урăх ҫемьере. Нинăран кĕҫĕнрех ачисем те пур унăн.

Ашшĕ хĕрачи патне нихăҫан та пырса ҫӳремен. Нинăпа иккĕшне хушаматпа мăшкăл ят кăна ҫыхăнтарса тăрать. Виркка упăшкинчен ача ҫураличченех уйрăлнă пулин те, хĕрачана ашшĕ ят панă, хушаматне те хăйĕнне ҫыртарнă: Нина Селентерова. Никамран ыйтмасăрах, хăй тĕллĕнех. Мăшкăл ячĕ вара... Ашшĕне куҫ хыҫĕнче Шăши Петриванĕ тенĕрен хĕрачине те Шăши Нини теме пуҫланă. Шкула

кайиччен илтмен хĕрача ку мăшкăл ята. Тен, кусç хысçĕнче кам та пулин каланă пуль, анчах куçăнах йĕкĕлтешмен. «Шăши! Шăши! Сĕлĕ пĕрчи мĕн шăрши?» — янăрашатчĕç арçын ачасем шкулта. Ниçта кайса кĕрейми тарăхатчĕ хĕрача. Ашшĕпе пĕрле пурăнманскере мĕншĕн çак мăшкăл ятпа кӳрентермелле-ха? Петриван Нини те мар вĕт — Шăши Нини. Çак сăлтавпа миçе хутчен макăрманши? Килтисем вара хĕрачана пурте Ниниле тесе чĕнеççĕ. Çемçен, ачашшăн, юратса каланăн илтĕнет ку ят.

Ашшĕн килĕнче Нина пĕтĕмпе те пĕр хутчен пулса курчĕ. Ӳсерехпе, ялти çичĕ класлă шкултан вĕренсе тухас умĕн. Вăрăмкасра, ашшĕн çурчĕ вырнаçнă урамра, унăн тантăшĕсем пурăнаççĕ. Туссем пĕрпĕрин патне кайсах çӳреççĕ. Нина килнине курсан ашшĕн амăшĕ, Нинăшăн асанне пулмалласкер, мăнукĕ каялла каясса алăк умĕнче сăнаса тăратчĕ, хĕрачана чарса тăратса е йăва, е шушкă, е кулач татăкĕ тыттаратчĕ. Пĕррехинче вара, Мăнкун эрнинче, ăна çавăтсах килне илсе кĕчĕ. Кил-йышĕ таçта хăнана кайнă вăхăт пулчĕ пулас, пӳртре никам та çукчĕ. Ватă çын хăйĕнсĕр ӳсекен мăнукне чей ĕçме лартрĕ, Мăнкун çăмарти, кĕлентĕр парса ячĕ. Ват çынна кӳрентересрен хăрарĕ пулин те, хăюлăх çитерсе ыйтрĕ-ыйтрех Нина çавăн чух:

— Мана Шăши Нини тесе мăшкăллаççĕ. Мĕншĕн сире Шăши хушма ят панă?

Асламăшĕ кӳренес вырăнне кулса ячĕ.

— Кĕтерин патша вăхăтĕнчех çыпçăннă ку ят пирĕн йăх çумне. Аçун аслашшĕн аслашшĕ хире тислĕк тăкма кайнă пулать. Çав тери ырă кăмăллă çын пулнăран ун патне яланах ачасем туртăннă тет. Тислĕке пушатса яла таврăннă чухне те ачасем çыпçăннă: лартса кай та лартса кай. Хайхискер урапи çине арпа хурать те пĕр лав ача лартса таврăнать. «Мĕн тиесе килен, мучи?» — ыйтать ял çынни-

сенчен тахăшĕ. «Тислĕк купи айĕнчен шăши çурисем тухрĕç те, çавсене лартса килеп-ха», — хуравлать ку. Çавăн хыççăн çилĕм пек çыпăçать ун çумне Шăши текен хушма ят, — хĕрача çине ăшă-ăшă куçпа пăхса каласа парать асламăшĕ. — Эс, мăнукăм, хăвна Шăши тенĕшĕн пач та ан кулян. Килти мăнуксене те çаплах калатăп, вĕсем те урамран пĕрре мар макăрса кĕнĕ. Шăши — çав тери ĕçчен те хунавлă чĕрчун, мĕн тери йышлă çемйине тăрантарса ӳстерет. Ан тарăх Шăши тенĕшĕн. Калаччăрах. Урăхла усал ят кăна ан çыпçăнтăрччĕ сан çумна. Çавăнтан асăрхан.

Пĕрремĕш хут асламăшĕпе çапла чунтан калаçса курчĕ хĕрача. Килĕшрĕ вăл ăна. Анчах хăй ашшĕн килĕнче пулса курни çинчен вăл амăшне те, кукамăшне те нимĕн те шарламарĕ. Мĕн тума пăлхантарас? Мăшкăл ятпа чĕннĕшĕн вара тарăхма-кӳренме пăрахрĕ.

Килти пĕтĕм хура ĕç Виркка çинчеччĕ. Нина çумне те çамрăклах куршанак çыпçăнчĕ. Тантăшĕсем урамра выляççĕ, ун вара урай сĕрмелле, хур пăхмалла, çум çумламалла, чăх-чĕп тăрантармалла, савăт-сапа тирпейлемелле, инкĕшĕсен ачисене астумалла... Пĕчĕккисем ашкăнсан та патакĕ ăнах тивет. «Ан ӳркен, ачам, ĕçлени çыншăн пулсан та ĕçе вĕренни хăвăншăн», — тетчĕ кукамăшĕ. Ашшĕ пур çинчех çурма тăлăх ӳсекен хĕрачана ятлаканни те, пуçран шăлаканни те вăлах пулнă. Амăшĕнчен кĕтсе илеймен ачашлăха кукамăшĕ çумĕнче тупатчĕ Нина. Çирĕп карчăкчĕ лешĕ. Авланса ача-пăчаллă пулнă ывăлĕсем, Саливанпа Кирук, пĕр утăм та иртеймен амăшĕн сăмахĕнчен. Вăл калани — саккун. Кайри-малтиллĕ йывăç пӳртре тăвată çемье пĕрле пурăнать. Сĕтел хушшине ларсан пĕр хурантан апат антарса çиеççĕ. Укçи-тенкине те пĕрле тытаççĕ: тĕпелти сĕтел сунтăхĕнчех выртать вăл. Пĕр-пĕринпе канашламасăр унтан никам та пĕр пус та ил-

мест. Кукашшĕ çапла хăнăхтарнă, вăл вилнĕ хыççăн килти йăла-йĕркене кукамăшĕ тытса пыратчĕ. Укçа пекех, çăкăр та кукамăшĕн аллинчеччĕ. Хăех пĕçеретчĕ вăл ăна. Йышлă çемьере кăвас чĕресĕ нихăçан та пушă лармасть. Кукамăшĕ кун сиктерсе тенĕ пек чуста çăрать. Вăл кăмака умĕнче кăштăртатать, Нина унран инçе те мар ик аллипе ик сăпка сиктерет. Пĕррехинче, хĕрача ун чухне шкула та каймастчĕ-ха, шутсăр выçса кайнă та кăмакаран çăкăр пиçсе тухасса чăтăмсăррăн кĕтсе тăрать. Акă кукамăшĕ вĕри çăкăрсене кăмакаран йывăç кĕреçепе кăларчĕ те шыв сĕрнĕ хыççăн ал шăллипе витсе хучĕ. «Эпĕ Лисахви ятлă, эсĕр кулач ятлă», — тесе пăшăлтатать хăй. Пĕчĕк Ниниле çакна илтрĕ те хирĕçлемесĕр чăтаймарĕ: «Апла мар-çке ĕнтĕ. Эсĕ кукамай ятлă. Çăкăрĕсем те кулач мар, кĕлетрен ыраш çăнăхĕ илсе кĕрсе пĕçертĕн. Хам куртăм. Кулача пасарта илеççĕ, вăл шап-шурă тата ту-утлă пулать. Пĕррехинче Манюкка инкесен тăванĕсем илсе килнĕччĕ. Астумастăн та-и вара?»

Çакна илтсен кукамăшĕ кулса ячĕ: «Ниниле мăнукăм, саншăн эпĕ — кукамай, хампа танăшшисемшĕн вара — Лисахви. Çăкăр вара... Çăкăр вăл хăйне хисепленине юрататать, çавăнпа ăна кăмакаран кăларнă чухне кулач тесе мухтатăп. Ĕçлесе ывăннă хыççăн хура çăкăр та кулач пекех. Ак сивĕнтĕр-ха кăштах, пĕчĕккисем çывăрса кайрĕç пулсан выляколаса çӳре. Кайран касса парăп», — терĕ. Нинилен хырăмĕ ун чухнех чăтма çук выçса кайнăччĕ те, аран-аран кĕтсе илчĕ кукамăшĕ çăкăр касса парасса. Ах, тутлă пулчĕ-çке. Татах çиййĕччĕ те — пурте пĕрле апата ларасса кĕтмелле.

Çапла, çирĕп аларăччĕ çемье. Паллах, çавăн пысăкăш йышра кашăк-чашăк шăкăртатмасăрах пулман. Килте пĕр-пĕринпе урлă пулсан та ял çине ят кăларман. «Тĕрĕс Терентисен хапхи питĕ çав», — тенине Нина ӳсерехпе хăй те пĕрре мар илтнĕ. Тĕрĕс

Теренти тесе ун кукашшĕне каланă. Лешĕ çĕр виçекен пулнă-мĕн. Ял халăхне çĕр касса панă май капла тĕрĕс, капла тĕрĕс мар текеленĕ-ши ĕнтĕ — хушма ят тухса та кайнă.

«Халĕ кукамайсăр мĕнле пурăнăпăр-ши?» — чунтан хурланса йĕрет Нина. Кукамăшĕ куç умĕнчен каймасть. Унпа çыхăннă самантсем пĕрин хыççăн тепри аса килеççĕ. Хăй нумай пурăнмасса сиснĕши кукамăшĕ, Нина Шупашкара тухса килес умĕн мăнукне çапла каласа хучĕ: «Ниниле, ачам, ӳссе çитсе хĕр пултăн. Хăвшăн анчах мар, ыттисемшĕн те папуйне* нумай çирĕн, каçар кукамуна. Малашне ĕнтĕ ман çумра çӳремĕн, тĕнчене каятăн. Сан пурнăçу малалла, ман — каялла. Эп вилсен ан ман мана. Ху апата ларнă чух умна ытлашши кашăк хур: «Лисахви кукамай, апат çиме кил», — тесе чĕн. Эп пырса сан апатна çисе ярас çук. Аса илни паха». «Ватă мар-ха эс халь, вилĕм çинчен калаçма иртерех», — тесе хуравларĕ хĕрача ун чух кукамăшне. «Вилĕм вăл çири кĕперен те çывăх теççĕ, — таврăнчĕ кукамăшĕ. — Турă мĕн чухлĕ виçсе панине никам та пĕлмест».

Кулянупа тата асаилӳпе ыйхине çухатнă хĕр ир енне çеç çывăрса кайрĕ.

Вăхăт темле çухату ыратăвне те пусăрăнтарать. Пурăна киле Нина та лăпланчĕ. Халĕ вăл кашни апата лармассерен сĕтел çине тепĕр кашăк хурать.

Юмăç янă чух курнă хура хĕрессене хĕрсем тек аса илмерĕç. Нинăшăн вара 1963 çул пуçламăшĕ çеç мар, вĕçĕ те синкерлĕ пулнă иккен.

Сĕтел çине Чĕкеç вĕри чейник пырса лартрĕ. Вăл паян — пӳлĕмри дежурнăй, çавăнпа кăшт иртерех тăнă.

— Хĕрсем, ларăр чей ĕçме, атту урама тухсанах

* П а п у й — побои *(вырăсла)*.

выçса та, шăнса та каятăр, — йыхăрчĕ вăл тантăшĕсене.

— Тĕлĕнмелле тĕлĕк курнă эп кĕçĕр. Пĕр-пĕр каччăпа çӳретĕп пулсан — юрĕччĕ-ха. Çак тарана çитсе пĕр яшпа та хапха тĕкĕлесе тăрса курман, тĕлĕкре вара чутах качча илсе каятчĕç, — калаçать Нина вырăнне тирпейленĕ май.

— Ытла хытă ан тирке яшсене, вара çӳремелли каччи те тупăнать. Вăрлакан каччи сарăччĕ-и, хураччĕ-и? — шăл йĕреççĕ тĕлĕк тупсăмне пĕлсех кайман тантăшĕсем. — Таксипе килчĕç-и сана илме е тăрантаспа? Каласа пар-ха тĕлĕкне.

— Çук çав, тăрантаспа та, таксипе те мар, грузовикпа. Пĕрле вĕренекен Ирăпа каçхи шкултан тухрăмăр пек. Пире илме грузовик килнĕ. Ира темшĕн лармарĕ, эпĕ кабинăна кĕрсе вырнаçрăм. Эсир, Чĕкеçпе Галя тата Настя, кузовра тăрса пыратăр пек. Хамăр пурăнакан çурт тĕлне çитсен пурсăр та анса юлтăр пек, мана вара кабинăран кăлармарĕç, машина тапранса кайрĕ. Эсир çул хĕррине тăнă та: «Анса юл, Нина, вăл сана вăрласа качча илсе каясшăн! Хăварăр Нинăна, вăл çамрăк вĕт-ха!» — тесе кăшкăратăр пек. Грузовик хытăран хытă каять пек. Таçта çити инçе кайсан тин, эсир курăнми пулсан, аран-аран анса юлтăм пек.

— Ĕмĕтре те пулин юратнă çын пурах ĕнтĕ сан. Куратпăр-ха, комбинатра станоксене юсакан Юрка куç илмесĕр сăнать сана, — чеен кулать Галя.

— Сăнатăрин. Ун мансăрах савнийĕ пур. Пĕр чипер хĕрпе çумăн утнине час-часах куратăп.

— Римма пирки калатăн пуль-ха эс. Лешĕ Юра çумне хăй çыпçăнать. Куршанак пек. Куна пĕтĕм комбинат пĕлет, — хушса хучĕ Настя. — Чиперри пирки... Тумлантарсан тунката та хитре теççĕ. Ак кăштах ĕçлер-ха, ун чухне эпир те хула майрисенчен кая мар тумланса çӳреме пуçлăпăр.

— Çын каччи мана кирлĕ мар. Ман мăшăр пу-

ласси çуралман-ха. Хам та кая юлса пиçекен çырла пулас эпĕ. Пиллĕкмĕш класран вĕренсе тухиччен те ача мĕнле çуралнине пĕлмен. Кайри-малтиллĕ пӳртре Саливан куккапа Кирук кукка çемйисем, аннепе иксĕмĕр тата кукамай пурăнаттăмăр. Эп çиччĕре чух Манюкка инкепе Альтук инке иккĕшĕ те ача çуратнă. Пĕр каштаран икĕ сăпка çакнăччĕ. Вĕсене камăн сиктермелле? Манăн. Тепĕр ик çултан куккасен çемйисенче татах йыш хушăнчĕ. Манăн каллех ик сăпка харăс сиктермелле. Пĕр ачана пăхма та йывăр, иккĕпе пушшех кансĕр. «Манюкка инкепе Альтук инке ачисене пульницаран мĕншĕн пĕр вăхăталла илсе килеççĕ-ши? Нивушлĕ урăхла май çук? Май çукран çапла тăваççĕ пуль çав. Ача илес текенсене пĕрле пухса черете тăратаççĕ те кашни кунах пепке валеçеççĕ», — тесе шутлаттăм вара.

Куна илтсен тантăшĕсем ахăлтатсах кулса ячĕç.

— Сирĕншĕн кулă, эп вара виçĕ тапхăр мăшăр сăпка сиктернĕ. Ай-яй йывăр. Анчах пĕрне çывратса яратăн, тепри макăрса ярать те — тĕлĕрсе кайни те вăранать. Ăна та тепĕр хут çывратса ямалла.

— Апла, сан ача пăхас опыт пысăк. Халех качча пама та юрать. Ахальтен мар тĕлĕкре сана вăрласшăн, — çаплах кулаççĕ Нинăран хĕрсем.

— Мĕн кулмалли? Пирĕн енче çав усал йăла пĕтмен-ха. Çиччĕмĕш класран вĕренсе тухсан чутах вăрласа кайман мана.

— Нуккă, нуккă тĕплĕнрех каласа пар-ха, мĕнле хăтăлса юлтăн çавăн чух? — тĕпчеме пуçларĕç хĕрсем Нинăна.

— Куккасем кӳршĕллĕ урамра Ульяна мăнак валли пӳрт тăватчĕç. Мăнака пулăшма тесе мана ун патне кайса янă. Мăнак пӳрчĕ йĕри-таврах çырмаçатра. Çырма леш енче Кĕтерин мăнак пурăнать. Унăн вăййа тухмалăх çитĕнсе çитнĕ хĕрĕсем, Мариçпе Санюк, пур. Вĕсемпе пĕрле вăййă курма тухас килчĕ те, çырма урлă каçса Кĕтерин мăнак патне

кайрӑм. Чӑнах та, каҫхине мана вӑйӑ курма илсе тухрӗҫ. Пӗлесчӗ сирӗн, мӗн тери хитре юрӑсем юрлаҫҫӗ пирӗн енчи хӗрсем. Нумай та пӑхаймарӑм, аппасем патне тахӑшӗ чупса пычӗ те пӑшӑлтатса тем каларӗ. Кусем мана иккӗшӗ ик енчен хулран ярса тытрӗҫ те чуптарсах килелле илсе каяҫҫӗ. «Мӗн пулнӑ? Тата кӑштах вӑйӑ курам-ха ӗнтӗ», — тетӗп каялла туртӑнса. Мариҫпе Санюк аппасем мана тата хытӑрах чуптараҫҫӗ, талкӑштараҫҫӗ кӑна.

Салтакран тин таврӑннӑ каччӑ мана вӑрласшӑн пулнине аппасем хӑйсен килне ҫитсен кӑна пӗлтерчӗҫ. Ҫав тери хӑраса кайрӑм. «Выртса ҫывӑр», — теҫҫӗ вӗсем мана. Ӑҫта унта ҫывӑрма? Ирхи тӑватӑ сехетрех хамӑн япаласене тутӑрпа чӗркесе ҫыхӑ турӑм та ҫырма урлах Ульяна мӑнаксем патнелле вӗҫтертӗм. Ҫырми тарӑн тата. Темшӗн Хула ҫырми теҫҫӗ ӑна. «Хула ҫырми хула пек», — тесе юрланине те илтнӗ эп. Чӑнкӑ тӑвайккинчен хӑпарса халтан кайрӑм. Тарӑхнипе хам ӑшра: «Хула ҫырми хула пек, ялне кӗрсен — тӗрме пек. Йӗри-тавра ҫырма ҫеҫ, мӗнле тухса тарам-ши?» — тесе йӗрсе ларатӑп.

Чей ӗҫекен хӗрсем каллех кӑлтӑртаттарса кулса ячӗҫ.

— Эсӗ поэт та иккен, — терӗ Галя.

— Тӗттӗм пулин те каҫрӑм ҫырма урлӑ. Тепӗр кунне ҫав салтакӑн тӑванӗсем Кӗтерин мӑнак патне мана ҫураҫма пынӑ тет. «Шкул пӗтерме ирӗк паратпӑр хӗрачӑра, унччен арӑм тумастпӑр», — тесе йӑлӑнаҫҫӗ тет. Тӑманасем! Ҫураҫма мӑнак патне мар, анне патне пымаллине те чухлайман. Кӗтерин мӑнак вӗсене итлесе те тӑман. Ку мыскарана эпир ялта никама та каласа паман. Хамӑн та сехре хӑпнӑччӗ ун чух, — кула-кула каласа парать Нина.

— Ҫавӑн чухне сехре хӑпни таҫта пуҫунта ҫырӑнса юлнӑ та халь те пулин тӗлӗке килсе хӑратать сана, — тет Чӗкеҫ тӗлӗк вулама пӗлекен ҫын пек. — Шапӑлтатса ларса ӗҫе кая юлас мар. Тапранӑпӑр.

Саланчĕç хĕрсем: хăшĕ — шкула, хăшĕ пир-авăр комбинатне кайрĕ. Нина кăçал каçхи шкулта вуннăмĕш класра вĕренме пуçларĕ. Вăтам пĕлӳ илсен малалла çул уçăлать. Унăн паян комбината уроксем хыççăн каймалла, иккĕмĕш сменăна. Ĕçе кайиччен таврăнса апат çиес терĕ. Хăйсен çуртĕнчен инçе мар вырнаçнă çăкăр лавккине кĕрсе кулачă туянчĕ. Çул урлă чупса каçма тăчĕ те — каçса ĕлкĕреймерĕ, васкавлăн утса-чупса пыракан хĕрачана грузовик пырса çапрĕ те тӳрех чарăнаймасăр пĕр вунпилĕк метр пекех малалла сĕтĕрсе кайрĕ. Машинине чарса тухса пăхнă хыççăн хăраса ӳкрĕ-ши водитель е, йĕксĕк чунлăскер, аманнă хĕре шеллеме те пĕлмерĕ — руль умне васкавлăн кĕрсе ларчĕ те анаталла вĕçтере пачĕ. Хускалмасăр выртакан кĕлетке патне çынсем чупса пынă çĕре автомашина курăнми те пулнăччĕ ĕнтĕ.

Пĕри çитсе чарăнать инкеке лекнĕ çын патне, тепри... Çул хĕрринче тăнсăр выртакан хĕрача тавра кĕçех халăх пухăнчĕ. Малтан «васкавлă пулăшу» машини кăшкăртса çитрĕ, унтан милици машинисем пырса тулчĕç. Инкек пулнине кура çывăхри çуртсенче пурăнакансем, ĕçлекенсем чупа-чупа тухрĕç.

— Тин çеç пирĕн патран кулачă илсе тухрĕ-çке ку хĕр, — теççĕ çăкăр лавккинче ĕçлекенсем.

— Сумки Нинăнни пекех. Чим-ха, Нина та кăвак пальтопа çӳрет, вăлах мар-ши ку?.. Нина вĕт! Нина! — пĕр харăс кăшкăрса йĕрсе ярать темиçе хĕрача. Вĕсем, халь кăна шкултан таврăнаканскерсем, халăх мĕншĕн пухăннине пĕлме пырса тăнă.

— Пĕтнĕ ку. Пытармалăх сăнĕ пултăр хăть, тирпейлĕрех пуçтарăр, — тет «васкавлă пулăшупа» килнисенчен пĕри.

Нинăна палласа илнĕ хĕрсене çийĕнчех милицире ĕçлекенсем тĕпчеме пуçларĕç:

— Кам вăл, хăрушла инкеке лекнĕ хĕрача? Ăçтан килнĕскер? Вĕреннĕ-и, ĕçленĕ-и? Ăçта ĕçленĕ, ăçта

пурӑннӑ? Юриех хӑйӗн пурнӑҫне татма сӑлтав пулман-и унӑн? Каччи кӳрентермен-и? Машинӑна кам та пулин курса юлман-и?

Кам пӗлет пурнӑҫра мӗн сиксе тухасса — милицин ӗҫӗ ҫавӑ: тӗпчемелле, айӑплине тупмалла.

Тантӑшӗсем йӗре-йӗре каласа параҫҫӗ мӗн пӗлнине, анчах Нинӑна мӗнле машина ҫапса кайнине никам та асӑрхаса юлман. Шӑп ҫав вӑхӑтра урамра урӑх машина та, ҫынсем те пулман. Энгельс урамӗ вӑл ахаль те улах вырӑн.

Хӗр кӗлеткине тиесе кайнӑ хыҫҫӑн темӗн пысӑкӑш юн кӳлленчӗкӗ юлчӗ ҫул хӗрринче. Тантӑшӗсем эрнипех шур юр сапрӗҫ ҫав вырӑна.

Больницӑна илсе ҫитерсен, морга кӗртсе хурас умӗн, вилнӗ пекех выртакан хӗрӗн юн таппине тепӗр хут тӗрӗслеҫҫӗ. Тӑлт... тӑлт... аран-аран сисӗнет юн таппи. Чӗрех-ши вара ку ҫын? Кун пек аманакансем чӗрӗ юлни халиччен те пулман. Тӑлт... тӑлт... татӑлман-мӗн пурнӑҫ ҫиппи. Моргра хӑварас тенӗскерне часрах травматологи уйрӑмне йӑтса кӗреҫҫӗ, тӳрех операци сӗтелӗ ҫине хураҫҫӗ. Хӗрачан хӑрах куҫӗ шӑтса юхнӑ, тепри сиксе тухнӑ. Шӑмӑсем арканса пӗтнӗрен пичӗ хӑш вырӑнта пулни те паллӑ мар. «Операци вӑхӑтӗнче вилсе каймӗ-ши, чӗрӗ юлайӗ-ши?» — пӑшӑрханаҫҫӗ тухтӑрсем, апла пулин те васкавлӑн пуҫтарӑнса виҫӗ хирург харӑс операци сӗтелӗ умне тӑраҫҫӗ.

...Икӗ эрнерен тӑна кӗчӗ Нина. Таҫтан такамсен ҫепӗҫ сассисем илтӗнеҫҫӗ. Тем калаҫаҫҫӗ ҫав ҫынсем — уйӑрса илме ҫук. Йӗри-тавра тӗттӗм. Уйӑхсӑр, ҫӑлтӑрсӑр каҫ пек. Сывлама йывӑр. Алӑксӑр, чӳречесӗр тӑвӑр пӳлӗме хупса хунӑ пек туять вӑл хӑйне. Акӑ такамӑн аллисем перӗнчӗҫ ӑна, темӗнпе сӑтӑраҫҫӗ. Чӑтма ҫук ыраттараҫҫӗ. «А-а-ай! Хӗрхенсемӗр мана! Ан тӗкӗнсемӗр!» — кӑшкӑрсах тархаслать хӗрача, анчах хӑй сассине хӑй те илтмест. Лешсем те илтмеҫҫӗ пулас, ҫаплах асаплантараҫҫӗ

ӑна. Тав Турра, тинех чарӑнчӗҫ. Халӗ сывлама та ҫӑмӑлланчӗ пек.

«Чӳречисем ҫуках ӗнтӗ ку пӳлӗмӗн, ав епле тӗттӗм, алӑка уҫса сывлӑша уҫӑлтарчӗҫ пуль. Маларах ҫапла тума тавҫӑрса илеймен-ши вӗсем? Епле йывӑрччӗ сывлама. Мӗнле тӗттӗм путвалта-ши эп? — тавҫӑрма тӑрӑшать хӗрача. — Хӑҫан, мӗнле лекнӗ эп кунта? Чим-ха, эп тӗлӗк куратӑп пулас. Ҫаплаҫапла, усал тӗлӗк курнӑ та вӑранаймасӑр асапланнӑ. Акӑ тинех вӑрантӑм... Анчах куҫӑмсем уҫӑлмаҫҫӗ. Мӗн пулнӑ вӗсене? Ӑҫта-ши эп?» Ҫак самантра таҫтан аякран «Ниниле... Ниниле...» тени илтӗнсе кайрӗ пек. Килтен тухса кайнӑранпа ӑна кун пек никам та чӗнмен. Нинӑн амӑшне ҫав тери курас килсе кайрӗ.

Акӑ такамӑн аллисем ун аллисене асӑрханса ачашшӑн тытрӗҫ. Палланӑскерсем пек. Ыраттарасран хӑраса ӑшшӑн, ҫепӗҫҫӗн сӗртӗнеҫҫӗ. «Анне аллисем пуль-ҫке кусем, — тавҫӑрса мар, туйса илчӗ Нина. — Апла, вӑл кунтах, юнашарах. Анчах мӗншӗн курмастӑп-ха эпӗ ӑна? Пӗрре те пулин пӑхса илесчӗ ун ҫине. Анне, ан кай, ан ҫухал. Ӑҫта эс?» Нина каллех тӑн ҫухатать.

Тӑна кӗнӗ самантсенче вӑл яланах хӑй малтан илтнӗ ҫепӗҫ сасӑсене кӗтет. Ҫав ҫынсем килӗҫ те акӑ каллех сурансене чӑтма ҫук ыраттарса тасатӗҫ. Халӗ Нина пӗлет: ыратнине чӑтса ирттерсе ярсан сывлама ҫав тери ҫӑмӑл пулса каять. Ыраттарччӑр. Вӑл чӑтӗ. Юрать-ха, амӑшӗ яланах ҫумра. Ун аллисем сӗртӗнсен чунра ырӑ та ҫӑмӑл пулса каять. Халиччен амӑшӗ ӑна нихӑҫан та ҫапла лӑпкаман, ачашламан. Ывӑнчӑк сӑнлӑскер киле таврӑнсан ачи ҫине ӑшшӑн пӑхса илетчӗ те каллех ӗҫе кӳлӗнетчӗ. Амӑшӗн аллисем ҫакӑн пек ҫепӗҫ тесе нихӑҫан та шутламан хӗрача. Ах, мӗн тери курас килет халь унӑн амӑшне. Анчах куҫӗсем кӑна мар, пӗтӗм пуҫӗ бинт ӑшӗнче.

Çапла асапланса уйăх çурă иртрĕ. Пĕр ирхине сурансене çыхнă бинта асăрханса сӳтрĕç те, умри тĕтрелĕхре шурă тумлă палламан арçын курăнса кайрĕ. Питĕ çамрăк пек хăй. Кĕçех тата такамсем кравать çинелле пĕшкĕнчĕç.

— Анне, — ют çынсем хушшинчи амăшне палласа илсе тутине хускатать хĕрача, анчах сасси тухмасть. Амăшĕ темшĕн питĕ аякра тăнă пек курăнать ăна. Мĕншĕн çывăхарах килмест-ха вăл?

Хĕрĕ хăйне чĕннине ăнланса амăшĕ ăна аллинчен тытать. Тин тавçăрать Нина: хаклă çынни çумрах иккен, куçĕ çаплаултавлă кăтартать. Тĕттĕмре нимĕн курмасăр, нимĕн илтмесĕр аташса выртнă чухне те чунĕ йăнăшман иккен: çак çепĕç алăсем чăнах та унăн амăшĕн пулнă.

— Паянлăха çитет. Тӳрех нумайлăха уçма юрамасть. Халь санăн куçна каллех хуплатпăр, — тет шурă тумлă çын. Сасси хăйĕн таçта катара илтĕнет. — Çутă çине пăхма сана майĕпен хăнăхтарса пырăпăр.

Куçне тепре уçнă самантра палатăна пир-авăр комбинатĕнче ĕçлекен Тамара Васильевна мастер çитсе кĕчĕ, Нинăна станокпа ĕçлеме вĕрентнĕскер. Çав тери ăшă чунлăскер, ырă кăмăллăскер вăл. Аппăшĕ выраннех хураççĕ ăна ялсенчен килнĕ хĕрачасем. Пур ыйтупа та ун патне чупса пыраççĕ. Палласа илчĕ ăна Нина. Сиксе тăрса мастера пырса ыталас килсе кайрĕ унăн. Анчах чун хавалĕпе темле туртăнсан та ни кĕлеткине хускатаймарĕ, ни сăмах хушаймарĕ.

Тамара Васильевна кашни кун тенĕ пекех пырса çӳрерĕ. Таçтан тупать вăл чуна шанăç кӳрекен ăшă сăмахсене? Кравать çумĕнчи пукан çине пырса ларать те Нинăна аллинчен тытса сăмахлама пуçлать. Хĕр нимĕн те ыйтаймасть пулин те, шăпах вăл пĕлес текен хыпарсене калать. Нинăн чун-чĕрине кĕрсе курать тейĕн çав. Хĕрачан сывлăхне куллен тĕрĕслесе

тăракан тухтăр çинчен те вăлах каласа пачĕ. Тамара Васильевна пĕлтернĕ тăрăх, Нина выртакан уйрăм заведующщине Отто Юстус тесе чĕнеççĕ иккен. Латыш. Вăрçă вăхăтĕнче эвакуаци йĕркипе Шупашкара килсе лекнĕскер-мĕн.

— Ылтăн алăллă тухтăр теççĕ Отто Эдуардович пирки. Специальноçĕпе шăл тухтăрĕ вăл. Авари хыççăн сана операци тума унсăр пуçне Сорокин травматолог, Васильева окулист хутшăннă, кашни — хăй енĕпе сипленĕ. Пач та ан иккĕлен, çăлса хăвараççех сана, сыватса ура çине тăратаççех, — лăплантарать мастер хĕрачана.

Тăна кĕнĕ пулин те, хăй çаплах пурнăçпа вилĕм хушшинче тănине Нина пĕлмест. Тамара Васильевна уйрăм заведующийĕпе ятарласах кĕрсе калаçрĕ. «Кунта питпе янах суранĕсене операци туса сиплекен уйрăм çук. Унăн вара пĕр харăсах шăлĕсем те, пит шăмми те, куçĕсем те, хăлхи те аманнă. Ăна май килнĕ таран хăвăртрах Хусана е Мускава леçмелле. Анчах вăл халĕ питĕ вăйсăр, çул çинчех вилсе кайма пултарать, çавăнпа сывлăхĕ кăштах та пулин çирĕпленесс кĕтме тивет», — тĕрĕссине пытармарĕ Отто Эдуардович.

Цехра пĕрле ĕçленĕ хĕрсем пĕрин хыççăн тепри больницăна пыма пуçларĕç. Пырсан кайма васкамаççĕ, аманнă тантăшне тирпейлеççĕ, кашăкпа сĕт, улмаçырла сĕткенĕ, шĕвĕ хăйма сыптараççĕ, хаçат-журнал вуласа параççĕ. Александр Артемьевăн «Салампи» кĕнекине сыпăкăн-сыпăкăн вулама тытăнчĕç те, Нина вĕсем килессе чăтăмсăррăн кĕте пуçларĕ. Малаллине пĕлес килет-çке. Кĕнеке вуланине итленĕ чух хĕр суранĕсем ыратнине те туйми пулать. Тамара Васильевна хĕрсем пирки Нинăна малтанах асăрхаттарса хучĕ:

— Эсĕ тантăшусем ĕç вăхăтĕнче сан патра ларнăшăн ан пăшăрхан. Хĕрсем сан патна килсе çӳренине комбинатра пĕлеççĕ. Вĕсем кунта чухне станокĕсене цехри ытти çынсем ĕçлеттереççĕ.

Ах, çав Тамара Васильевнăн кăмăлĕ! Вăл тăрăшнипех общежитире Нина валли уйрăм пӳлĕм пачĕç. Халĕ ĕнтĕ амăшĕн таçта çын патĕнче выртса тăмалла мар, вĕсен хăйсен кĕтес пур. Çавăнпа амăшĕ пурăнмаллах Шупашкара куçса килнĕ-мĕн, Нина ĕçленĕ комбинатах ĕçе вырнаçнă.

Кăнтăрла çеç мар, çĕрле те хăйне пĕччен туймасть Нина. Амăшĕ çук чухне ун патне çĕр каçма Чĕкеç е Галя килет.

Пĕр ирхине Отто Эдуардович Нинăна çапла пĕлтерчĕ:

— Сана кунта сыватма пуçланăранпа икĕ уйăх çитрĕ. Хамăр мĕн пултарнине турăмăр. Малалла сан питпе янах хирургийĕн уйрăмĕнче, шăп та лăп çав енĕпе ĕçлекен ăста специалистсем патĕнче, сипленмелле. Ун пек уйрăмсем Мускаври, Ленинградри тата Хусанти больницăсенче кăна пур. Виçĕ хулана ыйтса çыртăмăр, виççĕшĕ те сана йышăнма хатĕр. Хăвна малашне кайма-килме тата аннӳне пырса çӳреме çывăхрах пултăр тесе Хусана ăсатма йышăнтăмăр. «Васкавлă пулăшу» машинипех каятпăр. Ăсатма хам пыратăп. Аннӳ пĕлет. Çывăх вăхăтрах çула тухăпăр.

Мĕншĕн Хусана леçнин сăлтавне тĕрĕссипе калас темерĕ заведующи. Мускава е Ленинграда ярас пулсан çак асаплă чун çитес çĕре çитиччене вилсе выртма пултарать. Ăсатма хăй кайни те çак сăлтавпах çыхăннă: çул çинче тем пулас-килес пур.

Чăнах та, вăрăм çул сусăр хĕрачана халранах ячĕ. Юрать-ха, Отто Эдуардович юнашарах. Хусана çитиччен тухтăр машинăна виçĕ хут чарса Нинăна кантарчĕ, эмел ĕçтерчĕ, укол турĕ. Кăнтăрла иртсен тин çитрĕç больницăна. Палатăна вырнаçтарсанах хĕрача кравачĕ çумĕнчи пукан çине тулли кĕлеткеллĕ, самаях ватăлнă хĕрарăм тухтăр пырса ларчĕ. Чĕрçийĕ çинче — Нинăн чир историйĕ.

— Хĕрĕм, сывлăху ытла та хавшак. Тĕрĕссине

пытарса сана йăпатас кăмăлăм çук. Сан умăнта — хура хӳме. Санăн çамрăклăх пулмасть, юрату та пулмасть. Йěри-тавра хаваслă, телейлě, ырă пурнăç, анчах сан валли мар вăл. Мăшăру та, ачусем те пулмěç санăн. Ытти мěнпур çынсен пурнăçěпе пурăнаймăн эсě. Сан çумра аннӳ пулě. Яланах, хăй çěре кěричченех. Аннӳпе пурăнса ěмěрне irттерěн, — лăпкăн, васкамасăр калаçать хěрарăм тухтăр. Сăмахěсем вара савăл çапса кěртнěн ăша вырнаçаççě. Манас тесен те манаймăн. — Халь кала мана: çакăн пек пурнăçпа пурăнас кăмăл пěр тумлам та пулин пур-и санăн? Пурăнас кăмăлу çук пулсан... пирěн те ытахальтен, усăсăр ěçлес килмест, сана та нушалантарас килмест. Шутла, хěрěм. Лайăх шутла та кала. Пурăнассу килет пулсан пурнăçшăн пěрле кěрешěпěр.

Нинăн куракан куçěнчен куççулě сăрхăнса тухрě. «Аннене курас килет», — тесе каласшăн вăл. Сасси тухмасть, тути çеç вăйсăррăн мăкăлтатать. Вăрçă вăхăтěнче питрен аманнă салтаксене сипленě хирург, вěсем мěн каланине тута хусканăвěнчен тавçăрма вěреннěскер, тӳрех ăнланчě. Ку больници хăй те вăрçă çулěсенче госпиталь пулнă иккен. Çакна Нина каярахпа, темиçе операци витěр тухнă хыççăн, пěлчě.

— Аннӳне курас килсен, пурăнас тесен хăвна тимěр сăнчăрпа сăнчăрла, чăт, куççуль ан кăлар. Пурăнасси хăвăнтан килет, — терě Хусанти виççěмěш больницăра питпе янах суранěсене сиплекен уйрăмра ěçлекен Евгения Домрачева профессор, çар врачě пулнăскер. Операцисем пěрин хыççăн тепри вěçěхěррисěр пуласса та, хěр кирек хăш вăхăтра вилсе кайма пултарасса та — нимěн те пытармарě вăл çамрăк пациенткăран. — Çакăн йышши авари хыççăн халиччен никам та чěрě юлман-ха, — терě.

Çынна эмелпе тата ăшă сăмахпа сиплемелле теççě те... Пур чухне те апла мар иккен. Евгения Алексеевна пурнăçпа вилěм хушшинче тăракан çамрăк хěре

хăрушă чăнлăха ним пытармасăр, тӳррӗн пӗлтерчӗ. Нинăн пурăнас килет. Апла тăк ура ҫине тăрас тесен мӗнпур вăй-хала, чун хавалне пухмалла та шăла ҫыртса кӗрешмелле.

— Санăн ӗмӗр тăршшӗпех больницăсем тăрăх ҫӳреме тивӗ. Кашни врач сан чир историне тӗплӗн пӗлсе ҫитереймӗ. Хăвăн пӗлмелле, врача пулăшмалла, — ăс пачӗ пурнăҫ курнă хӗрарăм тухтăр.

Шупашкарта операци туса тухтăрсем хӗрачан хăрах куҫне ҫăлса хăварнă, питпе янах шăммисен ванчăкӗсене хырса тасатса пластинăсем хунă, тимӗр пралукпа ҫыхса ҫирӗплетнӗ, шăлӗсене те пралукпа хытарнă. Хусанта ҫӗнӗрен операцисем туса ҫав пластинăсемпе пралуксенчен хăшӗсене кăларчӗҫ, хăшӗсене хăварчӗҫ. Ҫӗрме-юхма пуҫланă сурансене тасатсах тăчӗҫ.

Операци хыҫҫăн операци... Пӗр вырăнах ҫичӗ-сакăр хут касса ҫӗлени те пулнă. Халӗ хӗрача хăй мӗншӗн калаҫайманнине те пӗлет: авари вăхăтӗнче сасă тытăмӗсем сиенленнӗ. Пурăна киле сасă уҫăласса шантараҫҫӗ-ха тухтăрсем. Хальлӗхе вара чӗлхесӗр ҫын пек пурăнма тивет. Мӗн те пулин каламалла чухне вăл пӳрнепе паллă парать те, санитарка унăн хăрах аллине ҫӳлелле ҫӗклет. Нина сывлăшра пӳрнепе сас паллисем ҫырса хăйне мӗн кирлине калать. Унăн хăрах хăлхи пачах та илтмест, пӗр куҫӗ пачах та курмасть. Вӗсем халӗ тин илтекен, куракан пулас ҫук.

Апат енчен те хӗсӗк хӗрачан пурнăҫӗ. Ҫур ҫул ытла ӗнтӗ вăл шӗвӗ апатпа кăна тытăнса тăрать. Чей кашăкӗпе пӗчӗккӗн-пӗчӗккӗн сыптараҫҫӗ. Палатăри ҫынсем апатланнă чухне тем пек ҫиес килет Нинăн, уйрăмах — хура ҫăкăр. Ҫук, чăмлаймасть. Апат вăхăтӗнче пуҫне аяккалла пăрать те лăнкăрт-лăнкăрт ҫăтать сурчăкне.

Ҫапла нушаланса пилӗк уйăх иртсе кайрӗ. Тухтăрсем Нинăна киле илсе кайма ирӗк пачӗҫ. «Сыв-

лăхĕ хавшасан кунтах килмелле, — тесе асăрхаттарчĕç амăшне. — Хăрах куçĕ курать, анчах вăл та вăйсăр. Шурă туя илме тивет. Хăй тĕллĕн урама тухас пулсан туясăр ан çӳретĕр».

## Иккĕмĕш сыпăк

Чĕрĕ, сывă йывăç сасартăк сиксе тухнă çил-тăвăл вăхăтĕнче шатăртатса çурмаран хуçăлнине курнă-и эсир? Тымарĕ çирĕп те — тӳрех хăрмасть вăл, анчах унăн тек нихăçан та лапсăркка та çăра туратсем пулмĕç. Ун çийĕн симĕс çулçăсем пăшăлтатмĕç. Текех илемлĕн те мăнаçлăн кашласа чӳхенсе лараймĕ вăл. Сывлăш та, çутă та çителĕклĕ илеймест, çапах пурăнать йывăç. Ĕмĕрлĕх аманса юлнăскер, мĕскĕнскер пĕр турат та пулин кăларасшăн тăрăшать.

Шăпах çавăн пек шатăртатса хуçăлчĕ Нинăн пурнăçĕ те. Икке пайланчĕ: аваричченхи — пĕр шухăшсăр ачалăхпа çамрăклăх, авари хыççăнхи — нушаллă, асаплă, суранлă шăпа. Вĕсене, Евгения Алексеевна калашле, хура стена уйăрса тăрать. Ытла та кĕске пулчĕ чечек пек çамрăклăхĕ. Халь акă тĕкĕр çине пăхма та хăрамалла.

Хусанти больницăри тухтăрсем ăна авари хыççăнхи пурнăçа чунпа йышăнма, хăнăхтарма пуçланăччĕ. Анчах хăвна ху ĕнентерни, хăнăхтарни, алра тытма тăрăшни çителĕксĕр иккен. Тăвансене, пĕлĕшсене, юлташсене, ял-йыша та хăнăхтармаллаллă. Унсăрăн вĕсен кулянăвĕ, асапланăвĕ, шеллевĕ, мĕн пытармалли пур, юхан-суранран йĕрĕнни те, аманнă çын çинех йывăр тиев пулса купаланаççĕ. Нина çакна яла кайсан уйрăмах лайăх туйса илчĕ.

Авари хыççăн çичĕ уйăхран тин киле таврăнчĕ вăл. Çулĕсем япăх, машинăсем сахал. Хусанти больницăран Нинăсен ялне çитме утмăл-утмăл пилĕк çухрăмран ытла мар, çитесси вара — чĕр нуша. Тăррине брезент витнĕ грузовикпа илсе кайрĕç ăна. Çула

май ларса пыракан ентешӗсем тӑваттӑн-пиллӗкӗн юнашар вырнаҫрӗҫ те хӗр кӗлеткине хӑйсен чӗрҫийӗсем ҫине хурса ӳкесрен аллисемпе тытса пычӗҫ. Сусӑр хӗрӗн пуҫӗ — амӑшӗн чӗрҫийӗ ҫинче. Лӑнк-лӑнк! сиктерет машина, пӗр еннелле сулӑнать кузов, тепӗр еннелле тайӑлать...

Машина ял лавкки умне ҫитсе чарӑнсан хӗр: «Тинех ку нуша пӗтрӗ иккен», — тесе лӑш сывласа ячӗ. Хыҫҫӑнах тепӗр асап — чун асапӗ — пуҫланасса пачах та кӗтмен. Шутламан та ун пирки.

Грузовик ҫинчен антарнӑ хӗр тавра ял ҫыннисем пухӑнчӗҫ. Хӗрарӑмсем ӳлесех йӗреҫҫӗ.

— Ҫырла пек хӗр кӑларса ятӑмӑр та — мӗнле сӑн-питпе таврӑнчӗ! — хӳхлет пӗри.

— Куҫӑхтарса кӑларса ятӑмӑр пуль, — Нинӑн пуҫ вӗҫӗнчен илтӗнет тахӑшӗн сасси.

— Турӑ умӗнче мӗн айӑпа кӗнӗ вӑл ҫак асапа курма? — хӗрача ҫумӗнчех макӑрать виҫҫӗмӗшӗ.

Хӗрарӑмсем макӑрни, вӗсен чуна ҫуракан сӑмахӗсем пурте Нинӑн хӑлхине кӗрсе чӗрине ыраттараҫҫӗ. Лавккара ӗҫлекен ашшӗ кӑна тухмарӗ урама. Тухмарӗ, хӑйӗнчен уйрӑм ӳснӗ хӗрӗ патне пырса пӗшкӗнмерӗ, аллине ачашшӑн сӗртӗнмерӗ. Хӑйӗн ӗмӗрӗнче ашшӗн чӗрҫийӗ ҫинче пӗрре те ларса курманскер, хӗрача Хусанти больницӑра выртнӑ чухне темшӗн вӑл пырасса кӗтрӗ. Ҫав тери кӗтрӗ. Ашшӗ палатӑна кӗрсе хӗрӗн аллине тытсанах сурансем сурма чарӑнассӑн, пӗтӗм асап вӗҫленессӗн туйӑнатчӗ. Шкулта вӗреннӗ чух вӑл ун ҫинчен пит аса илсех те кайман. Капла калани тӗрӗсех те мар-ха. Нина пӗрремӗш класа кайма пуҫласан ашшӗ ун валли такам урлӑ портфель парса янӑ. Шала тетрадьсемпе кӑранташсем хунӑ. Ҫав портфеле йӑтса утнӑ чух хӗрача хӑйне ашшӗ ҫавӑтнӑ пекех туятчӗ.

Тетрачӗсемпе усӑ курчӗ вӑл, кӑранташӗсене асӑнмалӑх хӑварчӗ, пӗрне те шӗвӗртмерӗ. Саккӑрмӗш класа кайма амӑшӗ ҫӗнӗ портфель илсе парсан та

киввине кăларса пăрахмарĕ хĕрача. Хайхи кăранташсене ун ăшне чикрĕ те портфеле амăшĕн арчине хучĕ. Ан çухалтăр ашшĕн парни. Йышлă çемьере куккăшсемпе пĕрле пурăннăран-ши, çумра ашшĕ çуккишĕн кулянсах кайман. Хусанта вара çав тери кирлĕччĕ вăл ăна. Кĕтсе илеймерĕ. Ун чухне те, халĕ те — ашшĕнчен темиçе утăмра кăна выртнă чух та. Е вăл пĕлмест те-ши хĕрачине машина таптанине?

Мĕнле ан пĕлтĕр? Пĕлет Петриван тăван тĕпренчĕкĕ çав тери пысăк инкеке лекнине. Хĕлле, Нинăна машина çапса кайсан, хура хыпарлă телеграммăна почтăра ĕçлекенсем чи малтанах ăна пырса кăтартрĕç. Телеграммăри сăмахсен пĕлтерĕшне ăнланса илсен арçыннăн ăшĕ хурăн хуппи пек хыпса илчĕ. Ним тума, ниçта кайса кĕме пĕлмен енне кĕленче уçса стакана хĕррипе тан шур эрех тултарчĕ те шалт ĕçсе ячĕ, анчах ўсĕрĕлнине, чун ыратăвĕ тамалнине туймарĕ. Тата тепĕр стакан ярса ĕçрĕ те лавккине хупма мансах куçĕ ăçталла курать, çавăнталла тухса сĕнкĕлтетрĕ. Юрать-ха, лавккана уçах хăварнине тавар туянма пынă çынсенчен пĕри курнă. Вăл хурала çын хăварса Петриванăн мăшăрĕ патне чупнă. Тата тем инкек курасси пурччĕ-ха.

Хĕрачине паян яла илсе килессине те пĕлет ашшĕ. Правление машина ыйтма кĕрсен илтрĕ вăл ку хыпара. Пĕр машинипе Петриванăн районтан тавар кўрсе килмелле, тепри урăх ĕçпе Хусана каять, çула май Нинăна илсе таврăнать. Тавар тиеме кайнă лавккаçă тем пек хыпаланчĕ пулин те, каçчен яла çаврăнса çитеймерĕ.

Усал хыпар утпа çўрет. «Шăши Нинине яла илсе килнĕ. Сăнĕ-пичĕ çав тери суранланса пĕтнĕ, палламалла та мар», — текен сас-хура ялĕпех саланчĕ. Çак хыпара илтсен ăна вăрттăн кучченеç çитерекен асламăшĕн чĕри çĕçĕпе тирнĕн чиксе ыратса кайрĕ. Тухса чупĕччĕ мăнукĕ патне — Виркка уйрăлса кайнăранпа икĕ çемье пĕр-пĕринпе пачах хутшăнмасть.

Тата... ывăлĕн тахçантанпах урăх арăм пур, вăл сиввĕн пăхĕ. Унран тем те кĕтме пулать. «Çăматăшăн та еплерех харкашу çĕклерĕ, — ватă хĕрарăм темиçе çул каярах пулса иртнĕ хирĕçĕве аса илсе ассăн сывларĕ. — Петриван тăван хĕрне пĕр мăшăр çăматă йăваласа панăшăн çука юлатчĕ-ши ĕнтĕ вĕсен çемйи? Ним тусан та партармарĕ вĕт кинĕ. Хытах вăрçăнса илчĕç Петриванпа ун иккĕмĕш мăшăрĕ. Çăвар урлă çăматă калăпĕпе тивертсен те парăнмарĕ кин. Ах, Нинукăм, Нинукăм», — кинĕ курасран асăрханса куççульне вăрттăн шăлчĕ ватă çын. Чи йывăр самантра мăнукĕ çумĕнче пулма, ăна пулăшма, ăшă сăмахпа та пулин лăплантарма май çуккишĕн кулянчĕ вăл.

Тăван ялĕнче хăйĕншĕн тата тепĕр çын, тăван чун, ниçта кайса кĕрейми хыпса çуннине хĕрача чухлама та пултараймарĕ.

Нинăна урапа çине куçарса вырттарчĕç, киле илсе çитерчĕç. Пӳрте виле пытарнă чухнехи пек халăх пырса тулчĕ. Пурте макăраççĕ. Ӳлени те нăшăклатни кăна илтĕнсе тăрать. Çак таранччен хĕрне куççуль кăтартман амăшĕ те чăтаймарĕ пулас, çурăмпа çаврăнса тăчĕ, хулпуççийĕсем чĕтреççĕ хăйĕн, апла тăк вăл та йĕрет. Нина, шкап çумне таянса ларнăскер, вăйĕ пĕтсе, куçĕ хуралса килнине сисет. Акă вăл каллех таçта тĕттĕм шăтăка анса кайрĕ.

— Мĕн тăватăр эсир?! Çын чĕрĕ юлнă! Пурăнасшăн! Эсир ăна чĕрĕллех шăтăка чикесшĕн-и? Вилĕмрен çăлăннăскере тепĕр хут вĕлересшĕн-и? Чарăнăр халех ӳлеме! Чарăннă пултăр! — тахăшĕн хаяр сассипе тăна кĕчĕ Нина. Куçне уçрĕ те майралла тумланнă хĕрарăма курчĕ. Кам вăл? Ыттисем камсем? Сăнĕсене таçта курнă пек, анчах уçăмлăн астумасть. Хăрушă авари унăн чечеклĕ çамрăклăхне çеç мар, астăвăмне те пурнăçа икке уйăракан тĕпсĕр çырма леш енне пăрахса хăварнă. Нина каярахпа кăна, вăхăт иртнĕ май, пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн аса иле

пуçларĕ. Хăшне хăех, хăшне килтисем, амăшĕ каласа панă тăрăх пĕлет.

Макăракан çынсене кăшкăрса чараканни мучăшĕн ывăлĕн арăмĕ, Варвара Сидоровна, иккен. Колхозра зоотехникра ĕçлекенскер майралла тумланса çӳрет. Çавăнпа Саливанпа Кирук куккăшĕсем, Манюккапа Альтук инкĕшĕсем ăна майра кин теççĕ. Нинăна илсе килнине пĕлсен Варвара Сидоровна та вĕсем патне кĕрсе тухма шутланă.

Саланчĕç çынсем. Пӳртĕн малти пӳлĕмĕнче амăшĕпе Варвара Сидоровнăсăр пуçне никам та юлмарĕ. Нина тăван кил ăш-чиккине куçпа сăнаса çаврăнчĕ. Акă вăл хăйĕнпе, аваричченхи çамрăк та хитре хĕрачапа, тĕл пулчĕ. Сăнӳкерчĕк çинчен ун çине пĕр кашăк шывпа çăтса ямалла илемлĕ хĕрача тинкерет. Куçĕсем тем пысăкăш. Хаваслă хăй. Пăхать, пăхать ун çине Нина. Халĕ вăл ăна хăй пек те мар, хăйĕнпе пĕр ятлă тантăшĕ пек туйăнать. Анчах вăл тек кунта çук, яланлăхах, ĕмĕрлĕхех таçта аяккааякка тухса кайнă, вĕсем иккĕшĕ тек нихăçан та, нихăçан та тĕл пулас çук.

Шухăшран каллех инкĕшĕ вăратрĕ:

— Вăрăм çул ывăнтарать те, выçтарать те. Апатланар. Нина валли ятарласах автан шӳрпи пĕçерсе килтĕм. Шĕвĕ хăйма сыптарăпăр. Килти апат больницăри мар, тутлăхлă та, сиплĕ те. Кĕçех вăй илетĕн акă. — Сусăр хĕре шеллесе пĕр сăмах та каламарĕ Варвара Сидоровна. Çав сăмахсем аманнă хĕрача чунне тата ытларах хуçасса ăнланать вăл. — Апат хыççăн выртса канăн.

Майра кин кайран та манмарĕ ун çинчен, район центрне кайкаласа çӳрекенскер кашнинчех Нина валли улма-çырла сĕткенĕ илсе килет.

Çын сăмахĕ, шеллесе юриех йăпатни те, хăртса е йĕрĕнсе калани те, суранран та ытларах ыраттарать иккен. Суран вăхăт иртнĕ май тӳрленет те, ун çинчен манатăн. Йывăр сăмах вара пĕрре чуна кĕрсе

вырнаҫать те — виличчен те асран тухмасть. Кун пеккине Нина каярахпа, Шупашкара таврӑнсан, темиҫе хут та тӳссе ирттернӗ. Хӑйӗн ҫине алӑ хурса вилме сӗнекен те пулнӑ. Ырри чӗмсӗр, усалли сӗмсӗр тесе ахальтен каламан.

Ялта пит нумаях пурӑнмарӗҫ Нинӑпа амӑшӗ, больницӑсем ҫывӑхнерех пулас тесе Шупашкара куҫса кайрӗҫ. Амӑшӗн ӗҫе ҫӳремелле. Тата тепӗр сӑлтав та пур: темле туслӑ пурӑнсан та Нина пек сусӑр ҫынна пысӑк ҫемьере канлӗх пулас ҫук. Юрать-ха, Шупашкарта хӑйсен пӳлӗм пур, уншӑн Виркка — комбинатра ӑна Вера Терентьевна теҫҫӗ — Тамара Васильевнӑна тав туса та пӗтерейместь. Шупашкартан Хусана ҫӳреме те ҫӑмӑлрах. Ятарласа машина тытмалла мар, автобуспа та, ҫуллахи вӑхӑтра Атӑл тӑрӑх та ҫитме пулать. Нина калаҫайманран Хусан больницине ӑна кашнинчех амӑшӗ леҫсе хӑварать, кайса илет.

Хӗрача пӗчӗккӗн-пӗчӗккӗнех больница пурнӑҫне хӑнӑхса пырать. Медсестрасем те, тухтӑрсем те унпа вашават калаҫаҫҫӗ, шӳтлесе кӑмӑлне ҫӗклеме тӑрӑшаҫҫӗ. Хӑйӗнпе пӗр ятлӑ медсестра уйрӑмах тарават, тем те пӗр шутласа кӑларать тата.

— Санпа эпир ахаль-махаль Нинӑсем мар, Хрущев арӑмӗпе пӗр ятлӑскерсем. Вӑл — Нина Петровна, эсӗ — Нина Петривановна. Хрущев арӑмӗ ватӑ, эсӗ — ҫамрӑк. Акӑ тытатпӑр та яратпӑр сана Мускава. Хрущев пӗр-пӗр ют ҫӗршыва илсе каять те, унтан эсӗ чиперкке пулса таврӑнатӑн, — куларах каласа хучӗ вӑл пӗр кунхине. — Мускава яриччен кунта хамӑр кӑштах сиплер-ха.

Шарламасть Нина, хуравлас тесен те пӗр сӑмах та калаймасть вӑл.

Ак хайхи! Нумай вӑхӑт иртрӗ-и унтанпа, сахал-и, пӗр ирхине медсестра Нинӑна сиплесех вӑратрӗ:

— Тӑр-ха, Нина, вӑран. Эх, Нинукӑм, пӗтрӗ иккен сан Мускава каясси. Хрущева хӑй вырӑнӗнчен

кăларнă, — чăннине каланă чух та шӳтлеме пăрахмасть медсестра.

Больницăри çынсем апат çисе ларнă чух та самана улшăнасси çинчен сăмахлаççĕ, Хрущев вăхăтĕнчи паллăрах пулăмсене аса илсе калаçаççĕ.

— Трон çинчен тĕксе ячĕç иккен куккурус корольне.

— Куккурусĕ вăл сиен туман-ха пире. Швешийла çисен ун çăнăхĕнчен тунă кулачă çав тери тутлă, кăпăшка, ырă шăршăллă.

— Куккурус ăçта лайăх çитĕнет, ăçта вара чĕркуççирен кăшт кăна çӳллĕрех ӳсет. Апла тăк тупăш мар, тăкак кӳрет. Хрущев вара çак культурăна хистесех актаратчĕ. Çитет ĕнтĕ. Куккуруса выльăх çитĕр, сĕтел çинче вара ыраш çăкăрĕпе тулă кулачи тăраниччен çимелĕх пултăрччĕ.

— Эх! Канса кураймарăм Ялтăра. Никита Сергейч Крыма Украинăна парнелерĕ — çавă япăх.

— Уншăн мĕн кулянмалли? Ют çĕршыв территорийĕ пулса тăман вĕт, СССРтах юлнă. Паянах кайса канма пултаратăн, никам та чармасть.

— Çапах та... Çĕр вĕт вăл, нумай-нумай çын пурăнакан территори. Парнелесе пама вăл кĕрĕксăхман та мар, ăратлă лаша та мар. Крымра пурăнакансенчен, çав çĕр хуçисенчен, ыйтса та тăмарĕ вĕт, мур илесшĕ.

— Камран мĕн ыйтнă вăл? Вак халăхсене вырăслантарма кам ирĕк панă ăна? Чăваш шкулĕсене вырăс чĕлхи çине куçарчĕ. Çапла тусан ачасене аслă вĕренӳ заведенине кĕме çăмăлрах пулать иккен.

— Хăвăр çине тăрайман пулĕ? Тутар çамрăкĕсем вуза кĕнĕ чух та тутарлах экзамен тытаççĕ.

— Темле тиркесен те, Хрущев — хăюллă çын. Америкăна «Кузькина мать» кăтартассипе хăратнă вĕт. Уринчи пушмакне хывса юнанă теççĕ.

— Те юнамаллипех юнанă ĕнтĕ, те пустуй калаçаççĕ? Тет хыççăн ĕненсе пĕтер-ха.

— Çĕнĕ генеральнăй секретарь мĕнле çын-ши?

— Пурăнсан куратпăр ак.

«Авă кам хушнипе чăвашла калаçма чарнă иккен пире, — шухăшласа илчĕ Нина, калаçăва шăппăн итлесе лараканскер. Вăл халиччен нихăçан та политикăпа интересленмен. «Кузькина мать» мĕнне те пĕлмест, ялта апла-капла сăмахсемпе перкелешмеççĕ те — нихăçан та илтмен кун пек каланине. — Килет-и Хрущев, каять-и — ман пурнăçра халь тин нимĕн улăштарма та май çук», — шухăшлать хĕрача.

Авари хыççăн виçĕ çултан тин Нинăн сасси уçăлса çитрĕ. Ку уншăн питĕ пысăк савăнăç, инкеке çĕнтерсе тунă тепĕр утăм пулчĕ. Çак утăма вăл Евгения Алексеевна пулăшнипе турĕ. Акă хĕр каллех Хусана кайма пуçтарăнать. Хальхинче вăл больницăна сипленме кăна мар, хăй чунтан хисеплекен тухтăра тав тума та каять. Сăлтавĕ те пур: Домрачева профессор çитмĕл пилĕк çул тултарать. Пур-çук укçине шеллемерĕç амăшĕпе хĕрĕ, суту-илӳре ĕçлекен пĕлĕшĕ пулăшнипе «Красная Москва» текен чи хаклă духие туянчĕç. Кĕçех Нина çула тухрĕ.

Евгения Домрачевăна халалланă наукăпа практика конференцийĕ Сергей Владимирович Курашов ячĕллĕ патшалăх медицина институтĕнче пулатьмĕн. Тухтăрсем хăйсемпе пĕрле Нинăна та лартса кайрĕç. Зал туллиех халăх. Профессора саламлама унăн вĕренекенĕсем, хăйсем те пысăк ăстаçа тухнă сиплевçĕсем, çĕршывăн таçти-таçти кĕтесĕнчен те пухăннă. Юбиляр президиумра ларать, умĕнчи сĕтел çинче — ытармалла мар хитре розăсем.

— Духие кайран парнелĕн, конференцире никам та парне памасть. Тухса тав сăмахĕ каланипе те çитет, — ăнлантарчĕ хĕрачана хăйпе юнашар ларакан Надежда Фоминична врач. — Кӳр парнӳне, эс Евгения Алексеевнăна саламлама тухнă хушăра хам тытса ларам.

Нина хӑйне сӑмах парсан ура ҫине тӑчӗ, сцена еннелле утрӗ. Утма утрӗ те-ха... Чим, кӗсийинчи хут татӑкӗ ҫук-мӗн. Калас тенӗ тав сӑмахӗсене вӑл ҫырсах хатӗрленӗччӗ, хучӗ вара парнене чӗркенӗ хаҫат ӑшӗнче тӑрса юлнӑ. Эккей! Халь мӗн тӑвас-ха? Хӗрача таврӑнас шутпа чарӑнса тӑчӗ. Ҫак вӑхӑтра Нинӑна тӳрех палласа илнӗ профессор сӗтел хушшинчен тухрӗ те хӑйӗн пациенткине хирӗҫ утрӗ, ӑна сцена ҫине хӑпарма пулӑшрӗ.

— Юбилей ячӗпе Сире чӗререн саламлатӑп... Хама вилӗмрен ҫӑлса хӑварнӑшӑн тав тӑватӑп, — терӗ хӗр сисӗнмеллех пӑлханса. Унтан ним калама аптӑраса ҫухалса кайрӗ. Анчах ҫакна никам та циссе юлаймарӗ, мӗншӗн тесен ҫав самантрах профессор Нинӑна ыталаса илчӗ.

— Маттурскерӗм, эсӗ калаҫма пуҫларӑн-и? Сассу уҫӑлчӗ-и? Мӗн тери савӑнтартӑн эс мана паян! — Пурнӑҫӗнче тем те курнӑ хӗрарӑм хирург хӑй те хумханса кайрӗ пулас, куҫӗсем шывланчӗҫ. Ҫак пӑлхануллӑ саманта асӑрхаса трибуна умне больницӑн тӗп врачӗ тухрӗ, кӗскен Нинӑн чир историне каласа пачӗ. Евгения Алексеевна хӗре ытамӗнчен ямасӑрах зал еннелле ҫаврӑнчӗ те ҫапла хушса хучӗ: — Нина пек пысӑк хӑрушлӑха кӗрсе ӳкнӗ ҫынсем вилӗме ҫӗнтерсе тепӗр хут ура ҫине тӑни пирӗншӗн, шурӑ халатлӑ ҫынсемшӗн, — чи пысӑк парне.

Залра ларакансем тӑвӑллӑн алӑ ҫупса ячӗҫ. «Маттурсем! Маттурсем! Маттурсем!» — харӑссӑн кӑшкӑраççӗ вӗсем. Ылтӑн алӑллӑ профессора мухтаса ҫеҫ мар, ҫирӗп чунлӑ хӗре хавхалантарса та алӑ ҫупаççӗ вӗсем. Ҫакна Нина чунӗпе туйрӗ.

Конференци хыҫҫӑн тухтӑрсем ҫирӗп асӑрхаттарса каларӗҫ: «Хыттӑн кӑшкӑрса калаҫма, юрлама юрамасть санӑн. Сассу каллех шала кайма пултарать».

Юрлас шухӑш-и вара Нинӑн? Вӑл вӗт килтинчен ытларах больницӑра пурӑнать. Ун ҫулӗнчи хӗрсем уяв валли капӑр тум хатӗрлеççӗ, Нина ҫӗнӗ кӗпе

çĕлеттерет пулсан тӳрех паллă: больницăна кайма пуçтарăнать. Атăл хĕрринче алла-аллăн çавтăнса çӳреççĕ-и яшсемпе хĕрсем, вăййа тухаççĕ-и, кинона е театра каяççĕ-и — ку савăнăçлă пурнăç ун валли мар. Яш-кĕрĕм çине ăмсанса пăхмасть Нина, шăпине те ӳпкелемест. Хăйĕн ыттисенчен расна пурнăçне хăнăхрĕ вăл. Хусанти больницăра вара ун пĕлмен кĕтес те юлмарĕ. Черетлĕ операци хыççăн кăштах вăй илет те чирлисене пулăшма тытăнать. Уйрăмах ачасем юратаççĕ ăна. Амăшĕсем кашни кунах пырса çӳреймеççĕ вĕсем патне, Нина аппа вара яланах кунта. Мĕн пĕчĕкрен ача пăхса ӳснĕскер хăвăртах пĕр чĕлхе тупать вĕсемпе. Çӳçе хитре хăюпа çивĕтлесе ярать, халапсем каласа, кĕнеке вуласа парать, çыру та çырать. Тата питĕ хăюллă хăй: «Укол тутарма, пӳрнерен юн пама нимĕн чухлĕ те хăрушă мар», — тет. «Мĕнле хăрамасть-ха вăл?» — тĕлĕнеççĕ пĕчĕккисем. «Нина аппа, юн пама манпа пĕрле пырсам, тархасшăн. Санпа чух эп те хăрамăп», — чĕнет кам та пулин. Каять вара Нина пĕчĕкскерне çавăтса. Ачана процедура пӳлĕмне кĕртсе ярать те хăй алăк умне тăрса юлать. Лешĕ шалта Нина аппăшне чĕнсе макăрма пуçлать. «Кĕр атя ачу патне, атту вăл лăпланас çук», — тет медсестра алăка уçса.

Пилĕк çулти Анюта уйрăмах хăрать пӳрнерен юн пама. Пĕччен ним тусан та кĕмест процедура пӳлĕмне. Нина кĕрсе ăна хăйĕн чĕрçиййĕ çине лартать те ыталаса илет. Хăранипе йĕп-йĕпе тара ӳкет хĕрача, аппăшĕ çупăрланăран чăтса ларать, тапкалашмасть, çапкалашмасть. Унăн шыçса кайнă шăл тунине сиплес умĕн те Нинăнах пырса чĕнчĕç. Ни амăшĕ мар вăл уншăн, ни тăван аппăшĕ мар, çапах та вăл çумра чухне ача хăйне хӳтлĕхри пек туять пулас. Сиплев пĕтиччен ăна аллинчен тытса кресло çумĕнче тăчĕ Нина.

Шăл сиплекен уйрăмра выртакан Анюта патне ашшĕ килсе çӳрет-ха, амăшĕ вара пĕрре те курăн-

марӗ. Те кӑкӑр ачи пур унӑн, те хӑй чирлӗ, те пӑрахса кайнӑ, те вилнӗ — кам пӗлет ҫын ҫемйине?.. Ҫак хӗр пӗрчи Нинӑна уйрӑмах юратса пӑрахрӗ. Шит те уйрӑлмасть. Кӑнтӑрлахи канура та, каҫхине те ун кравачӗ ҫинчех ҫывӑрса каять. Нина пӗчӗкскерне ачашшӑн йӑтса илет те шӑл чирӗсене сиплекен уйрӑма леҫет. Юрать, инҫе утмалла мар.

Акӑ ӗнтӗ Анютӑна киле илсе каяҫҫӗ. Ашшӗ ӑна тумлантарнӑ. Ним тусан та тухасшӑн мар хӗрача больницӑран. «Нина аппасӑр ниҫта та каймастӑп!» — терӗ те хайхискер ашшӗн аллинчен вӗҫерӗнсе хӑнӑхнӑ палата еннелле чуптара пачӗ.

— Мӗнле те пулин ӳкӗте кӗртсем ӑна киле каймашкӑн, — йӑлӑнать Нинӑна Анютӑн ашшӗ.

Больницӑра тупӑннӑ аппӑшӗ пӗчӗк тусне ӑшшӑн ыталаса илчӗ.

— Анюта йӑмӑкӑм, юратнӑскерӗм, акӑ эсӗ сывалса та ҫитрӗн. Сана киле илсе каяҫҫӗ. Тек нихӑҫан та ан чирле. Эпӗ те пырӑттӑм санпа пӗрле, анчах манӑн сурансем, хӑвах куратӑн, тӳрленсе ҫитмен. Ҫавӑнпа санпа пӗрле пыраймастӑп, хальлӗхе больницӑрах юлма тивет. Пӗчӗкскерӗм, ан кӳрен мана. Эп кунта пулатӑп, ҫав тери тунсӑхласа ҫитсен килсе курма пултарӑн, — йӑпатать хӗр Анютӑна.

Ҫапла калаҫкаласан кӑна хӗрача ашшӗпе юнашар утса кайрӗ. Хӑй пӗр вӗҫӗм каялла ҫаврӑна-ҫаврӑна пӑхать.

Больница пурнӑҫӗ ҫапла вӑл, инкекпе чир-чӗр ҫынсене пӗр-пӗринпе хӑвӑрт ҫывӑхлатаҫҫӗ. Ыратать тесе кунӗн-ҫӗрӗн нӑйкӑшса выртаймӑн. Сывӑ пуҫпа никам та килсе выртмасть вӗт кунта. Ыратаканни пурин те пур, пурпӗрех чӑтаҫҫӗ, шӳтлеме-кулма та хал ҫитереҫҫӗ. Хӑш чухне мыскара та пулкалать. Пӗр пӑтӑрмаха Нина та ҫакланчӗ.

Чирлисенчен нумайӑшӗ тутарла калаҫать. Нина вӗсен пӗр сӑмахне те ӑнланмасть. Хӑй вара тутар ялӗнчен килнӗ пӗр мучипе час-часах шашкӑлла, до-

минолла вылять. Мучийĕ япăх мар-ха, тулĕк çав тери çĕтĕк кăмăлласкер, ялан мăкăртатать, тӳрех тарăхса каять. Çавăн кăмăлне уçас тесе чăваш хĕрĕ ик-виç сăмах та пулин тутарла вĕренме шут тытрĕ. Тутар хĕрарăмĕ хăйсен палатинчех пур. Шутсăр шӳтлеме юратаканскер хăй. Операци хыççăн кулма çук — сурансем ыратаççĕ. Ун вара шăп та лăп çав вăхăтра кулăш хутаççи салтăнса каять. Çĕвĕ ан хускалтăр тесе суранĕсене ал лаппипе пусарса тытса кулаççĕ чирлисем.

— Апачĕ тутлă пултăр тесе тутарла калама вĕрент-ха мана, — терĕ çав хĕрарăма Нина.

— И-и-и, ăна каласси пиçнĕ апата антарассинчен те ансат, — терĕ те хайхискер пĕр кĕске предложени калама вĕрентрĕ.

Кăнтăрлахи апат вăхăтĕнче Нина шашкăлла выляма юратакан мучипе пĕр сĕтел хушшине пырса ларчĕ. Лешĕ чашăкри яшкана кашăкпа тиркевлĕн пăтратать. Мĕн çавăрттарать-ши ĕнтĕ? Больницăри яшка чашăкне никам та чышкă пысăкăш какай татăкĕ хурса парас çук. Нина мучи çине пăхса йăл кулчĕ те тутар хĕрарăмĕ вĕрентнĕ сăмахсене каларĕ.

Тутарла пĕлекенсем тӳрех ахăрса кулса ячĕç. Старик вара пĕрре шуралса, тепре хĕрелсе кайрĕ. Нина хăвăрт ура çине сиксе тăман пулсан лешĕ яшка чашăкне унăн пуçĕ çине ним мар тăхăнтартатчĕ пулĕ.

— Апачĕ тутлă пултăр тесе çеç каларăм-çке эп сире. Мĕншĕн каплах тарăхса кайрăр? — ыйтрĕ Нина мĕн пулнине ăнланмасăр.

— «Çиен-çиен, хăçан тăранан-ши эс?» тесе калама вĕрентнĕ сана, — теççĕ апат çисе ларакансем çаплах кулма чарăнаймасăр. — Кун пек калани «Çиен-çиен, хăçан вилен-ши эс?» тесе каланипе танах.

Кăштахран мучи хăй те кулса ячĕ. Çав пăтăрмах хыççăн старикĕн кăмăлĕ улшăнчĕ. Вăл мăкăртатма, вăрçăнма пăрахрĕ. Шашкăлла е доминолла выляс килсен Нинăна хăех пырса чĕнет.

Студентсенчен те ютшăнма пăрахрĕ хĕрача. Тухтăр пулма вĕренекенсем больницăна час-часах пырса çӳреççĕ. Профессорсем вĕсене Нина выртакан палатăна та илсе кĕреççĕ. Хĕрача хăйĕн чир историне, мĕнле операцисем тӳссе ирттернине каласа кăтартать. Лайăх тухтăр пулас тесен студентсен йăлтах хăйсен куçĕпе курса вĕренмелле. Вĕренччĕр. Пархатарлă професси суйласа илнĕ вĕсем.

Пĕррехинче пиллĕкмĕш курс студенчĕсем пынăччĕ. Евгения Алексеевна вĕсене кунта сипленекенсен чир историйĕсене ыйтса пĕлме хушнă-мĕн. Каччăсенчен пĕри Нинăн кравачĕ патне пырса ларчĕ, хĕртен вăл хăçан, ăçта çуралнине, миçемĕш çулта аварие лекнине, ăçти больницăсенче сипленнине ыйтса пĕлчĕ те кайрĕ. Тепĕр ик-виç кун иртрĕ-и, Домрачева профессор темиçе студента палатăна илсе пычĕ. Вăл хайхи качча Нинăн чир историне каласа пама хушрĕ. Лешĕ хĕртен унччен мĕн ыйтса пĕлнине каласа пачĕ те шăпланчĕ.

— Нина, эсĕ ăна туллинрех каласа памарăн-им? — хĕр енне çаврăнчĕ профессор.

— Вăл мана мĕнле ыйту панă, пурне те хуравларăм, — тавăрчĕ Нина.

— Авă мĕн. Халĕ хăвăн чир историне тепĕр хут каласа пар-ха çаксене, — терĕ профессор.

Нинăн диагнозĕсем темĕн чухлех, вăл вĕсен медицинăри ячĕсене пăхмасăр пĕлет. Операцийĕсем те темĕн чухлех пулнă. Вĕсенчен хăшне хăçан, мĕн сăлтавпа тунине, ун хыççăн сурансем епле ӳт илнине, хăйне мĕнле эмелсемпе сипленине йăлтах каласа пачĕ вăл.

— Эсир — ыран-паян дипломлă хирург пулас çынсем. Нина вара тăхăр класс çеç пĕтернĕ. Сире тыттарас диплома ăна памалла, — терĕ Домрачева студентсем хăйсен тивĕçне çителĕксĕр, çиелтен кăна тунипе кăмăлсăр пулса.

Вĕренекенсем çеç мар, Нина хăй те аванмарлан-

са кайрĕ. «Тĕплĕн ăнлантарса пама пĕлмерĕм пулас тесе каламаллаччĕ иккен. Мана пула каччă сăмах илтрĕ», — ӳкĕнчĕ вăл хăй ăшĕнче.

Студентсем ăна кӳренмерĕç. Виççĕн-тăваттăн харăсах сырса илчĕç те интересленсех унпа калаçма пуçларĕç.

— Нина, манпа пĕрле паян института пыраймастăн-и? — ыйтрĕ пĕррехинче Кольцова профессор.

— Пырăттăм та, Любовь Александровна, илемлĕ яш-кĕрĕм умне çак сăн-питпе тухса тăрасси вăтантарать мана.

— Пачах та ан вăтан. Вĕсен шăпах сан пек аманса сусăрланнă çынсене сиплеме вĕренмелле. Сана унта никам та кӳрентерес çук. Кăнтăр апачĕ хыççăн машина килет, водитель сана каялла леççех ярĕ.

Утса çӳрекен чĕрĕ кăтарту пособийĕ пулса студентсем патне аудитори кайрĕ Нина. Ун хыççăн вăл медицина институтĕнче экзаменсем вăхăтĕнче те пулнă. Ай-ай йывăр иккен дипломлă тухтăр пулма. Преподавательсем мĕнле кăна ыйту памаççĕ-ши студентсене! «Çак хĕрĕн пичĕ хытă аманни пăхсах курăнать. Ӳт илнĕ суран айĕнче мĕн пулма пултарать?» — ыйтрĕç пĕринчен. Лешĕ тӳрех калайманнине кура Нина пит шăммисене сыпăнтаракан пластинăсем çинчен шăппăн систерме хăтланчĕ.

— Ниночка, эпир экзаменра, пулас хирург хăй хуравлатăр, кунта пулăшма юрамасть, — чарчĕ ăна Кольцова.

Пурăнан пурнăçра тем тĕрлĕ инкеке лексе аманакан питĕ нумай-мĕн. Сывă çынсем асăрхасах та каймаççĕ çакна, больницăра вара тӳрех курăнать. Амăшĕн варĕнченех тĕрĕс мар тута-çăварлă çуралакансем те сахал мар. Надежда Фоминична шăпах çавăн йышши чирсене тĕпчесе диссертаци çырать. Нина ăна пулăшма та май тупрĕ: операцие килнисен карточкисене ачасен çуралнă çулĕсем тăрăх, вĕсем пурăнакан районсем тăрăх уйăрать. Хăш ра-

йонта, миçемӗш çулсенче сывӑ мар ачасем ытларах çуралнине тишкерсе çакӑн сӑлтавӗсене тупасшӑн Надежда Фоминична. Сӑлтавне пӗлсен ытти мӑшӑрсене çакӑн йышши инкекрен асӑрхаттарма, упраса хӑварма пулать вӗт.

Сывлӑхӗ лайӑх пулас тӑк Нина халь пач иккӗленмесӗр пӗр-пӗр медицина училищине вӗренме кайӗччӗ. Шурӑ халатлӑ çынсем мӗн тери пархатарлӑ ӗç тунине вӑл куллен курса тӑрать. Унӑн та вӗсем пек пулас килет. Шел, нумай вулама-çырма юрамасть, тӳрех пуç ыратма тытӑнать. Çавӑнпа Надежда Фоминична ӑна çӑмӑл ӗçсем кӑна тутарать. Çук, унпа усӑ курас тесе мар, хӗр ним тумасӑр ларса тунсӑха путасран. Нина хӑй те туртӑнать ун патне. Надежда Фоминична каçхи дежурствӑна юлсан, ытти сиплевçӗсем кайса пӗтсен вӑл тӳрех тухтӑр патне кабинета кӗрет. «Пирӗн профессор ӗçлеме кайрӗ», — шӳтлеççӗ вара унпа пӗр палатӑра выртакансем.

Надежда Фоминична хӑй те вӗсен палатине кӗмесӗр пӗр кун та ирттермест. Пӗр кунхине тухтӑр хӗре амӑшӗ пек ӑшшӑн ыталарӗ те çамкинчен чуптуса илчӗ.

— Мӗскер эсир, Надежда Фоминична, мана, хӑрушла таса мар питлӗ çынна, чуптӑватӑр, — терӗ Нина хӑйӗнчен хӑй вӑтанса.

— Таса марри эсӗ мар вӑл. Эсӗ — чи-чи таса та сӑваплӑ чун. Таса маррисем çинчен эп сана кайран ятарласах каласа ӑнлантарӑп. Ку больницӑра темле çын та пур, хӑшӗсенчен чир те ерме пултарать. Çавӑнпа ытти пациентсемпе хутшӑннӑ чух питӗ асӑрханмалла, — тавӑрчӗ ӑшӑ та çемçе кӑмӑллӑ тухтӑр.

Юрату çинчен ӗмӗтленсе чуна ыраттарма хушманччӗ Нинӑна Евгения Алексеевна. Çамрӑк чӗре çамрӑклах тапать иккен. Тухтӑра вӗренекен, пушӑ вӑхӑтра больницӑра ӗçлекен Володя чирлисен палатисене пӗрмаях кӗрсе çӳрет, аварие лекнӗ хӗр сыв-

лăхĕпе ытларах интересленет. Çамрăкскерне шеллет пуль ĕнтĕ. Сăнĕпе те, кĕлеткипе те килĕшӳллĕ каччă вăл. Кăмăлĕ те ырă, вĕçкĕнленесси, хăйне мăнна хурасси çук. Ахальтен мар пуль çамрăк медсестрасем ун çывăхнерех пулма тăрăшаççĕ. Хăй сисмесĕрех Нина та Володьăна кĕте пуçларĕ. Каччă пĕр кун та пулин сиктерсен хĕре çав тери тунсăх пусса илет. Шухăша кайса выртать-выртать те тăрса ларать, кравать çумĕнчи тумбочкăран пĕчĕк тĕкĕр кăларса пичĕ çине пăхса илет. Унтан вăрăммăн сывласа ярать те тĕкĕре каялла чиксе хурать, хурлăхне сирес тесе алла пĕр-пĕр кĕнеке тытать. Володя укол тума килсен уйрăмах аванмарланать хĕр. Хăш чухне юриех çывăрам пек туса выртать, кайтăрччĕ, кайтăрччĕ часрах тесе кĕлтăвать. Анчах çамрăк тухтăр кайма шутламасть те. «Селентерова, вăран, укола ăна вăхăтра тумалла. Хатĕрлен», — тет. Хĕрача вăтана-вăтана утиялне кăшт кăна сирет те кĕпе аркине купарчи тĕлĕнче шăрпăк курупки вырнаçмалăх уçать. Хĕрача вăтаннине туять Володя, çавăнпа ятламасть ăна.

Пĕр кунхине хĕрача больница çывăхĕнчи лавккана тухса кĕчĕ. Палатăран тухайман сусăр чылай кунта. Вĕсене Нина апат-çимĕç, хаçат-журнал туянса килсе парать. Хальхинче тахăшĕн валли пан улми йăтнăччĕ. Сасартăк вăл курах кайрĕ: ăна хирĕç Володя утса килет.

— Авă ăçта иккен эсĕ, Селентерова. Эп сана палатăра шырарăм, эсĕ вара картишĕнчи чечексемпе киленме тухнă иккен. Сывлăху чиперех-и? — терĕ Володя чарăнса.

Нина куçĕ каччă куçĕпе тĕл пулчĕ. Кăрт турĕ хĕр чĕри, пĕтĕм кĕлетки пĕр тăрук вĕриленсе кайрĕ. Юрать, çын чун-чĕринче мĕн пулса иртнине ыттисем курмалла туман.

— Чиперех, — терĕ те Нина палатăна васкарĕ. Унта вăл паян пĕчченех, чирлисем сывалса килĕсе-

не кайнӑ, ҫӗннисем килмен. Хӗр кравачӗ ҫине ларса тӗкӗр туртса кӑларчӗ. Сасартӑках ӑна урайне ҫаӑрса ҫапрӗ те вӗтӗ-вӗтӗ ванчӑксем пуличчен таптаса аркатрӗ, унтан кравать пуҫӗ ҫине тайӑнса сасӑпах йӗрсе ячӗ.

Авари пулнӑранпа пӗрремӗш хут куҫҫульне чараймарӗ Нина, чун каниччен макӑрчӗ. Хӑйӗн чӗринче мӗнле туйӑм йӑва ҫавӑрма пуҫланине ӑнланчӗ вӑл. Вӑй илме памалла мар унӑн ҫак туйӑма. Вӑл ӑна телей мар, асап кӑна кӳрӗ.

Ҫакӑн хыҫҫӑн хӗрача асӑрханма пуҫларӗ. Хӑйӗн Володьӑна ҫав тери курас килет. Лешӗ больницӑна килессе чӑтаймасӑр кӗтет вӑл, коридор вӗҫӗнче паллакан сасӑ илтӗнсенех ӑҫта та пулин пӑрӑнать. Кӗҫех Нинӑн Шупашкара таврӑнма вӑхӑт ҫитрӗ. Ҫакӑншӑн вӑл кӑштах савӑнчӗ те, чӗрине ыраттаракан туйӑмӗ тамаласса шанчӗ.

Хусана тепре килсен больница темшӗн пушшӑн кӗтсе илчӗ Нинӑна. Тухтӑрӗсем те ҫавах, чирлисем те сахал мар, анчах чунра ӑнланмалла мар пушӑлӑх янӑраса тӑрать. Кӑштахран пӗлчӗ хӗр ҫакӑн сӑлтавне: Володя ҫук иккен, вӗренсе пӗтерсе Чулхулана куҫса кайнӑ.

## Виҫҫӗмӗш сыпӑк

Унтанпа вӑхӑт чылаях иртсе кайрӗ. Сывлӑхӗ самайланнӑ хыҫҫӑн Нинӑна пӗрремӗш ушкӑнран иккӗмӗш ушкӑнри инвалида куҫарчӗҫ. Анчах унӑн пӳлӗмре ларас килмест, вӑл ҫын хушшинче пулма, ирпе халӑхпа пӗрле ӗҫе кайса каҫхине киле таврӑнма ӗмӗтленет. Тантӑшӗсем пир-авӑр комбинатӗнче те, унталлах чун туртать. Юлашкинчен чӑтса тӑраймарӗ, тепӗр хут комиссие кайса хӑйне иккӗмӗш ушкӑнран виҫҫӗмӗшне куҫарма ыйтрӗ. Виҫҫӗмӗш ушкӑнри инвалидсен ӗҫлеме юрать. Хӗрачана кирлӗ справкӑна пӗр чӑрмавсӑрах туса пачӗҫ, анчах ун

тепĕр енне темĕн чухлĕ асăрхаттару çырса хучĕç: ăс-тăн ĕçĕ тума, йывăр йăтма, тусанлă, шавлă çĕрте, витĕр вĕрекен çил çинче ĕçлеме юрамасть, иккĕмĕш смена та ун валли мар... Тĕрлĕ чарусем çур страница чухлех çырса тултарнă.

Пир-авăр комбиначĕн кадрсен пайĕнче тимлĕн вуларĕç справкăна. Пай пуçлăхĕ ĕçе кĕрес текен хĕр çине пăхса илчĕ те:

— Ку справкăпа килте кăмака çинче кăна лармалла, — тесе хучĕ.

— Чим-ха, çын кăмăлне тӳрех хуçса хурар марха, — терĕ кăшт маларах кабинета кĕрсе тăнă хĕрарăм. — Пирĕн цехра акă сортировщица кирлĕ. Çав ĕçе пултармаллах вăл. Унта йывăр йăтмалла мар, тусан вĕçмест. Никам таваскатас çук ăна. Ĕçлетĕр хăй пултарнă таран. Сортировщица çук пирки брак нумай каять. Метр çурă е метр тăршшĕ татăксенчен минтер пичĕсем, саппунсем, ал шăллисем тата ытти вак япала çĕлеме пулать. Пăрахăçласа çĕтĕке ямалла мар вĕсене.

— Хăвăн цехна илетĕн пулсан — эп хирĕç мар. Илсе кайса вырнаçтар, — терĕ кадрсен пайĕн пуçлăхĕ.

Çапла майпа Нина тепĕр хут тăван комбината таврăнчĕ. Халĕ ĕнтĕ вăл та ĕçлĕ çын. Комбинат алăкĕсем ирхине ун валли те яриех уçăлаççĕ. Йышпа пĕрле вăл та цеха васкать. Ĕçĕ кăткăс мар унăн, анчах пушă вăхăт çук: çитсă, сатин, катан пир, перкаль, поплин татăкĕсене уйăрмалла, вăрăмраххисен тăршшĕне виççе çырса хумалла. Вунă-çитмĕл сантиметр тăршшĕ татăк-кĕсĕке тарасапа виççе уйрăм çыхăсем тумалла. Çитмĕл сантиметртан вăрăмрах пĕр йышши татăксене утмăл метр чухлĕ пухса çыхмалла та клеме çапмалла. Вĕсене лавккаринчен йӳнĕрех хакпа пасара илсе тухса курттăммăн сутаççĕ. Пасарĕ — Атăл хĕрринчи Хĕрлĕ площадьре. Нина хăй те кайса туянать çав çыхăсене. Вĕсенчен амăшĕ

минтерпе утиял пичĕсем, простыньсем, çывăрнă чух тăхăнмалли кĕпесем, тĕпелте усă курмалли саппунсемпе ал шăллисем тата тем те пĕр çĕлет. Куллен кирлĕ çак тавар лавккара туяннинчен чылай йӳне ларать.

Пĕчĕкрен ĕçе хăнăхнă хĕр вăр-вар та çаврăнăçуллă. Кахалланасси, чееленесси çук унăн. Нинăн ĕçченлĕхне, тăрăшулăхне кĕçех асăрхарĕç. «Санпа тан ĕлкĕрсе пыма çук, автомат пек ĕçлетĕн эсĕ», — теççĕ ĕçтешĕсем. Халăхпа пĕрле тимленĕ чух кун иртни те сисĕнмест. Унпа юнашар ăна кирек хăçан та пулăшма хатĕр çынсем пур. Савăнăçне те, хуйхи-суйхине те пĕр-пĕринчен пытармаççĕ вĕсем. Калаçăвĕ те кунта урăхла, чир-чĕр çинчен йăлтах манса каятăн. Кану кунĕсенче те пĕччен мар Нина. Профсоюз комитетĕнче ĕçлекенсем е пĕр-пĕр театра илсе каяççĕ, е концерта, е курава. Нинăн çитсе курман музей юлмарĕ. Ăна уйрăмах Атăл хĕрринче Успени чиркĕвĕн çуртĕнче вырнаçнă краеведени музейĕ килĕшет. Çак тăрăхра пурăнакан мĕнпур чĕрчуна, кайăк-кĕшĕке курма пулать унта. Чăваш халăхĕн ĕлĕкхи пурнăçĕпе çыхăннă мĕн чухлĕ япала упранать! Хăш-пĕр экспонатсем Нинăн тăван ялĕнчи çынсем кил-тĕрĕшре усă куракан япаласене аса илтереççĕ. Чăваш кĕпи-тумĕ çинчи тĕрĕсем вара кăшт урăхларах. Кунти чăвашсемпе республика тулашĕнчи чăвашсем хушшинчи уйрăмлăх калаçура та сисĕнет. Унта та, кунта та калакан хăш-пĕр сăмах пачах расна пĕлтерĕшлĕ. Çакна вăл Шупашкара пĕрремĕш хут килсе общежитие вырнаçсанах сиснĕччĕ.

Нумай вулама юрамасть пулин те, библиотекăна çырăнчĕ хĕр. Кĕнеке авторĕсем вулакансемпе тĕл пулма комбината та, общежитие те пырса çӳреççĕ. Пĕр-пĕр повесть е роман вуласа тухнă хыççăн ун авторĕпе курса калаçма уйрăмах интереслĕ. Республика тулашĕнче тăван ялĕнче пурăннă чух хаçат-жур-

нал питӗ кая юлса ҫитетчӗ вӗсем патне, артистсем сайра пырса каятчӗҫ. Кунта вара тин тухнӑ хаҫат-журнала паянах илме пулать. Театрсем ҫӗнӗ спектакль лартсан комбинат хӗрӗсем ӑна вӑраха ямасӑр ҫитсе кураҫҫӗ. Пурнӑҫӗ ҫапла улшӑнни Нинӑна ҫав тери хавхалантарать. Сывлӑхӗ ҫирӗпех марри больницӑсем тӑрӑх уттарать пулин те тулли пурнӑҫпа пурӑнать хӗр. Тунсӑхласа ларма вӑхӑт ҫук унӑн.

— Нина, ыран Берендей вӑрманӗнче республикӑри ӗҫпе юрӑ уявӗ пулать. Атя кайса куратпӑр, — сӗнчӗҫ кӳршӗ пӳлӗмре пурӑнакан хӗрсем. — Унти хора курсан эсӗ тӗлӗнсе каятӑн. Пин ҫын та пур пуль.

— Ӑҫта вӑл Берендей вӑрманӗ? Инҫе каймалла-и унта?

— Троллейбус ҫӳрекен хулара мӗн инҫи пултӑр? Ларатпӑр та каятпӑр. Хулан тепӗр вӗҫӗнче, Гузовски урамӗнче, анса юлмалла та ҫул урлӑ каҫса вӑрмана шаларах кӗмелле ҫеҫ. Унта ҫитсен ҫулне тӳрех куратӑн, мӗншӗн тесен пурте уявалла утаҫҫӗ, — ӑнлантарчӗҫ хӗрсем.

— Сирӗнпе пӗрле кайсан кӑна ӗнтӗ... Хам тӗллӗн пулсан уяв шыраса утас ҫук, — килӗшрӗ тантӑшӗ.

...Кун пек пысӑк уява Нина халиччен те курман. Ҫав тери анлӑ уҫланкӑра темӗн чухлӗ халӑх. Ҫынсем коллективсемпе те, ҫемйисемпе те, тус-юлташӗсемпе те килсе тулнӑ. Таҫта та купӑс сасси илтӗнет. Хӑшӗсем вырӑсла юрлаҫҫӗ, теприсем — чӑвашла. Сцена ҫине тухиччен репетици тӑваҫҫӗ пулас. Йӗри-тавра шӑхлич сасси янӑраса тӑрать. Вӗсене сутакан ӑстаҫи патӗнче ача-пӑча явӑнать. Тӗрлӗ-тӗрлӗ чӗрчун кӗлетки евӗр ӑсталанӑ, сӑрласа илемлетнӗ шӑхличсене вӗсем суйла-суйла туянаҫҫӗ. Автолавккасем темӗн чухлех килсе тулнӑ. Вӗт кукӑль, пылак ҫимӗҫ, лимонад, мороженӑй тата тем те пӗр сутаҫҫӗ. Уҫланкӑн пӗр енче тӗтӗм сарӑлнӑ, шӳрпе

шăрши сăмсана кăтăклать. Хĕрсем вĕт кукăльпе лимонад туянчĕç, йывăç сулхăнĕнчи симĕс курăк çине ларса апатланчĕç.

Çанталăк шăрăх. Апла пулин те Нинăпа тантăшĕсем хĕвел питтине — пысăк сцена умĕнчи вăрăм саксенчен пĕрин çине — пырса вырнаçрĕç. Чăнах та, хорĕ тĕлĕнсе каймалла пысăк. Хуларанах çавăн чухлĕ çын пухнă-ши е районсенчен те илсе килнĕ? Тĕрлĕ çĕртен пуль. Ав тумĕсем те расна. Малти икĕ ретре шурă кофтăпа хура вăрăм юбка тăхăннă хĕрарăмсем, хура костюмлă арçынсем тăраççĕ. Ытти ретсенче — чăваш тумĕллĕ арçынсемпе хĕрарăмсем. Анчах вĕсем темиçе коллективран пулни тумĕсенченех паллă. Нина хорта тăракансене шутлама хăтланса пăхрĕ те часах арпашăнса кайрĕ. Ытла нумайййăн. Вĕсен умĕнче тăракан дирижерне Важоров терĕç пулас, Нина лайăххах илтсе юлаймарĕ. Çав тери килĕшрĕ ăна концерт. Лайăх юрлаççĕ. Концерт вĕçленсен чăвашла тумланнă юрăçсем симĕс курăк çинче вăйă карти çавăрчĕç те Нина та лайăх пĕлекен юрра юрласа ячĕç:

— Тантăшсене пухрăмăр, пухрăмăр,
Атăл хĕрне тухрăмăр, тухрăмăр
Карталанса юрлама,
Çурхи куна ырлама.

Эх, вăйă карти! Пăхса ытармалла мар. Нинăна çак самантра хăйсен ялĕнчи яш-кĕрĕм Мăнкунпа Çимĕк хушшинче вăйă калани аса килчĕ. Алла-аллăн çавтăнса аслă урама тухиччен хĕрсемпе каччăсем Нинăсен килĕнчен инçе мар вырнаçнă лаптăка пухăнатчĕç. Каç пулсан аслисем хăйсем тавра хĕвĕшекен шăпăрлансене киле хăваласа яратчĕç. Ах, каяс килместчĕ. Нина пĕррехинче кӳршĕ хĕрĕн саппунĕ айне пытанса юлнăччĕ. Вăйă юррисем çав тери илемлĕ, итленĕçемĕн итлес килет. Вĕсен сăмахĕсене хĕрача питĕ хăвăрт астуса юлатчĕ.

Кашти те кашти шур саппун та,
Эпир те ҫакас саппун ҫук.
Ушкăн та ушкăн сар ача та,
Эпир те савас яшсем ҫук.

Вăййа авланман, качча кайман ҫамрăксен кăна тухма юрать. Ҫавăнпа хĕрсем ҫемьеллĕ пулнă тантăшĕсене шеллесе ҫапла юрлатчĕҫ:

— Сиксе те сиксе шыв юхать те,
Пулли те ăҫта тарать-ши?
Кăҫал та качча кайнă хĕрсен
Чунĕ мĕнле чăтать-ши?

Вăййа чи малтан хĕрсем пухăнаççĕ, каччăсем каярахпа ҫитеççĕ. Вĕсем пырсан юррисем те урăхлараххисем янăраççĕ:

— Ай-хай пахча илемлĕ те
Шур купăста пур чухне.
Ай-хай хĕрсем илемлĕ те
Ҫумра савни пур чухне.
Шел, иртет ҫак вăйă.

Шкултан хăвăртрах вĕренсе тухма, вăйă картине тăрса курма ĕмĕтленетчĕ Нина. Тулаймарĕ унăн ĕмĕчĕ. Асаплă шăпа вăйă картине тăма ирĕк памарĕ. Самани те улшăнсах пырать. Вĕсен ялĕнчи яш-кĕрĕм те тахçанах вăййа тухма пăрахнă ĕнтĕ. Чĕмпĕр тăрăхĕнчи чăваш ялĕсенче кунти пек ĕçпе юрă уявĕсем те ҫук. «Ҫакăн пек илемлĕ йăласем те ҫухалса пыраççĕ иккен», — шухăшлать хĕр вăйă карти ҫине ытараймасăр пăхнă май.

— Ҫăвар типсех кайрĕ. Атя, Нина, тепрер кĕленче лимонад туянатпăр, — автолавка енне туртăнчĕҫ хĕрсем.

— Эсир кайса илĕр, манăн юрă итлес килет, — вырăнтан та хускалмарĕ тантăшĕ.

— Апла, кунтах пул, пĕр-пĕрне ҫухатса ярас мар. Эпир часах таврăнатпăр, — терĕҫ лешсем.

Юрлакан хӗрсемпе хӗрарӑмсем ҫине Нина куҫ илмесӗр пӑхать. Тумӗсем мӗнле хитре вӗсен. Тенкисем чӑнкӑр-чӑнкӑр сас параҫҫӗ. Лайӑхрах курас тесе Нина ҫывӑхарах пычӗ. Ак хайхи, хӗр сиссе те юлаймарӗ — утса-юхса ҫаврӑнакан вӑйӑ карти варрине тӑчӗ юлчӗ. Сасартӑк пуҫӗ ҫаврӑннӑ пек пулчӗ те, вӑл ҫемҫе курӑк ҫине ларчӗ, куҫне алӑпа хупларӗ. Мӗн ку?! Нина — пӗчӗк хӗрача пек. Хӗрлӗ чечеклӗ, аркӑллӑ кӗпе тӑхӑннӑ вӑл, тӗрӗллӗ шурӑ саппун ҫакнӑ, хӗрлӗ чӑпар тутӑрне каялла ҫыхнӑ. Урисем ҫара. Икӗ аллинче те чӗкеҫ тӑмӗ. Таса саппунне варапасран асӑрханса хайхискер икӗ аллине малалла кӑнтарнӑ та ҫырма тӑрринелле улӑхать пек... Чим, ӑҫта вӑл? Ӑҫта вӑйӑ карти?..

Хӗрсем таврӑннӑ чух Нина симӗс курӑк ҫинче пӗчченех ларатчӗ. Шухӑшлӑ, салхуллӑ хӑй.

— Мӗн пулчӗ сана? Такам кӳрентермерӗ пуль те? — ун кӑмӑлӗ улшӑннине тӳрех асӑрхарӗҫ лимонад йӑтнӑ тантӑшӗсем.

— Ҫук, никам та кӳрентермен. Шӑрӑх пусӑрӑнтарчӗ пулас, — тавӑрчӗ Нина. — Эсир мана ан пӑхӑр.

Ӗҫпе юрӑ уявӗнчен хӗрӗ ывӑнса мар, салхуланса таврӑннине амӑшӗ тӳрех асӑрхарӗ.

— Анне, манӑн невропатолог патне кайса килмелле мар-ши? Ӑсран тайӑлатӑп пулас эпӗ, — терӗ те Нина Берендей вӑрманӗнче хӑйӗнпе мӗн пулса иртнине пытармасӑр каласа пачӗ.

Амӑшӗ ӑна тимлӗн итлерӗ, тем аса илсе пӗр самант чӗнмесӗр тӑчӗ, унтан ҫирӗппӗнех ҫапла каласа хучӗ:

— Мӗн невропатологӗ кирлӗ сана? Вӑйӑ карти сиплӗ эмел вырӑнне пулнӑ саншӑн, ачалӑхна аса илтернӗ. Пӗчӗк чухне хӑв та хӗрлӗ тутӑрпа ҫӳретӗнччӗ. Анкарти хыҫӗнчи тарӑн ҫырмаран пӗрмай чӗкеҫ тӑмӗ ҫӗклеттӗнччӗ. Шутсӑр юрататтӑн тӑмран кӗлеткесем ӑсталама. Аварире аманнӑ хыҫҫӑн эсӗ

хăвăн ачалăхна та манса кайнă, çынсене те паллами пулнăччĕ. Майĕпен-майĕпен, татăкăн-сыпăкăн сан патна астăвăм таврăнать. Паян акă эсĕ хăвна, ача чухнехине, аса илнĕ.

Куна илтсен Нинăн чĕри лăштах пулчĕ, салхулăхĕ те таçта кайса кĕчĕ, куçĕ умне ĕçпе юрă уявĕнчи вăйă карти тухса тăчĕ. «Ах, ытармалла мар илемлĕ иккен тăван юрăсем. Пĕрре кăна çавăн пек вăййа тăрса ыттисемпе пĕрле юрласа çаврăнасчĕ, — çиçсе илчĕ чунĕнче вăрттăн ĕмĕт. Çавăнтах вăл хăйне хăй вăрçса тăкрĕ: — Ухмах! Хурчка хыççăн чăх вĕçнĕ тет. Шăпах санăн вăййăсем тăрăх çӳремелле! Ыттисем юрлани-ташланине курма-илтме пӳрнĕшĕн те Турра тав ту».

Ĕçлеме пуçланăранпа сисĕнмесĕрех ултă çул иртсе кайрĕ. Акă вĕсем каллех юлташĕсемпе пĕрле Çĕнĕ çул кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Сывăх кунсенчех комбинатăн пĕрлехи пухăвĕ пулмалла теççĕ. Нина ун йышши пухусене çӳреме юратмасть.

— Сана комбинатăн йышăну пӳлĕмне кĕрсе тухма каларĕç. Мĕн сăлтавпа чĕннине пĕлместĕп, ху пĕлсе килĕн, — терĕ пĕр кунхине цех пуçлăхĕ.

Нина çитнĕ чухне йышăну пӳлĕмĕнче çын пурччĕ. Таçта курнăскер пек, анчах ăçта, хăçан?.. Секретаршăпа иккĕшĕн калаçăвĕ тăрăх çакна ăнланчĕ: ку хĕре Римма тесе чĕнеççĕ иккен, вăл отпуска кайма пуçтарăнать. Шутсăр шукăль тумланнă хăй. Хайхи хĕр ун çине пăхрĕ-пăхрĕ те:

— Мĕнле çӳреетĕн эсĕ çак илемсĕр сăн-питпе? Намăс мар-и? Хальхи саманара вилме пĕрре те йывăр мар. Больницăра выртнă чухне пĕр-пĕр хаяртарах эмелне тыт та ĕç ытларах, — тесе хучĕ.

Кун пек сĕмсĕрлĕхе кĕтмен Нинăн сасартăк куçĕ хуралса килчĕ, хăй урайне мĕнле пĕтĕрĕнсе аннине сиссе те юлаймарĕ. Тăна кĕнĕ чух леш вĕлтĕркки çукчĕ ĕнтĕ. Те хăваласа кăларса янă ăна, те хăех

тухса тарнӑ?.. Ун умӗнче хӑраса ӳкнӗ секретарша тӑрать.

— Тав Турра, тӑна кӗтӗн иккен. Хӑратсах пӑрахрӑн эс мана. «Васкавлӑ пулӑшу» чӗнес-ши тесе тӑраттӑм. Тен, чӗнмелле?

— Çук-çук, кирлӗ мар. Иртсе каять акӑ. Ытла та кӗтмен çӗртен пулчӗ, — тӑрса пукан çине ларчӗ Нина.

— Сӑмаха ним шухӑшламасӑр персе ярать вара çав Римма. Сӑнӗ-пуçӗ чипер те, телейӗ пурпӗрех çук вӑл хӗрӗн. Пӗр наладчика вӑйпах авлантарчӗ. Пурӑнаймарӗç, уйрӑлса кайрӗç. Халь татах каччӑ шырама каять пулас. Чараксӑр чӗлхеллӗ этем сӑмахне чӗрене ан ил, — Нинӑна лӑплантарас тесе калаçать секретарша. — Манса кай ун сӑмахӗсене.

— Мана мӗн ыйтупа чӗннӗччӗ-ши эсир? — сӑмаха урӑх енне пӑрчӗ Нина.

— «Эп каланипех Нина пухӑва пырас çук», — терӗ те сирӗн цех начальникӗ, хӑвна чӗнсе илсех асӑрхаттарас терӗм. Комбинатӑн пӗрлехи пухӑвӗнче пулмаллах санӑн. Эсӗ «Пилӗкçуллӑх ударникӗ» ята тивӗç пулнӑ. Мала тухнисене коллектив умӗнче чыслаççӗ. Çавӑнпа каймаллах, — çирӗппӗнех татса каларӗ секретарша. — Пухура пысӑк пуçлӑхсем пулмалла терӗç. Награда илекенсенчен хӑшӗ те пулин пымасан мана пӗçерккӗ параççӗ.

— Юрӗ. Маншӑн ят тивмӗ сире.

Ун патӗнчен тухсан та çав сӗмсӗр хӗр каланӑ сӑмахсем пирки нумайччен шухӑшласа çӳрерӗ Нина. «Вӑл хӗрпе манӑн нимӗн парас-илес те пулман, эп нихӑçан та ун çулӗ çине тӑман, мӗншӗн вилме сунать-ха вӑл мана? Тата... намӑсланма мӗнле усал ӗç тунӑ эпӗ? Чӑн та, вилме çӑмӑл, вилӗме çӗнтерсе пурӑнма вара çав тери йывӑр. Хам çине алӑ хумашкӑн вилӗмрен чӗртсе тӑратнӑ-и мана Шупашкарти тата Хусанти тухтӑрсем? Мӗншӗн вилмелле манӑн? Никам кӑмӑлне хуçмасӑр, никама чӑрмантармасӑр пу-

рӑнма тӑрӑшатӑп. Кам та пулин мана кӳрентернӗ чух та малтан хам каҫару ыйтатӑп... Анчах тайлӑк пуҫа та туя тивет иккен. Ҫак ҫутӑ тӗнче илемӗ хӑрах куҫӑм витӗр ҫеҫ курӑнать. Вӑл та ҫителӗклӗ хампа ыттисем хушшинчи уйрӑмлӑха туйма. Римма пеккисен пурнӑҫӗпе танлаштарсан шӑпам ытла та йӳҫӗ. Йӳҫӗ пулсан та, ку вӑл — хӗрес айӗнчи йывӑр тӑпра мар, пурнӑҫ. Вӑхӑтсӑр вилӗмрен аран-аран ҫӑлӑнса юлнӑ хыҫҫӑн пурӑнма пӳрнӗ кашни кун хаклӑ маншӑн. Палан хыҫҫӑн пилеш те тутлӑ тенӗ чӑвашсем. Ҫакӑн чухлӗ асап тӳссе чӗрӗ юлнӑ пулсан — пурӑнасчӗ-ха».

Хур туса каланӑ сӑмах ытла та тарӑна кӗрсе тымар ярать иккен. Кӑкласа пӑрахаймастӑн. Кайран ҫав сӑмах йывӑрӑшне ӗмӗр тӑршшӗпех тӳссе пурӑнас пулать. Малтанлӑха час-часах, кайран сайрарах, анчах пурпӗрех аса килетех вӑл. Нина та манас ҫук йышӑну пӳлӗмӗнче пулса иртнӗ лайӑх мар саманта. Ҫавӑн хыҫҫӑн вӑл пӗр ыйтупа пуҫ ватать: тепӗр хут операцие кайса пӑхмалла мар-ши? «Хӑвна ҫирӗппрех туйма пуҫласан суран вырӑнӗнчи путӑка хӑвӑн ӳтӳпех хуплама пулать», — тесе йӑпатнӑччӗ ӑна тухтӑрсем. Пӗлет хӗр: ҫав операци хыҫҫӑн та вӑл чиперкке пулса тӑрас ҫук. Ҫапах та мӗншӗн тытӑнса пӑхас мар? «Пит ҫинчи путӑка, хӗрелсе тӑракан ҫӗвӗсене пытарса сывӑ ӳтпе хуплани те паха. Каймаллах пуль», — шут тытрӗ юлашкинчен Нина.

Хусана унпа пӗрле амӑшӗ те пычӗ. Хӗрне пулӑшма ятарласах отпуск илчӗ. Ӑнӑҫлах иртрӗ операци. Шупашкара амӑшӗпе хӗрӗ хавхаланса таврӑнчӗҫ. Анчах те пӗрремӗш хутри нӳрлӗ пӳлӗмре пурӑнни, те комбинатра пӗшкӗнсе ӗҫлени юрамарӗ — куҫарса лартнӑ ӳт ҫӗрме пуҫларӗ. Каллех операци, каллех асап... Ҫӗвӗ вырӑнӗсем ниепле те тӳрленесшӗн мар. «Йӗркеллӗ сӑн-питпе ҫӳреме пӳрмен пуль ҫав мана. Ҫак суран ӳт илтӗрччӗ кӑна. Вӑл питӗрӗнсен косметика операцийӗ пирки тек ҫӑвар та уҫмастӑп. Юхан-

суран иртсе кайтăрччĕ кăна», — чунтан кулянnă май хăйне хăй сăмах пачĕ Нина.

Час тӳрленмерĕ пулин те, ӳт илчĕ суран. Нина каллех ĕçе тухрĕ. Пит çинчи суранĕсем лăпланчĕç пек-ха, тулĕк темшĕн пуç ыратма пуçларĕ. Каç пулсан канăç пĕтет вара. Хăш-пĕр чухне «васкавлă пулăшу» машинине те чĕнме тивет. Укол тунă хыççăн ыратни иртет, анчах тепĕр кунне ĕçрен таврăнсан пуçĕ татах ыратма тытăнать. Нина больницăна çул тытрĕ. Пĕр кабинетран тепĕр кабинета çӳретнĕ хыççăн электрофорез мелĕпе сипленме хут çырса пачĕç.

Ӳкессе пĕлес тĕк тӳшек сарса хурăттăм теççĕ-иха?.. Халиччен ку мелпе сипленсе курманскер, Нина инкек курасса чухлаймарĕ. Электрофорез процедурине кайма хут çырса панă тухтăр, çамрăкскер, Нинăн пит çинчи суран паллисене курчĕ пулин те, ӳт айĕнче металл пурри-çукки çинчен тĕплĕн ыйтса пĕлме ăс çитереймерĕ.

Куракан куçĕ кăваккăн-симĕссĕн ялкăшакан çулăмпа ялтăраса кайсан Нина кушетка çинчен чалт çеç сиксе тăчĕ, прибора часрах илсе ывăтрĕ. Процедура сестри малтанлăха çухалса кайрĕ пулас, ним тума аптăранипе кабинетран тухса чупрĕ, кĕçех врачпа таврăнчĕ.

— Ӳт айĕнче металл пур-им? — тин тĕпчеме пуçларĕ тухтăр. — Мĕншĕн малтанах каламарăн?

Сиплев меслечĕсем çĕнелсе, нумайланса пыраççĕ. Хăйне мĕн юранипе юраманнине ăçтан пĕлтĕр-ха Нина? Çапах та вăл çак пăтăрмахшăн хăйне кăна айăпларĕ. «Сан ĕмĕр тăршшĕпех больницăсем тăрăх çӳреме тивĕ. Кашни тухтăр санăн чир историне тĕплĕн вулас çук, хăвăн астуса тăмалла, хăвăн каласа ăнлантармалла», — тенĕччĕ ăна Евгения Алексеевна. Маннă çакăн çинчен Нина, çавăнпа чутах инкеке лекмерĕ.

Электрофорез меслечĕпе ăнăçсăр «сипленнĕ» хыççăн пуç ыратнипе тата ытларах асапланма пуçларĕ вăл.

— Хĕрĕм, Ниниле, капла май килмест. Хальлĕ-

хе, пуҫ ыратни иртсе кайиччен, ҫуршар кун ӗҫлесен те ҫитет пуль сана. Заявлени ҫырса пар. Кайран унта куҫ курӗ, — терӗ амӑшӗ. — Укҫа енчен хӗсӗкрех пулӗ те — аптӑрамӑпӑр, пурӑнкалӑпӑр.

Нинӑн сывлӑхӗ хавшаса пынине шута илсе цехра ӗҫлекенсем пурте алӑ пусса ӑна валли хваттер ыйтса ҫырчӗҫ. Комбинат администрацийӗпе профком хирӗҫлемерӗҫ, амӑшӗпе хӗрне пӗр пӳлӗмлӗ хӑтлӑ хваттер пама йышӑну кӑларчӗҫ. Нушаллӑ ҫемьешӗн ҫав тери пысӑк савӑнӑҫ пулчӗ ку. Малашне Нинӑпа амӑшӗ ӑшӑ, хӑтлӑ хваттерте пурӑнма пуҫлӗҫ. Вара, тен, сывлӑх та самайланӗ...

Ҫулталӑк иртсе кайрӗ — Нина ҫаплах ҫур ставкӑпа ӗҫлет, ҫаплах пуҫ ыратнипе нушаланать. Ку ҫеҫ те мар-ха, куҫ вӑйӗ чакнине те сисет вӑл. Апла, авари хыҫҫӑнхи пек, каллех алла шурӑ туя тытма тиветши? «Пачах курми пулса ларас марччӗ, инкекрен тур сыхлатӑрах», — ӑшӗнче кӗлтӑвать хӗр. «Васкавлӑ пулӑшура» ӗҫлекенсем вӗсен адресне пӑхмасӑр пӗлекен пулса ҫитрӗҫ ӗнтӗ. «Нивушлӗ комбинатран кайма тивет?» — кулянать хӗр. Ниме усӑсӑр ҫын пулса юласси хӑратать ӑна. Авари хыҫҫӑн кун пек пурнӑҫпа темиҫе ҫул пурӑнса курнӑ вӑл: кунӗпех ирӗклӗ эсӗ, анчах аннӳсӗр пуҫне никама та кирлӗ мар.

...Сывлӑх ҫул памасан ӑҫта каян? Пӗтӗм йышпа пухӑнса ӑсатса ячӗҫ Нинӑна. Комбинатӑн кунсерен кӗрсе ҫӳренӗ алӑкӗнчен юлашки хут тухнӑ чух куҫҫульне чараймарӗ хӗр. Ҫак алӑк ӑна пурнӑҫ ҫулӗ ҫине кӑларнӑ, ҫакӑнти ҫынсем чи йывӑр вӑхӑтра алӑ тӑсса панӑ, вилсе чӗрӗлнӗскерне ура ҫине тӑма пулӑшнӑ.

Троллейбус чарӑнакан вырӑна ҫитсен те хӗр тӳрех ларса каймарӗ-ха, каялла ҫаврӑнса тӑван комбинат ҫине нумайччен пӑхса тӑчӗ. Пурӑна киле ҫак фабрикӑн цехӗсене шӑплӑх хупласа хурасса, унта ӗҫлекенсене ҫуклӑхпа нуша салатса ярасса шутлама та пултараймарӗ вӑл. Малашнехине мар, ыранхине те пӗлме пӳрмен ҫав пире.

## Тăваттăмĕш сыпăк

Нина ĕçрен кайнăранпа виçĕ уйăх иртрĕ. Халь вăл кунĕ-кунĕпе пушă, унăн ирпе те, кăнтăрла та ниçта та васкамалла мар. Ниçта та никам та кĕтмест ăна. Канлĕ капла, никам та турткаламасть. Анчах çак канлĕх ăна часах ывăнтарса, йăлăхтарса çитерчĕ. Аллисем ĕç ыйтаççĕ.

— Никама кирлĕ мар çын пулса тăтăм иккен, — тет вăл хаш-ш сывласа.

— Нининиле, Шупашкарта куç курманнисен общест-ви пур тенине илтрĕм. Унта сан пек инвалидсене ĕç те тупса параççĕ имĕш. Хăшĕсем килте ларсах сет-ка çыхаççĕ тет, укçа ĕçлесе илеççĕ. Кайса пăхар мар-и çавăнта? Сетка çыхасси станок умĕнче тăрасси мар, санран никам та план тултарма ыйтмасть. Хăçан май пур, çавăн чухне çыхатăн. Мĕн чухлĕ çыхатăн, çавăн чухлĕ ĕçлесе илетĕн, — сĕнчĕ Вера Терентьев-на ĕçсĕр пурăнса самаях кичемленнĕ хĕрне.

— Кайса килер апла, — килĕшрĕ Нина.

— Хăçан каятпăр?

— Вăраха тăсар мар, паянах çитсе çаврăнар.

Çынсенчен ыйткаласа пĕлсе кирлĕ çĕре çитсен Нина сасартăках тăп чарăнчĕ.

— Анне, ман пĕрре те кĕрес килмест ку çурта, — терĕ вăл.

— Мĕн пулчĕ тата? Хăвах килес терĕн-çке.

— Хамăр ялта пурăннă чух темле кино курнăччĕ эп, ятне астумастăп. Çав кинора куçĕ курман çын-сем пĕр хĕрачапа паллашни аса килчĕ. Вĕсем хĕра-чан пуçне, питне, кĕлеткине йăлт хыпашласа тухрĕç. Ман никама та хама хыпашлаттарас килмест. Атя кĕмесĕрех каялла каятпăр.

— Кинора унта тем те кăтартĕç, кунта апла мар пуль-ха, эпир пуринпе те паллашса тăмăпăр, хамăра кирлине çеç ыйтса пĕлĕпĕр. Пĕр килнĕскер кĕрсех тухар, — терĕ амăшĕ алăка уçса.

Пӳлӗмре пӗр хӗрарӑмсӑр пусне никам та ҫук. Нина ҫинчен кӗскен ыйтса пӗлнӗ хыҫҫӑн вӑл Пӗтӗм Раҫҫейри куҫ курманнисен обществин Чӑваш Республикинчи уйрӑмне мӗнле йӗркепе ҫырӑнмалли ҫинчен каласа пачӗ, ҫӑмӑллӑхсемпе усӑ курас тесен мӗнле справкӑсем кирлине ӑнлантарчӗ. Обществӑн хӑйӗн клубӗ, библиотеки пур иккен. Библиотекӑра итлемелли, пӳрнепе хыпашласа вуламалли кӗнекесем нумай. Нина вӗсене хӑй аллипех тытса пӑхрӗ. Камӑн куҫӗ пачах та курмасть, вӗсене Брайль ҫырулӑхне вӗренме пулӑшаҫҫӗ-мӗн. Хӑшӗсем валли ятарласа вӗрентсе хатӗрленӗ йытӑсем ҫырӑнса илеҫҫӗ. Нинӑна, мухтав Турра, кунашкал пулӑшу кирлӗ мар. Кунта вӑл ӗҫ тупас шутпа килнӗ.

— Сетка ҫыхакансем ахаль те ытлашшипех, — терӗ Нинӑпа унӑн амӑшне йышӑннӑ хӗрарӑм. — Паянлӑха сире валли ӗҫ вырӑнӗ ҫук, каярахпа, тен, пулма та пултарӗ.

— Килте те кичем те, кунта тата салхуллӑрах. Ку обществӑна кӗни кашкӑртан тарса упана ҫакланнӑ пек пулса тухмӗ-и? — терӗ Нина амӑшӗпе иккӗшӗ урама тухсан.

— Ара, сана кунта кам вӑйпах туртса илсе килет? Килмесен те пултаратӑн. Хӑвӑн ирӗкӳ.

Троллейбусра та, киле ҫитсен те вӗсем куҫ курманнисен обществи пирки тек сӑмах хускатмарӗҫ. «Пӗчӗк ача мар, хӑйне кирлӗ пек тутӑр», — шухӑшларӗ амӑшӗ.

Ҫапла эрне хыҫҫӑн эрне иртрӗ. Виркка куллен ӗҫе ҫӳрет, хӗрӗ килте апат хатӗрлет, хваттере тирпейлет. Пушӑ вӑхӑт нумаййи те япӑх иккен. Кичемлӗх пуссах лартать.

Пӗр кунхине Нина килти вак-тӗвек ӗҫе вӗҫленӗ хыҫҫӑн урамалла тухрӗ. «Тухнӑ-тухнах Горький ячӗллӗ библиотекӑна ҫитсе килес мар-ши?» — текелесе вӑл троллейбус чарӑнӑвӗ еннелле утрӗ. Те ӗҫ вӑхӑчӗ пулнӑран, унта никамах та ҫук, ҫурма пушӑ

троллейбуссем чаранура алакёсене ячёшён тенё пек çеç уçса хупаççё те малалла вёçтереççё. Вăрăм мар сак çинче пёр хёрёх çулсенчи хёрарăм ларать, унăн сулахай аллинче пысăках мар сумка, сылтăмминче — шурă туя.

— Çул урлă каçмалла манăн, пёччен шикленерех паратăп, хăнăхман. Каçарса яраймăр-ши? — ыйтрё вăл ура сасси хăй патёнчех чарăнсан.

— Паллах, каçарса яратăп. Ман хамăн та тепёр енчи чарăнуран ларса каймалла. Тăрăр атя, — Нина хёрарăма çавăтса хăйпе юнашар уттарчё. Çул урлă каçрёç. Иккёшён пёр троллейбусах лармалла иккен. Çула май калаçса кайрёç, паллашрёç, хăвăртах пёр чёлхе тупрёç. Татьяна тесе чёнеççё иккен ку хёрарăма.

— Ыран куç курманнисен обществинче ларма ирттереççё, ёлёкхи улах евёрлине. Питё каяс килет. Килте тем ёçех çук пулсан атьăр манпа пёрле. Пёччен çӳреме шиклёрех, — сăлтавне пытармарё çёнё пёлёшё.

Пёрре пулса курнă хыççăн Нинăн унта пит каясах килместчё-ха, хирёçлесе суккăр хёрарăмăн кăмăлне хуçас темерё, килёшрё ăна ăсатса яма. Килте пёрех нимех те тăвас çук.

Тепёр кун иккёшё палăртнă сехетре урамра тёл пулчёç те троллейбуспа ларса кайрёç, куç курманнисен обществине шăп вăхăтра çитрёç. Хальхинче çынсем чылайăн пухăннă-мён. Вăт тёлёнтермёш кунта: пёри алса, тепри нуски çыхать, виççёмёшё кёнчеле арлать, урайёнче йёке чуптарса çип пётёрекен те пур. Купăс калакан та тупăнчё. Ёçлеççё çынсем, юрлаççё, савăнаççё, пёр-пёрне килте пёçернё çимёçпе хăналаççё... Чăн-чăн улах! Пёрремёш хут килсен Нинăна хăратса пăрахнă кичемлёхён палли те юлман.

Нинăна çак туслă йыш ăшă кăмăлпа кётсе илчё. Хăйён çинчен ыйтса пёлнё хыççăн çапла каларёç:

— Эсир хăвăр тĕллĕн, никам çавăтмасăр çӳреме пултаратăр. Малашне те килĕр пирĕн пата. Сирĕн пеккисем пире питĕ кирлĕ. Кунта çӳрекенсем пĕрпĕрне яланах пулăшаççĕ. Пачах курманнисене хăшпĕр чухне больницăна е патшалăх учрежденине çавăтса илсе каймалла. Килтисем пур чухне те пушă мар. Пирĕн çынсене çакăн пек пулăшу пама ыйтсан хирĕç пулмăр-и?

Нина мĕншĕн хирĕç пултăр-ха? «Эпĕ хăрах куçпа та пулин кăштах куратăп, кунта вара пачах курманнисем те нумай. Хăшне те пулин çавăтса çӳреме пултаратăп вĕт», — ăшра шухăшласа илнĕччĕ вăл хăй те.

— Паллах, хирĕç мар. Хам инкеке лексен мана пулăшакансем нумай пулнă. Эпĕ те камшăн та пулин ырă ĕç тăвам, — ăшшăн тавăрчĕ хĕр.

Вăл клубри ертӳçĕпе калаçнă хушăра Татьяна улах ваййине хутшăнса та кайнă, хайхискер кĕçех çĕнĕ пĕлĕшне чĕнсе сас пачĕ:

— Нина, улах ларакансем мана юрлаттарасшăн ав, пулăш-ха.

Çамрăклах ваййă курма юратнă Нина нумай юрă пĕлет. Пĕр-пĕр çĕнĕ юрă килĕшсе кайсан ун кĕввине те, сăввине те хăвăртах астуса юлать те шăппăн ĕнĕрлекелесе çӳрет. Аварие лекнĕ хыççăн виçĕ çул ытла пачах калаçаймасăр пурăннăскерне тухтăрсем юрлама чарнăччĕ. Комбинатра ĕçленĕ чух уявра-мĕнре хĕрсемпе пĕрле кăштах юрлакаланă-ха вăл, анчах та концертсене хутшăнман. Комбинатри художество пултарулăх коллективĕ питĕ вăйлă. Хора çӳрекен хĕрсене мĕн чухлĕ ăмсанман-ши Нина? «Юрлама чарнă тесе çак улахра та çăвара çăт тытса лармалла-ши ĕнтĕ манăн?» — пăшăрханса илчĕ вăл. Унтан сасартăк çапла персе ячĕ:

— Мĕнле юрă юрласшăн?

— Хам та пĕлмес... Кунта чăвашсем те пур, вырăссем те. Пурте пĕлекен юрă кирлĕ.

Нина урамалла пăхса илчĕ. Унта лапка-лапка юр çăвать.

— Белым снегом, белым снегом, —

пуçласа пачĕ вăл халăхра анлă сарăлнă юрра.

Кĕçех ун сассине улах ларакансен вăйлă сассисем хупласа хучĕç:

— Ночь метельная ту стежку замела,
По которой, по которой
Я с тобой, любимый, рядышком прошла...

Чун туртнипех çӳреме пуçларĕ Нина куç курманнисен клубне, кунта çав тери кирлĕ çын пулса тăчĕ. Тепĕр çур çултан ăна хăйне пĕр ушкăн шанса пачĕç: унăн çирĕм сакăр çынпа ĕçлемелле. Вĕсем хулан тĕрлĕ кĕтесĕнче пурăнаççĕ, сайра пĕрин килĕнче телефон пур. Общество членĕсенчен взнос пуçтармалла, тĕрлĕ справкăсем пухса хатĕрлемелле, çынсен сывлăхĕсемпе интересленсе тăмалла... Нумай хутлă çуртра пурăнать-и ăна шанса панă çын е пĕр-пĕр çырма хĕрринчи çуртра-и — пурпĕрех пурин патне те çитмелле. Куçа курăнман ĕç темĕн чухлĕ! Группа членĕсенчен пĕри — вăрçă вăхăтĕнче аманса суккăрланнă купăсçă. Нина ăна шефа илме килĕшрĕ. Килтисем пушă мар чухне ăна ăçта та пулин çавăтса каймалла-и, çыру çырса е вуласа памалла-и, ялан кирлĕ пулакан пĕр-пĕр статьяна Брайль чĕлхи çине куçармалла-и — нихăçан та ӳркенсе тăмасть хĕр. Брайль çырулăхне ятарласах вĕренчĕ вăл. Анчах унăн пӳрнисем сисĕмлех мар, шăтарса çырнă сас паллисене туйсах каймаççĕ. Нина вĕсене куçпа вулама хăнăхрĕ. Кĕркунне ĕç татах хушăнчĕ: куç курманнисен хорне йĕркеленĕ май ăна культмассовикăн пулăшаканĕ туса хучĕç.

Пĕрремĕш концерт вăхăчĕ те çитрĕ. Репертуарти юрăсене пурне те пĕлет пулин те, юрлама юрамасть тесе хора тăмарĕ вăл, зала малти рете кайса ларчĕ. Кĕçех чаршав уçăлчĕ. Ак хайхи, юрлама юрамасть

текенни, хӑй те сисмерӗ — хорпа пӗрле залра юрласа ларать.

Концерт хыҫҫӑн куракансем саланчӗҫ. Артистсем вара киле кайма васкамарӗҫ-ха, тепӗр концерт пирки калаҫаҫҫӗ. Нинӑна та сцена ҫине чӗнсе хӑпартрӗҫ.

— «Тонкая рябина» юрра юрлатпӑр. Сӑмахӗсене пӗлекенсем вӗҫне ҫитиех юрлаччӑр, ыттисем чарӑнсан та, — терӗ купӑсҫӑ.

Халӑх ҫав тери юратакан илемлӗ те тунсӑхлӑ юрӑ янӑраса кайрӗ. Чиперех юрлатчӗҫ-ха, иккӗмӗш куплет хыҫҫӑн пат чарӑнчӗҫ хорта тӑракансем. Сӑмахӗсене пӗлекенсен юрламалла тенӗрен Нина чарӑнмарӗ, пӗчченех юрлать. Ун сассине тӗрӗслеме юриех чарӑннӑ иккен ытти юрӑҫсем. Ҫапла калаҫса татӑлнӑ хӑйсем хушшинче.

— Сассу лайӑх. Залра лармалла мар санӑн, хорта юрламалла, — терӗҫ пурте.

Нина хӑй те репетици тӑвакансем ҫине ӑмсанса пӑхатчӗ, унӑн та юрлас килет. «Мӗн пулать те мӗн килет — юрлас-ха ҫынсемпе пӗрле», — шут тытрӗ вӑл хальхинче.

Хорта юрлама пуҫланӑранпа пачах урӑх пурнӑҫ пуҫланса кайрӗ. Аван та иккен йышпа юрлама, пӗтӗм чун хаваслӑхпа тулса ларать, пурӑнас килсе тӑрать.

Пӗррехинче репетици вӑхӑтӗнче клуба халиччен пӗлмен арҫын пырса кӗчӗ.

— Паллашӑр: Геннадий Маркиянов композитор, — терӗ хора юрлаттаракан ҫын купӑсне чарса.

— «Анне сӑнарӗ» юрра ҫыраканни-и? — ыйтмасӑр чӑтаймарӗ Нина чӗрӗ композитора ҫывӑхранах курнипе савӑнса.

— Шӑпах ҫавӑ. Сӑмахӗсене пӗлетӗн-и?

— Пӗлетӗп.

— Апла тӑк юрла! — терӗ те Геннадий Маркиянов Нина мӗн те пулин хуравласа ӗлкӗриччен купӑса тӑсса та ячӗ.

Мĕн тăвас? Юрламах тиврĕ хĕрĕн:

— Тĕксĕмленсен чĕре кăварĕ,
Путсан эп тунсăх туйăмне
Кулянакан анне сăнарĕ
Вăраххăн тухрĕ куç умне...

Пилĕк çавраран тăракан çак юрра Нина çав тери юратать, сăмахĕсене пăхмасăр пĕлет. Больницăра выртнă чухне, амăшне аса илсе тунсăхланă самантсенче, юрă сăмахĕсем пуçа килетчĕç. Халĕ ĕнтĕ ун чухнехи пек хурлантармасть çак юрă, хĕр ăна пĕртенпĕр çывăх çыннине, амăшне, чунтан юратса тата ăшĕнче вĕçĕ-хĕррисĕр тав туса юрлать.

Юрра умлăн-хыçлăн виçĕ хут юрлаттарчĕ композитор. Унтан купăсне лартрĕ те:

— Аван юрлатăн. Кирек ăçта çитсен те юрла эс çак юрра, — тесе хучĕ.

— Концертра пĕччен юрламалли юрă пулчĕ те санăн, — терĕ художество пултарулăх ушкăнне ертсе пыракан. — Çывăх вăхăтра куç курманнисен больницине концертпа кайма палăртнă эпир. Программăна çак номере те кĕртетпĕр. Хатĕрленмелĕх вăхăт пур.

Нина пурнăçне çĕнĕ варкăш кĕртекен тĕлпулу пулчĕ ку. Ун хыççăн хĕр пĕр концертран та юлмарĕ. Больницăсенче выртнă тапхăрсене шута илмесен, паллах. Куракансем умĕнче хăй пĕччен пĕрремĕш хут юрланине вара нихăçан та манас çук. Купăсçă пукан çине вырнаçса ларчĕ, Нина унпа юнашар пырса тăчĕ. Ытлашши пăлханнипе ӳкес мар тесе вăл хăрах аллипе пукан хыçĕ çине таянчĕ. Чĕркуççийĕсем тăр-тăр-тăр чĕтреççĕ хăйĕн.

— Ну, Нина, вăйлă та вара эсĕ. Ку юрăç ман пукана ӳпĕнтерсе ярать-и ĕнтĕ е аркатса пăрахать-и тесе хăраса кăна лартăм вĕт, — шӳтлесе илчĕ купăсçă концерт хыççăн.

— Хăрăн унта. Халиччен нихăçан та куракансем умне тухса пĕччен юрламан.

— Пач та ан хăра. Сассу лайăх сан, сăмахĕсене пĕлетĕн. Юрла та юрла, — хавхалантарчĕ ăна купăсçă.

Юрă вăл пыл та мар, çу та мар, анчах унсăрăн пурăнма çук иккен. Ун асамлă вăйне Нина часах туйса илчĕ. Йышпа юрланă чух чун çуталсах каять. Юнашар тăракан çынсен вăй-хăвачĕ юрăпа пĕрле сан ăшна юхса кĕрет тейĕн.

Татьянăпа Нина иккĕмĕш çул ĕнтĕ клуба пĕрле çӳреççĕ. Капла иккĕшне те меллĕ, кичем те мар. Таврăннă чухне вара пĕр вăхăтра пуçтарăнса тухаймаççĕ. Нинăн каярах юласси час-часах пулать. Е кама та пулин ăсатма каймалла унăн, е урăх ĕç тупăнать. Халĕ ĕнтĕ нумайăшĕ ăна Нина Петривановна тесе чĕнет. Ырă кăмăлĕшĕн, кирек хăçан та пулăшма хатĕр пулнăшăн хисеплеççĕ ăна. Пĕррехинче унăн килĕнчен тухса çӳреймен çын патне кайса килме лекрĕ. Ун патĕнчен каçарах юлса тухрĕ те шăп ĕç кунĕ вĕçленнĕ вăхăтра троллейбуса кĕчĕ. Унта пĕр пушă вырăн та çук. Пĕр-икĕ чарăнуран иртсен салона çапса хĕстернĕ пекех халăх тулса ларчĕ. Тĕрткелешеççĕ, меллĕрех вырăн шыраççĕ. Кун каçипе пурте ывăннă.

— Çак хĕрарăма лартăр-ха, тархасшăн, — терĕ Нина çумĕпе хĕсĕнкелесе иртекен кондуктор пĕр ватах мар арçынна. Лешĕ канлĕ вырăнĕнчен ӳркевлĕн çĕкленчĕ.

— Ĕç кунĕ вĕçленнĕ вăхăтра калекăсем хула транспортĕнче мĕн туса çӳреççĕ-ши? — терĕ вăл кăмăлсăррăн. — Ку вăхăтра сирĕнсĕрех çын нумай. Пурте ĕçрен тухнă, килĕсене васкаççĕ.

— Ыттисем пекех эпир те ĕçрен киле васкатпăр, — тавăрчĕ ăна Нина. — Çав тери ывăннă пулсан ларăрах, ан тăрăр.

— Инвалидсем те ĕçлеççĕ-и вара? — Халĕ ĕнтĕ тата тепри калаçăва хутшăнчĕ. — Эсир çапах та

ларăр, ура çинче тăма сире йывăр пуль. Авă мĕнле хĕсеççĕ.

— Обществăлла ĕçрен килетĕп эпĕ, маларах тухса ĕлкĕреймерĕм, — тавăрчĕ Нина.

— Обществăлла ĕçе, бесплатнăй ĕçе, çӳрекен ухмахсем халь те пур-и вара? — тата ытларах тĕлĕнчĕ Нинăна вырăн панă арçын.

— Сирĕн умра — çавăн пек «ухмахсенчен» пĕри. Ман пеккисем татах та пур-и, тен. Кăкăр çапса çӳремеççĕ те вĕсем — курăнмаççĕ, — терĕ Нина, тек калаçăва-мĕне хутшăнмарĕ.

Ĕçрен ывăнса таврăнакан арçын хăйне калека тенĕшĕн кӳренмерĕ вăл, ухмахпа танлаштарнăшăн та çилленмерĕ. Пурнăçа кашни хăйне майлă ăнланать, хăй ăсĕпе, хăй хевтипе пурăнать. Чун савăнăçĕ те кашнин расна. Вăл акă паян пĕр çынна пулăшма пултарчĕ, çавăнпа хăйĕн те кăмăлĕ çĕкленӳллĕ. «Россия» хăна çуртне хирĕçле вырнаçнă урамри пĕр çуртра пулчĕ вăл, тухса çӳреймен пĕр суккăра кирлĕ документ тата пӳрнепе вуламалли кĕнеке çитерсе пачĕ.

Урамĕ ку ялтиллескер, тăршшĕпех пĕр хутлă йывăç çуртсем вырнаçнă. Çурчĕсем çумĕнче пысăках мар пахча е сад пур. Килсерен тенĕ пекех йытă усраççĕ. Юрать-ха, Нинăн алăра туя пур, унсăрăн ку урамра ним мар йытă кулли пулса тăратăн. Шиклене-шиклене утсах кирлĕ çын патне çитсе килчĕ Нина. Лешĕ хăйне манманшăн, пулăшнăшăн çав тери савăнчĕ.

«Обществăлла ĕç тăвакансене ухмах вырăнне хуракан этеме çак çын савăнăçне мĕнле ăнлантарса парайăн-ха ĕнтĕ? — шухăшлать Нина. — Ăнлантараймастăн та ăна, ĕнентерейместĕн те. Çын савăнăçĕпе савăнма пĕлмест те пуль вăл, мĕншĕн тесен ун пурнăçĕн карапĕ пачах урăх хумсем çинче ишет. Этем тени хăйне нуша килсе çапмасăр та çын нушине пĕлесшĕн мар. Пурнăç çавнашкал. Çапах та малашне киле ĕç кунĕ вĕçлениччен кăшт маларах çитме

тăрăшмалла», — шут турĕ вăл. Çынсене чăрмав кӳме юратмасть Нина, тĕркĕшӳре кам та пулин ун ури çине пуссан та хăй каçару ыйтать.

Куç курманнисен обществинчи художество пултарулăх коллективĕ репертуарне пуянлатсах пырать, пĕр уява та концерт лартмасăр ирттермест. Халĕ Нина та концертсенче хăрамасăрах пĕччен тухса юрлать. Вырăсла та юрлать, чăвашла та. Кăмăлласа йышăнаççĕ ăна куракансем. Суккăр купăсçă килĕнче вăл час-часах пулать. Пĕррехинче, ун ячĕпе социаллă хӳтлĕх министерствине çыру çырса хатĕрленĕ хыççăн, вăл ăна хăйĕн вăрттăн ĕмĕтне уçса пачĕ.

— Мартăн саккăрмĕшĕ тĕлне çĕнĕ юрă хатĕрлес килет ман, — терĕ хăюсăррăн. — Аннешĕн сюрприз пултăр.

— Мĕнле юрă? Эп пĕлекенскер мар-и?

— Темле çав. Хам çуралса ӳснĕ тăрăхри юрă вăл. Ман кукамай юрлатчĕ ăна, анне те пĕлет. Кунта никам юрланине те илтмен.

— Эс мана халь кăсăклантарсах ятăн. Юрласа пар-ха атя. Ан вăтан.

Нина кăххăмлатса пырне тасатрĕ те шăппăн юрласа ячĕ:

> — Кĕçнерникун çунă шур юр çине
> Мулкачă таптанă йĕр юлнă.
> Пăхăр-халĕ анне чĕрçи çине:
> Ача чух таптанă йĕр юлнă...

Ытти чухне çĕнĕ юрă кĕввине иккĕмĕш çавраранах ярса илекен купăсçă хальхинче вĕçне çитичченех пĕр хускалмасăр итлесе ларчĕ. Юрă сăмахĕсене илтеймесĕр юлас темерĕ пулас.

— Мĕншĕн ку таранччен пытарса усранă эс çакăн пек илемлĕ юрра? — терĕ вăл Нина шăплансан. — Халех, паянах, вĕренме пуçлатпăр! Кунти чăвашсем илтмен юрăсем татах та пур-и сан?

— Пур. Пĕчĕк чухне аппасем вăйă курма илсе каятчĕç мана. Илемлĕ юрăсен сăмахĕсене те, кĕвви-

не те хăвăрт астуса юлаттăм. Пирĕн патри хăна, йăла юррисем те уйрăларах тăраççĕ, — терĕ те Нина тата икĕ юрă юрласа кăтартрĕ.

— Сюрприз тăк сюрприз пултăр, виççĕшне харăс вĕренĕпĕр. Аннӳшĕн кăна мар, чăваш халăх юррисене юратакан кашни куракан валли паха парне пултăр. Хĕрарăмсен уявĕ тĕлне хатĕрлесе çитеретпĕр эпир вĕсене, — хавхалантарчĕ купăсçă.

Репетицие вата купăсçă патне киле çӳрерĕ Нина. Вĕсем мĕнлерех парне хатĕрленине кил хуçи мăшăрĕсĕр пуçне никам та пĕлмерĕ.

— Хамăр обществăри пĕр арçын паллашасшăн санпа, — терĕ пĕррехинче троллейбусра юнашар ларса пыракан Татьяна.

— Кам-ши вара вăл, çавăн пек хăюсăрскер? Мĕншĕн çын урлă пĕлтерет?

— Хăюсăрах та мар-ха хăй. Пĕлетĕн эсĕ ăна. Куç курманнисен обществине санран кăшт маларах çӳреме пуçларĕ. Пĕр уяв вăхăтĕнче пухăнсан хăйĕнпе паллаштарнăччĕ вăл. Ӳнерçĕ теççĕ ăна. Ячĕ те питĕ интереслĕ: Аванти.

— Аса илтĕм. «Аллăмсем тем тума та пĕлеççĕ» текенскер-и? Мухтанчăк пек туйăнчĕ вăл мана.

— Чăнах та пултарать пулсан ма пытарас-ха çакна? Пирĕн обществăна çав тери кирлĕ ăста алăллă çынсем.

— Мухтанасси — Мускава каясси мар, çул укçи ыйтмаççĕ, — терĕ Нина тек ку калаçăва тăсас кăмăлĕ çуккине систерсе. Татьяна шăпланчĕ, урăхран вăл Аванти пирки сăмах хускатмарĕ.

Клуба çитрĕç. Вĕсем Совет Çарĕн кунĕ тĕлне концерт хатĕрлеççĕ, çавна май кашни кун тенĕ пекех репетицие пухăнаççĕ.

Пĕр кунхине хайхи арçын, ӳнерçĕ текенскер:

— Ман сирĕнпе калаçмалли пурччĕ, — терĕ Нинăна сылтăм хулĕнчен çемçен тытса.

— Кăшт каярахпа калаçăпăр, халь ерçейместĕпха, — ун аллине асăрхануллăн сирчĕ сцена çине васкакан Нина.

Калаçмашкăн вăхăчĕ кайран та тупăнмарĕ. Репетици хыççăн Нинăн хорта юрлакансенчен пĕрне килне леçсе ямалла пулчĕ.

— Нина, çула май çак çынна та пĕрле илсе каяймастăн-и? Вăл пачах та курмасть, — çавăтса пырса тăратрĕç ун умне хайхи ӳнерçе.

— Юрĕ, эппин, — килĕшрĕ хĕр.

Агрегат завочĕ патĕнче пурăнакан хĕрарăма киле çитерсе хăварнă хыççăн иккĕшех урампа утрĕç. Суккăр арçын урамра куçлă çын пекех ирĕклĕ çӳреме пултарнине пĕлмен Нина ăна хулран тытнă та, ун-кун çинчен калаçкаласа пыраççĕ. Сăпайлăн сăмахлать арçын. Хальхинче вăл пĕрре те мухтанчăк, вĕçкĕн çын пек туйăнмарĕ. Нина ăна троллейбуспа лартса ячĕ те киле васкарĕ.

Уява халăх клуб туллиех пухăнчĕ. Концерт хыççăн ташă каçĕ пуçланчĕ. Хăй ĕмĕрĕнче пĕрремĕш хут арçынпа вальс ташларĕ Нина. Ӳнерçĕ «Случайный вальс» ятлă юрă пластинкине лартма ыйтрĕ те Нинăна ташша чĕнчĕ. Хирĕçлесе ма кӳрентерес çынна? Тиркенĕ пек пулĕ тата. Хăрах аллипе пилĕкрен çепĕççĕн тытса ташша çăмăллăн ертсе пырать арçын. Бал ташшисен кружокне çӳренĕ тейĕн.

— Паян — арçынсен уявĕ. Хăвăра киле çити ăсатма ирĕк парсан ку маншăн чи пысăк парне пулĕччĕ.

— Хăвăр каялла мĕнле таврăнăр?

— Мана троллейбус чарăнăвĕнче лартса яратăр та — çитетĕп киле.

— Киле ăсатса янăшăнах çылăх пулас çук, — хирĕçлемерĕ Нина.

Çулĕ çывăх мар пулин те çуранах утрĕç иккĕшĕ. Сăмах сыпăнса пынăран килĕ тĕлне çитнине те сисеймерĕ хĕр.

— Эс мĕн паян питĕ кая юлса килтĕн? Сана кĕтсе

ăшăм çунса тухатчĕ, — кăмăлсăррăн мăкăртатрĕ амăшĕ.

— Çуран килтĕм.

— Çавăн пек инçе клубран çуран-и? — тата ытларах хăраса ӳкрĕ лешĕ.

— Мана... ăсатса ячĕç.

Хĕрĕ тытăнарах калаçнинченех тем тавçăрчĕ пулас амăшĕ.

— Каччă ăсатмарĕ пуль те?..

— Юлташла кăна вĕт... Тата вăл хăй те сусăр çын, — Нина пальтине хывса çакрĕ, аттине алăк умĕнчи кавир çине лартса çемçе тапочка тăхăнчĕ.

— Хĕрĕм, Ниниле, кил-ха, ларсах калаçар-ха иксĕмĕр. Килĕшмест мана эсĕ çав çынпа туслашни. Вăл санпа юлташла кăна калаççан та пурăна киле хăвăн чĕрӳ çулăмпах хыпса илме пултарать. Хăв та сисеймĕн — юратса пăрахăн. Юратса пăрахăн та — чуну тамăка кĕрсе ӳкĕ. Мĕншĕн тесен эс юратакан çын сана пурпĕрех качча илес çук. Куна хăвах пĕлетĕн вĕт-ха. Арçынсем, сусăр-и вĕсем е сывах-и, санпа усă курса кăмăлĕсене çырлахтарĕç те — пăрахĕç. Çылăх лапра мар, шывпа çуса тасалаймăн. Кайран ăçта кайса кĕрĕн, ачам?

Нина ларнă та ним чĕнмесĕр итлет амăшне. Хусанти больницăра чухне палатăна час-часах пырса çӳрекен Володя сăнарĕ вĕлт тухса тăчĕ унăн куçĕ умне. Мĕнле тунсăхласа кĕтетчĕ ăна хĕр, лешне курсан вара ăçта та пулин тарса пытанма тăрăшатчĕ. Илемсĕр сăнпа каччă куçĕ умне курăнас килместчĕ.

Хăлхине каллех амăшĕ тӳррĕн калакан сăмахсем пырса кĕреççĕ:

— Телейсĕр юрату асапĕ вăл ӳт-пӳ суранĕнчен те хытăрах ыраттарать. Чун суранне сиплекен эмел çук, хĕрĕм. Çутçанталăк этеме мăшăрлă пурăнмалла тунă, анчах эс качча кайса çемьеллĕ пулаймăн. Турă сана та чипер сăн-питпех килтерчĕ çак тĕнчене, телейне шуйттансем туртса илчĕç. Ан ĕмĕтлен каччă çин-

чен. Пуҫна каччă шухăшĕ кĕрсен тĕкĕр умне тăр, хĕрĕм. Капла каласа чунна ыраттаратăп-ха та... Ан ҫиллен, чăннине мансăр пуҫне кам калĕ сана? Мĕнле паллашрăн — ҫапла уйрăл эс вăл каччăран.

Тĕрĕссине калать ҫумри пĕртен-пĕр ҫывăх ҫынни. Анчах вăл ахалех пăшăрханать. Хăйне пĕр арҫын та юратас ҫуккине Нина никам асăрхаттармасăрах пĕлет, пĕр-пĕр яшпа е арҫынпа ҫывăхланас, качча тухас шухăш нихăҫан та пырса кĕмен ун пуҫне.

— Ман алăк урати урлă арҫын каҫса ҫӳрес ҫук, анне. Вун ҫиччĕре мар вĕт эпĕ, веҫех ăнланатăп. Ăшна усăсăр ан ҫунтар. Хĕр ҫулне ҫитсенех шур туяпа мăшăрланнă эп, ман урăхла мăшăр пулас ҫук.

Хĕрĕн сăмахĕсем амăшĕн чĕрине йĕппе тирнĕ пек ыраттарчĕҫ, анчах вăл тек нимĕн те шарламарĕ. Лешĕ вара ăна пач кĕтмен ыйтупа тĕлĕнтерсе ячĕ:

— Анне, аттепе иксĕр мĕншĕн уйрăлнă эсир? Мĕншĕн эп ҫураличчен те кĕтмен?

— Кукаҫу ҫапла татса пачĕ пирĕн шăпасене. Вăрҫă пĕтиччен темиҫе уйăх маларах, Петриван фронтран аманса килсен, пĕрлешнĕччĕ эпир. Арҫынсем сахаллансах юлнăччĕ ялта. Ҫавăнпа та Петриван евчĕ ярсан аттепе анне мана качча парас терĕҫ. Тиркемелли каччă марччĕ вăл. Туй тусах пĕрлешрĕмĕр. Аҫуна тепĕр хут фронта илсе ĕлкĕреймерĕҫ — вăрҫă пĕтни ҫинчен калакан хыпар тухрĕ. Мĕн тери савăнăҫ! Ҫынсем макăраҫҫĕ те, кулаҫҫĕ те. Хуйхи, савăнăҫĕ веҫех пĕрле. Хура хут илнисем макăраҫҫĕ, шанăҫ пуррисем савăнаҫҫĕ, салтакĕсем паян-ыран киле ҫитессе кĕтеҫҫĕ. Халăх хушшинче пулас килнĕ пуль ҫав Петриванăн: «Правление ҫитсе килем-ха», — тесе тухса кайрĕ те каҫхине те таврăнмарĕ. Ялта сас-хура часах саланать. Кам патĕнче ҫĕр каҫнине те систерчĕҫ — ĕненес килмерĕ. Хам пулсан упăшка килте ҫывăрманнине никама та калас ҫукчĕ-ха. Ирхине пиччесемпе инкесем ҫĕр улми лартма пулăшмашкăн килчĕҫ те хуҫа килте ҫуккине тӳрех асăр-

харĕç. Петривана аккăшĕ кайса илсе килчĕ. Ун хыççăн аçу киле килмесĕр çухалса çӳрени пулман. Кĕр енне кайсан пĕр кунхине татах тупăнчĕ хирĕçсе илмелли. Эп йывăр çынччĕ ун чухне. Аçу çиллине чараймасăр аллине сулса ячĕ те — янахранах лекрĕ. Эп кăвак питпе çӳренине атте асăрханă. «Киле кĕрсе тух-ха», — терĕ мана. Кайрăм. «Эп сана çапла кăвак питпе çӳреме качча панă-и? Каймастăн упăшку патне. Паянтан килте пурăнма пуçлатăн. Ман сăмах пĕтрĕ. Япалусене тиесе килме лавпа хам каятăп, — терĕ. Кукаçу çапла татса пачĕ ман шăпана, йывăр çын пулнине те пăхса тăмарĕ. — Çуралас ачуна пĕрле çитĕнтерĕпĕр. Ытлашши çăвар пулмĕ», — татăклăн каларĕ вăл.

Атте-анне сăмахĕнчен иртме вĕрентмен пире. Юлтăм атте килĕнче. Вăл ман япаласене илме пырсан хунямапа хуняçа питĕ тĕлĕннĕ те куляннă тет. Атте вĕсемпе калаçса та тăман. Вăт çапла уйрăлса кайрăмăр. Кайран аçу тепре авланчĕ. Куна эс ху та пĕлетĕн. Ачисене те курнă. Пĕр-перинпе хутшăнмастăр пулсан та вĕсем сан тăванусем пулаççĕ.

— Асанне мана юратнă та, шелленĕ те пулас. Тантăш патне вĕсен урамне кайсан эп таврăнасса алăк умĕнче кĕтсе тăратчĕ, кĕлентĕр е йăва тыттаратчĕ. Ман ун кучченеçне çиме мар, алла та тытас килместчĕ, ват çынна кӳрентересрен кăна илеттĕм. Çав кучченеçсене пĕчĕк чухне эпĕ хам çимен, инкесен ачисене параттăм. Кукамая та, сана та каламан эп кун пирки, сире усăсăр пăлхантарас темен.

— Хуняма манпа та ăшă кăмăллăччĕ. Сивĕ сăмах илтмен эп унран. «Ах, кинĕм, кун каçипе çĕр тĕрлĕ ĕç тăватăн, аллусем пурпĕрех мамăк пек çемçе», — тетчĕ мунчара çурăмне çуса янă чух.

— Сан аллусем, анне, чăнах та çемçе. Çакна эпĕ авари хыççăн çеç туйрăм.

— Унччен сана ачашласа ларма ман вăхăчĕ те пулман. Иртнине аса илсе чуна ыраттарни анчах та

çав... Нимĕн те манăçмасть. Вăрçă хыççăн вăхăчĕ çăмăл марччĕ. Эп йывăр çын пулсан та лашапа кĕлте турттараттăм. Пĕррехинче тем пулчĕ лашана — ĕрĕхрĕ кайрĕ. Эп лав çинчен ӳксе кĕпер çинчи шăтăка пуçхĕрлĕ тăраннă. Хырăм пысăк пирки кăна шыва анса кайман, хĕсĕнсе ларнă. Юрать, çывăхра çынсем пулнă та пырса туртса кăларнă. Çавăн хыççăн эс айăплă çураласран хăраса пурăнтăм. Тав Турра, йĕркеллех килтĕн çак тĕнчене. Çав саманта эп кайран, эс аварие лексе йывăр асап тӳснĕ чух, темиçе те аса илнĕ. «Хырăмлă çӳренĕ чухне лав çинчен ӳксе вилнĕ пулсан халь хĕрĕм те, хам та асапланман пулăттămăр», — тесе шухăшлаттăм. Нинилe, каçар мана ун чух çапла каласа çылăха кĕнĕшĕн. Эс ни вилĕ ни чĕрĕ выртнине курма мана чăтма çук йывăрччĕ. Сана шелленипе чĕрем çурăлса каясла ырататчĕ. Тухтăрсем мана сан умăнта куççуль кăларма хушман та — шăла çыртса тӳсеттĕм. Ман урăх эс асапланнине курас марччĕ.

Пĕрремĕш хут çапла пĕр-пĕринчен ним пытармасăр чунĕсене уçса калаçрĕç амăшĕпе хĕрĕ. Ку таранччен вĕсем макăрмалли пулсан та пĕр-пĕринчен вăрттăн куççуль юхтарнă, амăшĕ — хĕрне, хĕрĕ амăшне ытлашши пăлхантарас темен.

Лăпланчĕ Виркка. Çемьеллĕ пурнăç ун валли маррине хĕрĕ ăнланать иккен-ха. Апла тăк кулянма та кирлĕ мар.

Авантин вара Нинăран хăпма мар, ун çинчен ытларах та ытларах пĕлес килет. Клубран таврăннă чухне лешĕ пушанасса кĕтсе тăрать. Урама тухас умĕн юриех: «Троллейбус чарăнăвне çитерсе яраймăр-ши мана?» — тет те, суккăра аюк тесе мĕнле калатăрха Нина? Троллейбус чарăнăвне çитиччен çумăн утаççĕ. «Пĕр çур сехет те пулин уçă сывлăшпа сывлар-ха, таçта васкамастăр пулсан каяр тепĕртак малалла», — сĕнет арçын. Тĕрĕссипе, Нина Авантие мар, лешĕ хăй ăна ăсатать, пĕр-пĕринпе калаçмал-

ли саманчӗ-сӑлтавӗсене те тупсах тӑрать. Хӗр ҫакна сисмест кӑна. Суккӑр йӗп тупнӑ текен ваттисен сӑмахӗ шӑпах Аванти пеккисем ҫинчен. Хӑй суккӑрланиччен Шупашкарта унӑн ҫитсе курман кӗтес те юлман, куҫӗ курми пулсан та пӗччен ҫӳреме хӑвӑрт хӑнӑхрӗ вӑл.

Акӑ вӗсем клубран каллех пӗрлех тухрӗҫ. Каҫ пуласси чылай-ха. Кӑнтӑрла ҫитеспе пӗр тапхӑр лапка-лапка юр ҫуса иртнӗччӗ те, утрӗҫ шур сукмакпа.

— Нина, эсӗ хӑрушӑ аварие лексе аманса юлни ҫинчен илтнӗччӗ эпӗ. Чӗмпӗр тӑрӑхӗнчи ялта пурӑнаканскер Шупашкара мӗнле килсе тухрӑн? — сӑмах хускатрӗ Аванти.

— Чӑннине каласа парсан ман айванлӑхран кулатӑн пуль-ха та... — Нина ассӑн сывласа илчӗ. — Тӑван чӗлхепе калаҫас килни Шупашкара илсе ҫитерчӗ. Эп саккӑрмӗш класра вӗреннӗ чухне наци шкулӗсене вырӑс чӗлхи ҫине куҫарас тапхӑр пуҫланса кайрӗ. Хамӑр ялта ҫичӗ класс вӗренмелли шкул кӑначчӗ, саккӑрмӗшне кӳршӗ яла ҫӳреттӗмӗр. Ют шкула, ют учительсене хӑнӑхасси ялтан тухса курман ачасемшӗн ҫӑмӑл марччӗ. Ку нуша ҫитмен-ха, тӑван чӗлхепе те ирӗклӗн калаҫма ҫук иккен. Кӗҫнерникун — вырӑс чӗлхи кунӗ тесе пӗлтерчӗҫ. Ҫав кун пирӗн уроксенче те, пӗр-пӗрин хушшинче те вырӑсла кӑна калаҫмаллаччӗ. Чӑвашла калаҫнине илтсен тӳрех асӑрхаттаратчӗҫ, ятласа тӑкакан та пурччӗ. «Ялтан тухса кайсан сире чӑваш чӗлхи ним тума та кирлӗ мар. Вӗренӗр вырӑсла. Хӑвӑра лайӑх пултӑр тесе калатпӑр. Ҫавна та ӑнланмастӑр», — тесе вӑрҫатчӗҫ учительсем. Кӗҫнерникун — эрнери чи йывӑр кунччӗ маншӑн. Ҫав кун ҫитесрен хӑраса тӑнӑ. Чӑвашла калаҫма ҫеҫ мар, чӑвашла тӑхӑнма та чарчӗҫ шкул ачисене. Кӳршӗ ялти шкула эпӗ пасар пусминчен ҫӗленӗ кӗпепе, мӑйран тӑхӑнмалли шурӑ саппунпа, кӗрен тутӑрпа ҫӳреттӗм. Тутӑрӗ кукамайӑн амӑшӗ туяннӑскерехчӗ, хитрескер. Халӗ те упратӑп-

ха эпӗ ӑна. Кукамай та, анне те питӗ шеллесе ҫыхса ҫӳренӗ пулас. Эп кӳршӗ ялти шкула ҫӳреме пуҫласан ӑна мана пачӗҫ. Саппун аркине хам ҫыхнӑ чӗнтӗрпе илемлетнӗччӗ. Таса, тирпейлӗ ҫӳренӗ. Чӑвашла тумланакансем малтан пурччӗ-ха, каярахпа шкулӗпе эпӗ кӑна тӑрса юлтӑм. «Шкула урӑхла тумпа килмелле», — тесе мана темиҫе те асӑрхаттарчӗҫ. Эпӗ ҫаплах кӗрен пусма ҫинче вӗтӗ кӑвак чечеклӗ кӗпепе тата шурӑ саппунпа ҫӳретӗп. Анне ман валли юбкӑпа кофта ҫӗлеме шурӑ тата хура пусмасем туяннӑччӗ-ха, ҫӗлесе пӗтерейменччӗ кӑна.

Учительсен чӑтӑмлӑхӗ пӗтрӗ пулас, пӗр кунхине мана хытарсах ҫапла каларӗҫ: «Намӑс кӑтартатӑн пирӗн шкула, ыран та ҫак тумпах килсен кӗпӳпе саппунна кӑвайт ҫине пӑрахсах ҫунтарса яратпӑр». Ыран тенӗ кун вара пирӗн класс ачисене пурне те Ульяновска илсе каяҫҫӗ. Эпир — ҫӗнтерӳҫӗсем, кивелнӗ хут пухса шкулта мала тухнӑ, ҫавӑншӑн хавхалантарса экскурсие яраҫҫӗ пире. Пурте савӑннӑ, хӑвӑртрах ыранхи кун ҫитессе кӗтеҫҫӗ. «Асту, чӑвашла тумланса килсен машинӑна та лартмастпӑр», — уроксем хыҫҫӑн тепӗр хут асӑрхаттарчӗҫ мана.

Эп шкултан таврӑннӑ ҫӗре анне юбкӑпа кофтӑна ҫӗлесе пӗтернӗ. Тӑхӑнса пӑхрӑм. Ку япаласемпе эп утма та пӗлеес ҫук. Хӑнӑхман тума пӗрре те тӑхӑнмӑттӑм — Чӗмпӗрне ҫав тери каяс килет. Эпӗ кӳршӗ ялтан аяккарах ниҫта та кайса курман. Мӗн тӑвас? Тепӗр ирхине аялтан юбкӑпа кофта, ҫиелтен хамӑн чечеклӗ кӗпене тӑхӑнтӑм, саппун ҫакрӑм та шкула кайрӑм.

«Эс паян та яланхи тумупах килтӗн-и-ха?!» — тӳрех ярса илчӗҫ мана. «Ҫу-ук», — тесе кӗпе аркине хӑюсӑррӑн ҫӳлелле ҫӗклетӗп. Аялтан хура юбка курӑнать. Чечеклӗ кӗпепе саппуна ман ҫирен хӑпӑлхапӑл хыврӗҫ те илчӗҫ.

Нинӑпа юнашар ним шарламасӑр утакан арҫын чӑтаймарӗ, кулса ячӗ.

— Ай мыскара! Çапла вырăслантарнă иккен сире.

— Халь вăл мыскара пек туйăнать. Юбкăпа кофта тăхăнса пĕрремĕш хут урама тухсан паллакансене курсанах йывăç хыçне пытаннине аса илетĕп те — хамăн та кулас килет. Майĕпен хăнăхрăм майралла тăхăнма. Анчах чун кĕпе мар, тавăрса тăхăнаймастăн-çке. Вăл тăван чĕлхепех калаçасшăн, тăван юрăсенех юрласшăн, чăвашла ташласшăн, чăваш йăлисемпе пурăнасшăн. Шкулта вара пĕрмаях: «Патшалăх чĕлхине лайăх пĕлмелле, чăваш чĕлхипе ниçта та каяймастăр», — тетчĕç. Вĕренӳре тăруках вырăс чĕлхи çине куçарнипе хама çынран катăк туйма пуçларăм. Яка калаçаймасран хăраса урокра алă çĕклемесĕр ларattăм. Килте хатĕрленнĕ пулсан та. Чăвашла каламалла тăк учитель ыйтăвне шăтăр-шатăр кăна хуравласа хумалла та çав... Хамран ыйтас-тăвас пулсан мĕнле каламалла-ха куна тесе ăшра чăвашла шухăшласа вырăсла куçаратăп. Йăнăш сăмах персе ярсан вырăсла аванрах пĕлекенсем куласран хăратăп. Хăвна çынпа тан туйманни ача чух, эх, мĕн тери чăрмантарать. Геометрие, сăмахран, чип-чиперех чăвашла вĕренеттĕмĕр. Пĕр кунхине пычĕç те пирĕн кĕнекесене шăкăр-шакăр пуçтарса илчĕç, вырăсла çырнисене валеçсе пачĕç. Унтан ытти предметсемпе те вырăсла учебниксем çине куçарчĕç. Хуть те мĕнле вĕрен. Математикăпа задачăсене аванах шутлаттăм-ха, ыйтăва сăмахпа каласа е вырăсла çырса хуравламалли предметсенчен вара питĕ хăраттăм. Уйрăмах çыру ĕçĕсене пурнăçлама йывăрччĕ. Эп кăна-и?.. Ĕлкĕрсе пырайманнисем тӳрех нумайланчĕç. Шкула каяс килми пулса çитрĕ.

Тăххăрмĕш класра вĕреннĕ чухне чăваш театрĕ гастроле пычĕ. Спектакль хыççăн артистсем чăвашла юрăсем юрласа кăтартрĕç. «Шурă-шурă Шупашкарăн çути ӳкнĕ Атăла...» — тесе юрлаççĕ те, çав аякри хулара çурчĕсем те шап-шурă-ши вара тесе итлесе тăратăп. Эх, килсе курас килет Шупашкара.

Чӑтаймарӑм, чаршав хупӑнсан хӑюлӑх ҫитерсе артистсем патне пытӑм. Кусем Елена Шорниковӑпа Ольга Ырсем пулчӗҫ. «Мана пӗр ыйту интереслентерет, — тетӗп. — Шупашкарта чӑвашла калаҫма чармаҫҫӗ-и?» Ман ыйту вӗсене кӑштах тӗлӗнтерчӗ пулас. «Тӑван ялунта чӑвашла калаҫмастӑр-и вара?» — теҫҫӗ. Шкулта сиксе тухнӑ йывӑрлӑхсем ҫинчен кӗскен каласа патӑм. Вӗсенчен эпӗ чӑваш театрӗ ҫинчен, Шупашкар ҫинчен ыйтса пӗлтӗм. Хулара пир-авӑр комбинатӗнче ӗҫлесе каҫхи шкулта вӗренме май пуррине те вӗсенченех илтрӗм. Ҫак артистсемех мана ФЗОна вӗренме илме ыйтса заявлени ҫырма пулӑшрӗҫ, ӑна хӑйсемех кирлӗ ҫӗре ҫитерсе пама пулчӗҫ. Ҫавӑн хыҫҫӑн татӑклӑнах ҫапла шутласа хутӑм: вуннӑмӗш класа каймастӑп, тӑххӑрмӗш хыҫҫӑн Шупашкара ҫул тытатӑп, унта тӑван чӗлхепе калаҫма чармаҫҫех.

Театрта ӗҫлекен артистсем хӑйсем панӑ сӑмаха пурнӑҫланӑ. Вӗсем кайнӑ хыҫҫӑн тепӗр икӗ эрнерен Шупашкартан ҫыру илтӗм. Хама ФЗОна вӗренме чӗннине пӗлсен ҫав тери савӑнтӑм, тӳрех чӑматан хатӗрлеме пуҫларӑм. Аннепе кукамай хуйха ӳкрӗҫ, ярасшӑн мар. Аран-аран ӳкӗте кӗртрӗм. Чӑваша килсен малтанах ФЗОран вӗренсе тухрӑм, тепӗр ҫултан каҫхи шкула вуннӑмӗш класа ҫӳреме пуҫларӑм. Пиравӑр комбинатне пӗрремӗш хут кайса курнине нихӑҫан та манас ҫук. Чи малтанах пире ҫип арланӑ ҫӗре илсе кӗчӗҫ. Пысӑк-пысӑк цехра темӗн чухлӗ станок пӗр кӗвӗллӗн кӗрлесе ӗҫлесе ларать. Йӗкесем шап-шурӑ ҫиппе тулса куҫ умӗнчех мӑнтӑрланса пыраҫҫӗ. Темле юмахри асамлӑ ҫӗршыва килсе лекнӗ пек туйӑрӑм хама, йӗкесем ҫинчен куҫа илейместӗп. Пӗр йӗке ҫине килекен ҫип татӑлчӗ кайрӗ. Станок умӗнчи хӗрарӑм пӳрнине тӑсрӗ те йӗкене ҫаврӑнма чарчӗ, татӑлнӑ ҫипе самантрах сыпса та хучӗ. Йӗке каллех вӑр-вӑр-вӑр ҫаврӑнма пуҫларӗ. Акӑ манран инҫех те мар татах ҫип татӑлчӗ. Пӳрнене

малалла тăсрăм кăна — алăран çат! çапрĕ хайхи хĕрарăм. «Алăсăр тăрса юлатăн вĕт, малтан ĕçлеме вĕренес пулать!» — терĕ мана çиллессĕн. «Эх! Çакăнта ĕçлеме килесчĕ ман», — тесе ĕмĕтленсе тăратăп. Çапла айкашса хамăр ушкăнран тăнă та юлнă. Тантăшсем эп çуккине пир тĕртекен цеха çитсен тин асăрханă. Мана шыраса каялла пычĕç. Çавăн хыççăн ФЗОра тата тăрăшарах вĕренме пуçларăм. Хам ĕмĕтленнĕ пекех, ĕçлеме мана çип арланă çĕре ячĕç. Цеха кĕрсен савăннипе çывăхри станока чуптуса илтĕм вĕт. Татăлнă çипе сыпма вара пĕрремĕш кунах вĕрентĕм.

— Чăвашла калаçма чармарĕç-и вара кунта?

— Пĕр-пĕрин хушшинче эпир чăвашлах калаçаттăмăр. Хулана тухсан: «Скажи на нормальном языке», — тенине илткеленĕ-ха, çапах та тăван чĕлхепе калаçнăшăн хамăр шкулти пекех хĕстермен. Çамрăклăхăм çинчен савăнса аса илмелли те çакă кăна. — Нина каллех ассăн сывласа илчĕ. — Телейĕм нумая пымарĕ. Вуннăмĕш класран вĕренсе тухаймарăм... 1963 çулхи раштав уйăхĕнче мана машина çапса кайнă.

— Авă мĕнле çаврăнса тухнă иккен пурнăçу, — шăппăн хушса хучĕ Аванти. Йывăр аварие аса илни хĕре самаях пăлхантарнине асăрхаса сăмаха урăх еннелле сулăнтарма тăрăшрĕ. — Шупашкара килнĕшĕн сахал мар ӳкĕнтĕн пуль ĕнтĕ ку таранччен?

— Хам инкек курнăшăн Шупашкара мĕншĕн айăплас-ха? Кунта мана тăван чĕлхепе вĕренес, ирĕклĕн калаçас кăмăл илсе çитернĕ. Пурнăçăм ӳпне çаврăнчĕ пулсан мĕн тăвас-ха ĕнтĕ? Сăн-пит кăна суранланнă пулсан юрĕччĕ-ха. Курăнман суран та пурçке-ха. Манăн кăна та мар. Тăван чĕлхепе вĕрентме пăрахса тӳрех вырăс чĕлхи çине куçни миçе ача чунне амантнă-ши? Хăйсен тăван чĕлхине вырăс чĕлхинчен каярах хунăшăн чунĕ ыратман-им вĕсен? Вырăсла начар калаçнăшăн кăна «пиллĕк» вырăнне

«тăваттă», «тăваттă» вырăнне «виççĕ» паллă илекенсем сахал куляннă тетĕн-и? Хамран пĕлетĕп. Пысăк-пысăк пуçлăхсем пĕр тăрук çавăн пек йышăну туни вак халăхсене хăйсен тăван чĕлхинчен пистермерĕ-и? Чăваш хăй чăваш пулнинчен вăтанасси çавăнтан пуçланмарĕ-и? Аса илсен халĕ те чун ыратса каять: шкула чăвашла тумланса пырса такамсене намăс кăтартнă иккен эпĕ. Тата... — Нина калас-ши, калас мар-ши тенĕ пек Аванти енне пăхса илчĕ, — ку шухăша çын умĕнче персе яма та хăрамалла. Тарăнрах шухăшласа кĕрсе кайсан çапла та пулса тухать: патшалăха халăхĕ кирлĕ, ун чĕлхипе культури кирлĕ мар. Пире, çак чĕлхепе аталанса ӳсекен ачасене, куçранах çапла калатчĕç: чăваш чĕлхи вăл мăн çул çине тухиччен кăна кирлĕ.

— Ун пек каланине кунта та илтме пулать. Наци шкулĕсене вырăс чĕлхи çине куçарас тапхăр Чăваш Республикинче те пулса иртнĕ. Эпĕ, шкултан кăшт маларах вĕренсе тухнăскер, çав улшăнусене чун витĕр кăларман. Пирĕнтен кĕçĕнреххисене çăмăлах пулмарĕ. Çĕршывра мĕн тĕрлĕ кăна халăх пурăнмасть те, ансат мар пуль нумай наци çыннине пĕрлештерсе ертсе пыма. Ыр тĕллевпех, малалла аталанма пĕр пек майсем пулччăр тесех, вак халăхсене вырăс чĕлхине тĕплĕнрех вĕрентесшĕн пуль-ха та... Капла тусан тăкакĕ те сахалрах: вĕрентӳ кĕнекисене пурин валли те пĕр пек кăларма пулать. Анчах пĕр халăхăн та хăйне ыттисенчен катăк туяс килмест, Турă умĕнче те пĕр тан вĕсем. Çĕршыва ертсе пыракансем çакна хăçан та пулин ăнланса илеççех пуль тесе шанатăп эпĕ, — терĕ шухăшлăн Аванти. — Тăван республикăра хăçан та пулин чăваш чĕлхине те вырăс чĕлхипе тан шая лартнине курасчĕ ман.

— Темле çав... Ытла та нумая ĕмĕтленетпĕр.

— Паян-ыранах пулмасан та, çитетех çав вăхăт. Ун чухне хамăр чĕлхерен те, тумран та вăтанма

пăрахăпăр. Ученăйсем чăваш тĕррисене тĕпченине пĕлетĕп эпĕ. Вĕсем каланă тăрăх, пирĕн тĕрĕсем çырулла имĕш. Çав çырулăх чăваш хĕрарăмĕсен тĕнчене тĕлĕнтерекен тумĕнче паянхи кунччěнех упранса юлнă теççĕ.

— Çаплах калаççĕ-и?! Вăт вулама вĕренесчĕ масмак-сурпан çинчи тĕрĕсене. Мĕн каласа çырнă-ши вĕсем çине? Хама валли чăваш çи-пуçĕ тума пуçларăм-ха эпĕ. Хушпупа сурпан, темиçе масмак аннен те пур, паратăп терĕ, кĕпипе саппунне хам тĕрлесшĕн. Сцена çинче кирлĕ пулатех.

Пĕр самант чĕнмесĕр утрĕç. Шăплăха Нина татрĕ:

— Вăт калаçса кĕрсе кайрăмăр санпа эпир паян. Пирĕнтен мĕн те пулин килес пек.

— Мĕн, килмест-им? Халăх хăй чĕлхине хӳтĕлеме пултаракан ывăл-хĕр çитĕнтеретех. Тен, малашнехи ăрусем çирĕп шăнăрлăрах пулĕç.

— Патшалăх чĕлхине хирĕç мар-ха эпĕ. Ăна пĕлмеллех, анчах мана хама ирĕклĕ, çынпа тан туйма тăван чĕлхе те кирлĕ. Ăна тиркени — мана хама тиркенипе танах. Акă пирĕн умран кăвакарчăн вĕçсе иртрĕ. Урăх кайăк çунатне лартса пар-ха ăна, хальхи пек ярăнса вĕçейĕ-ши вăл тӳпере?

— Кайăксем ют çунатпа вĕçмеççĕ.

— Тăван чĕлхе вăл — çунат пекех. Унпа калаçатăн, кулатăн, юрлатăн, макăратăн, ĕмĕтсемпе çунатланатăн, тĕлĕкне те чăвашла куратăн, тăван сăмахпа тĕнчене туятăн, сывлатăн... Унпа пурăнатăн. Урăх нихăш чĕлхе те мана тăван чĕлхе пек савăнтараймасть, килентерейместь, чуна лăплантараймасть. Ăна вĕрентме пăрахсан вăл малалла аталанма чарăнать вĕт, пурăна киле чăвашла калаçакан çын та тăрса юлмасть. Хамăр чĕлхене хӳтĕлесе патшалăха хирĕç тăмастпăр вĕт эпир. Çĕршыва кирлĕ чухне чăваш вута та, шыва та кĕрет. Ылханлă фашистсене çĕршывран хӳтерсе кăларассишĕн, ытти çĕршыва ирĕке кăларассишĕн мĕн чухлĕ чăваш пуç хучĕ! Эпир —

вăрçă хыççăнхи ăруран. Çерем уçмалла-и, заводсем лартмалла-и, вёсем валли руда кăлармалла-и — çĕршывăн кирек хăш кĕтесĕнче те чăваш ытти халăх çыннисенчен кая мар ĕçлет. Чĕлхи те унăн ытти чĕлхесенчен пачах та кая мар.

Пĕр вăхăт шарламасăр пычĕç. Нина тĕрĕс каланине пĕлет Аванти, хăй те ун пекех шухăшлать. Тăван чĕлхе патшалăх чĕлхипе тан пултăр тесен мĕн тумалла? Унăн пуçне çак шухăш пăралать. Хуравĕ кăна çук.

— Вăт хам çинчен сана чылай каласа патăм. Ху тата... Нумайранпах суккăр-и? Кĕлетке-çурăмран сывă çын пекех курăнатăн. Куçна мĕн пулчĕ? — Сăмаха урăх енне сулăнтарчĕ Нина. Авантипе калаçма ăна питĕ интереслĕ, çавăнпа халь унăн çак арçын çинчен ытларах пĕлес килет.

— Куçлă-пуçлă çынахчĕ эпĕ. Хĕрарăм хаярлăхне пула суккăрланса юлтăм. Усал шĕвекпе куçран сапрĕç. Суккăрланнă хыççăн арăмпа паспорт çине пичет лартсах уйрăлтăмăр. Вăрăм истори, — хаш-ш сывласа илчĕ Аванти. — Тепрехинче тĕплĕнрех каласа парăп.

— Пĕр тăрук пач курми пулса лартăн-и? — Çумра утса пыракан çын çинчен халех кăшт та пулин пĕлес килет Нинăн.

— Хăрах куçа кăштах çутă сăрхăнса кĕретчĕ. Операци турĕç те, пĕр эрне чиперех куртăм. Анчах савăнăçăм нумая пымарĕ, каллех курми пулса лартăм. Ун хыççăн вунă ытла операци тунă мана. Хăш операци хыççăн ик-виç кунлăх, теприсем хыççăн темиçешер сехетлĕх куçăм уçăлатчĕ, кайран пурпĕрех кун çути сӳнетчĕ. Юлашкинчен пытармасăрах каларĕç: «Мĕн май пуррине, хамăртан мĕн килнине турăмăр, тек нимпе те пулăшма çук». Пытармастăп, ал усăнчĕ юлашки операци хыççăн. Куç пачах та курмасть пулсан кама кирлĕ эпĕ? Пурăнас килмиех пулса çитнĕччĕ. Ĕçсе ӳсĕрĕлсен чун ыратăвĕ кăштах тама-

латчӗ. Урӑлатӑн та — каллех хуйхӑ пусса лартать, вара алӑ татах черкке шырать. Куҫ курманнисен обществине килсе тухман пулсан ӗҫкӗҫе те тухса каяттӑм-и тен. Кунта, хӑвах пӗлетӗн, мӗн тери талантлӑ ҫынсем пур. Ҫирӗп чунлӑ тата хӑйсем. Ҫавсемпе паллашни хама алла илме пулӑшрӗ...

Акӑ ҫитрӗмӗр пулас сирӗн ҫурт тӗлне.

— Ҫитрӗмӗр. Ҫула питӗ хӑвӑрт астуса юлатӑн иккен эсӗ, — тӗлӗнчӗ Нина.

— Хулана лайӑх пӗлетӗп эпӗ. Кунта нумайранпа пурӑнатӑп вӗт. Ан кӳрен чӑннине пытарнӑшӑн. Пӗччен ҫӳреме пӗлменрен мар, санпа ҫывӑхрах паллашас килнӗрен хама ӑсатса яма ыйтрӑм. Унсӑрӑн хӑвна ӑсаттарма килӗшес ҫукчӗ эсӗ.

— Ав епле иккен. Тӗлӗнтертӗн.

— Сывӑ пул. Ыранччен, Нина.

## Пиллӗкмӗш сыпӑк

Ун хыҫҫӑн темиҫе «ыран» та иртсе кайрӗ, курнӑҫасси пулмарӗ.

Авантипе уйрӑлнӑ каҫ Нина канӑҫсӑр ҫывӑрчӗ. Тахҫанах лӑканакан шӑлӗ сурма пуҫларӗ. Мӗн те пулин ыратнӑ чух тӗлӗкӗсем те усаллисем курӑнаҫҫӗ тата. Нина тем пысӑкӑш масара утса кӗчӗ пек. Шӑп варринче чӳречесӗр йывӑҫ ҫурт ларать. Ун патне пымалли ҫула асфальт сарсах хытарнӑ. Нинӑн шӑпах ҫавӑнта кӗмелле пек. Акӑ вӑл хайхи ҫурт патнех утса ҫитрӗ, пусма картлашкисем тӑрӑх хӑпарма пуҫларӗ. Алӑк хӑлӑпӗнчен ярса тытма тесе аллине тӑсрӗ кӑна... Ҫак самантра алӑк яриех уҫӑлса кайрӗ те, Нина умне шурӑ ҫӳҫлӗ ватӑ тухса тӑчӗ. «Хӗрӗм, халех мар-ха, халех мар», — ал лаппипе тӗртсе ярасла ӑна малалла кӑнтарчӗ ватӑ ҫын, анчах перӗнмерӗ. Нина каялла чакрӗ пек. Лешӗ ҫаплах аллине кӑнтарса ун еннелле утать. Ку каллех чакать, чакать... Нина масартан тухсан тин куҫран ҫӗтрӗ пек хайхи ватӑ.

— Тур ҫырлах! Ырра пултăрах, — куҫне уҫнă-уҫман сăхсăхса илчĕ Нина. — Ку шăла кăларттармаллах пуль ĕнтĕ. Унсăрăн тем курса тăрăн, — ассăн сывласа илчĕ вăл. Ирхи апата ларсан канăҫсăр шухăшне амăшне пĕлтерчĕ: — Хусана каяс тетĕп, анне. Шăл кăларттармалла. Кунти шăл тухтăрĕсем мана йышăнас ҫук, янах шăмми тапранасран хăраҫҫĕ.

— Хытах ыратать пулсан ним тума та ҫук, кăларасах пулать. Хусан ҫулĕ ҫывăхах мар та... Унти больницăра хăвна пĕлекен пулса ҫитнĕ. Пĕрле пырас мар-и? — хыпăнса ӳкрĕ амăшĕ.

— Мĕн иккĕн ҫӳремелли пур? Темле кăткăс операцие каймастăп вĕт. Больницăра ҫын нумай пулмасан часах ҫаврăнса килетĕп акă.

Виркка тӳрех хĕрĕ валли апат-ҫимĕҫ хатĕрлеме пуҫларĕ. Нина хăвăрт пуҫтарăнчĕ те тухса та кайрĕ.

...Шăл кăларма хăйне кресло ҫине вырттарнине лайăх астăвать Нина. Кайран мĕн пулнă? Талăкран тин куҫне уҫрĕ. Ун умĕнче медсестра ларать.

— Асту, хулленрех... Чĕлхӳне ан хускат. Ăна шăтарса ҫиппе ҫыхса туртăнтарнă, — асăрхаттарчĕ медсестра, унтан врача чĕнсе килчĕ.

— Шăл кăларнă чухне кив сурансене тапратас мар тесе питĕ асăрхантăмăр пулин те, янах шăмми хускалнă пулас. Тăнна ҫухатрăн. Чĕлхӳне ҫăтасран хăрарăмăр. Турра тав ту, халĕ ĕнтĕ пурăнатăн, — ăнлантарчĕ тухтăр Нинăна.

Ку пациенткăна больницăра лайăх пĕлеҫҫĕ. Сывлăхĕ пирки нимĕн те пытарса тăмаҫҫĕ, йăлтах тĕрĕссине калаҫҫĕ. Хĕр хăй те ҫак уҫҫăнлăха хăнăхнă. «Кирек хăш вăхăтра та вилсе кайма пултаратăн. Санăн вилĕме те кулса кĕтсе илме хал ҫитермелле», — тенĕччĕ ăна пĕрремĕш хут кунта лексен Евгения Алексеевна хирург. Нина ăна ялан ырăпа аса илет, ҫавăнпа та Надежда Фоминична хăйĕнпе пĕрле Домрачева патне килне ҫитсе килме сĕнсен савăнсах килĕшрĕ.

Çемçе кресло çинче ларакан пĕчĕк карчăка курсан Нина хăй куçне хăй ĕненмерĕ. Еплерех капмар кĕлеткеллĕ хĕрарăмччĕ Евгения Алексеевна. Вăл ирсерен обхода пынă чух ун валли палата алăкне икĕ еннелле те яри уçса хуратчĕç. Халĕ вăл типшĕм карчăк пулса юлнă. Ытла та шелсĕр иккен ватлăх.

— Куратăн-и, мăнукăм, мĕн тери ватăлса кайнă асаннӳ, урамра курсан палласа та илеймĕн, — терĕ Евгения Алексеевна. — Ну, килсем ман пата.

Нина пырса профессора ыталаса илчĕ. Ăшшăн, юратса çупăрларĕ вăл ăна, больницăри асламăшне. Авари хыççăн темиçе çултан, Нинăн чĕлхи уçăлсан, Домрачева ăна çапла каланăччĕ: «Ытти тухтăрсем хушшинче чух Евгения Алексеевна тесен те иксĕмĕр кăна калаçнă чух эс маншăн мăнукăм пулăн, мана асанне тесе чĕн». Çавăн хыççăн вĕсем тата ытларах çывăхланчĕç. Нинăшăн çак çын тăван пек хаклă.

Виçĕ кун иртсен тин Шупашкара çаврăнса çитрĕ Нина. Амăшĕпе пĕрле чиркĕве кайрĕç. Пуçне çĕклесе Микул Турă çине пăхрĕ те Нина шартах сикрĕ: турăш çинче Хусана кайиччен тĕлĕкре курăннă ватă тăра парать.

Аванти ăна çухатмаллипех çухатнă: шăнкăравлас — Нинăсен килĕнчи телефон номерне пĕлмест, хĕр куç курманнисен клубне пырса çӳремест. Унпа çывăх хĕрарăмсенчен ыйткаласа пăхрĕ — лешсем те пĕлмеççĕ тусĕ ăçта кайнине. «Паян та пымастьши ĕнтĕ? — тунсăхлăн шухăшлать троллейбусра ларса пыракан Аванти. — Пымасан вĕсен хваттерĕн номерне ыйтса пĕлетĕп те килне кĕретĕп. Çурчĕ тĕлне пĕлетĕп».

Турă курчĕ пуль ун тунсăхне, Аванти клуб алăкне уçсанах хăйне килĕшекен çын сассине илтрĕ. «Тинех килнĕ!» — вăрттăн савăнăçпа çунатланчĕ унăн чунĕ.

Çула май мар пулин те киле таврăннă чух кал-

лех пĕрле утрĕç. Тин пĕлчĕ Аванти Нина Хусанти больницăра выртса тухнине. Çав тери шел пулса кайрĕ асап курнăскере, анчах палăртмарĕ. Çак хĕр ăна килĕшнĕçемĕн килĕшсе пырать. Сăпайлăскер, ăшă кăмăллăскер. Вăл юнашар утса пынă чух чунра ырă-ырă пулса каять. Хăй пурнăçĕнче хитре хĕрсемпе хĕрарăмсене нумай курнă Аванти. Каччă чух та, авлансан та, суккăрланиччен, хăшĕсем ун çумне мунча милĕкĕн çулçи пек çыпăçатчĕç. Сирсе те сирĕлмеççĕ. Ĕмĕре ĕмĕрлеме сăн хитри кăна çителĕксĕр çав.

— Ӳнерçĕ теççĕ те сан пирки, чăнласах художника вĕренсе тухнă-и? — чĕнмесĕр утма аван мартан сăмах хушрĕ Нина.

— Çу-ук! — кулса ячĕ Аванти. — Ку «специальноçа» мана суккăрланнă хыççăн тупса пачĕç. Куç курманнисен обществине çӳрекенсенчен пĕри: «Ывăл ача авланса çурт лартрĕ, кăмака тăвакан ăстаçă тупаймастпăр», — тесе куляннине илтрĕм те: «Хам туса парам-и?» — терĕм. «Куçу пачах курмасть пулсан мĕнле купалăн эс кăмака?» — иккĕленет хайхи çын. «Суккăрланиччен темиçе кăмака та купаланă, куçсем курмасан та алăсем вăл ĕçе манса кайман. Шанатăн пулсан туса парăп», — тетĕп. Килĕшсе татăлтăмăр. Çын сан пултарулăху пирки иккĕленет пулсан ĕçе тата тимлĕрех тăвас килет вĕт. Эпĕ те питĕ тăрăшрăм. «Скульптура произведенийĕ пек хитре кăмака туса патăн. Чăн-чăн ӳнерçĕ эсĕ», — терĕç ĕçĕме пĕтерсен. Хайхи старик çавăн хыççăн мана ӳнерçĕ тесе чĕнме тытăнчĕ. Ăна кура — ыттисем те. Вăт çапла майпа кăмакаçăран ӳнерçĕ пулса тăтăм.

— Профессипе вара кам эсĕ?

— Физикăпа математика учителĕ пулнă. Пединститутран вĕренсе тухнă. Малтанах ялти шкулта ĕçлерĕм. Пулас мăшăрăмпа та, Ритăпа, çавăнтах паллашрăм. Лавккара сутуçăра ĕçлекенскер хулара пу-

рӑнма ӗмӗтленетчӗ. Мана хама ял пурнӑҫӗ килӗшерех паратчӗ. Куҫа савӑнтаракан илемлӗ вырӑнсем нумай унта: ҫырми-ҫатри, улӑхӗ-ҫаранӗ, ял ҫумӗпех иртекен тӑп-тӑрӑ юхан шыв... Вӑрман та инҫе мар. Мӑшӑрлансан Рита хистенипех хулана куҫса килтӗмӗр. Атӑл хӗрринчи пӗр урамра кивӗ пӳрт туянтӑмӑр. Пӳрчӗн ячӗ ҫеҫ. Пӗренине пӳрнепе тӗртсен пӳрне ним курӑнми кӗрсе каять. Туятӑп: учитель укҫипе кӑна эп нихӑҫан та ҫурт лартаяс ҫук. Хушма ӗҫ шырама пуҫларӑм. Ҫынсем сӗтел-пукан туса пама ыйтаҫҫӗ-и, алӑксемпе чӳречесене эрешлесе илемлетмелле-и, кӑмака купаламалла-и, дачӑра мунча е ҫурт лартмалла-и — пӗр ӗҫрен те пӑрӑнман. Хӑҫан мӗнле ӗҫ тупӑнать, ҫавна тытса тӑваттӑм.

— Хӑвна кам вӗрентнӗ ку ӗҫсене тума?

— Аттен алли ылтӑнччӗ. Килте пурӑннӑ чух вӑл пире, ывӑлӗсене, ахаль ларма памастчӗ. Хӑй тимӗрҫӗ те, платник та, кӑмакаҫӑ та пулнӑ. Вӑл пӗлмен ӗҫ ҫукчӗ ялта. Выляс килнӗ чух та ӗҫлеттернӗшӗн тарӑхаттӑмӑрччӗ хӑш чух. Ӗҫе вӗренни кайран хамӑршӑнах лайӑх пулчӗ. Хӑвах пӗлен: пирӗн ӗмӗртех самана мӗнле улшӑнса кайрӗ. Халиччен лавкка чӳречисем ҫинче кӑна тимӗр решеткесем пурччӗ. Халӗ вара ҫынсем пӗр-пӗрне шанми пулса ҫитрӗҫ. Хулари ҫуртсенче пӗрремӗш хутра пурӑнакансем пурте кантӑкӗсене тимӗр решетке тытаҫҫӗ. Тимӗр алӑксем модӑна кӗрсе кайрӗҫ. Пуянраххисем ҫав алӑксене, решеткесене эрешлесе илемлетме заказ параҫҫӗ. Ман валли ӗҫ нумай, ан ӳркен кӑна. Укҫине сахалах мар ӗҫлесе илеттӗм. Вӑрман касса пӗрене кӑлартӑмӑр. Пӳрт лартма та платник тытман — аттепе шӑллӑмсем, тӑвансем пулӑшрӗҫ. Ҫулталӑкран мӑшӑрпа иксӗмӗр ҫӗнӗ ҫуртра пурӑнма пуҫларӑмӑр. Тепӗр ҫулталӑкран йыш хушӑнчӗ, Рита ача ҫуратса пачӗ. Хӗрӗм — каснӑ лартнӑ эпӗ. Телейлӗччӗ эпир. Хамӑр телее ҫынран пытарман. Такам куҫ ӳкерчӗ-ши, ӑмсанчӗ-ши, пӗр-пӗр кӗвӗҫ чун хушша кӗчӗ-ши —

арӑмпа иксӗмӗр час-часах хирӗҫме пуҫларӑмӑр. Халь шутлатӑп та... ҫавах, кӑршӗри Аннах, пӑтратма, аркатма тӑрӑшрӗ пулас пирӗн ҫемьене. Малтанах туйман ҫавна, ара, ҫын пирки тӳрех усал шухӑшламастӑн вӗт.

— Пыркаласа ҫӳретчӗ-им?

— Пыркаласа ҫӳренӗ ҫеҫ мар, пыман кун та ҫукчӗ. Дефицит вӑхӑчӗ вӗт. Ун пек чухне суту-илӳре ӗҫлекенсен «тус-юлташ» нумайланать. Ман арӑм та Анна валли кӑлпасси, какай, пулӑ йӑтса килетчӗ. Эп вӗсен ӗҫне хутшӑнман. Арӑм килте ачапа ларма пуҫларӗ те кӑмӑлӗпе улшӑнчӗ, мана шанми пулчӗ.

Пӗр-пӗрне шанмасан хирӗҫмелли сӑлтавӗ темӗн чухлех тупӑнать: киле каҫа юлса таврӑнтӑм тӑк — «еркӗнпе пулнӑ», укҫа сахал илсе килнӗ тӗк — «ҫуррине вӑрттӑн савни валли тӑккаланӑ», хӗрарӑмсенчен кам та пулин киле шӑнкӑравларӗ тӗк — пӗтрӗн вара. Мӑшӑрпа юнашар утса пынӑ чух урамра пӗрпӗр хӗр е хӗрарӑм сывлӑх сунса иртсе кайтӑр-ха — киле пырсан асар-писер тӑвӑл ҫӗкленетех. Ялта пурӑннӑ чух Рита унашкал кӗвӗҫ чунлӑ марччӗ. Шупашкара куҫса килнӗренпе такам вут хурса тӑрать тейӗн.

— Тен, хӑвах кӗвӗҫме сӑлтав тупса панӑ?.. Икӗ ҫын хирӗҫнӗ чух айӑпне пӗринче кӑна шырамалла мар.

— Авланиччен аллӑ теҫҫӗ. Яш чухне хӗрсем нумай пулнӑ манӑн. Ритӑпа пӗрлешнӗ хыҫҫӑн мана никам та кирлӗ пулман, мӗншӗн тесен ӑна юратсах качча илнӗ эпӗ. Вӑл вара пурпӗрех шанмастчӗ. Пӗррехинче, ҫуллахи вӑхӑтра, Атӑл леш енче ҫурт купалама кӗрӗшрӗмӗр. Ӗҫ пӗтерсен кил хуҫисем мунча хутса кӗртрӗҫ. Платниксенчен тахӑшӗ шӳтлес тенӗ-ши — мунчари тура ҫинчи вӑрӑм ҫӳҫе ман шӑлаварӑн хыҫалти тӳми тавра яваласа хунӑ. Кил хуҫи арӑмӗн ҫӳҫӗ ӗнтӗ, ҫавӑ пилӗк таран ҫивӗтпе ҫӳретчӗ. Ирхине килте вӑрантӑм та — ман арӑм

ӳлесе макӑрать. Кӗвӗҫ хӗрарӑма мӗн каласа ӗнентерес ун пек чухне? Тӳрре тухас тесе сӑмахлани тата ытларах шанӑҫран кӑларать. Юлташсем юри шӳтленине ним тусан та ӗненмерӗ арӑм, ачана йӑтрӗ те пӑрахса кайрӗ. Хамӑр пурӑнакан урамрах «хваттер тупнӑ». Ӑшши-пӑшши иртсен таврӑнать пуль-ха терӗм, хыҫҫӑн утмарӑм.

Арӑм кайсан тепӗр ирхинех кӳршӗре пурӑнакан Анна каҫрӗ. Качака сӗчӗ йӑтнӑ. Упӑшкинчен уйрӑлнӑскер вӑл, пӗчченех пурӑнать. «Хӗрарӑм килте пулмасан арҫын хӑй тӗллӗн вӗри апат та пӗҫермест. Акӑ сӗт те пулин ӗҫ-ха», — текелет. Таҫтан пӗлнӗ мана Рита пӑрахса кайнине? «Сӗчӗ чӑрмантармасть-ха вӑл, тавтапуҫ», — тесе вак укҫа кӑларса патӑм. «Э-эй! Ҫакӑншӑнах укҫа илсе тӑмастӑп ӗнтӗ. Кӳршӗсем вӗт», — тет кайма васкамасӑр.

«Илех, ил, тепрехинче манӑн сӗт ӗҫес килсе кайӗ те — пырса чӑрмантарма аванмарланса тӑрӑп, — тесе укҫана кӗсйинех чиксе патӑм. — Эп хулана тухма пуҫтарӑннӑччӗ-ха», — тетӗп ку ҫаплах тӑнӑран. Тин тухса кайрӗ. Анчах вӑл манран хӑпма шутламан та пулас. Арӑм пӑрахса кайнӑ хыҫҫӑн пушанса юлнӑ тӗпеле хӑй кӗресшӗн пулнӑ-ши?.. Ун килӗнче ман валли ӗҫ «тупӑнсах тӑчӗ»: пуртӑ-пӑчкӑ ҫивӗчлетмелле, кӗрепле шӑлӗ лартса памалла, тӑпси тапраннӑ алӑкне вырӑна лартмалла...

— Ӗҫшӗн укҫа тӳлес вырӑнне эрех ӗҫтеретчӗ пуль-ха?..

— Укҫа ыйтман эп унран нихӑҫан та. Сӗнсен те илес ҫукчӗ. Пӗччен хӗрарӑм вӗт. Апатран вара пӑрӑнман. «Ҫакӑн чухлӗ ӗҫлеттертӗм те — выҫах кӑларса ямастӑп ӗнтӗ сана», — текелесе кашнинчех апат ҫиме лартатчӗ, эрех те ярса паратчӗ. «Кунта килсе ҫӳреме пӑрахмалла-ха», — тетӗп хам ӑшра вӑл йӑпӑлтатни ырӑпа вӗҫленмессе сиссе. Тепӗртакран татах пырса пулӑшу ыйтать те — аюк теме аван мар. Кайнӑ — мӗн ыйтнине туса панӑ, апла-капла

шухăш пуçа та пырса кĕмен. Арăмпа çураçас ĕмĕтпе çӳреттĕм, пĕчĕк хĕрĕмшĕн тунсăхласа çитнĕччĕ. Тек каймастăп-ха тесе тăнă çĕртех татах çыхланма лекрĕ вĕт çав Аннапа. Качаки тем çине пырса тăрăннă. Чупса каçрĕ Анна, вилсе кайиччен пусса пар тесе тархаслать. «Ун пек ĕçе пĕччен тăваяс çук, тыткалама та çын кирлĕ», — тетĕп. Вăл тата тепĕр кӳршине чĕнсе пычĕ. Каçчен пусса тирпейлерĕмĕр вара. «Кĕпӳ юнпа вараланнă, хăв тасатаймăн, хывса хур, хам çăвам, ыранччен типет», — тет Анна. Хывса хăвартăм та киле майка вĕççĕнех каçрăм.

Тепĕр ирхине кĕтмен туман çĕртен ман Рита таврăннă. Пăхать хайхискер: упăшкин кĕпи, çуралнă кун ячĕпе шăпах хăй илсе панăскер, Анна картишĕнчи кантра çинче çакăнса тăрать. «Намăссăр! — тет мана. — Мунчара Аннана çурăм çуса ятăн пулĕха, вăл ав сан кĕпӳне çуса хăйĕн картишнех çакса янă! Çынран та вăтанмастăр! Куç умĕнчех ерĕшсе пурăнатăр!» Тарăхса вĕриленсе кайнăскер Аннасем патне ыткăнчĕ. Усала сиссе ун хыççăн чупрăм. «Тăхта, йăлт ăнлантарса паратăп», — тетĕп. Тарăхупа тулнăскер итлесе тăрать-и? Анна шăп та лăп пӳртĕнчен тухать. Арăм ăна тӳрех çӳçрен ярса тытрĕ. Уйăрса яма пуçларăм та: «А-а-а! Хӳтĕлетĕн-и ерĕшкӳне?!» — тет. Кĕвĕçӳ çавнашкал усал япала вăл. Çын ним курми-илтми пулса ларать. Арăм Аннапа иксĕмĕре тем те пĕр каласа хăртса пĕтерчĕ те тухса кайрĕ. Эп ун хыççăн васкарăм. Мĕн пулса иртнине тĕплĕн ăнлантарса парсан çилли иртессĕн туйăнчĕ. Çенĕк алăкне уçса мăшăрăма курса ĕлкĕртĕм кăна — куçăмсем пĕçерсе ыратса кайрĕç. Тӳрех ним курми пулса лартăм. Арăм мана картишнелле тĕртсе кăларчĕ те алăка шалтан питĕрсе хучĕ. Хам нимĕн те курмастăп. Хыççăнах пулăшу панă пулсан хĕвел çути курмиех суккăрланса юлмастăмччĕ пулĕ. «Васкавлă пулăшу» чĕнес — пӳрте кĕрейместĕп. Халь эпĕ хăнăхнă та куç курмасан та кирлĕ çĕре хăвăр-

тах çитетĕп, ун чухне вара тĕнче тăруках тĕттĕмленсе ларнăран ăçталла утмаллине те пĕлмерĕм. Эпĕ такăна-такăна, алăсемпе хыпашла-хыпашла кӳршĕсем патне çитиччен кислота куççене вăйлах сиенленĕ... Вăт çапла сӳнчĕ те маншăн кун çути.

— Çапла... Тĕнче илемне куç тулли курса пурăннă хыççăн сĕм суккăр пулса юласси — çав тери йывăр хуйхă. Пĕтĕм ĕмĕте, шанăça, вăй-хала çапса хуçать. Аварие лекнĕ хыççăн хам тӳссе курнă, — терĕ Нина хаш сывласа. — Тав тухтăрсене, вĕсем хăрах куçăма та пулин курмалла турĕç. Мана ĕмĕрлĕх амантса хăварнă шофер тарса ĕлкĕрнĕ. Тупса явап тыттараймарĕç ăна. Тĕрмене лекменшĕн савăнса пурăнать пуль ĕнтĕ.

— Тен, апла та мар. Тен, хăйне çын вĕлерекен тесе паянччене чунне хĕнесе пурăнать?.. Çын пурнăçне пĕлмелли çук. Яваплăхран тарса пытаннă пулсан та пурпĕрех телейсĕр вăл этем, — терĕ Аванти. — Ман инкекшĕн явапли хам çумрахчĕ. Суд турĕç ăна. «Мана хĕнеме пуçланăччĕ вăл, хама вĕлересрен хӳтĕлентĕм», — тесе тӳрре тухрĕ. Ăна хупса хуманни лайăх та пулчĕ пуль. Ăна лартсан хĕрĕмĕре кам пăхатчĕ? Анчах çемье пурпĕрех саланчĕ: арăм тепĕр арçынпа явăçса кайрĕ. Суккăр арçынпа пурăнас темерĕ пуль. Уйрăлтăмăр вара.

— Инкек пĕччен çӳремест тесе ахальтен каламан пуль çав.

— Шăпамăрсем иксĕмĕрĕн те пылаках мар. Мĕн тери тумхахлă та сулăнчăклă сукмаксемпе уттарса пĕр çынна тепринпе тĕл пултарать иккен пурнăç, — терĕ шухăшлăн Аванти. — Çав тĕлпулу çын кунçулне пачах тепĕр май çавăрса яма пултарать.

Мĕн çамрăкран больница коридорĕсенче çӳресе Нина аманнă-сусăрланнă çынсене сахал мар курнă, çавăнпа Аванти тем систерсе калаçнине тавçăраймарĕ.

Сивӗсем иртсе кайса пӗтмен-ха, ҫапах та ҫанталӑк ҫуркунне енне кайни аванах сисӗнет. Ҫил-тӑманлӑ, кукӑр-макӑр сукмаклӑ нарӑс хыҫҫӑн пуш уйӑхӗ ҫитрӗ. Кун самаях вӑрӑмланчӗ, куллен тенӗ пекех хӗвел курӑнса савӑнтарать. Ҫанталӑк халӗ пачах урӑхла: чуна хаваслӑх, ӳт-пӗве ҫӑмӑллӑх кӳрет. Кӑнтӑрлахи вӑхӑтра чун урамаллах туртать.

Куҫ курманнисен обществинче Пӗтӗм тӗнчери хӗрарӑмсен кунне кӗтсе илме хатӗрленеҫҫӗ. Ыран концерт лартса памалла. Чи юлашки репетицире кӑна вӑрттӑнлӑхӑн пӗр пайне уҫрӗ Нина, никама систермесӗр хатӗрленӗ юрӑсенчен пӗрне юрласа пачӗ. Ҫӗнӗ юрра, тӗрӗсрех каласан, ӑруран ӑрӑва куҫса пырса паянхи кунччен упранса юлнӑ авалхи юрра, халӑх килӗштересси никама та иккӗлентермерӗ.

Уяв концертне Вера Терентьевна та кайрӗ. Хӑйне сцена ҫине кӑларсан Нина ҫак юрра амӑшне парнелени ҫинчен пӗлтерчӗ: «Хам пурнӑҫпа вилӗм хушшинче тӑнӑ чухне ҫӗрӗн-кунӗн юнашар пулнӑшӑн, пурӑнма хавхалантарнӑшӑн тав тӑватӑп сана», — терӗ те юрласа ячӗ. Залра шӑп. Куракансем юрӑри кашни сӑмаха ҫӑтса ярасла тимлӗн итлеҫҫӗ, мӗншӗн тесен ача ӳстерсе курнӑ кирек хӑш хӗрарӑм та ку юрра ман ҫинчен ҫырнӑ-ҫке тесе калама пултарать. Сӑмахӗсем ытла та чуна пырса тивеҫҫӗ. Юрланӑ май Нина малти ретре ларакан амӑшӗ ҫине вӗлт пӑхса илчӗ, лешӗн аллинчи шурӑ тутӑра асӑрхаса ӗлкӗрчӗ. Акӑ ӗнтӗ хӗр юлашки ҫаврана юрлать:

— Кӗҫнерникун ҫунӑ шур юр ҫинче
Ура шӑвассӑнах туйӑнать.
Пӑхӑр-халӗ анне пуҫӗ ҫине:
Ачисемшӗн ҫунсах шуралать.

Юрласа пӗтерсен хӗр сӑпайлӑн пуҫ тайрӗ те сцена ҫинчен кайрӗ. Залри куракансем тӑвӑллӑн алӑ ҫупаҫҫӗ, ӑна тепӗр хут тухма чӗнеҫҫӗ. Ҫӗнӗ юрӑ халӑха ҫав таранччен тыткӑна илессе никам та шут-

ламан. Тухса тепӗр хут пуҫ тайрӗ Нина. Ҫаплах ямаҫҫӗ ӑна.

— Тавтапуҫ. Хамӑр енче анлӑ сарӑлнӑ тата тепӗр юрра парнелем, апла, сире, — терӗ хӗр. Купӑсҫӑ ӑна тӳрех ӑнланчӗ. Залра каллех куракансем халиччен илтмен юрӑ янӑраса кайрӗ:

— Пӗтмӗ терӗм хура ай кӗпене,
Пӗтмӗ терӗм хура кӗпене.
Пӗтет иккен нумай ай тӑхӑнсан,
Пӗтет час-час ҫумасассӑн та.

Иртмӗ терӗм ҫамрӑк ӗмӗрӗме,
Иртмӗ терӗм ҫамрӑк ӗмӗре.
Иртет иккен нумай ай пурӑнсан,
Иртет хурлӑх кӑна курсан та...

Виркка хӗрӗ ҫине пӑхса тӗлӗнсе ларать. Шутламан та вӑл Ниниле авалхи юрӑсене пӗлессе. «Курха ӑна. Камран вӗреннӗ-ши? Хамӑн юрласа ларма вӑхӑчӗсемех пулман. Кукамӑшӗнчен илтнӗ пулинех, анчах вӑл урӑхларах юрлатчӗ. Кашни куплетрах висҫӗмӗш йӗркене икӗ хут юрламалла, Нина апла тумасть, ҫӗнӗ шухӑш каласа тӑваттӑмӗш йӗрке тӑвать. Хӑй нуша-асап нумай курнӑран ҫапла урӑхлатарах юрлать-ҫке ку», — тинех тавҫӑрса илчӗ амӑшӗ, пырне чӑмакка капланса хӑпарчӗ. Куҫҫуль кӑларасран аран чӑтса ларать Виркка.

Ӑна ҫеҫ мар, ытти куракансене те чунтан хумхантарчӗ юрӑ. Нумайччен шавлӑн алӑ ҫупрӗҫ ҫынсем. Сцена ҫине тата тепӗр хут тухма тиврӗ юрӑҫӑн. Хальхинче вӑл юрлас вырӑнне ҫапла каларӗ:

— Чӑваш халӑхӗн илемлӗ юрӑсем ҫав тери нумай. Шел пулин те, манӑҫса, ҫухалса пыраҫҫӗ вӗсем. Аннесене, асаннесене хисеплесе упрамалла ҫав юрӑсене. Юрласа кӑна тӑсма пулать вӗсен ӗмӗрне.

Халӑх ун шухӑшӗпе килӗшсе каллех шапӑрах алӑ ҫупса ячӗ.

Сцена ҫине ташӑҫсем тухрӗҫ. Концерт малалла

тăсăлчĕ. Уявĕ ыран та, виçмине те пĕтмест-ха. Мартăн саккăрмĕшĕ Çăварни эрнине килчĕ. Вырсарникун Çăварние ăсатса ямалла.

Куç курманнисен обществинче тахçантанпах пыракан ырă йăла пур: уявсенче вĕсем пĕрле пухăнаççĕ, тутлă апат-çимĕçпе, хаваслă юрăпа пĕр-пĕрин кăмăлне çĕклеççĕ. Клуба çӳрекенсем Çăварни эрнине те пĕрле пухăнса ăсатса ячĕç. Кашниех килтен икерчĕ пĕçерсе килнĕ. Пĕрин икерчи тăпăрчăпа, теприсен авăртнă какайпа, пулăпа, хăшĕсен — килти повидлăпа. Çынсем сĕтел хушшине ларса пĕр-пĕрин кучченеçĕпе сăйланчĕç, юрларĕç, савăнчĕç.

— Нина, мартăн саккăрмĕшĕнче анне çинчен юрланă çĕнĕ юрруна юрласа пар-ха, пире çав тери килĕшнĕччĕ вăл, — ыйтрĕç сĕтел хушшинче ларакансем.

— Çăварни уявĕнче тунсăхлă юрăпа кичемлетес килмест-ха ман сире. Юрласа паратăп, анчах ăна мар, урăххине, — терĕ те Нина купăсçă патне пырса тăчĕ. Пысăк пӳлĕмре кĕçех шӳтлĕ юрă янăраса кайрĕ:

— Сан кӳршӳ те Ăçтаппан,
Ман кӳршĕ те Ăçтаппан, Ăçтаппан.
Ăçтаппанпа пурăннă чух
Çăпатаран аптраман, аптраман.
Ай питĕ çемçеччĕ!

Юлашки йĕркине юрăçă хăйĕнчен хушса хучĕ те, уява пухăннисем кĕр-р! кулса ячĕç. Кулса ячĕç те шăпланчĕç, мĕншĕн тесен юррăн малалли çаврисем тата интереслĕрех:

— Сан кӳршӳ те Ăраман,
Ман кӳршĕ те Ăраман, Ăраман.
Ăраманпа пурăннă чух
Никамран та хăраман, хăраман.
Пурте пиртен хăратчĕç! —

тесе юлашки йĕркине каллех юрламасăр каларĕ Нина. Çынсем татах кулаççĕ. Юрри вăрăм, анчах

кичем мар. Лариван, Маккарччă, Сахарччă, Тăрахвин çинчен те тăрăхласа юрларĕ хĕр...

— Сан кӳршӳ халь Сариван,
Ман кӳршĕ те Сариван, Сариван.
Сариванпа пурăнатпăр,
Юрлатпăр та ташлатпăр, савнатпăр. —

Юрра вĕçленĕ май Нина: — Атя ташша яра пар! — терĕ те, купăсçă тӳрех ташă кĕвви пуçларĕ.

Çăварние çапла савăнса, юрласа та ташласа ăсатрĕç çынсем.

— Çăварни икерчисем пурин те тутлă пулнă, анчах санăнне çитеймеççĕ, — терĕ Аванти Нинăна клубран таврăннă чух.

— Чим, эс ăçтан пĕлтĕн хăш икерчи манăн пулнине? — тĕлĕнсе ыйтрĕ Нина.

— Тутинчен уйăрса илтĕм. Çĕнĕ çул уявĕ валли те çакăн пек икерчĕ пĕçерсе килнĕччĕ вĕт эсĕ. Ман чи юратнă çимĕç — икерчĕ. Кун пек çӳхе те чĕнтĕрлĕ икерче вара эп кашни кун çиме хатĕр. Шел, Çăварни çулталăка пымасть.

Нина Авантирен пăрăнса çӳреме пăрахрĕ. Ятарласа тĕл пулмаççĕ вĕсем, клубри мероприятисем хыççăн пĕрле тухаççĕ. Иккĕшĕн сăмах та çыпçăнса пырать. Пуринпе те ăшпиллĕн сăмахлакан Нина çак тĕлпулусене кулленхи ахаль хутшăну вырăнне çеç хурать. Арçын хăй патне пĕтĕм чунĕпе туртăннине сисмест вăл. Хĕрпе каччă, арçынпа хĕрарăм хушшинчи хутшăнусене туйтаракан сисĕмлĕхĕ хăй те çук унра, мĕншĕн тесен вăл нихçан та никамран та юрату кĕтмен, ун пирки ĕмĕтленмен те. Пĕр-пĕр каччă е арçын ăна килĕштерсе пăрахасси ун пуçне те пырса кĕмест. Хăйĕнпе кам та пулин юрату çинчен сăмах пуçарас тăк вăл çав тери тĕлĕнсе кайĕччĕ, çакна хăйĕнчен кулни вырăнне хурса чунтанах кӳреннĕ пулĕччĕ.

Нина хăйне клуба çӳрекен юлташĕ вырăнне çеç

хунине Аванти туять, чунне уҫса пама самант та, сӑмах та тупаймасӑр асапланать. Халиччен ытти хӗрсемпе хӗрарӑмсене каланӑ ӑшӑ сӑмахсем пачах та вырӑнлӑ мар пек туйӑнаҫҫӗ. Юратни ҫинчен пӗлтерме ҫӑвар та уҫас ҫук вӑл. Нина ӑна, авланса уйрӑлнӑ ҫынна, ним парсан та ӗненес ҫук. «Малтан арӑмна юратнӑ, халь — мана, унтан ҫӑмӑллӑнах тата кама та пулсан юратса пӑрахӑн», — тесе тавӑрассӑнах туйӑнать. Авланиччен Аванти хӗрсен чӗрисене сахал мар ҫунтарнӑ. Мӗн чухлӗ чиперкке ҫыпҫӑнатчӗ ун ҫумне. Куҫӗ вара хитререн хитрине шыратчӗ. Ритӑна та унӑн сӑнӗ ытармалла мар чиперришӗн юратса пӑрахрӗ, пичӗ ҫинчи илем чунӗнче ҫуккине асӑрхамарӗ. Нинӑна вара вӑл сӑнран пачах та пӗлмест. Хитре-и ҫак хӗр, хитре те мар-и — ку уншӑн халӗ пӗлтерӗшлӗ те мар. Каччӑ ытамӗнче пулса куриччене пурнӑҫпа вилӗм хушшине лексе асапланнӑскерӗн чунӗ калама ҫук ҫутӑ та таса пулнине вӑл суккӑр куҫпа та лайӑх курать. Ун ҫумӗнче чухне Авантие питӗ-питӗ лайӑх. Унпа пӗрле пӗр алӑкран кӗрсе ҫӳресси, пӗр тӗпелте кӑштӑртатасси, пӗр сӗтел хушшине ларса апат ҫиесси, пӗр вырӑна ӑшӑтасси — ҫӗр ҫинчи чи пысӑк телей пек туйӑнать. Пач та иккӗленмест арҫын: Нинӑпа иккӗшӗ — пӗр мӑшӑр пулмалли ҫынсем. Шутласан тӗлӗнсе каймалла: пурнӑҫ ҫулӗ ҫынна мӗн тери кукӑр-макӑр сукмаксемпе чуптарать. Вӑл хӑш вӑхӑтра, хӑш вырӑнта ӑҫталла пӑрӑнассине пӗлсе тӑраймастӑн. Пӗр чунлӑ икӗ ҫын пӗр-пӗрне шыраса тупчӑр тесех, юриех, шӑпа иккӗшне те ҫав тери пысӑк асап витӗр кӑларнӑ-ши вара? Аванти суккӑрланман, Нинӑна машина ҫапса хӑварман пулсан, тен, вӗсем ҫак аслӑ тӗнчере нихӑҫан та тӗл пулас ҫукчӗ. Ӑнсӑртран тӗл пулсан та пӗр-пӗрне асӑрхамасӑр иртсе каятчӗҫ-и, тен...

Иккӗшӗ пӗр-пӗриншӗн ҫуралнине Аванти туять, Нинӑна ҫакна мӗнле ӗнентермеллине кӑна пӗлмест.

Аванти хӑйне качча тухма ыйтсан Нина чӗлхесӗр пулса ларчӗ, ӗмӗрне те кӗтмен сӑмахсене илтнӗрен ҫухалсах кайрӗ. Ҫемьеллӗ пурнӑҫ ҫинчен нихӑҫан та ӗмӗтленмен вӑл. Авариччен ытла та ҫамрӑк пулнӑ, клубран таврӑннӑ чух кам та пулин хыҫран утнине асӑрхасан чупсах таратчӗ, авари хыҫҫӑн каччӑ шухӑшӗ пуҫа та пырса кӗмен. Амӑшӗ те хытарсах каланӑ: «Сана каччӑсем юратас ҫук, кулас текенсем вара тупӑнӗҫ. Эс качча каяс тӑк Атӑл тӑвалла юхма пуҫлӗ. Пуш ӗмӗтпе ҫунатланса хӑвна ху ан ултала. Эс каччӑпа е арҫынпа ҫавтӑнса утнине курам мар».

Халь акӑ Нина хула паркӗнчи сак ҫинче арҫынпа юнашар ларать. Ку ҫитмен-ха, лешӗ ӑна хӑйӗн мӑшӑрӗ пулма тархаслать. Хӗр тинех тӑна кӗнӗ пек пулчӗ те, ӑшӗнче тарӑху капланса хӑпарчӗ. «Мӗн калаҫать ку этем? Куласшӑн-и манран? Хамран култарма мӗнле сӑлтав туса панӑ эп ӑна?» — ҫиллине чараймасӑр ура ҫине яшт! сиксе тӑчӗ Нина. Ун хыҫҫӑн Аванти те ҫӗкленчӗ. Ҫак арҫын пур енчен те сывӑ пулас тӑк хӗр ӑна ик-виҫ сӑмахпа шат та пат ҫеҫ касса татмалла та пӑрӑнса утмалла. Анчах вӑл хӑй те сусӑр ҫын, Авантие йывӑр каласа кӳрентерме унӑн чӗлхи ҫаврӑнас ҫук. Хӑй ҫемьеллӗ пурнӑҫ валли маррине мӗн туса, мӗн каласа ӑнлантарас ӑна?

Ним шарламасӑр тӑракан хӗр тӗксӗм куҫлӑхне хыврӗ те Авантин сылтӑм аллине ҫӗклесе ӑна хӑйӗн пичӗ патне илсе пычӗ. Малтан куҫӗсене хыпашлаттарчӗ, унтан арҫыннӑн аллине сылтӑм пит ҫӑмарти ҫине шутарса антарчӗ. Авари вӑхӑтӗнче пит ҫӑмарти шӑммисем ваннӑ. Суранлӑ шӑмӑсене темиҫе хут та хырса тасатса сыпӑнтарнӑ пулин те, ҫав вырӑнта самаях тарӑн путӑк пулса юлнӑ. Кун йышши суран никама та илем кӳмест.

Питӗ-питӗ асӑрханса, Нина халиччен нихӑҫан та туйса курман ачашлӑхпа сӗртӗнет арҫын алли ун пичӗ ҫинчи суран вырӑнӗсене.

— Çакăн пек илемсĕр сăнлă арăм мĕн тума кирлĕ сана? — ыйтрĕ Нина Аванти аллине хăйĕн пичĕ çинчен хăвăрттăн сирсе.

— Сан питӳ çинчи кашни сантиметра чуптуса ачашлас килет ман. Илемлĕ сăнлипе пурăнса курнă эпĕ. Чĕри чул пек хытă пулсан мĕн тума кирлĕ мана хĕрарăм илемĕ? Сан чунна витĕр туятăп. Кăмăлу катса çиес сар çу пек.

— Çемье чăмăртама Турă пӳрмен мана. Ним пытармасăр калатăп: качча каясси çинчен нихăçан та ĕмĕтленмен эпĕ. Çук ĕнтĕ. Ку калаçăва вĕçлер.

— Сана эп сусăрри хăрататъ пулсан çакна ан пытар манран. Суккăр çынна ĕмĕр тăршшĕпе çавăтса çӳрес килмест манăн тесе уççăн кала. Куçран кала. Вара эпĕ санран тӳрех хăпатăп, пĕрлешесси çинчен тек çăвар та уçмастăп.

Нина, çут тĕнче çине хăй те хăрах куçпа кăна пăхаканскер, епле калатăр-ха ĕнтĕ ку сăмахсене? Апла калани çынна çапса хуçнипе пĕрех вĕт.

— Эпĕ — анне çуначĕ айĕнчи кайăк, çав йăваран вĕçсе тухма шутламастăп, — терĕ вăл Авантие кӳрентересрен асăрханса.

— Апла пулсан санпа калаçни те усăсăр, аннӳ патне пыратăп, — çирĕппĕн аларĕ арçын.

Ун сăмахне чăна илмерĕ Нина, анчах хăйне пăхăнман чĕри пăлханчĕ, хурланчĕ, савăнчĕ. Çак каçа вăл нихăçан та манас çук. Ăна качча тухма ыйтаççĕ. Кашни хĕр илтме ĕмĕтленекен сăмахсене кĕтментуман çĕртен вăл та илтсе курчĕ. Уншăн çакă та çителĕклĕ. Ĕмĕр асра тытса пурăнĕ вăл çак куна. Качча тухасси вара — ăна пӳрнĕ шăпа мар. Çапла шутларĕ те хĕр лăпланчĕ, Аванти унпа мăшăрланас шутлă пулнине амăшне те пĕлтермерĕ.

...Мăнкун çитиччен хваттере кăштах тирпейлес тесе Нинăпа амăшĕ юсав ĕçĕсем пуçласа ячĕç. Маçтăра чĕнме ытлашши укçа çук, çавăнпа хăйсемех тăрмашаççĕ. Ĕнер шуратнă мачча çĕр каçипе типсе

ёлкёрнё те халё тин çунă юр пек тасан курăнса чуна савăнтарать. Паян стенасене çума та юрать, ыранччен кушăхчăр. Хаклах мар, анчах пӳлёме ăшă тёс кёртекен шпалер туянса хунă ёнтё, стенисене тирпейлесе çитерсен тытмалла та çыпăçтармалла çеç. Виркка урай варрине шыв тултарнă витресем лартнă, кивелнё япаласенчен çурса хатёрленё татăк-кёсёк кăларса хунă. Урайне ёнер ик-виç хут çунă пулин те вăл шап-шурах. Пурă час кайса пётмест çав. Юрё ёнтё, паян татах вараланать.

— Стенасене çӳлтен хамах тасатăп, эсё пукан çине ан хăпар, пӳ çитнё таран кăна çу, — калаçать амăшё сётел çине шыв витри лартнă май. Унтан вăл хăй те сётел çине хăпарса тăчё.

Çак самантра алăк шăнкăравё янăраса кайрё.

— Кайса уç-ха, Ниниле, кӳршёсем каçрёç пуль, — хушрё Виркка хёрне.

Нина алăка пырса уçрё те пач кётмен çынсене курнипе çухалсах кайрё, пёр вăхăт ним чёнме аптăраса тăчё.

— Кёме юрать-и? — ыйтрё Авантипе юнашар тăракан арçын.

Кил хуçи çаплах ним те чёнменнине кура Аванти:

— Алăка ăна кёрсе çӳреме каснă вёт, — терё те шалалла ярса пусрё. Тепёр арçынни ун хыççăн кёчё.

«Ну, анне мана çапсах пăрахать, — шухăшласа илчё Нина. — Мён каласа каялла кăларса ярас кусене?»

Сётел çинче тăракан Виркка палламан арçынсене курсан каялла анчё, аллисене саппун аркипе шăлкаларё.

— Ырă кун пултăр. Пысăк ёç пуçланă иккен эсир, Турă пулăштăр, — чи малтан сăмах хушрё Авантипе пёрле килнё çын.

— Тавтапуç. Пысăкки-мёнё... Пёчёк хваттере Мăнкунччен тирпейлес терёмёр. Тем паллаймарăм-ха эп сире. Пирён патахчё-и эсир?

— Сирĕн патах, Вера Терентьевна. Сирĕн патах, — хуравларĕ хура куçлăх тăхăннă Аванти.

— Кур-ха, ятăма та пĕлетĕр. Камсем пултăр-ха эсир?

— Аванти ятлă эп, ку — ман шăллăм Улатимĕр. Юмановсем эпир. Асаттене Юманкка тесе чĕннĕ.

— Алăк патĕнче калаçмалли сăмах мар, малалла иртме юрать-и? — хăюланчĕ Улатимĕр текенни.

— Пирĕн паян тирпей çукрах-ха кунта, çакăнта иртсе ларăр эппин, — текелесе Виркка пурăпа вараланасран хупланă диван çиттине айккинелле сирсе хучĕ. — Кам хушнипе, мĕн ĕçпе çӳретĕр-ха?

— Чун хушнипе çӳрекенсем эпир. Çакăнта пушмак пăру пур тенине илтрĕмĕр, — юптарать Улатимĕр. — Ылтăнла параççĕ-ши, кĕмĕлле сутаççĕ-ши? Çавна пĕлес тесе килтĕмĕр.

— И-и-и! Пушмак пăру шыракансем пултăр иккен-ха эсир. Хĕрĕм, сана çураçма килнĕ мар-и? Тӳрех тур кĕтесĕ айне минтер хурса лартар мар-и каччине? — шӳтлесе те йĕплесе калаçать Нина амăшĕ. — Каччи хăшĕ пулать-ха?

— Ман пиччем, Авантей, хамăр хушăра эпир ăна Аванти тетпĕр, хăйĕн пурнăçне сирĕн хĕрпе çыхăнтарасшăн. Пирĕнтен тухнă йăла мар. Хĕрарăмпа арçынна мăшăрлă пурăнма Турă хушнă.

— Çаплине çапла пуль те-ха, — юриех шӳтленçи пулать Виркка. — Калăмне тӳлеме укçăр çитейĕ-ши? Ман пĕртен-пĕр хĕр кăна та — йӳнĕлле памастăп.

— Хĕрне парсан калăмĕ шел мар, мĕн чухлĕ ыйтсан та... Пичче кăмăлĕ çапларах, — тавăрчĕ Улатимĕр.

— Çитĕ чĕлхене вылятса! — хальхинче тарăхарах каласа хучĕ Виркка. — Ырă çыннăмсем, хăвăр мĕнле хĕре çураçма килнине кăштах та пулин тĕшмĕртетĕр-и хăть эсир?

— Пĕлнĕрен килтĕмĕр те ĕнтĕ, — евчĕ вырăнне хăй хуравларĕ Аванти.

— Çук, пĕлместĕр çав. Пĕлес тĕк ура та ярса пусмăттăр. Нина — вилĕмрен тăрса юлнăскер. Вăл миçе операци витĕр тухнине каласан çын ĕненес çук. Унăн пĕтĕм ăшĕ-чикки им-çампа тулса ларнă. Вăл эмел ĕçнĕ чухлĕ тепри чей те ĕçмест. Кĕлеткине пĕçерсе курите çине хурас пулсан ун какайне сысна та çиес çук.

Ку сăмахсене илтсен Аванти ахăлтатсах кулса ячĕ. Нина амăшĕ тарăхса каланă сăмахсем ăна çав тери кулăшла пек туйăнчĕç.

— Ун пекки мана пушшех те килĕшет. Ик çăпата пĕр мăшăр пулатпăр, — терĕ вăл.

— Аванти суккăр. Куçĕсене уçас тесе ăна вун виçĕ хут операци турĕç, шел, усси пулмарĕ, — хушса хучĕ Улатимĕр.

— Ав епле иккен! Мĕнле пурăнас тетĕр вара эсир, икĕ сусăр çын? — тата ытларах тĕлĕнсе, анчах чунĕпе çемçелсе ыйтрĕ Виркка.

— Пĕр-пĕрне упраса, пулăшса пурăнăпăр. Сусăр çынна сывви ăнланас çук. Эпĕ Нинăна питĕ лайăх ăнланатăп. Иксĕмĕр пĕр чĕлхе тупасси мана пĕрре те иккĕлентермест.

— Пĕр чĕлхе тупайăпăрах-ши? — тинех калаçăва хутшăнчĕ малтан йăлт çухалса кайнă хĕр. — Эсĕ — аслă пĕлӳ илнĕ çын, эпĕ ав вуннăмĕш класран та вĕренсе тухаймарăм...

— Куншăн пачах та ан кулян, Нина, эп вĕренни иксĕмĕре те çитет, — хуравне тӳрех тупрĕ Аванти.

— Эсĕ кирек хăш вăхăтра та вилсе кайма пултаратăн тесе асăрхаттарнă мана тухтăрсем. Качча кайасси çинчен шутламалла мар манăн.

— Тухтăр вăл Турă мар, кама миçе çул пурăнма пӳрнине ăçтан пĕлтĕр? Эпĕ те темиçе хут çĕçĕ айне выртнă, апла пулин те тăхăрвун тăхăр çула çитес ĕмĕтлĕ. Хампа пĕрле сана та пурăнтаратăп, манран ниçта та уйрăлса каяймăн, — савнă çынни енне çаврăнса йăл кулса илчĕ Аванти.

Вера Терентьевна шухăша кайрĕ, вăл ним калама аптăрарĕ пулас, пĕр вăхăт чĕнмесĕр ларчĕ. Пĕччен хĕрарăм шăпи мĕн тери йӳççине унран лайăхрах кам пĕлет-ши? Çул хĕрринчи ясмăк пек пурăнса ирттерет вăл ĕмĕрне: кам иртекен таптаса каçса каять. Ун асапне, ун куççульне куракан çук. Юрать-ха, чунне лăплантарма хĕрĕ пур. Вăл çамрăк, Виркка вара ватăлса пырать. Хăй вилсен тăр пĕччен юлакан хĕрне те çак шăпах кĕтмест-и? Çумра çывăх çын пурри лайăхах ĕнтĕ. Анчах... Шанса пама юрать-и çак çынна пĕртен-пĕр тĕпренчĕкне? Иккĕленет амăшĕ, хăй чун панă хĕрĕ тата пысăкрах асапа кĕрсе ӳкесрен хăрать.

Авантипе Улатимĕрĕн вара сăмах татмасăр каяс килмест. Кун пирки иккĕшĕ килнĕ чухнех калаçса килĕшрĕç. Çавăнпа та вăхăта тăсас тесе Улатимĕр ӳпкеленçи пулчĕ:

— Хăнасене чей те сĕнмеççĕ иккен ку килте. Чейĕ çук-ши, шывĕ çук-ши?.. Çăвар типсех ларчĕ. Хамăрпа чиксе килнине кăларса лартар-ха, Аванти. Йӳçĕ ĕçсе тутлăн калаçар.

— Чăнах та-çке, хăнасене чей сĕнме те манса кайнă эпир. Нина, чейник ларт-ха плита çине, — хушрĕ амăшĕ хĕрне. — Ĕнер каçхине пĕçернĕ кукăле касса хур.

Çăкăр-тăвар çичĕ юта та çывăхлатать. Сĕтел хушшине ларсан сăмах-юмах та çăмăллăнрах юхрĕ. Пĕрпĕрин çинчен ыйта-ыйта пĕлчĕç, шӳтлерĕç, кулчĕç.

— Ытла хитре ят панă сана аçу-аннӳ. Епле шухăшласа тупнă тулĕк? — терĕ Виркка Аванти çине пăхса.

— Хăйсем шухăшласа тупман ăна вĕсем, — тавăрчĕ Улатимĕр. — Çĕпĕрте, вăрман варринчи пĕр пĕчĕк чăваш ялĕнче, упранса юлнă çак авалхи ят. Тĕне кĕмен чăвашсем пулнă вĕсем. Атте фронтра чухне Çĕпĕр чăвашĕпе, Авантей ятлăскерпе, çумаçумăн çапăçнă. Авланса та ĕлкĕреймен маттур яш

пулнă лешĕ. «Вилсен-тусан ман ятăм та, хушаматăм та юлас çук ĕнтĕ. Хама астуса пурăнмалăх ывăл-хĕр те хăвараймарăм», — тесе куляннă иккен вăл. Чăнах та, Мускав çывăхĕнчи пĕр хаяр çапăçура çав каччă вилмеллех аманнă. Атте вара 1942 çул пуçламăшĕнче çуралнă ывăлне Аванти ят панă. Ку историе пирĕн тăвансем пурте пĕлеççĕ. Аттесĕр пуçне нихăшĕ те курман çав Çĕпĕр каччине, ячĕ авă пурăнать, хăйне те асра тытатпăр.

— Чăвашсем таçта та саланнă çав, — тĕлĕнсе итлесе ларать Виркка. — Мĕн кăна пулмасть пуль пурнăçра?..

Вăхăт каçалла сулăннă май каччăпа ун евчи каллех туй пирки сăмах хускатрĕç.

— Шухăшласа пăхар-ха лайăхрах. Каллĕ-маллĕ тумалли ĕç мар ку. «Тĕрĕс мар тунă пĕр утăм ĕмĕр тăршшĕпе такăнтарма пултарать», — теме юрататчĕ ман атте. Çĕр виçекен пулнă вăл. Хĕр качча парасси — хăпăл-хапăл татса памалли ыйту мар, — тесе ăсатса ячĕ Виркка авланас шутлă арçынпа ун шăллĕне. Аюк тесе те кӳрентермерĕ вăл Юмановсене, хăй шухăшне татăклăн та пĕлтермерĕ.

Тепĕр кун вĕсен алăкне Аванти пĕчченех пырса шаккарĕ. Нинăпа амăшĕ пӳрте тап-тасах çуса тирпейленĕ. Шпалер çыпăçтариччен кантăк каррисене çакма кухньăри чӳрече тăррине шăтăксем шăтармалла. Кирлĕ инструменчĕ пур, ĕçне пĕлекенĕ çук. Кама чĕнмелле-ши тесе пуç ватаççĕ.

— Мĕн çынна чĕнсе чăрмантармалла уншăн? Ăçтаха дрель? Чӳрече патне икĕ пукан юнашар лартса парăр мана, — терĕ Аванти. Акă вăл Нина юнашар вырнаçтарнă пукансенчен пĕрин çине хăпарса та тăчĕ. — Эпĕ хăш вырăнта шăтармаллине пӳрнепе кăтартăп, эсир иксĕр тимлĕрех пăхăр та пӳрнене ăçтарах куçармаллине калăр: сулахаялла е сылтăмалла, çӳлелле е аялалла? Тулĕк вăн çавăнталла тесе ан калăр, курмастăп пурпĕрех. Пĕррехинче юлташăм

патне кайма тухрăм. Çулне пĕлеттĕм-ха. Çил-тăман тухса юр хӳсе лартнă та, çул хытти çухалнă. Пĕр хĕрарăмран ыйтрăм. «Вăн çавăнталла каймалла», — терĕ те хăй çулĕпе утрĕ. Тепринчен ыйтатăп, вăл та: «Вăн çавăнталла каймалла», — тет. Çултан пачах аташса каяс мар тесе троллейбус чарăнăвне виççĕ çаврăнса тухрăм вĕт. Аран çитрĕм юлташ пурăнакан çурт тĕлне, — Вера Терентьевнăн килĕнче иккĕмĕш хут çеç пулин те пач ютшăнмасăр калаçать Нинăпа мăшăрланма ĕмĕтленекен арçын.

Пӳлĕм часах дрель сассипе тулса ларчĕ. Çур сехет иртрĕ-и, ытларах-и — Аванти виçĕ шăтăк шăтарса та пачĕ. Виркка суккăр çын алли-ури çапла çыпăçуллă пулнинчен çав тери тĕлĕнчĕ, анчах нимĕн те шарламарĕ. «Нинăна калас-ха, тен, шкапсене вырнаçтарнă чухне те Аванти килсе пулăшĕ», — шутларĕ вăл хăй ăшĕнче.

— Ку дрель сире кухньăри шкапсене лартнă чух та кирлĕ пулĕ-ха, çынран илнĕ пулсан халех леçсе ан парăр, — ун шухăшне вуланă пекех каласа хучĕ Аванти.

— Çынран илмен, хамăрăнах вăл, — терĕ Нина амăшĕ. Ялта чухне упăшкасăр пурăнакан хĕрарăмсенчен тĕлĕнетчĕ вăл: лешсен килĕнче арçын ĕç хатĕрĕсем — пăчки-пуртти, сави-мăлатукĕ тата ытти — пурте пурччĕ. Çынна чăрмантарас килмен-ши, арçынлă çемьесенчен катăк пулас темен-ши?.. Арçын ĕçне, мĕн вăй çитнине, хăйсемех тăватчĕç вĕсем. Шупашкара куçса килнĕренпе Виркка та кил-тĕрĕшре кирлĕ пулакан ĕç хатĕрĕсене янтăласа хучĕ. «Пĕччен хĕрарăм йăли теха ĕнтĕ... Пултăрах. Çăкăр ыйтмаççĕ, выртчăр. Пиччесем çумра çук вĕт кунта, — терĕ ун чух хăйне хăй лăплантарса. — Пурнан пурнăçра катăк пуртă та кирлĕ, акă дрель туянни те мĕнле вырăнлă пулчĕ.

— Эсир хирĕç мар пулсан уçăлкаласа çӳреме Нинăна урама илсе каясшăн эп, — терĕ Аванти кантăк каррисене çакнă хыççăн.

— Кайтӑр, ара. Ҫанталӑкӗ паян ҫав тери хитре. Ҫуркуннехи сывлӑша ҫӑтса тӑранмалла мар. Мӗн килте пӑчӑхса лармалла ҫамрӑксен? — хирӗҫлемерӗ Виркка.

Аванти Нинӑна Атӑл хӗрне ҫитсе килме сӗнчӗ. Троллейбус ҫинчен вӗсем Карл Маркс урамӗпе Володарски урамӗ хӗресленнӗ ҫӗрте анса юлчӗҫ.

— Атӑл хӗрне ҫитиччен малтан ҫакӑнта кӗрерха, — терӗ Аванти хӗре Мӑшӑрлану керменӗ еннелле уттарса. Лешӗн паспорчӗ ҫумрах пулнине чухлать вӑл, мӗншӗн тесен инвалида тухнӑранпа хӑй те урамра документсӑр ҫӳремест. — Паян заявлени парса хӑварӑпӑр.

Куна илтсен Нина хӑрасах ӳкрӗ, ним тусан та кермене кӗресшӗн мар.

— Паянах мана качча тухмастӑн вӗт эсӗ. Ҫырӑниччен виҫӗ уйӑх кӗттерӗҫҫӗ. Йӗрки ҫапла. Мана качча тухасах мар тетӗн пулсан заявление кирек хӑҫан та каялла илме май пур, — лӑплантарчӗ ӑна Аванти. — Заявлени пани — туй кӗрекине ларни мар. Пӗрлешме вӑхӑт ҫитиччен мана тата ҫывӑхрах пӗлсе ҫитетӗн.

«Виҫӗ уйӑх кӗтмелле пулни аван-ха вӑл, — тинех лӑпланчӗ Нина. — Ҫулла пулсанах тӑван ялӑма тухса каятӑп, вӑл вара виҫӗ уйӑхра ман ҫинчен манса та кайӗ», — ҫаплах ӗненмест вӑл Аванти чӑнласах авланма шутланине.

Мӑшӑрлану керменӗнчен тухсан Аванти тем шут тытрӗ, Нинӑна урама тӑратса хӑварчӗ те хӑй каялла кӗчӗ. Керментен ҫав тери хаваслӑн тухрӗ.

— Виҫӗ уйӑхран мар, уйӑх ҫурӑран ҫырӑнтарма ӳкӗте кӗртрӗм, — терӗ вӑл хӗре хулӗнчен тытса.

— Ҫапла хӑвӑрт-и? — каллех хӑраса ӳкрӗ Нина.

— Вун ҫиччӗре мар эпир санпа. Иксӗмӗр пӗр чӗлхе тупаймасан пӗр-пӗриншӗн ют пулнине эрнеренех туйса илетпӗр. Ан шиклен. Шухӑшна улӑштарсан кирек хӑш вӑхӑтра та заявление каялла илме пул-

таратӑн, — лӑпкӑн хуравларӗ Аванти пулас мӑшӑрне. — Иксӗмӗр уҫӑлса ҫӳреме тухрӑмӑр вӗт паян. Халӗ Атӑл хӗррине кайма та юрать.

Нинӑпа Аванти «Волга» ятлӑ хӑна ҫурчӗ умӗнчен иртсе Крупская ячӗпе хисепленекен парка кӗчӗҫ, юхан шыв еннелле утрӗҫ.

Эх, ҫав ҫурхи Атӑл! Сарлака та мӑнаҫлӑскер чуна хавхалану, ӑш-чике вӑй-хӑват вӗрсе кӗртет. Яшкӗрӗм нумай та, пушшех илемлӗн курӑнать Атӑл хӗрри. Пӑртан тасалнӑ юхан шыв ҫырана шӑмпӑлшӑмпӑл! ҫапӑнса чӳхенет. Сывлӑш мӗн тери уҫӑ. Уйрӑмах ҫулла, ҫыран хӗррипе ӳсекен ҫамрӑк ҫӑкасем ҫурӑлсан, лайӑх кунта. Нина килсе курнӑ. Ун чух пӗтӗм тавралӑх пыл шӑршипе тулса ларать. Ҫӑтмахра та ун пек ырлӑх ҫук пуль.

Аванти хӗре тепӗр эрнерен каллех Атӑл хӗррине илсе килчӗ. Нинӑшӑн тӗлӗнтермӗшсем пӗтмен иккен-ха.

— Пирӗн урам кунтан пит инҫех мар, ҫитсе килер-и ман киле? — сӗнчӗ Аванти. — Эп мӗнле пурӑннине ху куҫупа курӑн. Аннӳн ыйтӑвӗсене хуравлама ҫӑмӑлрах пулӗ.

Капла каласан Нина хирӗҫлемерӗ. Кайса курнӑшӑн мӗн пулать ара? Аванти тӗрӗсех калать: пулас кӗрӳшӗ ӑҫта, мӗнле кил-ҫуртра пурӑннине пӗлмесӗр Нинӑна амӑшӗ качча парас ҫук.

Кил хуҫи тирпейлӗхе юратнине картишне кӗрсенех асӑрхарӗ Нина. Алкумӗнчен лаҫ патне, вутӑ сарайӗ енне хӑма сарса ҫул тунӑ. Хӑмисем паян ирпе кӑна ҫуса тухнӑ пек таса. Сарай умӗнче пӗр машина вутӑ купаланса выртать. Ӑна татса хатӗрленӗ, ҫурса ӗлкӗреймен. Чус кӗрпине шӑлса пуҫтарса кивӗ карҫинкккана тултарнӑ. Пӳртӗнче те тирпейлӗ, суккӑр ҫын пурӑнать тесе те калаймӑн. Вырӑнӗ ҫине кӑвак чечеклӗ ҫи витти сарнӑ, хӗррине ҫип ҫапнӑ пек тӳрӗ кӗтеслесе майланӑ. «Аванти салтакра пулни ҫакӑнтанах паллӑ», — шухӑшласа илчӗ Нина. Минтерсе-

не кăпăшкалатса пĕр-пĕрин çине хунă. Унта-кунта тĕлсĕр йăванса выртакан пĕр япала та çук. Тĕпелти ал шăллийĕ тап-таса. Савăт-сапа валли ятарлă çӳлĕк пур, эрешлесе илемлетнĕскер. Ăна Аванти хăй тунине Нина каярахпа пĕлчĕ. Тумтир çакмалли шкап та лавккара туяннăскер мар, анчах фабрикăра тунинчен пачах та кая мар.

— Чей ĕçме шыв çук. Кайса пусăран ăсса килем, эсĕ унччен пăхкаласа çӳре, паллаш пулас килӳпе, — терĕ те Аванти картлăмпа икĕ витре йăтса пӳртрен тухрĕ.

— Санпа пĕрле пырам-и? — хыççăн тухма тăчĕ Нина.

— Юл килте. Эп хамах, — терĕ арçын каялла çаврăнмасăр.

Аванти шыв йăтса килнине курсан Нина куççульленмесĕр чăтаймарĕ. Картлăмпа икĕ витре шыв йăтнă арçын хăма сарнă çулпа тирпейлĕн, пĕр тумлам тăкмасăр утса килет.

Акă вăл вучах чĕртсе чейникпе шыв çакса ячĕ.

— Эс ĕçленине пăхса тăма мана аванах мар. Кала, мĕн туса пулăшмалла сана? — терĕ хĕр.

— Хальлĕхе нимех те тăвас çук. Ахаль тăрас килмесен тĕпелелле иртсе шур çăкăр кас, чей куркисем хатĕрле. Ман кунта плита çук та, сана малтанлăха кансĕр пулать-ха кăмака хутса, вучах чĕртсе апат пĕçерме. Ан шиклен, пĕр хăнăхсан йывăрах мар. Хам пулăшăп. Ытти енчен илсен — ырлăх. Сĕтел çине лартма мĕн кирлĕ — хамăн пахчарах акса-лартса тăватăп, лавккана утмалла мар. Çĕр ялти пек пысăк мар, анчах хамăра хĕл каçмалăх пахча çимĕç çитĕнтерме çитет. Чей ĕçсен тухса курăпăр акă. Шывне те кранран юхтармастпăр, таса пусăран йăтатпăр. Тути лайăх. Çавăнпа кунта чей те тутлăрах пек туйăнать.

Чей ĕçнĕ хыççăн юлнă вĕри шывпа Нина савăтсапана çуса хучĕ. Ал шăллине хăй вырăнне çакас тесе кармашнă чух Аванти ăна ыталаса илчĕ.

— Тӗкӗн тулӗк! Сан патран тухсанах Атăла кайса сикетӗп! — карт туртăнса ун ытамӗнчен вӗҫерӗнчӗ Нина.

— Ан ҫиллен. Эп сана хур тăвас ҫук, — пулас мăшăрӗ шӳтлеменнине тӳрех ăнланчӗ Аванти. — Нина, иксӗмӗр — пӗр ҫемье пулмалли ҫынсем. Халăх ҫăварне хапха тытса та хуплаяс ҫук. Кайран-кайран ҫын сăмахӗ урлă илтсе ăшна ҫунтармалла ан пултăр, хамăн ҫылăхăмсем ҫинчен хамах каласа парам сана. Тӳрех шарт та март туса шухăшна улăштарма ан васка. Итле малтан. Атя ларсах калаҫар-ха.

— Юрать, эп сана итлеме хатӗр, — Нина пукан илсе Авантие хирӗҫ вырнаҫрӗ.

— Суккăрлансан хама алра тытайми пулнăччӗ эпӗ. Пурăнас килместчӗ. Эрех ӗҫсен кăна хуйхăм тамалатчӗ. Ӗҫсе ӳсӗрӗлсен кам ăш сăмах калать, кам черкке тыттарать, ҫав ҫывăх ҫын пек туйăнать. Кӳршӗри Анна та эрехпе хăналатчӗ, пытармастăп: арăмпа уйрăлнă хыҫҫăн ун кравачӗ ҫинче ҫывăрса курнă эп. Хăмăт тăхăнтартасшăнччӗ вăл мана — вăхăтра пăрăнтăм. Эпӗ ун патне тахҫанах ҫӳреме пăрахнă. Хăй халӗ те шанăҫне ҫухатман пулас. Анчах вăл мана кирлӗ мар, нихăҫан та кирлӗ пулман. Хамăн малашнехи пурнăҫа эпӗ санпа юнашар кăна куратăп. Эпир, Юмановсем, хамăр хушаматпа выляма юратмастпăр. Ритăпа уйрăлнă хыҫҫăн урăх пӗр хӗрарăма та хамăн хушаматăма парас килместчӗ. Паян эпӗ пӗрре те иккӗленместӗп: иксӗмӗрӗн пӗр хушамат пулмалла. Эсӗ мана ҫылăхăмсене пăхмасăр йышăнма пултарсан эпӗ тӗнчери чи телейлӗ ҫын пулăп.

Аванти шăпланчӗ те Нина мӗн каласса кӗтрӗ. «Ятлатăр мана, намăслантартăр, пăрахса кăна ан кайтăр», — ăшра самаях шикленсе шухăшларӗ вăл.

Нина тӳрех хуравламарӗ.

— Халиччен мӗн пулни — вăл санăн иртнӗ пурнăҫу. Иксӗмӗр ҫӗнӗ пурнăҫ пуҫлатпăр пулсан ăна аса илмӗпӗр. Малашне вара санăн манран вăрттăн пурнăҫ

ан пултăрччĕ, пĕр-пĕриншĕн шанчăклă тĕрек пуласчĕ пирĕн, — терĕ вăл Авантие аллинчен тытса. — Ют хĕрарăм çеç мар, ĕçкĕ-çикĕ те ан аркаттăрччĕ пирĕн çемьене.

— Килĕштерсе, туслă пурăнăпăр эпир санпа. Лайăх пурăнăпăр, — тинех лăштах сывласа ячĕ Аванти. — Атя хамăн хуçалăха кăтартам сана. Чим, çăра уççи илем-ха.

Вĕсем пӳрт çумĕнчи чăлан евĕрлĕ пӳлĕме кĕчĕç. Кил хуçи кунта мастерской уçнă иккен. Тимĕрпе, йывăçпа ĕçлемелли станоксемпе ытти ĕç хатĕрĕ — мĕн кăна çук-ши? Хăшне урайне, хăшне стена çумĕнчи çӳлĕксем çине тирпейлĕн вырнаçтарнă.

— Çак мастерской çăкăр çитеретчĕ мана, — терĕ Аванти салхуллăн. — Ĕç хатĕрĕсене сутма та, çынсене салатса пама та алă çĕкленмест. Ывăнмасăр тăрмашаттăм кунта. Хуçалăхри чи юратнă кĕтес çакăччĕ.

— Тăрăшса пухнă хатĕр-хĕтĕре ма салатса пĕтермелле? Çăкăр ыйтмаççĕ вĕт. Кунтах упранччăр, кирлĕ кунта кирлĕ пулĕç, — тавăрчĕ Нина, Аванти чунĕ ыратнине туйса сăмаха урăх еннелле пăрчĕ. — Ман «мастерской» ăçта пулать?

— Атя ут ман хыççăн, сан «мастерской» кунтан чылай пысăкрах, пĕччен ĕçлесе ĕлкĕреймĕн унта, иккĕн тăрмашăпăр. — Аванти алăка хупса питĕрчĕ те анкартинелле утрĕ.

Пахчи ытла пысăках мар. Пахча çимĕç йăранĕсене сулхăнлатас мар тесе улма-çырла йывăçĕсемпе тĕмĕсене анкартин хĕвел тухăç енне лартнă. Çĕр улми анипе йăрансене кĕркуннех чавса тирпейленĕ пулас, хуп-хуран курăнса выртаççĕ. Çĕр типнĕпе пĕрех, кĕреçе йăтса тухма та юрать.

— Карта хĕррисенче сип-симĕс вĕлтĕрен шăтнă, яшка пĕçермелĕх çитĕнсе те ĕлкĕрнĕ, — терĕ Нина.

— Мана та килĕшет вĕлтĕрен яшки, анчах серте яшкине тата ытларах юрататăп. Серте вутă сарайĕ

хыҫӗнчи лаптӑкра ӳсекенччӗ, кӗҫех шӑтать пуль-ха.

— Шӑтнӑ серте, аякранах ем-ешӗл курӑнса ларать, — тесе Нина вутӑ сарайӗ еннелле утрӗ. — Атя серте яшки пӗҫеретпӗр. Кӑнтӑр апачӗ пултӑр.

— Салмапа-и?

— Салмапа та пӗҫерме пулать. Салмине тулӗк тӗрлӗ ҫӗрте тӗрлӗрен тӑваҫҫӗ. Пирӗн енче, сӑмахран, салмана тӑваткалласа касаҫҫӗ. Общежитире пурӑннӑ чух Патӑрьел районӗнчен килнӗ хӗрсем чустана ҫӳхен йӗтӗрлесе каснӑ салма тӑватчӗҫ. Сана мӗнли килӗшет?

— Ман анне чустана чашӑкран кашӑкпа пӗчӗкшерӗн касса илсе вӗрекен яшкана ярать. Ҫӑмах теҫҫӗ ӑна пирӗн енче. Ҫӑмах яшки пӗҫерсен ҫӑкӑр та кирлӗ мар вара.

— Хамӑр патри пек салма ҫитерем-ха, апла, сана.

— Ху пӗлнӗ пек ту. Эс яшка пӗҫернӗ хушӑра эп ҫак вутта ҫурам, — пуртӑ илме мастерской алӑкне уҫрӗ Аванти. — Ҫӗр улми тӗпелти витрере, ҫӑнӑх — шкапра.

Нина серте татса кӗнӗ ҫӗре Аванти вутӑ ҫурма та пуҫланӑччӗ ӗнтӗ. Картишӗнче шарт! та шарт! туни, вут пуленкисем аяккалла ӳкнӗ сас кӑна илтӗнсе тӑрать. Хӗр чарӑнса тӑрса вӑл ӗҫленине сӑнарӗ. Акӑ Аванти ҫӗнӗ сыпӑ илсе ӑна каска пуканӗ ҫине вырнаҫтарса тӑратрӗ, пуртта ҫӳлелле йӑтса сулса ячӗ. Пуртӑ вутӑ сыппи ҫине тӑрӑнса ларчӗ. Арҫын вутӑ сыппине ҫӗклесе илсе пуртӑ тӑршшипе каска ҫине ҫавӑрса ҫапрӗ. Сыпӑ ҫурмаран касӑлса кайрӗ те, пӗр пуленки Авантие чутах ураран лекмерӗ. Ҫакна асӑрханӑ хӗр хӑрасах кайрӗ.

— Хӑвна ху амантса пӗтерӗн, ан васка, тархасшӑн.

— Эс, Нина, эп ӗҫленине пӑхса сехрӳне хӑпартса ан тӑр. Кӗрех пӳрте. Йӗркеллех пулать, халиччен туман ӗҫ мар вӗт, — лӑпкӑн хуравларӗ кил хуҫи. — Сертине кашӑк ҫаврӑнми нумай яр. Унсӑрӑн вӑл серте яшки те мар.

Пӗрле ларса апатланнӑ хыҫҫӑн Аванти Нинӑна Чӑваш академи драма театрӗ умне ҫити ӑсатрӗ. Троллейбуссем Ехрем купса ҫурчӗсем умӗпе иртсе ҫаврӑнаҫҫӗ те шӑпах театр умӗнче чарӑнаҫҫӗ. Кунта ҫын та нумай мар, ларса кайма меллӗ.

Хӗрӗпе пулас кӗрӳшӗ загса заявлени панине Вера Терентьевна ҫийӗнчех пӗлеймерӗ. Хӗрӗ ӑна кулянтарасран хӑрарӗ. Анчах ку хыпара туйччен пытарса усрама та ҫук, каламах тиврӗ.

— Аннӳнтен ыйтса та тӑмастӑн вӗт-ха. Мана, ват ҫынна, пӑхса пурӑнасран хӑраса качча каятӑн-и ӗнтӗ? — кулянса та ӳпкелешсе калаҫрӗ амӑшӗ...

— Анне, мӗн калаҫатӑн эсӗ? Сана эпир нихӑҫан та пӑрахас ҫук. Пӗр-пӗрне пулӑшса пурӑнӑпӑр.

— Сана хӑвна пӑхмалла. Эсӗ сусӑр, упӑшку пулас ҫын суккӑр, иксӗре те нянька кирлӗ. Хам кунсерен ватӑлса пыратӑп. Икӗ ҫынна пӑхма вӑй ҫитерес ҫук эпӗ. Кама шанса пӗрлешетӗр?

— Анне, Авантие нимле нянька та кирлӗ мар. Килӗнчи мӗнпур ӗҫе хӑй тӗллӗн тума хӑнӑхнӑ вӑл. Пурӑна киле хӑвах курса ӗненӗн акӑ, — лӑплантарма тӑрӑшать амӑшне Нина.

Лешне вара нимпе те ӳкӗте кӗртме ҫук.

— Хӗрӗм, тархасшӑн, пӑрахӑҫла ку шухӑша. Пӗччен ан хӑвар мана! — ҫаплах хӑйӗнне перет Виркка. — Авланса уйрӑлнӑ арҫынпа йӗркеллӗ ҫемье тума май килӗ-ши? Шансах каймастӑп.

— Май тӑк — май, май мар тӑк — апрель, — терӗ Нина хирӗҫӳллӗ калаҫӑва шӳте куҫарма тӑрӑшса. Тӗрӗссипе каласан, авланса уйрӑлнӑ арҫынсене вӑл хӑй те килӗштерсех каймастчӗ. Авланнӑ арҫынсене юратакан хӗрсене вара пачах та ӑнланмастчӗ. Мӗншӗн ҫын телейне хапсӑнаҫҫӗ вӗсем, мӗншӗн тепӗр хӗрарӑм ҫемйине аркатасшӑн? Концертсенче те, ахаль кӑна ушкӑнпа «Огней так много золотых» юрра юрланӑ чух ҫӑвар уҫмасӑр тӑратчӗ. Ҫак туйӑм амӑшӗн шӑпипе тачӑ ҫыхӑннине вӑл халь

кӑна тараннӑн ӑнланса илчӗ. Амӑшӗн тата унӑн чӗрисене ӗмӗр тӑршшӗпех ыраттарса тӑнӑ суран ку. Тӗлӗнмелле ҫаврӑнса тухать иккен пурнӑҫ. Вӑл хӑҫан ӑҫталла пӑрӑнасса пӗлсе пӗтерейместӗн. Халӗ акӑ Нина хӑй те авланса уйрӑлнӑ ҫынна качча тухма хирӗҫех мар.

Пӗр-пӗрне ӑнланса ҫитеймесӗрех, пусӑрӑнчӑк кӑмӑлпа ҫывӑрма выртрӗҫ амӑшӗпе хӗрӗ.

Ирпе тӑрсан Нина амӑшне те систермерӗ, Авантие те пӗлтермерӗ, заявление каялла илме тесе загса кайрӗ. «Заявление пӗрле патӑр пулсан ӑна каялла илме те пӗрлех килмелле, — ӑнлантарчӗ ӑна унта ӗҫлекен хӗрарӑм. — Пӗрле килӗр те, заявление ним чӑрмавсӑрах тавӑрса паратпӑр».

Аванти кӑмӑлне хуҫма хӑюлӑх ҫитереймерӗ Нина, шарламарӗ загса кайса килни ҫинчен. «Ҫулла пултӑр-ха, яла тухатӑп та каятӑп. Виҫ-тӑват эрне пӗр-пӗрне курмасан Аванти туй ҫинчен ҫеҫ мар, ман ҫинчен те манӗ», — шутларӗ вӑл.

Туй кӳмине лариччен те туй пуласса ӗненсех кайман хӗре Аванти тӑван ялне те, ниҫта та кӑларса ямарӗ. Пӗр-пӗринпе тӑтӑшах тӗл пулчӗҫ вӗсем. Уйӑх ҫурӑран Нина Аванти килне унӑн мӑшӑрӗ пулса кӗчӗ. Унччен вара... Унччен чун-чӗрене самаях пӑлхатнӑ тата тепӗр ӗҫ пулса иртрӗ.

## Улттӑмӗш сыпӑк

Амӑшӗ ӗҫрен таврӑннӑ тӗле касхи апат хатӗрлеме тесе Нина кухньӑна кӗнӗччӗ. Сасартӑк телефон шӑнкӑртатрӗ.

— Итлетӗп, — трубкӑна пырса тытрӗ хӗр.

— Ырӑ кун пултӑр. Нина Петривановна-и?

— Шӑпах ҫавӑ. Кунӗ ырах-ха. Касарӑр та, эп сире сасӑран уйӑрса илеймерӗм.

— Зинаида Петривановна пулатӑп эпӗ.

— ...

— Паллаймарӑн-и? Селентерова эпӗ.

Тӗлӗнсе кайнӑ хӗр телефон ҫывӑхӗнчи хыҫлӑ пукан ҫине лаках ларчӗ.

— Халь палларӑм ӗнтӗ, — терӗ вӑл кӑштахран хӑйне алла илсе.

— Сывлӑху аптрамасть-и? Аннӳ мӗнле пурӑнать?

— Тав Турра, иксӗмӗр те чиперех-ха.

— Тӑван ялта сайра пулатӑр пулас эсир.

— Ҫапла, тахҫанах кайман, — кӗскен хуравлать Нина. Зинаида ун патне ахальтен шӑнкӑравламаннине чухлать вӑл, анчах сӑлтавне ниепле те тавҫӑраймасть, тӳррӗн ыйтма та хӑяймасть. Зинаида — Нина ашшӗн тепӗр арӑмӗнчен ҫуралнӑ хӗрӗ. Вӗсем пӗр-пӗрне палласҫӗ, пӗлеҫҫӗ, анчах ялта е шкулта тӗл пулсан нихӑҫан та сӑмах хушса каласман. Тӗрлӗ амӑшӗсенчен, анчах пӗр ашшӗнчен ҫуралнӑ аппӑшӗпе йӑмӑкӗ пӗр-пӗриншӗн ютсем пулнӑ. Яланах.

— Нина, атте сан патна ҫыру ярасшӑн, эсӗ хирӗҫ мар пулсан, паллах. Сан адресна шыраса тупма ыйтрӗ.

— Ман телефон номерне ӑҫтан тупрӑр?

— Ялти ҫынсенчен ыйткаласа пӗлтӗмӗр. Юрать-и сан патна ҫыру ҫырма? Хурав парӑн-и аттене?

— Ҫыру ҫырма ҫеҫ мар, пӗр-пӗринпе курса калаҫас шанчӑка та ҫухатман-ха эпӗ, — хӑй сисмесӗрех персе ячӗ Нина. Трубкӑн леш вӗҫӗнчи ҫын ҫӑмӑллӑн сывласа янине вӑл лайӑхах илтрӗ. Унтан хӑйӗн адресне пӗлтерчӗ.

— Тавах сана, — терӗ те Зинаида халиччен нихӑҫан та аппа тесе каласа курман тӑванӗпе сывпуллашса трубкӑна хучӗ.

Нина кухньӑна таврӑнчӗ, анчах малтанхи пек лӑпкӑн ӗҫлеме пултараймарӗ. Ҫӗр улми шуратмалли ҫӗҫҫе сунтӑха чикес вырӑнне холодильника хунине асӑрхарӗ те аллине лаш сулса газ плитине сӳнтерчӗ. Кӗтмен шӑнкӑрав унӑн пӗтӗм кӑмӑл-туйӑмне арӑш-пирӗш ҫавӑрттарса ячӗ, тахҫанах пир-

ченнӗ сурана тепӗр хут тапратса ыраттарчӗ, выртса макăрсан та тавăрма ҫук ачалăха илсе кайрӗ. Ашшӗ пур ҫинчех атте тееймесӗр, ун хӳтлӗхне, юратăвне туймасăр ӳсрӗ вăл. Мӗнле вăл аттепе пурăнасси — куна Нина пӗлмест. Унăн амăшӗ фермăра ӗнесем сунă чух ашшӗ те ҫавăнтах склад заведующийӗнче ӗҫлетчӗ. Амăшӗ патне кайсан хӗрача ăна пӗрре мар курнă. «Вăн сан аҫу килет», — тетчӗҫ те ҫынсем, Нина е силос шăтăкне, е вите хыҫне тарса пытанатчӗ. Пӗррехинче ҫапла ашшӗ хăйне ан куртăр тесе ӗнесене утă-улăм хурса памалли кункăра айне кӗрсе лăпчăнчӗ. Вырта-вырта ҫавăнтах ҫывăрнă та кайнă. Хӗрача ӗнесем мӗкӗрнипе вăранса кайрӗ. Уйран килнӗскерсене витене кӗртеҫҫӗ-мӗн. Тухса ӗлкӗреймерӗ Нина — кункăра умне Улапуҫ пырса тăчӗ. Сӗкекен ӗне вăл, ҫавăнпа унран дояркăсем хăйсем те хăрарах тăраҫҫӗ. «Мӗнле тухса тарас-ши кунтан? — шиклӗн шухăшлать ача. Хăй патӗнче такам пуррине сисрӗ пулас выльăх, мăйракипе кункăрана кӗмсӗртеттерсе хирме пуҫларӗ. Хӗрача хăранипе тата шаларах лăпчăнчӗ. — Мӗнле ҫакăнта ҫывăрса кайнăха эпӗ? Анне мана ҫухатрӗ пуль ӗнтӗ, тарăха-тарăха шырать пуль, — кулянать Нина. — Мӗнле тухасши халӗ кунтан? Кӗлеткене кункăра айӗнчен кăларсанах Улапуҫ мана мăйракипе чиксе шăтарать. Эп вилсен аннепе кукамай макăрсах вилеҫҫӗ. Атте макăрӗ-ши? Ҫук пуль. Унăн хăйӗн ачисем пур. Мана юратмасть вăл. Мӗншӗн ҫакăнта кӗрсе пытантăм-ши? Силос шăтăкнех сикмеллеччӗ. Унта никам та пырса тухас ҫукчӗ».

Йӗри-тавра никам та ҫук пулас. Ӗнесем мăшлатса сывлани, утă кавлени, урисемпе вырăнтан вырăна пускаласа илни ҫеҫ илтӗнет. Нинăн хырăмӗ те выҫса кайнă. Вăт лекрӗ те вăл капкăна. Ним тума аптăранипе хӗрача ӗнене йăпатма пуҫларӗ: «Улапуҫ! Улапуҫăм! Эсӗ мана тивместӗн вӗт? Эпӗ сана юрататăп, мӗншӗн тесен эсӗ сӗт нумай антаратăн. Анне

çапла калать: «Пĕр ĕни те Улапуç чухлĕ сĕт параймасть», — тет. Хĕрача хăрах аллине тăсса Улапуçа малти уринчен ачашласа илчĕ.

Ĕне хăйне нимĕнле хăрушлăх та кĕтменнине ăнланчĕ-ши, пуçне кункăрана чиксе утă кавлеме пуçларĕ. Çак самантпа усă курса Нина кункăра айĕнчен упаленсе тухрĕ те Улапуç патĕнчен аяккалла вирхĕнчĕ. «Ух-х! — тинех çăмăллăн сывласа ячĕ вăл. — Халь часрах киле çитмелле. Унсăрăн аннерен те, кукамайран та патак лекет».

Тахçан-тахçан пулнă хăрушла саманта аса илнĕ май Нина тути çинче кулă выляса илчĕ. Мĕншĕн тарса çӳренĕ вăл ашшĕнчен, халĕ çакна ăнлантарса пама та пултараймасть. Ютшăннă. Асламăшĕ саппун айĕнчи вăрттăн кĕсьерен кăларса тыттаракан кучченеçе те ват çынна кӳрентерес килменрен кăна илетчĕ. Килĕнче кукамăшĕ пуртан асламăшĕ патне питех туртăнман вăл. Ашшĕ вара кирлĕччĕ. Тантăшĕсем ашшĕсемпе çавтăнса утнине курсан унăн та çапла утса курас килетчĕ. Мăнаçлăн. Хăюллăн. Вăрттăн мĕн чухлĕ ĕмĕтленмен-ши кун пирки? Ашшĕне çывăхра курсан вара урисем хăйсемех аяккалла чуптарса каятчĕç. Чунри вăтанупа ютшăну, кӳренӳ унран аяккалла хăвалатчĕç.

«Çапах та хăйне май юратнă пуль вăл мана. Эпĕ кăна туйман, сисмен пуль çавна?» — шухăшлать халь асаилӳсен тыткăнне лекнĕ Нина. Ашшĕпе пĕр хут çеç куça-куçăн тăрса курнă вăл. Авари хыççăн тепĕр çултан пулчĕ-ха ку. Петриван ун чух ялти лавккара ĕçлетчĕ. Куккăшĕ Нинăна сахăр илсе килме хушрĕ, суранлăскерпе тем сиксе тухасран унпа пĕрле кӳршĕ хĕрачине ячĕ. Нина тавар илме хăй кĕмерĕ, урамра тăрса юлчĕ. Кӳршĕ хĕрачи, пĕчĕкскер, сахăр кам валли кирлине каланă-ши ĕнтĕ, урама унпа пĕрле лавккаçă хăй те тухрĕ. Хĕрачине вăл сахăр хутаçĕсĕр пуçне печени пачки, сахăр хакĕнчен юлнă вак укçа çумне хăйĕнчен хушса самаях хаклă хут

укçа тыттарчĕ. Аллисем чĕтреççĕ хăйĕн. «Хĕрĕм» тенине, ашшĕ хăй çине куç илмесĕр пăхнине, ун пичĕ тăрăх шултра тумлам йăрăлтатса аннине астăвать Нина. Тем каларĕ ăна ашшĕ, ку тем хуравларĕ — йăлтах манăçнă, мĕншĕн тесен ун чухне те хĕрача çав тери пăлханса кайрĕ те чупсах тарчĕ. Кил тĕлне çитеспе такăнса ӳкнĕ те тăн çухатнă. Çав саманта куç умне кăларсан халĕ те хăлхара ашшĕн сасси илтĕнет пек: «Хĕрĕм». Хăй пурнăçĕнче ытла та сахал илтнĕ ашшĕнчен çак сăмаха. Çавăншăн паян та чунĕ ыратать.

Тепĕр çултан ашшĕ çемйине район центрне куçарса кайрĕ те, ун пек пăлханулла-хумханулла тĕлпулусем урăх пулман.

— Çук, эмел ĕçсе лăпланмасан паян ним ĕçлесси те пулмасть манран, — Нина хăйпе хăй каласса стакана ăшă шыв ячĕ, эмел кăларса ĕçрĕ.

Аннене ĕçрен таврăнсан кăна калатăп текенскер чăтаймарĕ, тепĕр çур сехетрен телефон трубкине ярса тытрĕ. Хăй ĕнтĕ йăлтах лăпланса çитнĕччĕ. Халĕ ун чунĕнче малтанхи пăлхану вырăнне тем пысăкăш савăнăç хуçаланать. Ниçта шăнăçайми савăнăç.

— Анне, ларатăн-и эс, тăратăн-и? — калас хыпарне тăруках персе ямарĕ хĕр.

— Мĕн пулчĕ тата? — тем кĕтменни сиксе тухнине тӳрех тавçăрса илчĕ лешĕ.

— Пукан илсе лар-ха.

— Мĕн, çав тери хăрушă хыпар-им?

— Савăнмалли.

— Савăнмалли хыпар пулсан мĕн пуканĕ кирлĕ мана? Эпĕ ăна тăрса та итлеп.

— Телефонпа аттен хĕрĕ шăнкăравларĕ. Атте ман пата çыру ярасшăн. Манăн адреса ыйтать.

Вирккашăн та çав тери тĕлĕнмелле хыпар пулчĕ пулас ку. Вăл мĕн те пулин тавăрса каласса чылай кĕтрĕ Нина.

— Тупнă та вара эс савăнмалли! Мĕн, ватлăх çыв-

харнă май çылăх каçарттарасшăн-им сан умра? — илтĕнсе кайрĕ тинех амăшĕн сасси. Типпĕн, сиввĕн калаçать Виркка. — Мĕн каларĕ аçу?

— Хăй мар, хĕрĕ шăнкăравларĕ терĕм-çке. Атте манпа çыру çӳретесшĕн. Адреса шырать.

— Пĕлтертĕн-и вара адресна?

— Каларăм. Çыру çӳретнĕшĕн мĕн пулать ара?

Амăшĕ каллех пĕр вăхăт чĕнмесĕр тăчĕ. Унтан малтанхи пекех типпĕн:

— Иртни иртнĕ. Çыру çырса та, телеграмма ярса та тавăрма çук, — терĕ те трубкăна хучĕ.

«Тавăрма çук, паллах, анчах пирĕн малалла пурăнмалла-çке, — шухăшлать Нина. — Енчен те атте манăн телефона ятарласа шыраттарнă пулсан, манман вăл хĕрне. Унăн та чунĕ ыратать апла пулсан. Тен, Турă пулăшсан тĕл пулса та калаçăпăр. Çиттĕрччĕ çав кун».

Амăшĕ ĕçрен таврăнсан та, кайран та мăшăрĕ пулнă çын çинчен тек пĕр сăмах та хускатмарĕ. Нина вара вăрттăн савăнăçпа çунатланса çыру кĕтрĕ.

Нинăн ашшĕ тупăннă хыпар Авантие те савăнтарчĕ.

— Пиллĕкре-и эпир, вăтăр пиллĕкре-и — кирек хăçан та атте-анне кирлĕ пире. Вĕсем пурри хăех пурăнма вăй-хал парса тăрать. Ман арăм хаяр кăмăллă пулчĕ, анчах хĕрĕм патне пырса çӳреме чармасть. Эс хирĕç пулмасан хĕрĕм те пирĕн килĕмĕре пырса çӳрĕ.

— Манран чару пулмĕ. Эпĕ уйăрса яман вĕт сире, çавăнпа ун мана кӳренсе пурăнма сăлтав çук. Ачапăча кулли илтĕнекен киле ватлăх кĕме хărать теççĕ. Ватăлас килмест-ха ман халех, — терĕ Нина шӳтлесе. Халĕ вăл ялан çĕкленӳллĕ кăмăлпа çӳрет.

Пĕр каçхине Вера Терентьевна почта ешчĕкĕнчен хаçатсемпе пĕрле извещени те йăтса кĕчĕ.

— Яла кайсан кӳршĕсене кивçен укçа парса хăварнăччĕ. Каялла ярса та панă иккен. Тулĕк из-

вещенине темшĕн сан ятпа çырнă, — терĕ амăшĕ. — Вăл-ку çавах-ха. Кайса кил, Нина, почтăна.

Почтăна çитсе укçана алла илсен тин пĕлчĕ Нина: ăна кӳршĕсем мар, ашшĕ ярса панă. Халĕ тин илес-и е илес мар-и тесе иккĕленме те, укçана каялла яма та май çук. Укçана илни çинчен калакан хут çине вăл алă пуснă ĕнтĕ. «Тепĕр тесен, мĕншĕн ăна каялла ямалла? Апла туса эпĕ аттене кӳрентеретĕп. Укçана кам янине пĕлсен анне тарăхать пулĕ-ха та... Хăй манпа пĕрле килнĕ тĕк ним тусан та илтерес çукчĕ», — шухăшлать Нина килелле утнă май.

Кĕтмен укça йĕтăнса анни Вирккана савăнтармарĕ те, хурлантармарĕ те.

— Ача чух тӳлемен алимента халь саплаштарасшăн-им вăл? — терĕ сĕтел çине хунă укça çине сиввĕн пăхса.

«Укçи хăй мар, ăна атте ярса пани хаклă», — тесшĕнччĕ те Нина, амăшĕ кӳренессе сисрĕ.

— Халĕ ачисенчен уйрăм пурăнакан ашшĕ-амăшĕнчен алимент илеççĕ. Эп пĕчĕк чух çынсем алимент мĕнне те пĕлмен пуль, — терĕ вăл ашшĕн хутне кĕме урăхла сăмах тупаймасăр. Лешĕ кая юлса та пулин уншăн тăрăшни хăйне савăнăç кӳнине амăшне кăтартас килмерĕ унăн.

— Ун чухне парсан та пĕр пус илес çукчĕ эпир унран. Кукаçу нихăçан та çын çăкăрне çимен. Пире те çаплах вĕрентнĕ.

«Атте çăкăрĕ — ют çын çăкăрĕ мар вĕт вăл», — ăшĕнче амăшне хирĕçлерĕ Нина, сасăпа ним те шарламарĕ. Сумкине илсе сĕтел хушшине кĕрсе вырнаçрĕ. Аванти ăна республика хаçатне яма текст хатĕрлесе пама ыйтнăччĕ. Вăл пăнчăпа кăна çырать, Нина çав текста куçарса сас паллисемпе çырса парать. Кун пек ĕçе тума вăл тахçанах хăнăхнă, пĕр çынна кăна мар пулăшнă, куç курманнисемпе пĕрле ĕç тăвакан органсене те сахал мар кайса çӳренĕ.

Тепĕр кунне Нина ашшĕ янă çырăва илчĕ. Кон-

верта кăкăрĕ çумне тытса хваттере кĕме васкарĕ. Çырăва часрах уçса вулас килет. Хачă илсе конвертăн хăрах вĕçне çинçен касрĕ. Çырăва ашшĕ янă-çке. Конверчĕ çеç мар, ун çине çырнă кашни саспаллийĕ хаклă.

«Ырлăх-сывлăх пултăр сире, тăванăмсем. Мĕнле пурăнатăр, сывлăхăрсем еплерех?

Ку çырăва, Ниниле, аçу çырать. Зинăна хăвăн адресна панăшăн, манпа çыру çӳретме килĕшнĕшĕн тавах. Пĕчĕк чух яланах тарса çӳреттĕн те, манпа çыхăну тытма килĕшессе шанманччĕ. Аннӳпе иксĕр умĕнчи айăпăм çав тери пысăк. Сана хам çумра ӳстерейменшĕн каçар. Ĕмĕр вăрăм та, кун кĕске. Çав кĕске кунсене те çылăха кĕмесĕр иртререймерĕм. Сан шăпу çапла çаврăнса тухнăшăн та хамах айăплатăп. Аннӳпе иксĕмĕр уйрăлман тăк, тен, эсĕ те ура çине çирĕп тăричченех тăван килтен тĕнчене тухса кайман, таçта ют çĕрте аварие лекмен пулăттăн. Каçар мана, хĕрĕм. Тархасшăн, каçар. Ку таранччен хирĕç тăрса та, çумăн ларса та калаçма май килмерĕ. Хамăр курнăçасси те пулĕ, те пулмĕ, сире — хамăн ачамсене — пĕр-пĕринчен ютшăнтарас килмест манăн. Пĕртăвансем эсир. Мăшăрăм урăхларах çын, анчах хĕрĕмсем, сан йăмăкусем, çын хурламалли çынсем мар. Кăмăлĕпе те асаннӳне хывнă вĕсем. Асли Зина ятлă, вăталăххи — Тамара, кĕçĕнни — Венера. Виççĕшĕ те çемьеллĕ. Зинăпа Тамара пĕрер мăнук парнелерĕç. Сире хăçан та пулин пĕр кĕрекере курасчĕ ман. Хамăн сывлăх — çанталăка кура. Вăрçăра аманнă ура хăш чух самаях кансĕрленет.

Укçа пирки яла пырсан никама та ан шарла. Ман çумри ун пеккине юратмасть. Çырăвна Зина ячĕпе ун адресĕпе яр.

Аннӳпе иксĕре те çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул сунатăп.

Сывă пул, хĕрĕм. Сан çырăвна кĕтсе юлатăп. Хăв çинчен ытларах çырса пĕлтер».

Кĕске çырăва Нина сывлăш çавăрса ямасăр тенĕ пек вуласа тухрĕ. «Хĕрĕм» тесе çырнине курсанах пырне чăмакка килсе капланчĕ. Акă ĕнтĕ вăл куççульне те чараймасть. Юрать-ха, амăшĕ çак самантра килте çук.

Йĕрсе тăрансан, чунĕ лăпланса çитсен Нина çырăва тепĕр хут вуласа тухрĕ. «Килтисем мана Ниниле тесе чĕннине ăçтан пĕлет-ши вăл? — тĕлĕнсе шухăшласа илчĕ вăл. — Ыттисемшĕн, пуриншĕн те, эпĕ — Нина. Паспорт çинчи ятăм та çаплах». Пуçламан тетрадь варринчен икĕ листа кăларса илчĕ те сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕ. Унăн часрах хурав ярса ашшĕн тепĕр çырăвне хăвăртрах илес килет. «Ун çырăвĕ хама еплерех пăлхантарчĕ те, ватă çын чĕрине хуйхă çеç мар, пысăк савăнăç та çурса пăрахма пултарать», — шухăшларĕ вăл, çавăнпа çырăвне те типпĕнрех çырма тăрăшрĕ.

«Сывă-и, атте? Чĕремри ăшă туйăмсемпе çырнă çыру суранусене çăмăллăх кӳтĕр, чунна вăй-хăват хуштăр. Сан çырăвна илсе вуларăм, хыççăнах хурав çыратăп. Эсĕ ярса панă укçа та ман пата çитрĕ. Тавтапуç сана пуриншĕн те. Атте, мĕн пулса иртни ĕнерхи кунрах юлтăр. Тахçанхине аса илмĕпĕр, ӳт илнĕ сурана тепĕр хут тапратар мар. Пĕр-пĕрне шыраса тупрăмăр, чи пахи — çакă. Сана кӳренсе пурăнмастăп эпĕ. Ĕмĕрлĕхех суранланса юлнăшăн та эс айăплă мар. Ӳкессе пĕлнĕ пулсан тӳшек сарса хурăттăм теççĕ те... Пурнăçра кама мĕн пӳрнине Турă çеç курса тăрать. Астăватăн-и, атте, эпĕ саккăрмĕш класра чухне наци шкулĕсене вырăс чĕлхи çине куçарасси çинчен калакан саккун тухрĕ. Тăван чĕлхене хамăн пурнăçран ытларах та ытларах хĕссе кăларни Шупашкара, хамăр пек чăвашсем пурăнакан çĕре, килме хистерĕ. Çав саккун кунта та вăйра тăрасса шута илмен эпĕ. Çапах та Шупашкарта чăвашла калаçнăшăн хамăр патри пекех хĕсмеççĕ. Кунта чăваш театрĕсем ĕçлеççĕ, хаçачĕсем ачасем валли те, çи-

тĕннисем валли те чăвашлах тухса тăраççĕ, журналĕсем виççĕ те пур: «Ялав», «Тăван Атăл», «Капкăн». Радио ир те каç чăвашла калаçать... Кунта куçса килнĕшĕн пĕрре те ӳкĕнместĕп. Халĕ ĕнтĕ Шупашкар маншăн — тăванран та тăван хула. Пирĕн кунта пĕр пӳлĕмлĕ, балконлă хваттер пур. Çурт илемлĕ вырăнта вырнаçнă.

Хам эпĕ пĕр вăхăт пир-авăр комбинатĕнче ĕçлерĕм. Анне те çавăнтах. Сывлăхăм хавшанă пекрех пулчĕ те, анне мана ĕçлеме чарчĕ. Чи пĕчĕк пенси илетĕп. Типтерлĕ тыткаласан пурăнма çитсе пырать.

Ман сан пурнăçу, йăмăкăмсем çинчен ытларах пĕлес килет. Ялта пурăннă чух эпĕ вĕсене виççĕшне те пĕрре мар курнă. Халиччен палламалла марах улшăнса кайрĕç пулĕ ĕнтĕ. Эпир Шупашкара килнĕренпе, эсир район центрне куçса кайнăранпа чылай çул иртрĕ вĕт».

«Аванти çинчен, тепĕр уйăхран туй пуласси çинчен пĕлтерес-ши ĕнтĕ? — çырма чарăнса шухăшласа ларчĕ Нина. — Çук, çырас мар-ха. Тен, заявление каялла илес тейĕп те... Мăшăрлансан кун пирки кайран та пĕлтерме пулать».

Нина йăмăкĕсем валли салам ячĕ, ашшĕпе сывпуллашрĕ те çырăва вĕçлерĕ. Конверта хупас умĕн мĕн çырнине тепĕр хут вуласа тухрĕ. «Атте». Вăрăмах мар çырура виçĕ хутчен асăнчĕ вăл çак сăмаха. «Мĕн пĕчĕкрен ашшĕ çумĕнче ӳсекен ачасем хăйсен пурнăçĕнче миçе пин хут, çук, пин мар-ха, миçе мĕльюн хут калаççĕ-ши çак сăмаха? — Çапла шухăшласа Нина ассăн сывласа илчĕ. — Телейлĕ вĕсем».

Хĕрĕн кăмăлĕ палăрмаллах улшăннине Виркка курать, çакă мĕнпе çыхăннине те пĕлет. Çавăн пек япала вăл — савăнăç, çынран ăна нимле те пытараймастăн: сăмахпа каламасан юррунта янăрать вăл, юрруна кăлармасан куллунта курăнать, куллуна кăтартмасан куçунта çуталать.

Ашшӗн ҫырӑвне Нина амӑшне те вуласа пачӗ. Лешӗ вара:

— Халиччен ӑҫта пулнӑ вӑл? — терӗ те урӑх ним шарламасӑрах кухньӑналла кӗрсе кайрӗ. Чунӗнче мӗн пулса иртнине хӗрне кӑтартас мар терӗ пулас.

Вирккана йывӑр халь. Ҫакна хӗрӗ лайӑх ӑнланать. Амӑшӗн чӗрине ӗмӗрӗпе чул пек пусса тӑнӑ кӳренӳ куҫҫульпе ыратусӑр тухас ҫук. Алӑ е ура мӑкӑлтансан сиплевҫӗсем ҫав тери хытӑ ыраттарса шӑмма вырӑна лартаҫҫӗ. Чун суранӗ те ҫавӑн евӗрлех, ыраттармасӑр, куҫҫуль кӑлармасӑр ӑшран тухмасть. Ҫак ыратӑва чӑтса ирттермеллех амӑшӗн. Вара ӑна малалла пурӑнма ҫӑмӑлрах пулӗ, тен, вӑл хӑй чун панӑ ачан ашшӗне каҫарма та вӑй ҫитерӗ. Нина акӑ каҫарма пултарчӗ. Каҫарупа пӗрле ун чунне канлӗх килчӗ. Чунра нимӗнле кӳренӳпе ырату та пулмасан мӗнле ҫӑмӑл иккен пурӑнма. Амӑшӗ вара хӗрӗ ашшӗ патне туртӑннипе ниепле те ҫураҫасшӑн мар. Тӑвансенчен кам та пулин е кӳршӗаршӑ килсен сӑмах май тенӗ пек: «Ман хӗрӗн ашшӗ тупӑннӑ-ха тата», — тесе йӗкӗлтешсе илет. Ӗмӗрхи кӳренӳ анчах мар, кӗвӗҫӳ те сисӗнет ҫак сӑмахсенче. Нина ҫилленмест, амӑшӗ тӗртсе каланине ним хуравламасӑр ирттерсе ярать. Ашшӗн тепӗр ҫырӑвне те амӑшне сасӑпах вуласа пачӗ вӑл. Хӑнӑхтӑр терӗ. Пӗр тупнӑ ашшӗне Нина халӗ ним тусан та пӑрахас ҫук.

Ҫуллахи кунсем ҫырла пек хитре, ҫавӑнпа-ши ытла та хӑвӑрт шӑваҫҫӗ? Туй вӑхӑчӗ ҫывхарса килет. Мӗнле пулӗ-ши ҫав кун? Ҫав тери пысӑк, ҫав тери вӑрттӑн ӗмӗт канӑҫ памасть хӗре. Авантипе мӑшӑрланнӑ чух унӑн амӑшӗнчен кӑна мар, ашшӗнчен те пил илес килет. Ҫак ӗмӗте пурнӑҫлас тесен ашшӗне туя чӗнсе амӑшӗпе юнашар тӑратас пулать. Ыйтмасӑрах паллӑ: ҫак сӗнӳпе амӑшӗ ним тусан та килӗшес ҫук.

— Аннӳпе канашламасӑрах кулянса ан ҫӳре-ха

эсӗ. Тен, аҫуна чӗнме вӑл хирӗҫех те пулмӗ. Асӑрханса калаҫса пӑх малтан, — терӗ Аванти. — Хамӑр тӗллӗн чӗнсе туя пӑсса хурӑпӑр тата.

Пӗр каҫхине Нина хӑюлӑх ҫитерсе сӑмах хускатрӗ-хускатрех:

— Анне, туй вӑл — ӗмӗрте пӗрре пулакан япала. Авантипе пӗрлешсе ӗмӗрӗпех пӗр-пӗрне юратса, хисеплесе пурӑнасчӗ пирӗн. Ашшӗ-амӑшӗн пилӗ ачисене мӗн ватӑлса виличчен сыхласа та упраса пырать теҫҫӗ. Аттене чӗнер-и туя? — терӗ те амӑшне куҫран пӑхрӗ.

— Маншӑн Петриванпа юнашар тӑрас вӑхӑтсем иртнӗ. Ваттисем каланӑ тӑрӑх, ҫын малтан кампа пуҫ шуратнӑ, леш тӗнчере те ҫавӑнпах пулать. Яланлӑх тӗнчене кайсан Петриванпа иксӗмӗрӗн юнашар ҫӳремелле пулать, унччен вара эп унпа ҫумӑн ларас ҫук. Ман сӑмаха итлемесӗр чӗнсе илетӗр пулсан туя та пымастӑп, — шат та пат касса татрӗ Виркка.

Ҫитрӗ Нинӑшӑн ӑш ҫунтармалли сӑлтав. Икӗ вут хушшинчи пек туять вӑл халӗ хӑйне. Амӑшӗсӗр мӗнле туй пултӑр-ха? Турӑ ан хуштӑр ун пеккине. Ашшӗ пур ҫинчех ун пилӗсӗр те юлас килмест. Юрать-ха, Аванти ырӑ канаш парса лӑплантарчӗ:

— Аҫу патне иксӗмӗр хут ҫырса ярӑпӑр, ҫыру урлӑ пил ыйтӑпӑр. Аннӳ унпа тӗл пулма халех хатӗр маррине пӗлтерсен вӑл ӑнланӗ. Ашшӗ-амӑшӗн пилӗ вӑл сӑмахпа каласан та, хут ҫине ҫырса ярсан та хӑватне ҫухатмасть.

— Юрӗ апла. Эсӗ каланӑ пек тӑвӑпӑр, — терӗ Нина. — Хамӑн аннепе пӗр чӗлхе тупаймастӑп та, хунямана юрама пултарӑп-ши эпӗ?

— Пултаратӑн. Ман аннене юрама нумай та кирлӗ мар, чӑваш сӑрине тума пӗлтӗн тӗк — ҫитрӗ те. Килти кӑпӑклӑ сӑрана кӑмӑллать вӑл. Ӳсӗртмест чӑваш сӑри, анчах пӗтӗм чуна уҫса ярать. Анне сӑра тума питӗ ӑстаччӗ, халӗ, сывлӑхӗ хавшанӑ май, вӗретеймест.

— Ай! — шартах сикрĕ Нина. — Апла, эп уншăн ĕç тĕлне пĕлмен кин пулатăп. Чăваш сăрине нихăçан та вĕретсе курман. Аманнă хыççăн мана ун пек ĕçсене хутшăнтарман. Кукамай сывă чух вăл сăра тăватчĕ, кайран çак ĕç инкесем çине куçрĕ.

— Вăл ĕçе хăнăхма ним те мар. Хам вĕрентĕп. Анне сăра тунă чух ăна пулăшкалаттăм. Эпĕ те юрататăп килте вĕретнĕ сăрана, çавăнпа хăмла шăччисем хамăн пахчара та виççĕ тан.

Туйччен икĕ кун маларах Нина ашшĕнчен çыру тата самаях пысăк укçа илчĕ. Аванти шăпах вĕсем патĕнчеччĕ те, почтăна та пĕрлех кайса килчĕç. Ашшĕ пехиллесе çырнă çырăва Нина сасăпа вуласа пачĕ. «Хĕрĕмсемпе пĕрле сире кăштах укçа ярса паратпăр. Туй парни вырăнне пултăр. Мĕн кирлине кĕрӳпе иксĕр хăвăр пĕлсе туянăр», — тенĕ ашшĕ. Çыру вĕçĕнче урăх алăпа çырнă тата виçĕ йĕрке пур иккен:

«Телейлĕ пулăр. *Зина*».

«Яланах тулăх пурнăçпа пурăнăр. *Тамара*».

«Пĕр-пĕрне ĕмĕр-ĕмĕр юратса пурăнăр. *Венера*».

Ку йĕркесене Нинăн йăмăкĕсем çырнă. Вĕсене вуласан Нинăн куççулĕ тухсах кайрĕ. Ашшĕн пехилĕ ăна чунтан савăнтарчĕ. Йăмăкĕсем те тăванла ырă сунни çак савăнăçа тата ытларах вăйлатрĕ. Вăл пăлханнине криссе Аванти ăна хăй çумне тытса çупăрларĕ.

— Анне, эсĕ туя кафере ирттерме укçа çитеет-ши тесе кулянаттăнччĕ. Акă мĕн чухлĕ укçа пур халĕ пирĕн. Ним те ан кулян, — терĕ Нина амăшĕ енне пăхса.

— Эй, ачамсем, апла сая ярар мар-ха аçу парнине. Туй валли унсăрах тупăпăр. Ку укçана вара выçă ларсан та ан тытăр. Иксĕр пĕрле пурăнма тытăнсан унпа пĕр-пĕр хаклă япала туянăр. Асăнмалăх пулать, — терĕ Виркка.

Ашшĕ туй парни вырăнне панă укçана Нина хăй

те кафери ёҫкӗ-ҫикӗ валли ярас ҫукчӗ-ха, амӑшӗн кӑмӑлне пӗлес тесе ҫеҫ ҫапла каларӗ. «Майӗпен ӑшӑнса пырать иккен-ха аннен чӗри», — савӑнса шухӑшларӗ вӑл.

Туя хатӗрленсе вӑхӑт иртни те сисӗнмерӗ. Ыран Авантипе Нина ҫырӑнаҫҫӗ. Хӗр енчи тӑванӗсем Шупашкартан чылай аякра пурӑннӑран пӗр кун маларах килчӗҫ. Хӑнасене каҫхи апат ҫитернӗ хыҫҫӑн Нинӑна Кирук куккӑшӗ кухньӑна чӗнсе кӗртрӗ.

— Вӑрттӑн калаҫса илер-ха иксӗмӗр, — терӗ вӑл. — Туя пуҫтарӑнса килнӗ май тем тӗрлӗ те шутласа пӑхрӑмӑр ӗнтӗ. Ҫемьеллӗ пурнӑҫ сан валли мар тесех пурӑнаттӑмӑр ку таранччен. Пытармастӑп, хамӑр ялта та пурччӗ сана качча илес шутлӑ пӗр ҫын, арӑмӗ вилнӗ хыҫҫӑн икӗ ачапа юлнӑскер. Сана каламан эпир кун пирки. Икӗ ҫул каялла евчӗ янӑччӗ. «Хӗрача чӗрине усӑсӑр ан пӑлхатӑр, качча тухас ҫук вӑл пурпӗрех», — тесе кӑларса ятӑмӑр евче. Халь акӑ хӑв кӑмӑлпах качча тухатӑн. Пирӗн енче, хӑвах пӗлетӗн, ваттисем туя каймаҫҫӗ. Эпир ҫав йӑлана пӑхӑнас мар терӗмӗр. Ыран эпир кӗрӳ килне ҫитсе курасшӑн. Тӑхтамана хӗр панӑ пек, пулас кӗрӳ камне пӗлмесӗрех туя килтӗмӗр. Кӗрӳ килне пырса курмасӑр мӗнле парса хӑварӑпӑр-ха сана? Темле ҫынха вӑл? Килӗ-ҫурчӗ мӗнлерех ун? Сана пурӑнма кансӗр пулмӗ-ши унта? Тата... Кӗрӳ пуласси суккӑр ҫын терӗҫ. Мӗнле майпа суккӑрланнӑ вӑл? Арӑш-пирӗш ҫапӑҫакан этем мар-и?

— Ҫук, Кирук кукка, усал ҫын мар вӑл. Пӳрчӗ-ҫурчӗ те йӗркеллех. Куҫӗ курмасан та алли тем тума та пӗлет, — лӑплантарма тӑрӑшрӗ куккӑшне Нина. Аванти ҫинчен хӑй мӗн пӗлнине каласа пачӗ.

— Эсир ҫырӑннӑ хыҫҫӑн пурпӗрех килне пырса куратпӑр. Енчен те унта япӑх пулсан, сана ҫав ҫын аллине парса хӑвармастпӑрах, — хӑйӗн шухӑшне тепӗр хут ҫирӗплетрӗ куккӑшӗ.

Ăшĕ çуннăран çĕрĕпе çывăраймарĕ Нина. Пуçĕнче çĕр тĕрлĕ шухăш çаврăнать. «Куккасемпе инкесем мана Авантие чăнах та парса хăвармасан мĕн тумалла? Авантие кӳрентерни, намăс кăтартни пулать вĕт ку. Кайран куç курманнисен обществине мĕнле питпе кайса çӳремелле? Унти çынсем мĕн калĕç мана? — кулянмаллипех кулянать Нина, хăйне Аванти вырăнне лартса пăхать. — Хама качча илме килсе илмесĕрех кайччăр-ха... Çĕр тĕпне анса кайăп намăсланнипе. Авантин те, хамăн та пите хĕретмелле ан пултăрччĕ ыран».

Тепĕр кунне туй килсе Авантие минтер çине лартиччен те лăпланаймарĕ Нина. Виркка хĕрĕпе кĕрӳшне çирĕп те туслă çемье йĕркелеме ырă сунса пехиллерĕ.

Загсра çыраннă хыççăн Аванти мăшăрне амăшĕ пурăнакан хваттере илсе кайрĕ. Улатимĕр авланса уйрăлса тухнă хыççăн пĕчченех пурăнать вăл, чирлĕрех те — тухса çӳреймест. Авантипе ун мăшăрĕ вăл ларакан кравать умне пырса чĕркуçленчĕç. Ик аллине ывăлĕпе кинĕн пуçĕ çине хурса пил пачĕ ватă хĕрарăм. Пĕр-пĕрне итлесе, юратса, хисеплесе пурăнма, пĕр çăвартан сурма, çăкăр-тăварлă пулма, çемье ăшшине упрама ырă сунчĕ вăл.

Кафере тин лăпланса çитрĕ çĕнĕ çын. Хĕр енчи тата каччă енчи хăнасем пĕр-пĕринпе паллашса ĕлкĕрчĕç пулас, ташлаççĕ, юрлаççĕ.

— Уртăшран та пулать кăранташ,
Çич ютран та пулать хурăнташ, —

янратать туй халăхĕ.

Çуллахи кун вăрăм. Хăнасем хĕвел аничченех саланма пуçларĕç. Кăштах хĕрнĕ Саливанпа Кирук куккăшĕсем çĕнĕ мăшăр патне пырса тăчĕç.

— Кĕрӳ, эпир кунта час-час килсе çӳреес çук. Пĕр килнĕ чух хăвăн килне илсе кайса кăтарт пире. Нина малашне ăçта пурăнассине пирĕн хамăр куçпа курас килет. Килӳ-çурту килĕшсен Нинăна сана пар-

са хăваратпăр, килĕшмесен каялла илсе тухатпăр. Иксĕр çыръннă пулсан та, — тўрех патлаттарса хучĕ Кирук куккăшĕ.

Ку сăмахсене илтсен Нинăн сехри хăпрĕ. «Ах, çаксен чĕлхисене! Çапла калама юрать-и вара? Тăванăмсем Аванти кил-çуртне тиркесе ăна кўрентерме пултараççĕ. Аттепе аннене кукаçи уйăрса янă. Нивушлĕ куккасем пире çыръннă-çырăнман уйăрса яраççĕ? Вара тăван ялăмра ман пирки мĕн калĕç? Куç курманнисен обществине пырса кĕме те намăс пулĕ», — канăçсăрланчĕ вăл.

Аванти вара пачах та кўренмерĕ.

— Атьăр, атьăр! Пирĕн пата каятпăр, пурте атьăр, — хапăл тусах йыхравларĕ вăл. — Ман патăмра хăвăр та юлас тейĕр ак.

Килне çитсен Аванти хăнасене чи малтан кĕрекене мар, мастерскойне ертсе кĕчĕ.

— О-о-о! — терĕç арçынсем йĕркипе лартса тухнă станоксене, стенасем çумне тирпейлĕн çакнă ĕç хатĕрĕсене курсан. Кашни шурупĕ, кашни тĕрлĕ пăти çўлĕк çинчи уйрăм савăтра упранать. — Тепĕр строительство бригадин те кун чухлĕ ĕç хатĕрĕ çук. Йăлтах хăвăн-и?

— Хамăн, — тавăрчĕ кил хуçи. — Куççем курнă чух ялан çакăнта тăрмашаттăм. Халĕ те ку кĕтес маншăн — чи юратнă вырăн. Авă хаçат-журнал вуламалли сĕтел тума пуçларăм. Варринче — шашка хăми, уçăлать вăл. — Аванти алăпа хыпашласа шашка хăмине уçрĕ те, ун айĕнче пĕчĕк сунтăх курăнса кайрĕ. — Сĕтеле туса пĕтерсен çакăнта шашкăсем е шахмат фигурисем хума пулать.

Арçынсем шалалла иртсе ăна-кăна тыткаласах пăхрĕç. Хăш-пĕр станокĕсене вĕсем халиччен те курман. «Ку мĕн тумалли? Кунпа ăçта усă кураççĕ?» — ыйту хыççăн ыйту параççĕ вĕсем. Йывăçпа тата тимĕрпе ĕçленисĕр пуçне атă-пушмак та юсать иккен кил хуçи.

— Пĕр килнĕ чух кĕрӳ пахчине те кĕрсе курарха, — терĕç Манюккапа Альтук инкĕшĕсем мастерскойĕнчен тухса. — Мĕн акса-лартса ӳстерет-ха вăл? — текелесе хайхисем анкартинелле утрĕç. Вĕсем хыççăн арçынсем те хускалчĕç.

Çĕр улми ани туй кĕпи пек шап-шурă чечекре. Нина çак илеме ытараймасăр сăнарĕ. Хайне мăшăрлану керменĕнче панă хитре розăсенчен те ытларах килĕшеççĕ ăна халь çак чечексем. Пĕтĕм анкарти чечекре. «Çакăн пек илемлĕ те таса пултăрччĕ пирĕн çемьеллĕ пурнăç», — ырă ĕмĕтпе çунатланчĕ çĕнĕ çын.

— Помидор тĕмĕсем çумĕнчи патаксем мĕн тума кирлине чухлатăп-ха, хăяр ани çине вĕсене мĕн тума чике-чике тухнă? — тавçăраймарĕ Кирук куккăшĕ.

— Хăяр вăррине акнă чухнех лартса тухнă вĕсене. Хăш тĕле куркапа шыв ямаллине пĕлме, — ăнлантарчĕ Аванти.

Суккăр çын тавçăрулăхĕнчен тĕлĕннĕ хăна шăпланчĕ, вырăнсăр ыйту панине ăнланса аванмарланчĕ.

— Ан çиллен, кĕрӳ. Теприн, куçлă-пуçлă çыннăн та, пахчи кунашкал тирпейлĕ мар. Эсĕ лайăх хуçа пулни çакăнта та курăнать, — терĕ Кирук.

Çак самантра Саливан куккăшĕ Нина çине пăхса кулса ячĕ:

— Нина, пĕчĕк чухне тантăшусемпе пĕрле хăяр туйĕ тунине астăватăн-и?

— Мĕнле туй тата вăл, хăяр туйĕ? — кăсăкланчĕ çĕн кĕрӳ.

— Хăяр ани чечеке ларсан пирĕн енче ачасем хăяр туйĕ туса вылятчĕç, — ăнлантарчĕ Саливан куккăшĕ. — Нина та вылятчĕ. Халĕ ĕнтĕ çав вăйăсем манăçнă. Паянхи ачасем урăхларах вăйăсемпе йăпанаççĕ.

— Хăярĕ пысăк пултăр, йышлă пултăр, пире çиме тутлă пултăр тесе такмакланине астăватăп, — кулса илчĕ çĕнĕ çын...

— Паян хăяр туйĕнче мар, сирĕн туйăрта савă-натпăр. Пĕр-пĕрне упраса, юратса, хисеплесе пурăнăр, телейлĕ пулăр, — ырă сунчĕç хăнасем çĕнĕ мăшăра.

Картишĕнчи хуралтăсене, лупас айне тирпейлĕн купаланă вутă шаршанĕсене курсан хăнасем кил ху-çине мухтамасăр чăтаймарĕç.

— Килӳ-çурту йăва пек хăтлă, — кĕрӳшне мух-тарĕ Саливан куккăшĕн арăмĕ Манюкка. — Нина начар çĕре лекрĕ тесе кулянмăпăр ĕнтĕ. Кунта пу-рăнма пулать.

Хăнасем йышлăн килессе пĕлнĕ пекех, Аванти тăванĕсем ун килĕнче те тулли сĕтел янтăласа хунă. Мăшăрлану уявĕ-хавасĕ малалла тăсăлчĕ.

Çак савăнăçа хӳме хушăкĕ витĕр ют куçсем сив-вĕн сăнанине никам та асăрхамарĕ.

Тепĕр кунне çĕнĕ мăшăр Нинăн тăванĕсене ăсат-ма вокзала кайрĕ. Таврăнсан иккĕшĕ çуллахи шă-рăхран уçăлма тесе пахчана тухрĕç. Чим, мĕн ку? Ĕнер шап-шурă чечекре ларнă ана çинче паян пĕр чечек те çук. Пĕр каçрах шанма та, тăкăнма та пул-тарайман вĕт вĕсем. Нина хăй куçне хăй ĕненме-сĕр çĕр улми кассисем хушшине кĕрсе кайрĕ. Касă-сем хушшинче тăршшĕпех шанса кайнă чечексем выртаççĕ. Вĕсене тахăшĕ юриех тата-тата пăрахнă. Çĕкленӳллĕ кăмăл лапах сӳнчĕ. «Пире усал суна-кан этем те пур иккен ку урамра. Мĕн кирлĕ-ши ăна? — шухăшларĕ Нина. — Асăрханарах пурăнас пулать».

— Хырăму та выçса кайрĕ пуль, атя кĕрсе апат çиер, — терĕ вăл мăшăрне, хăйсене такам юриех хур туса хăварнине Авантие тӳрех шарлас темерĕ.

Çапах та каçхине чăтаймарĕ, çĕр улми ани çинче ют çын сĕмсĕрленнине упăшкине пĕлтерчĕ.

— Тăшмансем те пур пулас санăн кунта? Кам кĕнĕ-ши? — терĕ Нина.

— Те арăм пулнăскер çапла хăтланнă ĕнтĕ, те Анна? Аллине хурса хăварман, пĕлес çук. Ăша ан

ил ют çын çиллине. Уншăнах кăмăлна ан хуç, мăшăрăм. Иккĕн халь эпир. Аптăрамастпăр. Пĕтместпĕр, — тавăрчĕ Аванти.

Мăшăрĕ яланах çумра пулнăран, кирек хăш ĕçре те пулăшса тăнăран Нина çĕнĕ кил-çурта хăвăртах хăнăхрĕ. Вучах чĕртсе хуран çакасси, кăмака хутса кукăль пĕçерессипачах та йывăр мар халь уншăн. Аванти ĕçсĕр ларма пĕлмест. Нинăпа пĕрле пурăнма пуçласанах лутра пукан туса лартрĕ. Ял хĕрарăмĕсем çакăн пек пуканпа ĕне сума тухаççĕ.

— Ку мĕн тума кирлĕ? Ĕне е качака туянас теместĕн пулĕ те? — ыйтрĕ мăшăрĕ пукана тытса.

— Çу-ук, — кулса илчĕ Аванти. — Сана выльăхчĕрлĕхпе нушалантарас шут çук-ха ман. Атă-пушмак хывнă е тăхăннă чухне ларма пултăр ку пукан. Ларса пăх-ха, меллĕ вĕт?

— Чăнах та меллĕ капла.

Пукан туса пĕтерсен каллех хăйĕн мастерскойĕнче кăштăртатма пуçларĕ Аванти. Хăма савалать. Ĕçлет-ĕçлет те аллипе хыпашласа тĕрĕслесе тухать.

— Ку хăмасемпе мĕн тăвасшăн эс? Пăрах-ха аппаланма. Аллу-уруна амантса пĕтересрен хăратăп, — чарасшăн ăна Нина.

— Кравать тăвасшăн-ха эп. Хамăр ятпа пултăр. Ĕмĕр тăршшĕпех диван çинче çывăрас килмест вĕт, — тавăрчĕ упăшки. — Эс маншăн ан хăра. Аманмастăп. Куçсем курманнине аласем асăрхаççĕ. Пĕччен пурăннă чух мана нимех те кирлĕ марччĕ. Малтанхи арăм эп килте çук чухне кирлĕрех япаласене машинăпах тиесе тухса кайнă. Шавласа çӳремерĕм. Мĕн илсе кайни ăна çеç мар, чи малтанах хĕрĕме кирлĕ. Рита юта тухрĕ пулсан та хĕрĕмре ман юн чупать. Ăна валли пултăр. Хамăра валли эпĕ çĕнĕ сĕтел-пукан тăватăп.

Мăшăрĕн алли çапла çыпăçуллă пулни, унтан та ытларах, вăл килшĕн тăрăшни Нинăна савăнтарчĕ. Кун пек çынпа пурăнма пулать.

## Çиччĕмĕш сыпăк

Туйра парнелесе панă укçапа çĕнĕ мăшăр телевизор тата холодильник туянчĕ. Нина нихăçан та япала чури пулман, пĕр черетрен тепĕр черете чупман. Качча тухсан вăл çакна лайăх туйса илчĕ: çемье валли пĕрле илнĕ пысăк япала çеç мар, сахал укçана перекетлесе туяннă вак-тĕвек те чунтан савăнтарать иккен. Акă Юмановсем паян çĕнĕ чейник йăтса килчĕç, халĕ пĕрле чей ĕçсе лараççĕ. Лайăххăн хăнăхса та çитмен-ха вĕсем пĕр-пĕрне. Нина упăшкин кăмăлне пур чухне те ăнлансах кайманнине хăех сисет, çакăншăн лешĕ кӳренессĕн туйăнать.

— Сисетĕп, тем каласшăн эсĕ мана. Мĕнпе те пулин кăмăлсăр тăк — ан пытар, кала. Эпĕ кӳренмĕп, сана ăнланма тăрăшăп, — терĕ Аванти аллине арăмĕн хулпуççийĕ çине хурса.

— Санпа паллашиччен эп каччăпа юнашар утса та курман, эсĕ вара — çемьере пурăннă çын. Эпĕ — алла хăнăхман кайăк пек, хама хам шанса, хама хам хӳтĕлесе пурăнма вĕреннĕ. Тĕрĕссипе, шăпа çапла хистенĕ. Лайăх мăшăр пулайăп-ши эп саншăн? Мĕн те пулин килĕшмесен вăрттăн кӳренсе е тарăхса çӳрес марччĕ пирĕн, уççăн калаçса, пĕр-пĕрне ăнланса пурăнма тăрăшасчĕ.

— Ан кулян. Пирĕн пурте йĕркеллĕ пулать, — хуравларĕ Аванти мăшăрне çупăрласа.

— Аттепе ӳснĕ пулсан мана та мăшăрлă пурнăçа хăнăхма çăмăлрах пулатчĕ, тен. Аннепе иксĕмĕр нушаллă пурнăçа хамăр пĕлнĕ пек, хамăр вăй çитернĕ пек тытса пынă. Халĕ те пулин аттепе юнашар ларса курас килет манăн. Аванти, паян эпир хамăра мĕн кирлине хамăр татса пама пултаратпăр, анне хирĕç пуласран хăраса тăмалла мар. Атя аттене хăнана чĕнсе илетпĕр е хамăр ун патне кайса килетпĕр. Унпа çыру çӳретни сахал маншăн, тĕл пулса калаçас килет. Пĕрре те пулин унпа юнашар ларса ку-

расчĕ, кусран куса пăхса каласасчĕ. Эпĕ кун пирки тахсантанпах ĕмĕтленетĕп.

— Сан асу халь маншăн та — атте. Хамăн та тахсанах унпа паллашас килет, — тавăрчĕ упăшки. — Вата сынна вăрăм сула илсе тухса чăрмав кӳриччен хамăр кайса килер мар-и?

— Ун пек те юрать. Пĕлсен анне кӳренет-ха ĕнтĕ.

— Эпир ăна Чĕмпĕр тăрăхне кайса килсен кăна пĕлтерĕпĕр. Ан пăлхантăр.

Упăшки хăйне ăнланни, унпа пĕр шухăшлă пулни Нинăна савăнтарчĕ. Анчах вĕсен нисута та каймалла пулмарĕ. Ашшĕ хăй Шупашкара килесси синчен сырупа сырса пĕлтерчĕ. Ăна, вăрсă ветеранне, сывлăхне сирĕплетме тесе пылчăкпа сиплекен санаторие путевка панă иккен. Ашшĕ хăй хăсан килессине те сырса янă. Сакăн синчен пĕлсен хĕрĕпе кĕрӳшĕ питĕ савăнчĕс, каклă хăнана кĕтсе илме хатĕрленчĕс.

Ытти пассажирсем хушшинче ашшĕне уйăрса илеймесрен хăранăччĕ Нина, сывăх сыннине пысăках мар пăрахут синчен аннă-анман палласа илчĕ. Сăнĕ питех улшăнман унăн, пĕвĕ вара кăштах пусăрăннă пек туйăнать. Юлашки хут курнă чух ашшĕ хуп-хура та сăра сӳслĕччĕ, халĕ вăл шап-шурах. Пĕр-пĕринпе сыру сӳретнĕскерсем ютшăнса тăмарĕс, тӳрех хыттăн ыталанса илчĕс. Пăлханнипе, савăннипе иккĕшĕн те куссулĕсем шăпăрах юхса анчĕс.

— Атте…

— Хĕрĕм…

Кăштахран Нина ашшĕне упăшки умне пырса тăратрĕ.

— Паллашăр, атте, ку ман мăшăр — Аванти.

— Петриван Егорович, Нинăн ашшĕ пулатăп эпĕ.

Арсынсем пĕр-пĕрне ăшшăн алă пачĕс.

— Сулĕ сывăхах мар, мĕнле ситрĕн, атте? Атăл ывăнтарчĕ пуль-ха, — алă панă май тахсанах пĕлекен сынпа тĕл пулнă пек каласать Аванти. Вăл ахаль те кирек кампа та сăмах килтерме пĕлет.

— Атăл тăрăх çӳресе курманччĕ. Пăрахут çинче аван иккен. Тусан вĕçмест, шăрăх та пусмасть. Чиперех çитрĕм, ГЭС кĕперĕ айĕн тухса куртăм. Пысăк карапсене шыв çинчи электростанцисем витĕр мĕнле кăларса янине халь пĕлетĕп ĕнтĕ. Этем ăсĕ мĕн кăна шухăшласа кăлармасть пуль, тĕлĕнсе те пĕтерейместĕн.

— Çапла. Пурнăç çав тери хăвăрт çĕнелсе пырать. Эпир краççын çутипе вĕреннĕ, халь краççын лампине музейра çеç курма пулать. Ну, кайрăмăр-и? Вăрăм çул пурпĕрех ывăнтарать вăл. Хамăр пата çитсе чей ĕçĕпĕр, вара ывăнни йăлтах иртсе каять. Килте тунă сăра та пур. Сана кĕтсе Нина ирех кукăль пĕçерсе кăларчĕ, — кăмăллăн сăмахлать Аванти.

— Ай, ачамсем, маншăн аплах чăрманмалла марччĕ. — Петриван Егорович хĕрĕ енне çаврăнчĕ. — Сăра курки тытиччен малтан санаторие кайса вырнаçмалла мар-ши? Вара хăнара ларнă чух та хыпкаланмалла пулмĕ.

— Унта ыран каятпăр, Нинăпа иксĕмĕр сана ăсатсах яратпăр, вырнаçтарсах хăваратпăр. Паян эсĕ — пирĕн хăна. Кĕçĕр хĕрӳпе кĕрĕвӳ патĕнче çĕр каçăн. Ăçта-ха сан чăматану? — ыйтрĕ Аванти.

Нина ăна ашшĕн чăматанне йăттарчĕ, хăй пĕр аллипе мăшăрне, теприпе хаклă хăнана хулĕнчен тытрĕ.

— Кайрăмăр. Атя, атте, пырса кур эпир мĕнле пурăннине. Тăраниччен калаçса ларăпăр. Эс чиперех çитнине Зинăна шăнкăравласа пĕлтерĕпĕр, ан кулянччăр килтисем. Килте телефон пурри çав тери меллĕ. Çыхăну уйрăмне кайса çӳремелле те мар.

Мăшăрĕ сĕтел хатĕрленĕ хушăра Аванти хăнана кил-çурчĕпе, пахчипе паллаштарчĕ. Вĕсем картишнелле тухнă самантпа усă курса Нина амăшĕ патне ĕçе шăнкăравларĕ.

— Анне, тĕлĕнсе ан кай. Атте килчĕ. Ыран вăл санаторие каять, кĕçĕр пирĕн патра çĕр каçать. Сана та хамăр пата чĕнетпĕр, — терĕ вăл.

Амӑшӗ нимӗн те шарламарӗ.

— Анне, ҫитет ӗнтӗ кӳренсе пурӑнса. Эсир пӗрне-пӗри каҫарсан иксӗре те ҫӑмӑлрах пулать.

— Каҫару ыйтма ун умӗнче мӗн айӑпа кӗнӗ эп? Савӑнӑр хӑвӑрах! Мана ан кӗтӗр, — ҫиллессӗн каласа хучӗ амӑшӗ.

— Апла тӑк каҫарахпа, эсӗ ӗҫрен таврӑнсан, сан пата хамӑр пыратпӑр.

— Аҫуна илсе пырсан ӑна ҫеҫ мар, хӑвӑра та кӗртместӗп! — шат та пат татса хучӗ амӑшӗ.

— Юрӗ апла, пырса чӑрмантармӑпӑр, — кӑмӑлсӑррӑн трубкӑна хучӗ Нина. Амӑшӗ килӗшмессе малтанах туйса тӑратчӗ-ха вӑл. Мӗн тӑвас тен, ашшӗпе амӑшӗ хушшинчи шырлан ытла та тарӑн.

Арҫынсем кӗнӗ ҫӗре сӗтел ҫинче кӑкшӑм тулли сӑра, турилккипех тутлӑ кукӑль ларать, чӑх какайӗпе пӗҫернӗ шаркку пӑсланать, нумаях пулмасть тӑварланӑ хӑяр техӗмлӗ шӑршипе сӑмсана кӑтӑклать. Тата мӗн кирлӗ ҫуллахи ҫак ырӑ ҫанталӑкра?

Нина хӑй ӗмӗрӗнче пӗрремӗш хут ашшӗпе юнашар ларать, хӑйне вӑл халӗ ҫав тери телейлӗ туять. Мӗн чухлӗ ӗмӗтленмен-ши ҫак самант ҫинчен? Иккӗшӗ тӗл пулсан мӗн ҫинчен калаҫассине темиҫе тӗрлӗ те шутласа, куҫ умне кӑларса пӑхнӑ вӑл. Тӗрӗссипе каласан, хӑй ӑшӗнче унпа калаҫнӑ.

— Каҫар мана, хӗрӗм. Пурнӑҫу ҫапла ҫаврӑнса тухасси манран та нумай килнӗ, — ҫине-ҫинех пӗр сӑмахах калать ашшӗ.

— Эп сана, атте, тахҫанах каҫарнӑ, Турӑ каҫартӑр. Сана нихӑҫан та тарӑхса-ҫилленсе пурӑнман. Пӗчӗк чух ачасем Шӑши Нини тесе тӑрӑхлани кӑна ҫав тери кӳренмелле пек туйӑнатчӗ. Аттепе пӗрле пурӑнмастӑп пулсан мана мӗншӗн-ха Шӑши йӑхӗ ҫумне ҫыпӑҫтармалла тесе кулянаттӑм.

— Куншӑн та хам айӑплӑ. Пӗр ялта пурӑннӑ чух та аҫу килне кӗрсе кураймарӑн, — каллех ӳкӗнет Петриван Егорович.

— Мĕнле кĕрсе курман? — пӳлчĕ ăна хĕрĕ. — Кĕрсе курнă. Шкулта вĕреннĕ чух сирĕн урама часчасах пыраттăм эпĕ. Микулай пиччесен Анукĕ патне. Асанне темле асăрхатчĕ эпĕ иртсе кайнине? Киле таврăннă чух мана чарса тăрататчĕ те саппунĕ айĕнчи вăрттăн кĕсьерен мĕн те пулин тутли кăларса тыттаратчĕ. Пĕррехинче вара çавăтсах пӳрте илсе кĕчĕ. Шăши ят ăçтан тухса кайнине çавăн чух асанне ăнлантарса панăччĕ.

— Сана çеç мар, хама та пĕчĕк чух çав мăшкăл ятпах чуна илетчĕç. Эп урамран макăрса кĕрсен анне, сан асаннӳ ĕнтĕ: «Мĕн макăран? Шăши ячĕ, Шăши йăхĕ нихăçан та ан пĕттĕр тесе каламалла», — тетчĕ. Кĕтерин патша вăхăтĕнченех пыракан хушма ят пирĕн çемьерен эпир район центрне куçса кайсан тин хăпрĕ, çырмара выртса юлчĕ.

— Мĕнле «выртса юлчĕ»? Ăна çырмана пăрахса хăварма çĕтĕк çăматă мар вĕт вăл, — ăнланаймарĕ Нина.

— Хамăр ялтан куçса кайнă хыççăн пирĕн пахча хыçĕнчи çырмана Шăши çырми теме пуçланă.

— Авă мĕн. Пĕчĕк чух айван пулнă çав. Ялта хушма ят пурин те тенĕ пекех пур. Мĕн кӳренмелли уншăн? Шăши Нини тени тупăлча ачи тени мар вĕт.

— Тупăлча тенине мĕнле ăнланмалла? — пĕлесшĕн пулчĕ Аванти. — Пирĕн патра каламаççĕ ун пек.

— Вăрçă хыççăн ашшĕсĕр çуралнă ачасем чылаяхчĕ. Çавсене тупăлча ачи тетчĕç, — ăнлантарчĕ Нина. — Ытла та кӳренмелле сăмахчĕ вăл: ачисемшĕн те, амăшĕсемшĕн те. Упăшкисем, мăшăр пулас каччисем вăрçăра выртса юлнă хыççăн хăш-пĕр хĕрарăмсем хăйсене ватлăхра пăхма пĕршер ача та пулин çуратас тенĕ пуль çав. Ашшĕсĕр çуралнă ачасем сăмах айĕнчен тухаймарĕç. Халăх çăварне хапха тытса хуплаймастăн вĕт. — Нина ашшĕ енне çаврăнчĕ те: — Хамăн атте пуррине эп яланах асра тытса пурăннă. Сана Çĕнтерӳ кунĕпе саламласа пĕр

виçĕ хутчен открытка та янăччĕ. Тулĕк ятăма кăтартма вăтанаттăм, — терĕ.

— Эсĕ пулнă-и-ха вăл, мана вăрттăн саламлаканни? — терĕ те ашшĕ кулса ячĕ. — Вăл открыткăсене курсан арăм кĕвĕçсе çил-тăман кăларатчĕ.

Калаçса ларнă май Нина ашшĕ çине вĕлт те вĕлт пăха-пăха илет. «Анне шурă ӳтлĕ, аттепе иксĕмĕр вара сарăрах питлĕ. Эпĕ ытларах ăна хывнă, — шухăшлать вăл. Ашшĕн сылтăм хăлхинчен аяларах вырнаçнă тур паллине халь кăна асăрхарĕ те ăшра кулса илчĕ: — Акă вăл — эпĕ атте хĕрĕ пулнине çирĕплетекен пичет. Манăн та шăп çав вырăнта тур палли пур».

— Атте, çырура эс ман пата Ниниле тесе çыратăн. Мана пĕчĕк чухне килтисем кăна ачашласа çапла чĕнетчĕç. Анне халĕ те çав ятпа чĕнкелет. Эсĕ вăл сăмаха ăçтан пĕлетĕн? — ыйтмасăр чăтаймарĕ Нина.

— Ачашласа чĕнмелли ят мар вăл, авалхи ят. Вирккапа иксĕмĕр çапла калаçса татăлнăччĕ: хĕр çуралсан Ниниле ят хуратпăр, ывăл çуралсан — Таниле. Эс çуралнине пĕлсен ял советне кайса сана хам хушаматпа çыртартăм. Эсĕ манăн хĕр вĕт-ха, санра Селентеровсен юнĕ чупать. Ун чух аннӳпе çураçас шанăç та пĕтменччĕ. Ятна вара... Списокра Ниниле ят çук терĕç те Нина тесе çырса хучĕç. Вĕсем сĕнекен ят Нинилене çывăх пулнăран кăна килĕшрĕм. Хам ăшра вара эпĕ сана яланах Ниниле тесе чĕннĕ, — ăнлантарчĕ ашшĕ.

Халиччен чăтни-тӳсни ӳпкев пек ан курăнтăр тесе хăй пурнăçĕ çинчен Нина асăрханса каласа парать. Çырупа çырса яма меллех мар ыйтусем те чылай унăн. Халь пурин çинчен те ыйтса пĕлетех.

— Телевизорпа кăтартакан «Жди меня» передачăна сиктермесĕр кураттăм эпĕ. Эсĕ мана шыраттарса çав передачăна çыру ярассăнах туйăнатчĕ, — хăюсăррăн каласа хучĕ Нина.

— Вăл передачăсăрах тупма ĕмĕтленеттĕм эпĕ

сана. Хам айăпа туйса тăнăран хăюлăх çитереймесĕр пурăнтăм. Çак йывăр утăма тума Турри хăех хистерĕ пулас. Тĕлĕк куртăм пĕр каçхине. Ман умра — кăвакал сăмсиллĕ тараса ларать пек. Лешĕ — лавккасенче апат-çимĕç таварĕ виçсе памалли. Унăн хăрах чашăкĕ тулли пек, тепри вара — пуш-пушă. «Сан пурнăç тарасин хăрах енĕ пушă», — тесе каларĕ пек такамăн хулăн сасси. Йĕп-йĕпе тарласа вăранса кайрăм, ирччен те куç хупаймарăм. Тĕлĕкĕм сан пирки систернине тӳрех тавçăрса илтĕм. Иккĕмĕш арăмпа çуратнă ачасем пурте ӳссе çитĕннĕ, ура çине çирĕп тăнă. Сана вара пачах та пулăшаймарăм. Пулăшма мар, çухатса ятăм. Акă мĕне пĕлтерет тарасан хăрах чашăкĕ пушă пулни. Пурнăç анине кама мĕн чухлĕ виçсе панине никам та пĕлмест. Çамрăк мар ĕнтĕ эп халь тин, фронтри сурансем те хăйсем çинчен аса илтерсех тăраççĕ. «Лере çурма пушă тарасапа каяс марччĕ манăн», — тесе шухăшлатăп. Хама мĕн канăçсăрлантарнине Зина хĕрĕме каласа патăм та, сан телефонна тепĕр эрнеренех тупса килчĕ. — Петриван Егорович шывланнă куçĕсемпе каллех хĕрĕ çине тинкерчĕ. — Каçарсам мана, Ниниле хĕрĕм. Тархасшăн, каçарсам.

— Ан пăлхан, атте. Юн пусăмĕ хăпарса кайĕ тата. Эс ватă мар-ха. Пурăнмалла та пурăнмалла санăн. Халь тин пире никам та уйăрса яраймĕ.

Ашшĕпе хĕрĕ каллех ыталанса илчĕç.

Пĕр-пĕрне курнипе савăннăскерсем вăхăт иртнине те сисмерĕç. Нина ашшĕ енчи тăванĕ-хурăнташĕ çинчен виç-тăватă сыпăк таранах ыйтса пĕлчĕ. Авантипе хуняшшĕ пĕр-пĕринпе хăвăртах пĕр чĕлхе тупрĕç те çур çĕр иртичченех сăмахласа ларчĕç.

Петриван Егорович санаторирен кайиччен Нинăпа Аванти ун патне темиçе те çитсе килчĕç, кайма тухсан та хăйсемех ăсатса ячĕç.

— Ăслă та ырă чун-чĕреллĕ çын тĕлне пулнă эсĕ, хĕрĕм. Турă вăрăм кун-çул патăрччĕ иксĕре те, — пе-

хил парса сывпуллашрӗ ашшӗ. — Сирӗнпе курса калаҫни санаторири ырлӑхран та ытларах сиплӗх кӳчӗ, тахҫантанпах ыратса пурӑнакан чунӑм лӑш пулчӗ.

— Пӗр-пӗрне ҫухатмӑпӑр, атте. Ҫыру ҫырсах тӑр, — терӗ Нина.

— Хӑнана килӗр пирӗн пата, — ырӑ сунса чӗнчӗ Аванти.

— Ҫемйипех килӗр, — хушса хучӗ Нина. — Сан мӑшӑру умӗнче те, йӑмӑксем умӗнче те эпӗ айӑплӑ мар. Мӗншӗн пӗр-пӗринчен ютшӑнас?

Унтанпа темиҫе ҫул та иртрӗ. Килӗштерсе, туслӑ пурӑнаҫҫӗ Юмановсем. Нинӑна пӗр сӑлтав ҫеҫ кулянтарать. Авантипе иккӗшӗн ача ҫук. Сывлӑхӗ хавшакрах пулнӑран Нинӑна тухтӑрсем ача ҫуратма хушмаҫҫӗ. Тепӗр сӑлтав та пур. Кун пирки тухтӑрсем куҫранах каламаҫҫӗ те, Нина хӑй пит лайӑх ӑнланать: пепке тытса лармалӑх ҫамрӑк мар ӗнтӗ вӑл.

Ытла та шӑп вӑл, ачасӑр кил-ҫурт. Авантин малтанхи арӑмӗнчен ҫуралнӑ хӗрӗ, Лариса, килсе ҫӳретха. Анчах вӑл килет те — ҫав кунах каять. Амӑшӗпе тата ҫӗнӗ ашшӗпе — ӑна Лариса Куҫма пичче тесе чӗнет — ҫак урамрах пурӑнаҫҫӗ вӗсем. Авантин пӗрремӗш арӑмӗнчен ҫуралнӑ хӗрне хӑнӑхса ҫитрӗ Нина, унпа ҫӑмӑллӑнах пӗр чӗлхе тупрӗ. Ҫавӑнпа лешӗ те ютшӑнмасӑр килсе ҫӳрет. Ҫапах та Нинӑн хӑй варӗнче ӳтленнӗ пепкине алра тытса курас килет. Хӗр-и вӑл е ывӑл — пурпӗрех чиперскер пулӗччӗ. Аванти — такам та кӑмӑлламалла хитре арҫын. Аварие лекиччен Нина хӑй те илемлӗ хӗр пулнӑ. Саккӑрмӗш класра чух ӳкерттернӗ пӗртенпӗр сӑнӳкерчӗк ҫине пӑхса Нина ҫапла ӗмӗтленет: «Хӗр ҫуралас пулсан вӑл ман пек хӑмӑр куҫлӑ, Авантинни пек шурӑ ӳтлӗ, ҫӑра куҫ харшиллӗ пулатчӗ ӗнтӗ». Пӗр каҫхине ҫапла ӗмӗтленсе выртса йӗрсех ячӗ: «Турӑ ҫырман пуль ҫав мана ун пек телее курма».

— Мĕн пулчĕ? Ма йĕретĕн эсĕ? — мăшăрĕ нăшăклатнине илтсе вăранса кайрĕ Аванти. — Ăнсăртран вырăнсăр сăмахпа кӳрентермерĕм пулĕ те сана паян?

— Çу-ук, — питне хăвăрт шăлса илчĕ Нина. — Троллейбусра витĕр çил вĕрнĕ çĕрте ларса килтĕм, куç çавăнпа шывланать пулас. Сана мĕншĕн кӳренес ман? Тав Турра, ӳпкелешме сăлтав çук. Сывлăх пулсан аптăрамăпăр.

— Асту, чирлесех ан кай. Кил çумарах, ăшăнса çывăрса кайăн.

## Саккăрмĕш сыпăк

Пурнăç мĕнле пуласси сывлăхран кăна килмест çав. Çĕршывра «перестройка» текен тапхăр тапранса кайрĕ. Халăх хăй те пĕлмен темĕнле çĕнелĕве кĕтет. Горбачев калаçнине итлесен пурнăç лайăх еннелле улшăнмалла пек, анчах лавккасен сентрисем палăрмаллах чухăнланса пыраççĕ. Йĕркеллĕ атăпушмак е кĕпе-тумтир туянас тесен е Мускава каймалла, е пасарта вăрттăн сутă тăвакан усламçăсенчен икĕ е виçĕ хут хаклăрах хакпа туянмалла. Лавккана пĕр-пĕр ырă тавар килсен çавăнтах çухрăм тăршшĕ черет пуçтарăнать. Пурăна киле куллен кирлĕ таварсем те — кăлпасси, какай, сахăр, супăнь, кĕпе çумалли порошок — çитсе пыми пулчĕç.

Горбачев пуçласа янă уççăнлăх самани халăх çăварне ирĕке ячĕ, анчах пурнăça нимĕн чухлĕ те лайăхлатмарĕ. Хаçат-журнал çăхавсемпе, питлевсемпе, иртнĕ саманана хурласа çырнă статьясемпе тулса ларчĕ. Тиркешме сăлтав та пур — çитмен пурнăç. Уншăн айăплисем те паллă: коммунистсем, колхозсем, Сталин, совет самани... Уççăнлăх текенни çырансене çирĕплетмесĕр татса янă пĕве пек пулчĕ. Тем калама та, тем çырма та юрать. Çĕршыв шайĕнчи депутатсем темиçе ушкăна пайланса кайрĕç. Пĕр шухăшлăх çук вĕсем хушшинче. Халăх тарçисен пĕр пайĕ çĕршыв Конституцийĕнчен улттăмĕш статьяна

кăларса пăрахма сĕнет. Çĕршывра коммунистсен партийĕн пĕччен кăна хуçаланмалла мар, тĕрлĕ шухăшлă çынсен прависене хӳтĕлеме партийĕсем те нумай пулмалла теççĕ вĕсем. Совет политика тытăмне тĕппипех улăштармалла текенсем те пур. Çак ыйтăва хаçат-журналта та хĕрӳллĕн сӳтсе яваççĕ. Пĕрпĕриншĕн ют çынсене кăна мар, арăмне упăшкипе, пиччĕшне шăллĕпе, ашшĕне ывăлĕпе хирĕçтерекен ыйту пулса тăчĕ Конституцири улттăмĕш статья.

Улатимĕрпе Аванти те тĕрлĕ куçпа пăхаççĕ çак ыйту çине. Улатимĕр çемйипе хулан тепĕр кĕтесĕнче пурăнать, пиччĕшĕ патне килкелесех тăрать. Пĕр кунхине иккĕшĕ хирĕçмеллипех хирĕçсе кайрĕç.

— Демократи кирлĕ тесе çĕршывăн пĕтĕм историне тиркесе юрăхсăра кăлармалла мар ĕнтĕ! — тарăхсах калать Улатимĕр. — Уйрăм коммунистсем икĕ питлĕ сутăнчăксем пулнăшăн, хăйсен ырлăхĕшĕн кăна тăрăшнăшăн пĕтĕм партие варалама юрать-и вара? Хамăрăн аттене те çавсен шутнех кĕртетĕн-и апла? Вăл вара фронтра парти ретне кĕнĕ, вăрçăран кăкăр тулли орден-медальпе таврăннă. Паянхи демократсем умĕнче мĕн айăпа кĕнĕ вăл? Кунта тасан пурăнса тасанах леш тĕнчене кайнă вăл. Ан варала ун ятне. Паян эс çапла калаçса ларнине илтес тĕк мĕн калатчĕ-ши вăл? Шел, фронтри суранĕсене пула нумай пурăнаймарĕ. Вăл вилни анне ĕмĕрне те кĕскетрĕ. Юрать-ха, курмаççĕ эсĕ суя демократсем майлă çаптарса ларнине!

— Атте пирки калаçмăпăр. Ун пек тӳрĕ чунлисем сайра. Влаçра вара чунĕсене шуйттана сутнă коммунистсем темĕн чухлех. Влаçăн кирек хăш картлашкине илсе пăхма пултаратăн. Хăшĕсем партие те карьера тăвассишĕн кăна кĕнĕ. Çавсемех юхăнтарса ячĕç çĕршыва, — тавлашать Аванти.

— Нивушлĕ пачах та нимĕн те сисместĕн эсĕ? Усал тĕллевлĕ вăйсем пирĕн çĕршыва аркатма шут тытнă. Сталинăн киревсĕр ĕçĕсене Хрущев вăхăтĕн-

чех сивленӗ, вӗсем ҫинчен уҫҫӑн пӗлтернӗ. Халь ҫак ыйтӑва мӗншӗн тепӗр хут ҫӗклеҫҫӗ тесе шутлатӑн эсӗ? Халӑха пӑтратасшӑн. Курӑн акӑ, ҫак юхӑм Сталинӑн киревсӗр ӗҫӗсене сивленипех пӗтмӗ, — хӑй шухӑшӗнчен чакмасть Улатимӗр те. — Апат-ҫимӗҫ ҫитсе пыманшӑн коллективлӑ хуҫалӑхсене айӑплама пуҫларӗҫ. Вӗсене йӗркелемелле пулман имӗш. Колхозсем пулман тӑк пирӗн ҫӗршыва нимӗҫ ҫарӗ ним мар аркатса тӑкатчӗ. Совет ҫарне тиркекен статьясем мӗн чухлӗ тухаҫҫӗ тата. Кун пекех пулсан Гитлер мар, Сталин вӑрҫӑ пуҫласа янӑ теме тытӑнӗҫ акӑ. Совет Союзӗнчи тӑванла республикӑсене пӗрпӗринпе хирӗҫтерсе ярасшӑн. Ҫак туртӑм вӑй илсе пынине куратӑп эпӗ, нивушлӗ эсӗ нимӗн те сисместӗн? Мускавра миллионлӑ тиражпа тухакан хаҫатсенче, журналсенче мӗн тери провокациллӗ статьясемпе ӳкерчӗксем тухаҫҫӗ. Нумай пулмасть акӑ «Огонек» хуплашки ҫине ҫакӑн пек сӑнӳкерчӗк кӑларнӑччӗ: сарлака шоссе ҫинче сурӑх кӗтӗвӗ кӗпӗрленнӗ. Ӑна икӗ вӗҫӗнчен те совет танкӗсем хупӑрласа илнӗ. Ӳкерчӗк айне «Туҫи Карабах» тесе ҫырнӑ. Танксем сурӑх кӗтӗвӗ хӑваласа ҫӳремеҫҫӗ паллах. Ятарласа провокациллӗ ӳкерчӗк пичетленӗ. Вырӑнти халӑха кампа танлаштарнине чухла.

— Эс пур ҫӗрте те вӑрттӑн тӑшмансем куратӑн. Кама кирлӗ эпир? Анӑҫри ҫӗршывсем пирки систерен пулсан вӗсем пирӗнтен чылай лайӑхрах пурӑнаҫҫӗ. Вӗсене демократисӗр пуҫне нимӗн те кирлӗ мар. Тӗрлӗ грантсем йӗркелесе хӑйсем пире пулӑшма тӑрӑшаҫҫӗ. Тӑшман мар вӗсем пирӗншӗн, — ӑнлантарать шӑллӗне Аванти.

— Вӗсен пулӑшӑвӗ хӑҫан та пулин пыра ларассӑн туйӑнмасть-и сана? Ӗненместӗп эп вӗсен ыр кӑмӑллӑхне. Хӑй ҫӑкӑрне ҫиекен халӑх кӑна ирӗклӗ пулма пултарать, — парӑнмасть Улатимӗр те.

— Ҫитет ӗнтӗ тимӗр картара пытанса пурӑнса, алӑксене уҫма вӑхӑт. Совет Союзӗ пирки те ахалех

пăшăрханатăн. Ăна салатма кам ирĕк патăр? Ун пек ухмахсем çук.

— Ухмахсем мар, чее ăслисем аркатасшăн ăна. Шалтан йăштарасшăн.

Пиччĕшĕпе шăллĕ хушшинчи хивре калаçу хĕрсех пырать. Нинăн Аванти хутне кĕрсе сăмах хушас килет. Унăн мăшăрĕ — каллĕ-маллĕ шухăшлама пĕлекен çын, çĕршыври лару-тăрупа çеç мар, тĕнчери хыпарсемпе те интересленсех тăрать. Çĕршывра çĕнелӳ пуласса кĕтет вăл. Нина та ăшра ун майлă, анчах вăл пĕртăвансене хирĕçтересшĕн мар.

— Чарăнăр, иксĕр кунта хирĕçнипе мĕн çитсе ларать? Пĕр варта ӳснĕ тăвансем эсир, мĕнле намăс мар сире çапла вăрçăнма? — ятласа тăкрĕ вăл мăшăрĕпе унăн шăллĕне. — Сирĕн иксĕрĕн ним пайламалли те çук. Мускаври политиксем çĕр тĕрлĕ шухăш каласан та пирĕн пурин те пĕр тĕллевпе пурăнмалла: çак пăтранчăк саманара хамăр халăха упраса хăвармалла. Тутарсем çывăрмаççĕ авă, хăйсене кирлĕ саккунсене хыпалансах йышăнаççĕ.

— Тĕрĕс калатăн-ха эсĕ, Нина инке, — терĕ пиччĕшĕпе урлă пулнăран пусăрăнчăк кăмăллă Улатимĕр. — Пирĕнтен килмест-çке. Эпир саккун кăларакансем мар. Чăваш вăл çăпатине сырса кая тăрса юлакан... Нумай лартăм сирĕн патра. Килелле тапранас.

Те самани лăпкă тăманран, Çĕнĕ çул уявĕ те пысăк хаваслăхпа хавхалану илсе килмен пек туйăнчĕ. Нарăс уйăхĕнче Мускавра пысăк митинг пухăнса шăв-шав çĕклерĕ. Икçĕр пин ытла çын урама тухнă терĕç. Камсем, мĕнле майпа пухнă-ши çавăн пек йышлă халăха? Ун хыççăн нумай та вăхăт иртмерĕ — халăх депутачĕсен черетсĕр съездĕнче улттăмĕш статьяна çĕршыв Конституцийĕнчен кăларса пăрахрĕç, СССРта президент должноçĕ пулмалла текен йышăну турĕç. Ăна халăхпа суйламалла пулин те пĕрремĕш президента депутатсем суйларĕç. Горбачев СССРăн пĕрремĕш президенчĕ пулса тăчĕ.

Коммунистсен партийӗ пӗрлештерсе, ертсе пыракан парти пулма пӑрахрӗ те, тӗрлӗ-тӗрлӗ партисем ҫумӑр хыҫҫӑнхи кӑмпасем пек шӑтса тухрӗҫ. Чӑваш Республикинче ҫав партисен вырӑнти уйрӑмӗсем те, хӑйне тӗллӗн ӗҫлекен пӗрлешӳсем те йӗркеленчӗҫ. Нинӑпа Аванти нихӑш партире те тӑмаҫҫӗ, анчах пуринпе те интересленеҫҫӗ.

Пиччӗшӗпе шӑллӗне мирлештерес тесе Нина тем пек тӑрӑшрӗ пулин те лешсем хушшинчен хура кушак каҫса кайрӗ. Ку темех мар-ха. Улатимӗрпе Аванти ют ҫынсем мар, вӑрҫӗҫ те, ҫураҫӗҫ те... Хӑратаканни — урӑххи. Халиччен пӗрре те влаҫа хирӗҫ тӑман Шупашкар митингсене туха пуҫларӗ. Халӑх кӑмӑлсӑрлӑхӗ ӳснӗҫем ӳсет. Куллен кирлӗ апат-ҫимӗҫпе тавара талонпа кӑна параҫҫӗ. Хӑш уйӑхра талонӗ пулсан та таварне илеймесӗрех юлатӑн. Ҫакӑн пек ҫити-ҫитми пурнӑҫра Балтика тӑрӑхӗнчи республикӑсенче анчах мар, Атӑл тӑрӑхӗнче те наци юхӑмӗ палӑрмаллах ҫӗкленчӗ. Чӑваш Республикине илес пулсан хаҫат-журналти чи ҫивӗч статьясем ҫӑкӑр ҫинчен мар, чӗлхе ҫинчен. Писательсем, ученӑйсем, журналистсем, ӑна-кӑна чухлакан ахаль ҫынсем чӑваш чӗлхине вырӑс чӗлхипе танах патшалӑх чӗлхи туса хурас ыйтӑва ҫӗклеҫҫӗ. Вырӑсла тухса тӑракан хаҫатсенчен пӗри «Икчӗлхелӗх тата наци ыйтӑвӗ» ятлӑ статья пичетленӗ хыҫҫӑн калаҫу тата ытларах хӗрсе кайрӗ. Халӗ ӗнтӗ мӗнпур хаҫат-журнал икчӗлхелӗх пирки тавлашать.

Нина та туяннӑччӗ ҫав номере. Чӑваш писателӗ икчӗлхелӗхӗн усӑллӑ тата сиенлӗ енӗсем ҫинчен ҫырнӑ статьяна вӑл Авантие сасӑпа вуласа пачӗ.

— Ҫамрӑк пулсан та хӑюллӑ ҫын иккен ку Чердаков, тарӑннӑн шухӑшлама пӗлекенскер, — терӗ Аванти Нина вулама чарӑнсан. — Аллӑмӗш ҫулсен вӗҫӗнче, утмӑлмӗшсен пуҫламӑшӗнче васкаварлӑн икчӗлхелӗх ҫине куҫса пысӑк йӑнӑш туни ҫинчен ним хӑрамасӑр, уҫҫӑн ҫырать. Чӑваш чӗлхи ҫав тапхӑрта

иккӗмӗш сортлӑ чӗлхе пулса юлчӗ, республика тулашӗнчи чӑваш шкулӗсем хупӑнма пуҫларӗҫ тет Чердаков писатель.

— Тӗрӗс калать. Хамӑр тӳссе курнӑ эпир куна, — терӗ Нина. — Вырӑс чӗлхи ҫине куҫмасан ачӑрсем нимӗнле института та кӗреймӗҫ тесе хӑрататчӗҫ ашшӗ-амӑшне. Ҫав реформа хыҫҫӑн чӑваш хӑй чӗлхинчен хӑй ӑтанма пуҫларӗ. Пуринчен те ытларах кулянтараканни — халӑх вырӑсланма тытӑнни. Автор 1979 ҫулхи халӑх ҫыравӗн кӑтартӑвӗсене илсе парать. Республикӑра пурӑнакан чӑвашсен вунӑ процентчӗ хӑйсене вырӑс тесе ҫыртарнӑ иккен. Шупашкарта вара чӑвашсен ҫирӗм икӗ процентчӗ хӑйсене вырӑс тесе палӑртнӑ. Кунта, чӑваш ҫӗрӗ ҫинче, ҫапла пулсан республика тулашӗнче мӗнле-ши? «Вырӑсланнӑ» чӑвашсем унта тата нумайрах пуль ӗнтӗ. Тулӗк ман пуҫа пӗр япала ниепле те шӑнӑҫасшӑн мар: аҫу-аннӳ чӑваш пулсан хӑвна мӗнле-ха вырӑс тесе ҫыртарас килет?

— Вӑт ҫапла чӑвашмарланса пырать пирӗн халӑх. Вырӑсланасси качки... — Аванти пӗр вӑхӑт чӗнмесӗр ларнӑ хыҫҫӑн ҫапла хушса хучӗ. — Вырӑсла пилӗкҫӗр-ултҫӗр сӑмах пӗлнипех вырӑс пулса тӑраймастӑн-ха.

— Пулса тӑраймастӑн ҫав. Чӑвашла-вырӑсла, вырӑсла-чӑвашла ҫӑрса калаҫакансем мӗнле нумай пирӗн хулара. Ялта пурӑнакансен чӗлхи тирпейлӗрех, илемлӗрех.

— Тарӑнрах шутласа кӗрсе кайсан, чӑвашӑн пӗтӗм аталанӑвӗ ял ҫинче никӗсленсе тӑнӑ пек туйӑнать. Писательсен, художниксен, артистсен, композиторсен, паллӑ спортсменсен ытларах пайӗ ялтан тухнӑ. Ялне хӑйне куллен аталантарса пымасан вӑл хавшаса юлма пултарать. Хавшама пуҫларӗ ӗнтӗ. Ялти пурнӑҫ условийӗсене хуларипе ниепле те танлаштарма май ҫук. Пултаруллӑ ҫамрӑксем хулана вӗренме килеҫҫӗ те кунтах юлма тӑрӑшаҫҫӗ, ҫемье-

ленеççĕ те ачисене вырăсла калаçтарса ÿстерееççĕ. Пирĕн ялта та хăш-пĕр учительсем килте ачисемпе вырăсла çеç калаçатчĕç. Чăн та, вĕсен ывăлĕ-хĕрĕсем пысăк хуласене вĕренме кайса вырнаçса пĕтрĕç. Вырăсла яка калаçнин усси пурах пуль çав ĕнтĕ. Ун пеккисем хăйсене хăюллăрах тытаççĕ. «Чăваш чĕлхи мăн çул хĕрне тухиччен кăна кирлĕ», — тенине илтсе ÿснĕ çамрăксем вара хăйсен чĕлхинчен хăйсем вăтанса çÿреççĕ, хăйсем чăваш пулнине пытарма тăрăшаççĕ.

— Чăвашран чăваш çуралма пăрахсан халăх йышĕ чакса пырать. Мана пĕр япала тĕлĕнтерет. Ачаранах вырăсла лайăх пĕлекен чăвашсем пурнăçра ăшă вырăн тупса вырнаçаççĕ те тăван чĕлхе шăпишĕн пăшăрханма пачах пăрахаççĕ. Кирлĕ те мар вăл вĕсене. Мĕншĕн çапла пулса пырать? — те хăйĕнчен хăй, те мăшăрĕнчен ыйтать Нина.

— Статьяра икчĕлхелĕх пирки интереслĕ çырса кăтартнăччĕ. Вуласа пар-ха çавна тепĕр хут, — терĕ Аванти.

— Чим, ăçтаччĕ-ха вăл вырăн? Акă тупрăм, итле: «Икчĕлхелĕх ачасене, уйрăмах кĕçĕн çулхисене, сиен кÿни пирки тавлашма та кирлĕ мар. Ăна пула ачан интеллекчĕ кирлĕ шайра йĕркеленсе пыраймасть, вăл тăван чĕлхепе шухăшлаcси, ун пĕтĕмĕшле ăнлавĕ аталанасси чакать, калаçăвĕ пăсăлма пултарать тата ытти те. Чи япăххи çакă: икчĕлхелĕхе ним шухăшламасăр кĕртни çурмачĕлхелĕх патне илсе пырать. Урăхла каласан, ача ик чĕлхине те алла илнĕ пек туйăнать. Тĕрĕссипе вара иккĕшĕнчен пĕрне те тĕплĕн пĕлмест. Кăткăсрах ăнлава уçса памалла чухне вăл ăна ик чĕлхерен пĕринпе те тĕп-тĕрĕс калаймасть».

— Наци, чĕлхе ыйтăвĕ вăл — çăкăр ыйтăвĕ пекех. Чăтсан-чăтсан халăхăн тÿсĕм пĕтсе çитет. Ун пек ан пултăр та-ха... Çав Балтика тăрăхĕнче пурăнакансен СССРтан уйрăлас кăмăл пурри сисĕнет.

Наци ыйтӑвӗ вӑл — шӳтлемелли япала мар. Мӗн патне пырса тухатпӑр капла? Мускавра тухса тӑракан хаҫатсенче ҫав тери тавлашуллӑ статьясем пичетленеҫҫӗ тет. Шел, нумайӑшне вулаймасӑр юлатпӑр, — ассӑн сывласа илчӗ Аванти.

— Тавлашӑвӗ вӑл кунти хаҫат-журналта та ҫителӗклех-ха, — тавӑрчӗ Нина. — Калаҫнин-ҫырнин усси пулӗ-ши тулӗк?

— Пӗри те тепри хӑй шухӑшне калама хӑраса тӑрсан мӗн пулать? Пӗтсех ларатпӑр вӗт. Хам шухӑша эп те ҫырсах хатӗрлерӗм. Нина, куҫарса ҫырса ыран редакцие леҫсе пар, тархасшӑн.

— Юрӗ, ара. Унта кайса килме йывӑр мар, — терӗ те Нина сӗтел хушшине кӗрсе ларчӗ, Авантин пӑнчӑпа ҫырнӑ текстне куҫарма пуҫларӗ.

«Турӑ мӗнле ҫырнӑ, ҫав халӑх ҫынни пулса ҫуралатпӑр эпир. Турӑшӑн халӑхӗсем те, чӗлхисем те тан. Кирек мӗнле чӗлхепе калаҫсан та ҫыннӑн хӑйне ыттисенчен катӑк туймалла мар. Пирӗн вара лавккана тухсан та, аптекӑна кӗрсен те, больницӑна пырсан та вырӑсла калаҫмалла. Районсен пуҫлӑхӗсем, министрсем пирки калама та кирлӗ мар, вӗсем пурте вырӑсла сӑмахлаҫҫӗ. Пухусем вырӑсла иртеҫҫӗ. Вунӑ чӑваш хушшине пӗр вырӑс пырса тӑрсан пурин те вырӑсла калаҫмалла. Унсӑрӑн чӑвашла пӗлмен ҫынна хисеплемен пек пулать имӗш. Ҫакӑ вӑл пӗртанлӑх пулать-и? Чӑваш хушшинче пурӑнатӑн пулсан вырӑнти халӑх чӗлхине мӗншӗн калаҫу шайӗнче те пулин вӗренес мар? Чӗлхене шкулсенчен, аслӑ вӗренӳ заведенийӗсенчен, производствӑран, политикӑран хӗссе кӑларма тытӑнсан вӑл аталанма та пӑрахать вӗт. Кайран вара уйрӑм ӑнлавсене чӑвашла калама ҫук теҫҫӗ. Эпӗ — географие, историе, математикӑна чӑвашла вӗренсе курнӑ ҫын. Учительсен ыйтӑвӗсене хуравланӑ чухне сӑмах ҫитменнине астумастӑп. Паянхи ачасем географипе пӗр темӑна та пулин тӑван чӗлхепе ӑнлантарса пама пултарӗҫ-ши?

Пултараймаççĕ, унчченхи ăнлавсем манăçнă, çĕннисем аталанман, мĕншĕн тесен аталанăва чарса лартнă. Чĕлхе пĕтсен халăхĕ те пĕтет.

Чăваш чĕлхине вырăс чĕлхипе танах аталанма майсем туса памалла», — тесе çырнă Аванти.

Ун çырăвĕсене леçме çӳренĕ май Нина республика хаçатĕнче ĕçлекенсенчен чылайăшне паллакан пулса çитрĕ. Аванти çырăвне хальхинче те кăмăллasах илсе юлчĕç.

— Наци юхăмĕ вăл — çиллĕ çанталăкра чĕртнĕ кăвайт пекех. Асăрханаллă пулмасан пĕтĕм тавралăха çулăм айне тума пултарать. Вырăнта пурăнакан тĕп халăхăн маттуртарах ывăл-хĕрĕ тăван чĕлхине упраса хăварасшăн çĕкленчĕ. Анчах çак юхăмра хăйсемшĕн хăрушлăх куракансем те сахал мар, — терĕ тĕп редактор çумĕ пулса ĕçлекен Андреев çырăва вуласа тухнă хыççăн. — Улатăр хулипе районĕнчен, вырăссем пурăнакан ытти çĕртен урăхларах çырусем те килеççĕ. Вĕсен авторĕсем чăвашлăхшăн тăракансене националист тесе вăрçаççĕ, Улатăр çыннисем вырăс чĕлхине патшалăх чĕлхи туса хумасан хăйсен тăрăхне урăх облаçа куçарас ыйтăва çĕклессипе хăратаççĕ.

— Çапла хĕрӳленсе çитрĕ-и тавлашу? — чăннипех пăшăрханса ыйтрĕ Нина.

— Наци юхăмĕн хастарĕсем тăван чĕлхе аталанăвĕшĕн тимленине хăшĕсем темшĕн вырăс чĕлхине хирĕç тăнă пек ăнланаççĕ.

— Мĕнле ăнланмаççĕ-ха вĕсем? Вырăс чĕлхине хирĕç мар эпир. Вырăс чĕлхине лайăх пĕлмелли никама та иккĕлентермест. Вăл чĕлхе — чăваш-и эпир, çармăс-и, тутар-и е пушкăрт — пурне те кирлĕ. Халăхсем хутшăнмалли чĕлхе — аталану чĕлхи вăл. Анчах çакă пирĕн тăван чĕлхене иккĕмĕш сортлă чĕлхе шайне антарса лартмаллине пĕлтермест-çкеха. Халăхсен пĕртанлăхĕ çинчен калаçа-калаçах республика тулашĕнчи хаçатсен чăвашла кăларăмĕсене

хупса пĕтерчĕç, унти шкулсенче чăваш чĕлхине вĕрентме пăрахса пычĕç. Çакă вара пĕртанлăх пулать-и? — чунтанах кулянса калаçать Нина.

— Мĕн те пулин улшăнать пулĕ-ха. Чĕлхе ыйтăвĕ паянхи кун йĕркинче питĕ çивĕч тăрать. Писательсем çине-çинех пухусем ирттереççĕ. Куллен халăх хушшине тухса çӳренĕ май пĕлетĕп: çав пухусене парти обкомĕнче ĕçлекенсем те пыраççĕ. Хастартарах çынсем вырăс тата чăваш чĕлхисене иккĕшне те патшалăх чĕлхи тăвас ыйтăва çĕклеççĕ. Кун пекех пулсан депутатсем те, республикăна ертсе пыракансем те чĕлхе ыйтăвĕнчен пăрăнаймĕç, — терĕ Андреев.

Чăнах та, халăхăн хастар ывăлĕ-хĕрĕ çине тăни усăсăр пулмарĕ, 1990 çулхи юпа уйăхĕнче депутатсем «Чăваш Республикинчи чĕлхесем çинчен» саккун кăларчĕç. Унпа килĕшӳллĕн малашне чăваш чĕлхи вырăс чĕлхипе танах патшалăх чĕлхи пулса тăрать.

Ку хыпара Юмановсен килне Аванти шăллĕ Улатимĕр илсе килчĕ. Вăл Патшалăх Канашĕн сессийĕнчен тухнă пĕлĕшĕпе курса калаçнă-мĕн.

— Нивушлĕ? Нивушлĕ çитрĕ эпĕ ĕмĕтленни? — ĕненесшĕн пулмарĕ Нина ку хыпара. — Саккунне хамăн куçпа курасчĕ манăн.

— Куратăн. Ыранах пичетленсе тухать вăл, — терĕ Улатимĕр.

— Куратăпах-ши? — ĕненес те килмест Нинăн. — Апла тăк, Аванти, сăра вĕретер пуль. Юпа уйăхĕнче юпа шăтăкĕнче те сăра тенĕ чăвашсем. Унта-кунта чупкаласа çӳресе ку уйăхра сăра та тăваймарăм. Çĕрле чуста хуратăп. Хуплу пĕçерсех уяв тăватпăр ыран. Эсĕр те, Улатимĕр ывăлсем, çемйĕрпех килĕр пирĕн пата. Вăт савăнăç! — ача пек хĕпĕртерĕ Нина. — Чăваш тата вырăс чĕлхисемпе малашне пĕр тан усă курма пуçлăпăр, мĕнпур чăвашшăн вĕсем мăшăр çунат вырăнне пулĕç.

Юмановсем кăна-и, чăваш чунĕллĕ пĕтĕм çын малашлăх ĕмĕтпе çунатланчĕ çав саккуна йышăннă

хыççăн. Анчах саккун йышăннипех ĕçĕ пулса лармасть çав. Ăна пурнăçа кĕртме хальлĕхе пĕр пус та уйăрман. Çакна Нинăпа Аванти ăçтан пĕлччĕр-ха ĕнтĕ?

Хĕл пĕр канлĕх те илсе килмерĕ. Самана таканари шыв пек пăтранать, чӳхенет. Малтан Балтика тăрăхĕнчи хирĕçӳсем самаях кулянтарчĕç. Çуркунне суйлав умĕнхи тапхăр пуçланчĕ те, çĕршыври тĕрлĕ партисемпе юхăмсем халăх кăмăлне хăйсен кандидачĕ майлă çавăрас тесе пĕр-пĕрне варалама тытăнчĕç. Юмановсем пĕр иккĕленмесĕрех Ельциншăн сасăлама калаçса татăлчĕç, хăйсем те агитаторах тухса кайрĕç. Аванти куçĕ курманран таçта аякках тухса çӳреймест. Нина вара Шупашкартан çывăхри районсене хутлакан автобуссем çине ларса çула тухать те пассажирсене Ельциншăн сасăлама чĕнсе çӳрет. Автобусри пассажирсемпе калаçнă хыççăн пĕр-пĕр чарăнура анса юлать те тепĕр автобус çине куçса ларать. Кунти пассажирсене те Ельцинăн программи çинчен хăй пĕлнĕ, хăй ăнланнă пек каласа парать. Программине пичет çуртĕнче ĕçлекен пĕр журналист панăччĕ. Çынсемпе калаçнă чух кирлĕ пулать-ха тесе ăна Нина темиçе хут та вуласа тухрĕ. Пассажирсене агитацилеме те çав журналистах ыйтнăччĕ. Билет укçине саплаштарассине пĕлсен Нина хаваспах килĕшрĕ.

Хăш чухне пассажирсем калаçăва хăйсем те хутшăнаççĕ, тепĕр чухне вара шăппăн итлесе кăна лараççĕ. «Итлесе ларни те юрать, пурпĕрех мĕн те пулин асра тăрса юлать», — шухăшлать Нина. Раççейĕн пĕрремĕш президентне суйланакан çын халăх пурнăçне ырă улшăнусем илсе килес пирки Юманова хăй пачах та иккĕленмест. «Вăл влаçа килсен хура халăха лайăх пулать. Ельцин пирĕн пекех ахаль лавккасенче апат-çимĕç туянать, ахаль больницăсенче пирĕн пекех черет тăрса сипленет. Вăл — хамăр çын, халăхшăн тăрăшакан президент пулать.

Уншăн сасăласан ӳкĕнмелле пулмĕ. Пурнăç лайăх енне улшăнасси эсир хăвăр сассăра камшăн панинчен килет», — тет вăл хуларан яла, ялтан хулана куçакан халăха агитацилесе.

Суйлавра Ельцин çĕнтернине пĕлсен пĕрисем кулянчĕç, теприсем савăнчĕç. Юмановсемшĕн çакă шанăç çуратакан хыпар пулчĕ. «Ку çын çĕршывра йĕрке тăватех», — терĕç вĕсем. Ара, пурнăç арканса пыни лупа витĕр пăхмасăрах курăнать вĕт. Производствăра çеç мар, кирек ăçта та сисĕнет çакă. Вĕренӳ заведенийĕсенче те дисциплина япăхса кайнă иккен. Юмановсем хăйсем çырăнса илекен «Самана» хаçатра тĕлĕнтермĕш çырупа паллашрĕç. Чĕмпĕр облаçĕнче пурăнакан, Шупашкарти университетра вĕренекен Надежда студентка вулакансенчен пулăшу ыйтса çырнă. Çырăва малтан Нина ăшра вуласа тухрĕ. Шалт тĕлĕнсе кайнăскер упăшкине:

— Итле-ха, Аванти, мĕн хăтланаççĕ çамрăксем! Ай йĕксĕксем! — терĕ те студентка çырăвне сасăпа вуласа пачĕ.

«Пурнăç çапла арканса кайман пулсан алла ручка тытмастăмччĕ пулĕ. Тархасшăн, пулăшăр мана. Эпĕ аслă вĕренӳ заведенийĕнче пĕлӳ илетĕп. Пурăнма общежитие вырнаçтарчĕç. Инкек хама килсе çапиччен ĕненсех каймастăмччĕ ытти хĕрсем каласа панине. Пĕр-пĕр пӳлĕм алăкне арçын ачасем е хуларан килнĕ пуçтахсем урапа тăрслаттарса тапнине илтсен е курсан тантăшăмпа çапла шухăшлаттăмăр: хĕрĕсем хăйсем çавнашкал йăкăл-якăл, пуçтахсем çавăнпа çыпçăнаççĕ те вĕсем çумне. Хамăр хăрушлăха кĕрсе ӳксен тин ăнлантăмăр: общежити хулиганĕсем никама та, ниме те пăхса тăмаççĕ. Хĕрсене тапăнаççĕ, пусмăрлаççĕ. Никам та хута кĕрекен, чаракан çук. Алăк çĕмĕрсе кĕресси вĕсемшĕн ним те мар. Коридорта шăв-шав илтĕнсен часрах пӳлĕмри çутта сӳнтерсе шăпланса ларатпăр — никам та çук тесе иртсе кайччăр.

Общежитири секцисенче арçын ачасем те, хĕрачасем те пурăнаççĕ. Камăн каччă пур, вĕсем çумне сĕмсĕрсем çыпçăнмаççĕ. Камăн хӳтлĕх çук, вĕсене кирек кам та кӳрентерме пултарать.

Тантăшăмпа иксĕмĕр каччăсемпе çӳремен. Малтан вĕренсе тухар-ха, унтан çемье çавăрасси çинчен шухăшлăпăр. Юлашки вăхăтра пире пусмăрлассипе хăрата пуçларĕç. Хамăр паллакан арçын ачасемех. Каярахпа хăйсен юлташĕсене тĕллеттерсе яма пуçларĕç. Каçхине-и, кăнтăрла-и — пӳлĕмрен пĕччен тухма, пĕччен пырса кĕме хăрушă пулса çитрĕ. Мĕнле вĕренмелле-ха кун пек лару-тăрура?

Эпĕ — республика тулашĕнчен килнĕ çын. Шупашкарта ман паллакан-пĕлекен çынсем çук. Общежитире пурăнса пуçтахсен мăшкăлĕ пулас килмест. Вĕренме пăрахса çуралнă киле таврăнăттăм — аттеанне кăмăлне хуçас килмест. Пĕр вĕренме кĕнĕскер диплом иличчен чăтмаллах ĕнтĕ.

Хам тĕллĕн хваттер шыраса пăхрăм. Общежитирен мĕншĕн сивĕннине каласа парсан çынсем шелленçи пулаççĕ, анчах хваттере яма хăраççĕ. «Темле хĕр-ха эсĕ?» — теççĕ. Пурнăçĕ урăм-сурăм улшăнса кайнăран вĕсем никама та ĕненми пулса çитнĕ. Паян çынна шанакан çын та юлман-ши Шупашкарта? Пĕрпĕр вată кинемей мана кĕтес парас пулсан урай çусатирпейлесе тăрăттăм, апат-çимĕç туянма лавккана çӳрĕттĕм, пĕçерме те ӳркенместĕп. Хваттершĕн те тӳлĕттĕм. Лăпкă чунпа пырса кĕмелли, шарт сикмесĕр пурăнмалли кĕтес кăна пултăрччĕ. Хваттер тупма пулăшăр-ха, тархасшăн».

— Эпир вĕреннĕ чух института е университета чи пултаруллисем, аслă пĕлӳ илес тесе чăнласах тăрăшакансем, лекнĕ. Ытти шутĕр-мутĕр конкурс витĕр тухайман. Общежитири йĕрке те çав тери çирĕпчĕ, — терĕ Аванти. — Халĕ япăхсах кайнă иккен студентсен йышĕ. Ку хĕре питĕ пулăшас килет те... Пĕччен пурăнакан кинемейсене пĕлсех каймастăп.

— Ман анне патне ямалла мар-ши ӑна? Иксӗмӗр пӗрлешнӗренпе пӗчченех тунсӑхласа пурӑнать. Хӗрӗ тата хамӑр енчисемех. Тен, аннепе пӗр чӗлхе тупӗҫ, — шухӑшлӑн каларӗ Нина.

— Малтан аннепе калаҫса пӑх, тен, ют ҫынпа чӑрманас та темӗ.

— Паянах кайса калаҫатӑп.

Вера Терентьевна Чӗмпӗр тӑрӑхӗнчи хӗре хваттере яма хирӗҫ пулмарӗ. Унпа калаҫса килӗшнӗ хыҫҫӑн Нина редакцие васкарӗ: «Кайса пӗлес, тен, редакцире ӗҫлекенсем Надеждӑна халиччен хваттер тупса та панӑ?»

## Тӑххӑрмӗш сыпӑк

Редакцире Нинӑна Ангелина ятлӑ журналистка патне ячӗҫ. Надежда ҫырӑвне вӑл пичете хатӗрленӗ иккен, хваттер шырассине те вӑлах хӑй ҫине илнӗ.

— Ҫук-ха, хальлӗхе тупаймарӑмӑр, — пӗлтерчӗ Ангелина. — Каччӑсем кӑна: «Надя хваттер шырать, эпир арӑм шыратпӑр. Килтӗр — пӗр чӗлхе тупатпӑр», — тесе шӳтлесе шӑнкӑравлакаларӗҫ. Хулара пурӑнакан пӗр кинеми килсе кайрӗ. «Мана хваттер укҫи кирлӗ мар, ун вырӑнне ялтан пахча ҫимӗҫ, сӗт-ҫу илсе килсен аванччӗ», — тет. Ӑна та ӑнланма пулать: пурнӑҫ апат-ҫимӗҫрен хӗсӗнсе ҫитрӗ. Надеждӑн ашшӗпе амӑшӗ ялта пурӑнаççӗ, парӗччӗҫ апат-ҫимӗҫне, анчах илсе килме ҫулӗ инҫе. Ҫавӑнпа урӑх сӗнӳ пуласса кӗтетпӗр.

— Хӗрачи мӗнлескер? Кама вӗренет?

— Чӗмпӗр тӑрӑхӗнче чӑваш ялӗсем нумай, тӑван чӗлхене вӗрентекен учительница пуласшӑн. Хӑй питӗ сӑпайлӑскер.

— Чӑваш чӗлхине вӗрентесшӗн-и?

— Мӗншӗн тӗлӗнетӗр? Юлашки ҫулсенче наци юхӑмӗ вӑйланчӗ те, тӑван чӗлхене аталантарас шанӑҫ ӑранчӗ. Надежда педагог пулса ачасене вӗрентесшӗн.

— Ай маттур хĕрача. Ун пеккисене пулăшас та килет. Манăн анне пĕччен пурăнать. Хваттерĕ пĕр пӳлĕмлĕ кăна та — çитет иккĕшне. Çурчĕ хула варринче, библиотекăна çӳреме те, лекцие кайма та инçе мар. Тулĕк ман малтан хĕрачипе хăйĕнпе курса калаçасчĕ.

— Надя ыран кăнтăр апачĕ вăхăтĕнче редакцие кĕрсе тухатăп терĕ. Килĕр çав вăхăталла.

Надеждăна Вера Терентьевна патне хваттере вырнаçтарнă хыççăн Нинăпа Ангелина çывăхрах паллашрĕç те туслашсах кайрĕç. Халĕ Юманова редакцие пырсан тӳрех Ангелина патне кĕрет.

Куллен кирлĕ таварпа апат-çимĕçе халăх çаплах талонпа илет. Пĕр кунхине республика хаçачĕсенчен пĕринче Ряженков журналистăн статйи пичетленсе тухрĕ. Вăл парти обкомĕн дачинче пулса курнă иккен. Журналист обком буфетĕнче шăрттан касăкĕ хурса е вăлча сĕрсе бутербродсем сутни çинчен тăрăхса çырать. Обком çыннисем иртĕхсе пурăнаççĕ тесе вăрçать. Статья пысăк пăлхавах хускатаймарĕ, анчах вулакансене тĕлĕнтерчĕ. «Кур-ха, еплерех иртĕхеççĕ! Вĕсем валли вăлча сĕрнĕ бутерброд сутаççĕ!» — тесе тĕлĕнчĕç пĕрисем. «Демократсем еплерех хăюллă! Обком дачине те çитсе тĕрĕслесе тухнă. Вăт камсене памалла влаçа, туххăмрах йĕрке тăваççĕ», — терĕç теприсем. Виççĕмĕшĕсене çак демократсен виçесĕр сĕмсĕрлĕхĕ тĕлĕнтерчĕ: «Буфетра вăлча сĕрнĕ бутерброд туяннăшăнах айăплама хатĕр пулсан ку демократсем халăха влаçа хирĕç тăратма сăлтав кăна шыраççĕ пулас. Кам, мĕн вăй парса тăрать-ши вĕсене?»

Ряженковпа юлташĕсем кăларакан çĕнĕ хаçат самаях шăв-шав çĕклет. Паха хут çинче нумай тиражпа пичетленет вăл. Ăна икĕ тенкĕпех туянма пулать. Ку тӳлевсĕр илнипе танах. Хаçата таçта мурта регистрациленĕ «Ось» фирма кăларать. Тăкакне кам саплаштарать — куна никам та пĕлмест. Пĕрисем

каланă тăрăх, Америкăри çĕрме пуян Сорос Раççейре демократи тăвас шутпа пулăшать. Вăлах вĕрентӳ программисене çĕнетме те укçа уйăрса парать имĕш. Хайхи хаçат вĕçĕмсĕрех критикăллă статьясем пичетлет. Те тĕрĕс унти фактсем, те суя, те çурма суя — никам та пĕлмест. Çити-çитми пурăнакан халăха тарăхтарма вара нумай та кирлĕ мар. Ĕмĕртенпе чăваш кĕнекисене пичетленĕ типографие хайхи «Ось» фирмăна парасси çинчен сас-хура тухсан чăваш писателĕсем карах çĕкленчĕç, çине-çинех пухусем ирттерчĕç. Парăнчĕç влаçрисем, типографи ют алла куçмарĕ.

Ряженкова Ангелина та паллать. Пĕррехинче столовăйне апат çиме ансан черетре иккĕшĕн юнашарах тăма лекрĕ.

— Вçо! Компартин шутлă кунсем юлчĕç. Кăçалхи кĕркунне пĕтсе ларать вăл, — хавасланса калаçрĕ Ряженков. — Шăпи тулать.

— Эсĕ ăçтан пĕлетĕн?

— Пĕлетĕп, — кĕскен çеç хуравларĕ лешĕ, унтан тута хĕррипе чеен кулса илчĕ.

Çак саманта Ангелина кайран, Раççей президентне суйланнă Ельцин компартин ĕçне чарса лартсан, аса илчĕ: «Тепĕр çур çултан мĕн пулассине Ряженков ăçтан пĕлсе тăнă-ха? Çак синкерлĕ саманан та режиссерĕсем пур-ши вара?»

Унччен кăшт маларах, август уйăхĕнче, Мускавра пĕтĕм çĕршыв пурнăçне арăш-пирĕш пăтратса янă пăлхав пулса иртрĕ. Уяр кунра аçа çапнă пек пулчĕ вăл хыпар: халăх пурнăçне ырă енне улăштарма пултарайман Горбачева партири юлташĕсемех вырăнтан кăларма хăтланнă, ăна тинĕс хĕрринчи тин туса лартнă чаплă керменĕнче хупса хунă. Влаçа саккуна пăсса туртса илесшĕн тесе демократсем вĕсене хирĕç çĕкленнĕ. Демократие хӳтĕлеме Шупашкартан та каякансем пулнă тет. Камсем кайнă — куна Ангелина калама пултараймасть, çав ушкăнра Юмановсемпе пĕр урамра пурăнакан Макаровсен хĕрĕ,

ниҫта та ӗҫлеменскер, митингсемпе пикетсем тӑрӑх ҫӳреме юратаканскер, пулнине пӗлет. Кун пирки ӑна Нина Петривановна каласа панӑччӗ. Шурӑ ҫурт умӗнчи лаптӑкра палаткӑра пурӑннӑ иккен демократие хӳтӗлекенсем. Хӗрачине ҫавӑнта ҫити кӑларса яма ашшӗ-амӑшӗ мӗнле хӑраман-ха тесен Нина Петривановна ӑна хӑй мӗн пӗлнине каласа пачӗ. Чиперех ҫаврӑнса килнӗ иккен Макаровсен хӗрӗ. Ни шӑнса, ни выҫса вилмен. Апат-ҫимӗҫрен татӑк тӑратман тет вӗсене. Хӑйсем те митинга пынисем валли чей вӗретнӗ, бутербродсем хатӗрленӗ ҫӗрте ӗҫленӗ. Халӑхӗ шутсӑр нумай пулсан та куҫса ҫӳрекен столовӑйсем кунне икӗ хут та вӗри апат ҫитернӗ тет. Юманова ҫав хӗре хӑюлӑхшӑн мухтаса та илчӗ.

Ангелина шарламарӗ. Ҫав хӑрушӑ кунсене унӑн аса та илес килмест. Мускаври пӑлхав хыҫҫӑн вӗсен хаҫатне те хӑйсене перестройка прорабӗ текенсем ярса илнӗ. Саккунлах тунӑ евӗр курӑнтӑр тесе пуху пекки ирттеренҫи тунӑ. Ангелина отпускраччӗ те — ӑна никам та чӗнмен, хирӗҫ калаҫакан ан пултӑр тенӗ пуль. Сас-хура пухса ҫӳрекен, пӗли-пӗлми янрашма юратакан Фая ача ҫуратма вӑрӑм отпуска кайнӑччӗ. Ҫавна та машинӑпах лартса пынӑ тет. Ах, ҫунтарчӗ тет лешӗ малтанхи редактора, ах, питлерӗ тет. Пуху пирки черетлӗ канӑва кайнӑ тӗп редактора та систересшӗн пулман иккен, лешӗ ӑнсӑртран пырса тухать те — хӑйне редактортан кӑларма ятарласах йӗркеленӗ пухӑва лекет. Хаҫат пӗр кунтах демократсен аллине куҫрӗ, митингсенче сурчӑк сирпӗтсе кӑшкӑракансем валли алӑка яриех уҫса хучӗ. Тӗрӗссипе каласан, редакцири «демократсем» те коммунистсемехчӗ-ха. Ҫил ӑҫталла вӗрнине сисрӗҫ пулас та, йӑпӑр-япӑрах урӑх ялав айне куҫса тӑчӗҫ. Хальлӗхе халӑх ырлӑхӗшӗн мар, хӑйсем валли ӑшӑ вырӑн тӑвассишӗн ҫине тӑраҫҫӗ.

Ҫӗнӗ хуҫа редактор ҫумӗсене, пай пуҫлӑхӗсене пурне те улӑштарчӗ, вӗсем вырӑнне хӑйӗн майлӑ ҫап-

таракансене лартса тухрĕ. Вĕсенчен пĕри — Щукин. Пултарулăхĕпе нихăçан та палăрса тăманскер, халĕ вăл — тĕп редакторăн иккĕмĕш çумĕ. Лаша хӳри пек тӳрĕ çӳçне бигуди лартса кăтралатакан çак арçын уççăнлăх текен самана пуçлансанах малтанхи редактора тапăнма пуçланăччĕ. Те хăюлăхне кăтартасшăнччĕ вăл, те хăй пуçлăха тухасшăнччĕ, планеркăсенче тĕп редактора: «Тĕрлĕ канашлусене служба машинипе мар, троллейбуспа çӳремелле, укçана перекетлемелле», — тесе асăрхаттаратчĕ. Хаçат ĕçĕн çĕр-çĕр ыйтăвĕпе тĕрлĕ организацие, мероприятие çитекен тĕп редактор пĕр уйăхра машинăпа миçе çухрăм тунине те шутласа пĕлнĕччĕ Щукин. «Бензин укçине редактортан хăйĕнчен шыраса илмелле, иртĕхме памалла мар!» — тесе ыйту çĕклерĕ пĕр планеркăра. «Троллейбуспа çӳресен унăн редакцилеме вăхăчĕ те юлмасть вĕт, — хута кĕчĕç хаçатра нумай çул ĕçлекенсем. — Тата... Редакци машинипе хунькассине каймасть вĕт вăл. Кирлĕ ыйтупа советсен çуртне е обкома çитсе килни служба вырăнĕпе усă курса иртĕхни пулать-и вара?»

Çĕн редактор коридорта е кабинетсенче виççĕнтăваттăн пухăнса калаçма чарнă иккен. Отпускран тухнă Ангелина, çакна пĕлменскер, редакцири улшăнусене пĕлес тесе хăйĕнпе юлташлă хĕрарăм патне кĕнĕччĕ. Пилĕк минут та калаçаймарĕç, Ангелинăна тĕп редактор чĕнни çинчен пĕлтерчĕç. Кайрĕ Ангелина хуçа пӳлĕмне, унтан ним айăпсăрах тип мунча кĕрсе тухрĕ. Ĕçтешĕсен кăмăлне пăтратса çӳрет имĕш вăл, çынсене çĕнĕ пуçлăха хирĕç тăратасшăн. Кам элекĕпе ят илтнине сисрĕ-ха Ангелина. Коридорта ăна редакцие килекен тӳлевлĕ пĕлтерӳсемшĕн квитанци çырса паракан хĕрарăм курчĕ. Апла тăк редактора суя сăмахпа хĕртсе яраканни те вăлах пулнă. Куç умĕнче йăпăлтатса, куç хыçĕнче çынна çисе калаçаканскерĕн çавăн пек юрăхсăр йăла пуррине Ангелина тахçанах сиснĕ. Малтанхи редактор

ун йышши çынсене итлесе тӑмастчӗ. Çӗннине вара йытӑ пек шӑршласа, сыхласа çӳрекенсем, юраса тӑракансем питӗ килӗшеççӗ курӑнать.

Çыннисем çавсемех пулин те коллектив та, вӑл кӑларса тӑракан хаçат та улшӑнчӗç. Икке пайланчӗ журналистсен ушкӑнӗ: хӑйсене демократ шутне кӗртекенсем тата парти билечӗсене кӑларса пӑрахманнисем. Иккӗмӗш ушкӑнрисене хаçат страницисенче политика ыйтӑвӗсемпе хӑйсен шухӑшне калама ырӑн памаççӗ, планеркӑсенче те питех çӑвар уçтармаççӗ. Коммунистсене хӳтӗлесе виç сӑмах каласанах редакцие вырнаçиччен маларах комсомол райкомӗнче ӗçленӗ Сивруков хар-р! кӑшкӑрса тӑкать. Эрех ӗçсе килӗнче харкашнӑшӑн пӗр-ик çул каялла парти пухӑвӗнче сӳтсе явнӑччӗ ӑна. Хӑйне юлташла асӑрхаттарнӑ çынсене çавӑнтанпах шӑл хӑйраса пурӑнатчӗ. Тинех çитрӗ таварӑ вӑхӑчӗ. Халӗ вӑл — тӗп редакторӑн пӗрремӗш çумӗ, чи асли мар пулсан та — хуçа. Хаçата камсен материалӗсене вырнаçтарассине, гонорар мӗн чухлӗ лартассине вӑл татса паратъ. Нумаях пулмасть парти пухӑвӗсенче юнашар ларнӑ çынсенех паян вӑл коммунист тесе хӑртать. Чӗнмеççӗ çыравçӑсем, чун ыратсан та чӑтаççӗ. Ку саманара тӗрӗслӗх пирки ӗмӗтленмелли те çук.

Редакци йышӗнче килӗшӳ те çураçу юлмарӗ. Пусӑрӑнчӗç çынсем. Çапах та тӳсӗмлӗх чикӗсӗр мар. Ватӑ журналистсенчен пӗри чӑтса тӑраймарӗ пӗррехинче, тӳррӗнех çапла каласа хучӗ:

— Унччен пӗрмаях тӗрлӗшухӑшлӑх кирлӗ тесе шавлаттӑр. Халӗ мӗншӗн тӗрлӗ шухӑш калакан çынсене сӑмах памастӑр?

— Паянхи хаçата уçса вуламан-им эсӗ? — тӳрех пӳлчӗ ӑна Сивруков. — «Дайджест» рубрика пур унта. «Правда» хаçатра пичетленнӗ статьяна та илсе панӑ. Тӗрӗссипе, коммунистсен кӑларӑмне кӗртмелле те мар хамӑр хаçата. Эпир вара ӑна куçарса пичетлесе чыс тӑватпӑр. Ку вара тӗрлӗшухӑшлӑх мар-и?

Планеркăран таврăнсан Ангелина юриех вуласа тухрĕ «Правда» хаçатран илсе пичетленĕ пысăках мар информацие. «Мускавра, Художниксен çурчĕ хыçĕнче, иртен пуçласа каçчен халăх йышлă. Мĕн курмалли пур кунта? Инçе те мар курăк çинче постамент çинчен çапса антарнă Дзержинский хăйĕн пăхăр сăнпичĕпе тӳпенелле тинкерет. Юнашарах — таçтан туртса кăларнă урасăр Сталин, çавăн пекех хăйсем «пурăнакан вырăна улăштарнă» Свердловпа Калинин скульптурисем йăваланса выртаççĕ, — тенĕ çав хыпарта. — Хальлĕхе çулпуçсен купи умĕнче урăх çĕршывсен çыннисем ытларах. Вĕсемшĕн çакă — нихçан курман тĕлĕнтермĕш. Вĕсен йăлтах урăхла. Мĕншĕн тесен вĕсем хăйсен историне хисеплеме пĕлеççĕ».

— Иртнĕ саманана хур тăвассишĕнех куçарса пичетленĕ куна. Çакă вара тĕрлĕшухăшлăх пулать-и? Халăх ăс-тăнне йăлтах арпаштарса ячĕç иккен, — хăй тĕллĕн калаçса илчĕ Ангелина. — Кама кирлĕ палăксемпе çапăçни?

Ĕç кунĕ вĕçленес умĕн Ангелина йышăну пӳлĕмне кĕчĕ. Унăн ыран командировкăна каймалла.

— Сана валли командировка хучĕ çапса хатĕрленĕ. Акă ил те редактор патне кĕрсе алă пустар, — терĕ секретарша ун енне удостоверени тăсса. Ангелина редактор алăкне шаккарĕ те ăна уçса шалалла ярса пусрĕ. Кĕрсе тăчĕ те тĕлĕннипе шак хытрĕ. Куçĕ умне халиччен нихăçан та курман ӳкерчĕк тухса тăчĕ. Ирсерен планерка иртттерекен вăрăм сĕтелĕн ку вĕçĕнче Сивруковпа çĕнĕ редактор тата Ангелина палламан тепĕр арçын эрех ĕçсе лараççĕ. Вĕсем умĕнче — пуçланă кĕленче, стакансем, кăлпассипе çăкăр касса хунă турилккесем.

— Мĕнле ыйтупаччĕ? — сиввĕн ыйтрĕ пуçлăх.

Ангелина ним чĕнмесĕр командировка хутне тăсса пачĕ. Редактор ĕçкĕ сĕтелĕ хушшинчен тухса хăйĕн уйрăм ларакан сĕтелĕ патне пычĕ, удостоверени çине алă пусрĕ те Ангелинăна тавăрса пачĕ.

Редактор пуканне йышăннăранпа нумай та вăхăт иртмерĕ, çĕнĕ пуçлăх çĕнĕ устав хатĕрлерĕ. Вăл тĕп редактор пуканĕпех çырлахас çуккине, ахаль журналистсенчен вунă хут пысăкрах шалу илес шутлине хаçатçăсем пĕлмеççĕ-ха.

«Самана» хаçатра пачах урăх самана пуçланчĕ.

## Вуннăмĕш сыпăк

Чунра канлĕх çук пулин те, çынсем пурпĕрех шанăçа çухатмаççĕ-ха, çаплах ырă улшăнусем пуласса кĕтме пăрахмаççĕ. Тен, республика президентне суйланă хыççăн пурнăç лайăхланĕ? Тĕрлĕ партисемпе юхăмсен кандидачĕсем тăваттăн. Нинăпа Аванти чăвашлăхшăн çине тăрса кĕрешекен кандидат майлă агитацилесе çӳрерĕç. Пĕрремĕш тапхăрта ыйту татăлман пирки суйлавăн иккĕмĕш турне иртересси çинчен пĕлтерчĕç. Кĕрешӳ тата ытларах çивĕчленчĕ. Шел, Нинăпа Аванти шанса тăнă кандидат ыттисенчен ытларах сасă пухса та президента суйланаймарĕ, мĕншĕн тесен ăна хирĕçлекенсем майлă сасăлакансенчен ытларах иккен. Ку вара саккунпа килĕшсе тăмасть. Республика икĕ тапхăр суйлав иртерсе те хăйĕн президентне суйлаймарĕ.

Пăтранчăк самана халиччен политикăпа нихăçан та интересленмен çынсене те çĕршыври, республикăри лару-тăру çинчен калаçтарать. Халăх шиклĕн пурăнать. Темрен тем сиксе ан тухтăрччĕ тесе çынсем ирпе тăрсанах радио е телевизор яраççĕ, çĕнĕ хаçатсене уçса пăхаççĕ. Ырă хыпарĕсем çукпа пĕрех, усаллисем вара тупăнсах тăраççĕ. Фронтра пулнă сăвăç Юлия Друнина хăй çине алă хуни çинчен калакан хыпара нумайăшĕ асăрхамасăрах юлчĕ пулĕ. Çĕр тĕрлĕ усал хыпар çинче мĕн вăл пĕр çын шăпи?.. Юмановсем вара çак хыпара илтсен çав тери кулянчĕç. Аванти хăй те, унăн ашшĕ те çав тери юрататчĕç Друнина сăввисене.

«Я только раз видала рукопашный,
Раз — наяву и тысячу — во сне.
Кто говорит, что на войне не страшно,
Тот ничего не знает о войне», —

текен йӗркесене, Друнина вӑрҫӑ ҫинчен ҫырнӑ ытти хӑш-пӗр сӑвва Аванти пӑхмасӑрах пӗлет. Ҫӗршыва нимӗҫ фашисчӗсенчен хӳтӗлесе юн тӑкнӑ сӑвӑҫ хальхи хаҫат-журналта совет ҫарне пылчӑкпа вараланине, Раҫҫей юхӑнса, халӑхӗ мӗскӗне тухса пынине курса тӑма хал ҫитереймен иккен. Вилес умӗн вӑл:

«Как летит под откос Россия,
Не могу, не хочу смотреть», —

тесе ҫырса хӑварнӑ тет. Тӑван ҫӗршыва ҫав тери юратнӑ талантлӑ сӑвӑҫ пурнӑҫран уйӑлнӑшӑн Юмановсем чылай вӑхӑт кулянса пурӑнчӗҫ. Ҫак йӗркесене аса илтернӗнех тата кашни каҫ телевизорпа ҫӗнӗ хыпарсем парас умӗн кӳлмен, ҫӑварлӑхламан лашасем кӗҫенсе, ӗрӗхсе чупнине кӑтартаҫҫӗ. Вӗсем экран ҫине тухсан пӗлсех тӑр: ҫӗнӗ хыпарсен ярӑмӗ пуҫланать. Тулӗк ырӑ хыпарӗсем ҫукпа пӗрех.

— Ытла та интереслӗ тапхӑрта пурӑнатпӑр халь эпир, — терӗ пӗр кунхине урамран кӗнӗ Нина.

— Тата тем сиксе тухнӑ-им? — тӳрех сисчӗвленчӗ Аванти.

— Чӑваш писателӗсем ҫӗнӗ союз йӗркеленӗ.

— Ан тӗлӗнтер-ха. Малтанхи пӗрлешӳре мӗн ҫитмен вара вӗсене?

— Те чӗрӗлӗх ҫитмен, те пӗрлӗх. Кам пӗлет вӗсене?

Юмановсем юнашар ларсах вуларӗҫ «Пучах» хаҫатра мӗн ҫырнине. Унта ҫыравҫӑсен йӗркелӳ пухӑвӗн отчетне пичетленӗ. Тухса калаҫакансен сӑмахӗсемпе паллашсан ҫакӑ уҫҫӑн курӑнать: ҫӗнӗ пӗрлешӗве малтанхи союз ӗҫӗпе кӑмӑлсӑррисем пуҫтарӑннӑ. Пултарулӑх ҫыннисем хушшинче килӗшӳ ҫукки тахҫанах сисӗнетчӗ-ха. Пӗр-пӗрне ӑмсанасси, вӑрттӑн ура хурасси пурччӗ. Ачасем валли нумай ҫыракан пӗр

автора малтан республика тулашӗнче пурӑннӑран писательсен союзне илмен иккен, кайран, вӑл ҫемйипе кунта куҫса килсен, ватӑ тесе ушкӑна кӗртмен. Тепри каланӑ тӑрӑх, малтанхи союзра правлени членӗсем хӑйсен кӗнекисене ытларах кӑлараҫҫӗ имӗш, ыттисемшӗн издательство планне кӗресси ҫав тери йывӑр. «Ҫӗнӗ союзра кивӗллех ӗҫлес марччӗ, ертӳҫӗсен издательствӑна хӑйсен кӗнекисене кӑна сӗтӗрес марччӗ, — тесе асӑрхаттараҫҫӗ ҫӗнӗ пӗрлешӗве йӗркелеме хутшӑнакансем. — Сӑмах ирӗклӗхне сыхлама, автор прависене хӳтӗлеме, пӗр-пӗрне пулӑшма ҫӗнӗ союз кирлӗ», — теҫҫӗ.

Халиччен пулманни — пӗр союз пур ҫинчех теприне туса хуни — ӳнерҫӗсене те, журналистсене те, ытти пултарулӑх интеллигенцине те кӑсӑклантарать иккен. Мӗтри Мӑньял краевед шучӗпе, халиччен писательсене пурне те пӗр пек урапа ҫинче ярӑнтарнӑ, ҫавӑнпа тепӗр союз йӗркелени кирлӗ. Паллӑ ӳнерҫӗ Марье Митти ҫыравҫӑсенчен тӗслӗх илсе художниксен тепӗр союзне йӗркелес шут пуррине пӗлтернӗ. «Икӗ союз — инкек мар, — тенӗ пухӑннисем. — Икӗ союзӑн малашне пӗр-пӗринпе килӗштерсе ӗҫлемелле, ҫыравҫӑсене ҫӗнӗ йыша ҫӑмӑллӑн илсе пӗрлешӗве ҫӳп-ҫаппа тултармалла мар».

— Писательсен ҫеҫ мар, ӳнерҫӗсен те пӗрлӗх ҫук иккен. Вӗсем те пайланасшӑн, — терӗ Аванти Нина хӑйне хаҫатри хыпарсемпе паллаштарнӑ хыҫҫӑн. — Ҫыравҫӑсем икӗ союза пӗр литература фончӗ пӗрлештерсе тӑрасса шанаҫҫӗ. Темле ҫав... Укҫа кама та пулин туслаштарнине илтмен-ха халиччен. Пурлӑх пайласа пӗртӑвансем те тӑшман пулса тӑнине пӗрре мар курнӑ. Ахальтен-им Константин Иванов: «Укҫапала эрехех ҫынна ӑсран кӑларать», — тесе ҫырнӑ.

— Тӳрех япӑххине ан шутла-ха эс. Пурте чиперех пулать акӑ, — хирӗҫлерӗ ӑна Нина. — «Эткер» ятлӑ ҫӗнӗ литература журналӗ те кӑларасшӑн-ха вӗсем. Ҫав пухурах редколлеги членӗсене те суйланӑ.

Апла тăк çĕнĕ союзăн литература журналне çывăх вăхăтра алла илсе вулăпăр. «Ялавпа» «Тăван Атăл», «Капкăн» пур, «Çилçунат» тухать, малашне «Эткер» журнал та пулать. Ку япăх-и вара? — терĕ Нина. — Писательсем валли тата тепĕр çул уçăлать.

— Тен, савăнмалли те çав журнал кăна пулĕ?.. Пурăнсан курăпăр.

Пурнăç малалла та кукăр-макăр çулпах чуптарчĕ. Çав çулхинех халиччен пĕр йышра пулнă республикăсен нихăçан та арканми союзĕ саланчĕ.

Пăлхавлă, хирĕçӳллĕ, аркатуллă 1991 çул вĕçленсе пырать. Тепĕр икĕ кунтан Упăте çулталăкĕ пуçланать. Паян, вырсарникун, Ельцин питĕ пĕлтерĕшлĕ сăмах каласси çинчен малтанах хыпарланăччĕ те, палăртнă сехетре Авантипе Нина телевизор умне вырнаçса ларчĕç.

Раççей президенчĕ çĕнĕ çулта кăрлачăн иккĕмĕшĕнчен хаксене ирĕке ярасси, приватизаци ирттересси çинчен калама пуçларĕ. «Тем тĕрлĕ вариант та шыраса пăхрăмăр, урăхла май çук, — тет вăл. — Кунпа пĕрлех пирĕн задача çакă пулать: Раççей пуянлăхĕ шутланаканнине патшалăх аллинчен вĕçертме юрамасть. Çĕр айĕнчи пуянлăхсене, вăрмансене, шыв ресурсĕсене, заповедниксене, историпе культура объекчĕсене, художество пуянлăхĕсене, укçа-тенке патшалăх тытса тăрассине, ылтăн запасне, валюта фончĕсене, хĕç-пăшаллă вăйсен пурлăхне тата пурнăç шайне тытса тăмашкăн кирлĕ энергетикăн, транспортăн, çыхăну предприятийĕсен тата учрежденийĕсен пысăкрах пайне кирек мĕнле пулсан та приватизацилемелле мар. Пире йывăр пулать, анчах çак тапхăр нумай вăхăта пырас çук. Сăмах ултăсакăр уйăх пирки пырать. Çак вăхăтра тӳсĕмлĕ пулни кирлĕ», — терĕ Ельцин.

— Ултă е сакăр уйăха кăна чăтма пулĕ-ха ăна. Мĕнле те пулин пурăнкалăпăр çур çула, — терĕ Аванти президент хăй сăмахне вĕçленĕ хыççăн.

— Тӳрех хăраса ӳкес мар-ха. Хакĕсем те тăрукках нумай ӳссе каймалла мар терĕ вĕт, — те хăйне, те мăшăрне лăплантарса каларĕ Нина. — Перекетлĕрех пурăнма тивет. Пенси пысăк мар та — пахча çăлать. Хамăра мĕн кирлине акса-лартса тăвăпăр. Юлашки вăхăтра пĕрмаях шок терапийĕ çинчен калаççĕ. Ăна мĕнпе пуçса çимеллине кĕçех курăпăр акă. Нумаях юлмарĕ кĕтмелли.

— Ан хăра. Хаксем ытлашшиех ӳссе каймĕç-ха. Раççей президенчĕ хăй çине яваплăх илчĕ: хаксем виçĕ-тăвать хутран ытла ӳссе кайсан рельс урлă выртатăп терĕ. Кунтан çирĕпрех сăмах пулма пултарать-и? Эп ăна шанатăп, ĕненетĕп, — терĕ Аванти.

Çĕнĕ çула Юмановсем холодильникра, нӳхрепре мĕн пуррипе кĕтсе илчĕç. Кăрлачăн иккĕмĕшĕнче Нина курмалла-уçăлмалла тенĕ пек лавккана тухса кĕме шутларĕ.

— Çăкăр туянмалла, сахăр, çу пĕтнĕпе пĕрех. Кайса çаврăнса килем-ха çывăхри лавккана, — тесе килĕнчен тухрĕ.

Нумай тăмарĕ вăл, ахлатса та охлатса каялла таврăнчĕ. Сĕтел çине пĕр пачка сахăр, пĕр катăк хуçалăх супăнĕ кăларса хучĕ.

— Тĕлĕннипе лавккара çăвар карăлса кайрĕ те, халь те хупаймастăп, — терĕ Нина сывлăш çавăрса ярса. — Унти хаксене курсан тăн çухатма пулать.

— Ан хăрат-ха. Аплах мар пуль, — диван çинчен тăрса сĕтел патнелле утрĕ Аванти. — Мĕн илсе килтĕн лавккаран?

— Акă пĕр кило сахăр туянтăм. Пĕлтĕр эпир ăна тăхăрвунă пуспа илнĕ, халĕ вăл вунпĕр тенкĕ тăрать. Пĕр катăк супăнь илес терĕм, талонсăрах параççĕ. Хакĕ — вунтăхăр тенкĕ. Унччен маларах тенкĕ те тăман япаласем паян пурте виçесĕр хакланса кайнă. Урăх ман ним илме те укçа çитес çукчĕ. Кăлпасси вăтăр тенкĕ ытла тăрать, çу — сакăрвун тенке яхăн, аш хĕрĕх икĕ тенкĕччĕ пулас... Хăйма утмăл сакăр

тенкĕ тăрать — никам та илмест. Ай тур çырлах! Мĕнле пурăнăпăр капла?

Хаксем пĕр каçрах çапла хăрушла ӳссе кайни Авантие те анратса ӳкерчĕ пулас, анчах вăл çакна кăтартасшăн пулмарĕ.

— Мирпе пĕрле аптăрамăпăр-ха. Ельцин кун пек йывăр тапхăр ултă-сакăр уйăхран ытла пулмалла мар тесе шантарчĕ вĕт. Чăтăпăр-ха мĕнле те пулин, — текелерĕ вăл. — Пурăна киле хаксем чакĕç акă. Урăхла май çукран çапла тăваççĕ пуль ĕнтĕ.

Çакăн пек арăш-пирĕш вăхăтра та çынсем малашлăх пирки шухăшлаççĕ, республика гимнĕ мĕнле пулмалли пирки тавлашаççĕ. Хаçатсенче конкурс та ирттерсе пăхрĕç, юрăхлă сăвă тупаймарĕç. Пулă курманнине шӳрпи те юрать тенешкел, Илле Тукташ сăввине унтан-кунтан улăштаркаласа гимн тума сĕнчĕç. Нумайăшне килĕшмерĕ çак шухăш. «Тукташ сăвви наци гимнĕ пулма пултарать те пулĕ. Анчах наци гимнĕпе патшалăх гимнне пăтраштармалла мар. Тукташ сăввине гимн тума текстра уявлăх тĕп вырăнта тăни чăрмантарать. Пашалăх гимнĕ вара уявра çеç мар, хурлăхлă самантсенче те янăраса халăха пĕрлештермелле, вăй памалла. Сăмахран, пĕр-пĕр паттăрла ĕç туса вилнĕ çынна пытарнă чух Тукташ сăввинчен тунă гимна янăратни вырăнлă пулĕ-ши?» — тесе асăрхаттарчĕç музыковедсем, конкурса малалла тăсма сĕнчĕç.

Гимн валли юрăхлă сăвă çырма пултаракан автор тупăнмарĕ, вара Илле Тукташпа Герман Лебедев çурхи тĕнчене мухтаса çырнă «Тăван çĕршыв» юррăн сăввине вырăнăн-вырăнăн тӳрлеткелерĕç те, вăл Чăваш Республикин патшалăх гимнĕ пулса тăчĕ. Гимнпа пĕрле Чăваш Республикин Аслă совечĕ патшалăхăн ытти символĕсене те — республика ялавне тата гербне — çирĕплетсе хăварчĕ.

Выçă пурăнатăн-и, тутă-и, макăратăн-и, кулатăн-и — вăхăт малаллах шăвать. Çулталăк асаплăн

иртрӗ. 1993 ҫул тата хӑрушӑрах ӗҫсемпе, канӑҫсӑр кунсемпе асра тӑрса юлчӗ. Хӑйне хирӗҫ тӑнӑ парламента Раҫҫей президенчӗ хӗҫ-пӑшалтан персех салатрӗ. Темиҫе кун тӗтӗм-сӗрӗм мӑкӑрланчӗ Шурӑ ҫурт ҫийӗн. Юмановсем те телевизор сӳнтермерӗҫ ҫак кунсенче. Пӑхса ӑша ҫунтарса ларни ҫеҫ те ҫав, тӗп хулара мӗн пулса иртнине пӗлмесӗр пурӑнасси тата йывӑртарах. Пӗр кунхине радио ячӗ те Нина — тарӑхнипе чутах ҫурӑлса каятчӗ. Раҫҫей радио журналисчӗ такама арҫынпа хӗрарӑм хушшинчи савӑшусем, вырӑн ҫинчи тӗрлӗрен меслетсем ҫинчен калаҫтарать иккен.

— Радио пуҫу! Тытатӑп та ҫавӑрса ҫапатӑп акӑ! — тарӑхсах каласа хучӗ Нина. Унтан приемника юрӑхсӑра кӑларнипе ним усси те пулас ҫуккине ӑнланса хӑйне алла илчӗ те радиона чарса лартрӗ. — Намӑссӑрсем! Тупнӑ халӑха илӗртмелли калаҫу! Йытӑсем!

Юмановсене ҫеҫ мар, пӗтӗм халӑха кулянтарчӗҫ Мускаври хирӗҫтӑруллӑ кунсем. Тата мӗнпе тӗнчене тӗлӗнтерӗ-ши ӗнтӗ Раҫҫей? Ҫакӑн хыҫҫӑн Нина приемника радио чӑвашла калаҫнӑ чух ҫеҫ яма пуҫларӗ. Ҫӗршыври лару-тӑру темле йывӑрланса ҫитсен те Шупашкарти радио хыпарсене лӑпкӑн пӗлтерсе тӑчӗ, ҫынсене пӗр-пӗринпе хирӗҫтерекен, тарӑхтаракан передачӑсем кӑлармарӗ. Пачах урӑхла, чи йывӑр самантсенче тӑванлӑх юррисем, халиччен янӑраманнисем, эфира туха пуҫларӗҫ. Ыратса тӑракан чунсемшӗн сиплӗ эмел пек пулчӗҫ вӗсем.

Нина Муркашран таврӑнать. Юрать-ха, автобус умне маларах ҫитсе тӑчӗ. Атту ним тусан та лараяс ҫук, туяннӑ билетупах перрон ҫинче тӑрса юлатӑн. Пысӑках мар автобус туххӑмрах тулса ларчӗ.

— Шуҫӑр варринелле! Шуҫӑр, шуҫӑр! Сирӗн каймалла та, ыттисен юлмалла-и? — хыттӑнах ятлаҫаҫҫӗ лӑк тулса ларнӑ автобус алӑкӗнчен шалалла хӗсӗнекенсем. Халӑхӗ вара мӑкӑртата-мӑкӑртата хускаланҫи тӑвать те ҫав вырӑнтах тӑрать.

— Хыҫаларахра пушӑ вырӑн нумай вӗт. Ма куҫмастӑр ҫак? Якорь яман пуль, — вӑйпах хире пуҫларӗ хӑюллӑраххисенчен пӗри.

— Ну, мӗн чышкалан ӗнтӗ? Хыҫра та пуш вырӑн ҫук, пушӑ пек курӑнать кӑна. Унта туллиех кутамкка та михӗ, сумка. Мӗн, выртас-и-ха ман вӗсем ҫине? — янӑраша пуҫларӗ ун умӗнче тӑраканни.

— Шуйттан майрисем! Пысӑк миххи-кутамккисемпе кунӗн-ҫӗрӗн унталла та кунталла кумаҫҫӗ. Хулара спекуляци туни сахал, яла та ҫитрӗҫ. Ӗҫлемесӗр пуяҫҫӗ! — илтӗнчӗ тарӑхуллӑ сасӑ алӑк патӗнчен.

— Эс те пуйса пӑх-ха, кам чарать сана? Ҫак сумкӑсемпе михӗсене ыр пурнӑҫран сӗтӗретпӗр тетӗним? Нуша хӑвалать, — хирӗҫ таварчӗ мӑн сумка хыҫӗнчен курӑнакан пуҫ.

— Нушаллӑ пулсан хаклӑ тир-сӑранран ҫӗленӗ пальтопа купарчуна тарлаттарса ларман пулӑттӑнха. Укҫасӑр ҫын ҫапла капӑр тӑхӑнаймасть. Хула майрисем вӗсем ҫӗнӗрен ҫӗнӗ япала туянаҫҫӗ. Ялти ҫыннӑн темиҫе ҫулта пӗрре ыр пальто е ҫӗлӗк илес тесен те хӗл каҫнӑ вӑкӑр сутмалла, — тавлашӑва хутшӑнчӗ тата тепри.

— Сирӗн вӑкӑр пур-ха сутма, сысна усрама пулать, — парӑнмасть хула майри. — Хула ҫыннин вара холодильникӗ пушӑ пулсан хырӑмӗ те пушӑ.

— Эс усраса кур-ха выльӑх, шыҫӑнса кайиччен ҫывӑрнипе пулмасть вӑл. Ялта пӗр канлӗх курмастпӑр вӗт. Тата выльӑх тӑрантма укҫа кирлӗ мар тетним? Мӗн чухлӗ утӑ-улӑм, кӑшман, ҫӑнӑх, комбикорм хатӗрлемелле. Хӑй хакне выльӑх пусса сутиччен ҫисе ярать. Пусса та, сутса та тупӑш тӑваймастӑн.

— Ял ҫынни тупӑшне тӑваймасан та выҫӑ лармасть. Хула ҫынни вара бесплатнӑ ӗҫлеме пуҫларӗ те — хӑш чух ҫӑкӑр илме те укҫа ҫук. Рабочисем виҫшер уйӑх, ҫуршар ҫул ӗҫ укҫи илеймеҫҫӗ.

Автобусри ҫынсен тавлашӑвне Нина шӑппӑн итлесе пырать. Сасартӑк ӑна хӑй Ельциншӑн сасӑла-

ма чӗнсе автобусран автобуса куҫса ҫӳрени аса килчӗ. «Ну, ытла та айван пулнӑ вара, ҫав эрех пичкине шаннӑ, — ӑшра ӳкӗнсе илчӗ вӑл. — Ҫак автобусра ун майлӑ калаҫса пӑх-ха — ним мар кӑларса ывӑтаҫҫӗ те уй варрине тӑратса хӑвараҫҫӗ».

Вырӑн ҫитменнипе тавлашса кайнӑ ҫынсем автобус лӑнк-ланк сиктернипе тахҫанах кам мӗнле пӗлет ҫапла вырнаҫнӑ ӗнтӗ. Ытахальтен пуҫланӑ калаҫу вара ҫаплах чарӑнмасть.

— Юрӗ ӗнтӗ, ҫитӗ ялпа хулана пӗр-пӗринпе хирӗлсе. Ӗҫлекен ҫын пурнӑҫӗ ялта та, хулара та ҫӑмӑл мар. Выҫӑ вилес мар тесен килте вӑкӑр мар, карчӑк усрамалла, вӗсене пенси вӑхӑтра параҫҫӗ, — терӗ халиччен тавлашӑва шӑппӑн итлесе тӑнӑ ҫамрӑк ҫын.

Вӑл кӗтмен ҫӗртен каласа хунӑ сӑмах тӗл лекнӗрен пурте кулса ячӗҫ.

— Вӑт ку тӗрӗс! — терӗҫ иккӗн-виҫҫӗн харӑсах.

«Чӑн калать, — ӑшра килӗшрӗ унпа Нина та. — Юрать-ха, анне пенсие тухса ӗлкӗрчӗ. Уйӑхра пӗр хут укҫа илет. Фабрикӑсемпе заводсенче ӗҫлекенсене шалу вырӑнне кирлӗ-кирлӗ мар тавар параҫҫӗ». Пир-авӑр комбиначӗ йӗркеллӗ ӗҫлейменрен Нинӑн тантӑшӗсем тӗрлӗ ҫӗре саланса пӗтрӗҫ. Чӗкеҫ ҫемйипе упӑшкин тӑван килне куҫса килчӗ. Нина шӑпах вӗсем патӗнчен таврӑнать. «Пӗр-пӗрне нумайранпа курман, вӑхӑт тупса килсе кай-ха», — тесе ҫырса янӑ та тантӑшӗ, Нина паян ӳркенмесӗрех ҫула тухрӗ. Чӗкеҫшӗн хӑй те тунсӑхласа ҫитнӗччӗ. Вӑл хулара пурӑннӑ чух ҫыхӑну татман, района вара йӑпӑр-япӑрах тухса каяймастӑн. Хӑнара вӑхӑт хӑвӑрт иртет. Тантӑшӗ темле ӳкӗтлесен те ҫӗр каҫма юлмарӗ Нина. Килте ӑна Аванти кӗтет. Иккӗшӗ пӗрлешнӗренпе пӗр-пӗрне пӗччен хӑварас йӑла ҫук вӗсен. Нинӑна тантӑшӗ автостанцие ҫитиех ӑсатрӗ, пӗр ҫавра услам ҫу, тӑпӑрчӑ, сӗт парса ячӗ.

— Чӑваш халӑхӗ кутамккапа михӗ айне пулнӑ иккен. Челнок текен сутуҫӑсем хулана ҫеҫ мар, ра-

йонсене те çавăрса илнĕ. Автобуссем пассажирсенчен ытларах тавар турттараççĕ, — терĕ Нина килне кĕнĕ-кĕмен. — Аран Шупашкара çитрĕм.

— Ĕççĕр тăрса юлнă халăх пурнăçне мĕнле те пулин саплаштарасшăн. Çавăнпа çур хула сутуçа тухрĕ, — тавăрчĕ Аванти. Вăл арăмне хывăнма пулăшрĕ.

— Сумка-михĕ вĕççĕн сутă тусах кăштах пайтине кураççĕ пулмалла çынсем. Хамăр урамра пурăнакан Макаровсем те пасара çӳреççĕ. Виçĕмкун хула варринче Маринăна тĕл пултăм. Пĕчĕк урапа çине тем пысăкăш сумка лартнă та асфальт тăрăх кăлтăрталттарса пырать. «Ай-уй, кун пысăкăш çĕклемпе троллейбуса мĕнле кĕрсе тухан?» — терĕм те, вăл урам леш еннелле пуçĕпе сĕлтсе кăтартрĕ. «Пĕччен мар эп. Ав Валери урамăн тепĕр енĕпе пырать. Упăшка манпа юнашар утма именет. Паллакан-пĕлекен курсан спекулянт тесе каласран хăрать. Пасара çапла каятпăр эпир, каялла та çаплах таврăнатпăр», — терĕ тарăхса.

— Çапла-и?! — Аванти тĕлĕннипе çăварне карсах пăрахрĕ. Унтан Макаровпа арăмĕ иккĕшĕ урамăн ик енĕпе утнине куç умне кăларчĕ пулмалла та кулса ячĕ. — Вăт арçын! Арăм çăкăрне çиме вăтанмасть, унпа юнашар сумка сĕтĕрсе утма вăтанать. Кур-ха эс ăна!

— Марина пасар укçипе упăшкине анчах мар, качча каймасăр ача çуратнă хĕрне те тăрантарать. ГКЧП вăхăтĕнче демократие хӳтĕлеме Мускава кайса килнине. Ачине те çавăнтанах тупса килнĕ теççĕ.

— Апла, Маринăн килĕнче демократи калчи ӳсет. Трактор заводĕнче инженерта ĕçлетчĕ мар-и-ха Макаров?

— Çавăнтаччĕ-ха та... Завод ĕç укçи тӳлейми пулнă тет.

— Вăт мĕн патне çитсе тухрăмăр. Инженерсен те ĕççĕр лармалла... Пасарĕ тупăш паратех-ши вара?

— Марина каланă тăрăх, налуксене йăлтах тӳлесе пырсан тупăш тăкака саплаштармалăх та юлмасть.

Сутма мĕн-мĕн илсе тухнине вĕсен йăлтах тетрадь çине çырмалла, мĕн сутнине палăртса пымалла. Шута илмен тавар тупсан тĕрĕслекенсем тӳрех штраф хураççĕ тет. Марина пĕр-пĕр хаклăрах япала сутсан упăшкине часрах киле чуптарать, шăп çавăн пек тепĕр япала илсе килтерет. Вара хаклă япала сутни курăнмасть.

— Тупăш çук пулсан çавăн чухлĕ сутуçă пулмалла мар ĕнтĕ.

— Кам мĕнле пĕлет, çапла чееленме хăнăхнă. Çемьене тăрантармалла вĕт.

— Сутă тăвакан ĕмĕрне те выçă ларман. Пурăнччăрах хăйсем пĕлнĕ пек. Эс вара уй урлă каçса выçрăн пуль-ха. Каçхи апата шаркку пĕçертĕм.

— Выçса ĕлкĕреймерĕм. Чĕкеç лайăх хăналарĕ. Чейник лартăпăр. Ăш хыпрĕ. — Çапла каласа Нина тĕпелелле иртрĕ.

— Чĕкеç мĕнле пурăнать унта?

— Лаша пур та вĕсен, аптăрамаççĕ. Хăйсене тăранмалăх пахча çимĕçĕ те, сĕт-çупа аш-пăш та туса илеççĕ. Колхозĕ саланнă терĕç. Машина-трактор паркĕнче мĕн пурри йӳнĕ хакпа малтанхи пуçлăхсен аллине лекнĕ пулас. Ялта çава-çурла, сухапуçĕ чĕрĕлсе тăнă, пушă килсем нумайланнă.

— Кун пек самана таврăнасса кам шутланă?

— Курасчĕ сан хальхи уйсене. Хытхура пусса илнĕ вĕсене. Кĕркуннене тахçанах кĕтĕмĕр пулин те талккишпех сухаламан анасем выртаççĕ. Çулла та çум курăксăр пуçне нимĕн те ӳсмен вĕсем çинче. Унччен маларах выльăх-чĕрлĕх тытнă фермăсем пушаннă. Кантăкĕсем çĕмĕрĕлсе пĕтнĕрен витесен чӳречисем хуп-хуран курăнса лараççĕ, пăхсан чун ыратать. Ял арканать.

— Паян никама та çăмăл мар пурăнма. Анчах сыввисен алли-ури тĕрĕс-тĕкел, куçĕ курать. Сусăрсене пушшех йывăр. Хăшĕсен пĕчĕк ачасем пур. Ун пек çемьесем мĕнле тытăнкаласа тăраççĕ-ши? Инва-

лидсене ĕç тупса парасси çинчен никам та шутламасть. Мĕн те пулин шухăшласа тупмаллах...

— Темле çав... Учительсем, инженерсем пасарта тăраççĕ пулсан инвалидсем валли мĕнех шухăшласа тупăн?

— Ман пата паян пĕр арçын килсе кайрĕ. Çыннине Виталий Иванович тесе чĕнеççĕ. Инвалидсем валли ĕç вырăнĕсем туса паракансене налук çăмăллăхĕсем параççĕ тет. Пысăках мар фирма йĕркелеме сĕнет вăл. Хăвах пĕлетĕн, сĕтел-пукан, кравать таврашĕ çитми пулчĕ. Çынсем «Уют» магазин умне ирхи тăватă сехетре пырса черете çырăнаççĕ. Кравать-сем, пукансемпе сĕтелсем, пĕчĕк шкапсем, çăкăр хумалли савăт, кĕреçе-кĕрепле, пуртă аврисем — çын тăвайми япаласем мар. Вĕсене килтех туса сутма пулать вĕт. Тытăнса пăхмалла мар-ши? Савалама-каскалама пĕлекенсем хамăр урамрах сахал мар. Заводсем ĕçлеменрен килтех кун ирттереççĕ. Пире виçтăватă çын пулсан та çитет. Инструментсем, мастерской хамăнах пур.

— Шанчăклă çынах-ши вăл арçын? Çыхланма юрать-ши унпа?

— Шухăшлатăп-ха. Укçасăр пурăнма та çăмăлах мар. Хамăр тытăнкаласа тăрăпăр-ха инвалид укçипе те. Çĕр улми пур чух выççах вилмĕпĕр. Пире нумаях кирлĕ мар. Хĕрĕме пулăшайми пултăм, çавă кулянтарать. Ашшĕ пуль эпĕ.

— Ĕç пуçарас пулсан чус-хăма, йывăç кирлĕ. Мĕнле укçапа туянасшăн ăна сан пата килнĕ çын? Мĕн, çав тери пуян-им?

— Малтанлăха укçа кивçен илĕпĕр, кайран тавар сутса парса татăпăр тет. Ку ĕç пурăна киле тупăш парасса шанать вăл. Ман шутпа, тытăнса пăхни çылăх мар. Халăха кирлĕ япала сутăнатех.

— Ĕçĕ ăнмасан кивçене мĕнпе татан? Вăл куçлăпуçлă çын. Уншăн кирек ăçта та çул уçă. Вăл кирлех пулсан вăрман касса та укçа тума, парăм татма

пултарать. Хальхи шанчăксăр саманара, Аванти, пирĕн иксĕмĕрĕн кивçене кĕме юрамасть.

— Хам ятпа кивçен укçа илме ним парсан та килĕшес çук-ха эпĕ. Тĕрĕсех ăнлантăм пулсан ăна манăн станоксемпе инструментсем тата пĕчĕк фирма ертӳçи инвалид пулни кирлĕ. Вăл директор пулĕ, эпĕ — унăн çумĕ.

— Каçхи сăмах çине чăх сысать тет. Кун пек ĕçе ирхи ăспа тумалла, — терĕ Нина. — Атя чей ĕçер те çывăрма выртар. Ыран унта куç курĕ.

Сасси лайăх пулин те Аванти куç курманнисен обществинчи художество пултарулăх ушкăнне çӳреместь. «Репетицисенче вăхăта ирттериччен пĕр-пĕр ĕç тытса тăватăп», — тет вăл. Пушă вăхăтра кĕнеке вулама юрататъ, час-часах тем çырать. Нина вара пултарулăх ушкăнĕсĕр пурăнаймасть. Çити-çитми пурнăçра юрă пушшех кирлĕ иккен. Юрласан йывăр пурнăç çăмăлланнăн туйăнать, чун та уçăлать.

Куç курманнисен обществинчи юрă-ташă ăстисем самаях вăйлă ушкăна чăмăртанчĕç. Çамрăксем те пур унта, вăтам çулсенчисем те, ватăсем те. Юрăçсен йышĕ хулари ваттисен çурчĕсенче, санаторисенче, интернатсенче, больницăсенче концертсем кăтартать, пултарулăх ушкăнĕсен смотрĕсене хутшăнмасăр юлмасть, нумай чухне малти вырăнсенех йышăнать. Нинăн та сахал мар грамотăпа тав çырăвĕ, ытти хисеп хучĕ. Темиçе çул маларах Чăваш Республикин Музыка обществин правленийĕ панă Хисеп грамоти уншăн уйрăмах хаклă. «Н.П. Юмановăна Чăваш Республикинчи художество пултарулăхĕн смотрне хутшăнса пысăк ăсталăх кăтартнăшăн» тесе çырнă унта. Филипп Лукин композитор хăй алă пуснă. Пысăк ăстасем асăрхарĕç пулсан сцена çине тухма намăс мар вара.

Хулари культура пурнăçне хутшăннисĕр пуçне Нинăсен коллективĕ сайра хутра та пулин районсе-

не тухха çӳреме пуçларĕ. Концерчĕсене тӳлевсĕрех кăтартаççĕ вĕсем. «Паянхи пек йывăр саманара пирĕн уйрăмах хастар пулмалла, юрă-кĕвĕпе те пулин çынсен кăмăлне çĕклемелле, вĕсен чунне ăшăтмалла, шанчăк памалла, — тет ушкăна ертсе пыракан. — Çынсене савăнăç кӳрсен хамăра та пурăнма хаваслăрах».

Пĕр çуллахи кун хайсем тĕллĕн вĕреннĕ ăстаçăсем автобус çине тиенчĕç те Элĕк районне тухса кайрĕç. Вĕсен паян икĕ ялта концерт кăтартмалла. Çăкăр-тăварпа хирĕç тухса ăшшăн кĕтсе илчĕç ял çыннисем. Урамра, хĕвел ăшшинче, кăмăллăрах тесе клуб умĕнчех кăтартас терĕç концерта. Клубран илсе тухса лартнă вăрăм саксем çинче пушă вырăн юлмарĕ. Ытларах вăтам çулхи çынсем, ватăсем килнĕ. Яшсемпе хĕрсем нумаях мар. Вĕсем хуласене саланса пĕтнĕ пулас.

Куракансем кăмăлтан алă çупаççĕ, кашни юрă хыççăн кам та пулин чечек парнелет. Концерт вĕçленесси нумаях юлманччĕ — урам варринче темле шăв-шав илтĕнсе кайрĕ. Клуб еннелле пĕр вуникĕвунвиçĕ çулсенчи ача чавтарса килет. Ун хыççăн аллине хулă тытнă хĕрарăм кăшкăрашса чупать.

— Вĕрентеп эп сана çын пахчине кĕме! Сана валли лартман эп вăл чечексене! Аçу-аннӳне кайса каласа паратăп!

Ача хытă чупать, хăвалаканни те унран юласшăн мар. Халăх пухăннă тĕле çитсен хĕрарăм аванмарланчĕ пулас, шăпланчĕ.

— Мĕн концерчĕ вара паян кунта? Эп пĕлмесĕрех юлаттăм, — хашка-хашка ыйтрĕ вăл çывăхра тăракансенчен.

— Куç курманнисем пирĕн яла концертпа килнĕ, — ăнлантарчĕ ăна тахăшĕ. — Килтен тухмасăр ларса курмасăрах юлаттăн.

Халĕ ĕнтĕ чечек вăрлакан ачана хăваласа кунта çитиех килнĕ хĕрарăм та тимлесех юрă итлеме пуç-

ларĕ. Юрă сăмахĕсем чуна пырса тивмелле лайăх. Кĕвви — халиччен илтменскер. Хăш енчи чăвашсен юрри-ши ку?

Улмаллă, улмаллă саппунăм пур,
Çакмассерен ума ай çутатать.
Курса ытарайми тăвансем пур,
Курмассерен чунăм ай савăнать.

Улма илер, тăван, улма илер,
Хакĕсене пĕрле ай тӳлĕпĕр.
Пĕрле пурнар, тăван, пĕрле пурнар,
Ĕмĕрсене пĕрле ирттерĕпĕр.

— Нивушлĕ вĕсем пурте суккăр? — ыйтрĕ кая юлса çитнĕ хĕрарăм юнашар тăракан кӳршинчен.

— Пĕлместĕп çав. Хăшĕсем кăштах кураççĕ-и, тен, нумайăшĕ сĕм суккăрах пулас.

— Аван юрлаççĕ, кусемшĕн чечек те шел мар.

— Ахаль те кашни юрă хыççăн юрлаканнисене чечек тухса параççĕ. Пирĕн урамри пахчасенче паян чечек юлмарĕ пуль ĕнтĕ, — терĕ кӳрши куларах.

— Пултăрин, ара. Чечек шалккă-им? Мĕнле маттур вĕсем. Пуç усмаççĕ. Хăйсене те пурăнма çăмăл мар, вĕсем вара пире хавхалантарма килнĕ.

Концерт вĕçленнĕ хыççăн ял совет председателĕ артистсене тав турĕ. Унтан ял халăхĕ енне çаврăнчĕ те çапла каларĕ:

— Куртăр-и, мĕн тери пултаруллă артистсем килчĕç паян пирĕн пата. Вĕсенчен пĕри те çăмăл шăпаллă мар. Кун çутине çухатсан та пурнăç илемне, тĕллевне çухатман вĕсем. Авă епле ушкăн йĕркелеме пултарнă. Эпĕ пĕлнĕ тăрăх, халăх умне тухмалли костюмĕсене те хăйсен аллипех çĕленĕ. Эпир вара, куçлă-пуçлă, вăй-халлă çынсем, кăшт йывăрлăх тӳснипех нăйкăшма пуçлатпăр. Калăр-ха мана, кам чăрмантарать пире çакăн пек пултарулăх ушкăнĕ йĕркелеме?

— Укçа-тенкĕ çитсе пыман чух юрласах килмест

çав, — хăюсăррăн хуравларĕ çывăхарах тăракансенчен пĕри.

— Пурнăç йывăр тесе пĕрмаях йĕрсе лармалла мар пуль ĕнтĕ, — терĕ тепри.

— Тăван йăла-йĕрке манăça тухса пырать, — сăмахне малалла тăсрĕ председатель. — Вăййа тухмастпăр, кĕр сăри тумастпăр, хорпа юрламастпăр. Мĕн, юрра-ташша пултараймастпăр-и? Сцена çине тухма кĕпе-тумтир тăваймастпăр-и?

— Костюм тума çăмăлах мар-ха. Капăрланасси çинчен мар, хырăм тăрантарасси çинчен шухăшламалла. Çав тери хĕсĕк пурăнатпăр вĕт. Колхоз саланчĕ. Пахча çимĕç сутса пуяймастăн, — тавăрчĕ хĕрарăмсенчен пĕри.

— Ятарласах çĕнĕ костюм çĕлетме çук паллах. Кун пирки паян ĕмĕтленме кăна пултаратпăр. Анчах кашни килтех аннесемпе асаннесен арчисем ларaççĕ, вĕсенчи хушпу-тухья кивелсе выртать, кĕписаппунне кĕве çиет. Ма ахаль вырттармалла вĕсене? — терĕ библиотекăра ĕçлекен хĕрарăм. Куç курманнисене те яла вăлах чĕннĕ иккен.

— Эпир ытла кичем пурăнатпăр, — терĕ пĕр çамрăкĕ. — Атьăр пухăнса канашлар та художество пултарулăх коллективĕ йĕркелер. Ялта купăссăсем те, гитара калама пĕлекенсем те пур. Кашни уяв тĕлне концерт хатĕрлеме пулать.

— Тĕрĕс! — мухтарĕ ăна ял совет ертӳçи. — Пуш вăхăта картла çапса, диван çинче йăваланса е эрехсăрапа анраса ирттермелле мар. Акă камсенчен тĕслĕх илмелле пирĕн. — Ял совет председателĕ юрăçсем еннелле çаврăнчĕ. — Сире, хисеплĕ артистсем, пире илемлĕ юрă-кĕвĕпе савăнтарнăшăн тем пысăкăш тав. Сӳрĕклĕхе сирме пулăшнăшăн тата пысăкрах тав. Сирĕнтен тĕслĕх илсе юрлама-ташлама юратакансен ушкăнне йĕркелетпĕрех.

Пултарулăх ушкăнĕ автобуса тиенсе çула тухрĕ. Тепĕр яла васкаççĕ юрăççем. Унти концерт каçхи сакăр

сехетре пуçланмалла. Çапла калаçса таталнă. Унччен ял çыннисем кĕтӳ кĕртсе ĕне сума ĕлкĕреççĕ.

— Хамăр паян çак ялта мĕнле вăрлăх акса хăварнине ăнлантăр-и? — ыйтрĕ автобусри артистсенчен вĕсене ертсе пыракан культмассовик. — Ялсенче художество пултарулăхне аталантарма хĕтĕртсе эпир питĕ усăллă, пархатарлă ĕç тăватпăр.

## Вунпĕрмĕш сыпăк

Раççей президенчĕ шантарнă сакăр уйăх виçĕ хут иртсе кайрĕ пулĕ — пурнăç лайăхланасси пăхса та курăнмасть. Фабрика-заводсенче укçа тӳлеме пăрахрĕç. Предприятийĕсем хăйсем те чарăна-чарăна кăна ĕçлекелеççĕ. Хаксем чакма мар, уйăхсерен ӳссе кăна пыраççĕ. Çу хакĕ тăватçĕр тенкĕрен иртрĕ, совет саманинче икĕ тенкĕ те сакăрвунă пус тăнă кăлпасси хакĕ çĕр хут ӳсрĕ, пĕр пачка маргарин утмăл тенке çывхарчĕ. Хăйма, тăпăрчă çиесси çинчен шутламалли те çук. Сутуçăсем витринăсенче апат-çимĕçĕн килограмĕ мар, çĕр грамĕ мĕн чухлĕ тăнине кăтартма пуçларĕç. Капла хаксем тӳрех хăратса ӳкермелле курăнмаççĕ.

Куçĕ начар курнăран Нина пĕррехинче мăшкăл тӳсрĕ. «Ай-уй, хаксем йӳнелме пуçланă иккен. Халăх пĕлмест пулĕ-ха, çавăнпа лавккара никамах та çук», — тĕлĕнчĕ вăл витрина çинелле тинкерсе. Авантипе иккĕшĕ кăлпасси туянма тахçанах пăрахнă. Ыр апат çиер-ха пĕрре текелесе хайхискер касса умĕнчи сутуçă патнерех пычĕ, пĕр кило кăлпасси виçсе пама ыйтрĕ.

— Тăватçĕр çитмĕл икĕ тенкĕ те сакăрвунă пус, — терĕ сутуçă кăлпассие тараса çинчен илсе.

Нина куна илтсен çухалсах кайрĕ. Унăн кĕсйинче пĕтĕмпе те çĕр çирĕм тенкĕ кăна.

— Витрина çинчи хакпа сутакан кăлпасси пĕтнĕ-им вара? — ыйтрĕ вăл урăх сăмах тупаймасăр.

— Унта кăлпассин çĕр грамĕ мĕн чухлĕ тăнине кăтартнă. Сире эп çав кăлпассиех виççе патăм, — терĕ сутуçă тавара чĕркеме пăрахса. — Илетĕр-и?

Нина магазинран икçĕр грамм кăлпассипе тухрĕ.

Хаксем çĕпре янă чуста пек хăпарса кайни çынсен вуншар çул хушши пусăн-пусăн перекетлесе пынă укçине çӳппе çавăрчĕ. Халăх çука тăрса юлчĕ. Çынсем влаçа хирĕç ан çĕкленччĕр тесен вĕсен тарăхăвне урăххисем çине куçармалла, çăкăр çук тăк — вуламалли, курмалли, çăвар карса тĕлĕнмелли тупса памалла. Çак задачăна «Самана» хаçат редакторĕ лайăх пĕлет. Пысăк укçа илме май паракан пуканне упраса хăварас тесе вăл тем тума та хатĕр.

Ангелинăн çемйи те укçасăр, çăкăрсăр ларать. Упăшки, заводра ĕçлекенскер, çулталăк ĕнтĕ ĕç укçи илмен. Юрать-ха, садикшăн тата хваттершĕн шалу шучĕпе саплаштармалла турĕç. Уншăн та тавах. Алăран пама укçа çук. Заводăн хулара темиçе магазин пур. Шалу шучĕпе унта тавар илме пултаратăн, анчах апат-çимĕç тиесе килсен халăх пырса тулать те — илсен илеетĕн, илеймесен пушăллах килелле утатăн. Çăкăра уйрăмах хăвăрт илсе пĕтереççĕ. Йӳçĕтнĕ купăста банкисем кăна ирĕклĕн лараççĕ, вĕсем никамах та кирлĕ мар.

Пĕррехинче Ангелинăпа упăшки шоколад сутнă вăхăта лекрĕç. Алюшпа Ванюка савăнтаратпăр тесе чылаях илчĕç ăна. Пылак çимĕç тепре туянасси тахçан пулать-ха... Килте уçса пăхрĕç те — шоколадăн тĕсĕ те юлман, вăл шуралса, вырăн-вырăн пăнтăхса ларнă.

Тумтире те çав лавккасенчех туянма тивет, анчах юрăхлă япала тупма çав тери йывăр. Ыр япала сутнă чух черет çав тери вăрăм. Пĕррехинче Ангелинăпа мăшăрĕ сехет ытла черет тăрса хĕрарăм атти туянчĕç. Коробкăна уçса лайăххах тĕрĕслерĕç пек ĕнтĕ. Куçа лавккари электричество çути улталарĕши, хăйсем тимлĕрех пăхаймарĕç-ши — сулахайпа сылтăм атăсем икĕ тĕслĕ иккен. Уйрăмлăхĕ нумаях

та мар, анчах кăнтăр çутипе урама тухсан тӳрех курăнать. «Шăтнă пулсан та кив атăпах çӳреме тивет ĕнтĕ. Саплама парас тăк укçа тӳлес пулать. Вăл вара ахаль те çитсе пымасть», — кулянса хаш-ш сывларĕ хĕрарăм.

Шалу парсан Ангелина çемье тăкакĕсен списокне тăвать, унта шăрпăк коробки таран — йăлт шута илет. Укçа çитменнине курсан çав списока кĕскетме тытăнать: рис виçĕ пачка вырăнне иккĕ çеç, çăнăх тăватă кило вырăнне виççĕ хăварать, улма-çырла таврашне вуçех туртса пăрахать, сахăр виçине те сахаллатать. Çапла кашни пусне шута илмесен, хĕсĕнсе пурăнмасан пур-çук укçа çур уйăха та çитмест.

Редакцире те шалăвăн пĕр пайне кирлĕ-кирлĕ мар япаласемпе саплаштараççĕ. Килĕнче Ангелинăн икĕ банка сăрă, сенĕк, çул юсакансем усă куракан сарлака кĕреçе, туалет тасатмалли порошоксем темиçе пачка та выртаççĕ. Вĕсене пурне те шалу вырăнне панă. Пăрахĕччĕ те кайĕччĕ Ангелина редакцирен, ытти хĕрарăмсем пек Мускавалла е урăх хулана çитсе ĕçе вырнаçĕччĕ. Пĕр кун та килмĕччĕ вăл çак çĕлен йăви пек чашкăрса тăракан çĕре. Çĕнĕ редакторпа унăн çывăх çыннисем, малтан пĕр шухăшлă пулнăскерсем, хăйсем хушшинче тем пайлайман. Халĕ вĕсем пĕр-пĕрин çинчен çăхавсем çыраççĕ, судлашаççĕ. Редакцире пĕрмаях тĕрĕслев комиссийĕсем чакаланаççĕ. Редактора хирĕç çырнă çыру çине Ангелинăна та алă пустарасшăнччĕ. Морячкин çак сăлтавпа ятарласах кĕчĕ ун патне.

Хĕрарăм пек вăрттăн кавар туса çӳрекен çак этеме Ангелина тӳсме пултараймасть. Совет саманинче çак журналист Ленин çапла каланă тесе мĕнле те пулин цитата хушса хумасăр пĕр статья та çырман, халь пач урăхла çаптарать. «Хăвăр суйласа лартнă вĕт эсир çак редактора, халь мĕншĕн ыттисен аллипе кăвар туртасшăн?» — тесе куçранах каларĕ Ангелина. Ĕç тухманнине кура тухса шăвăнчĕ Морячкин.

Пĕр кунлăх та юлмĕччĕ çакăнта Ангелина. Каяймасть вăл Шупашкартан аяккалла, мĕншĕн тесен ывăлĕсем пĕчĕк-ха. Вĕсене амăшĕ кирлĕ. Упăшки те çынсен арçыннисем пек таçта Çĕпĕрелле тухса каяймасть, мĕншĕн тесен ватă амăшĕ ялта пĕчченех, ăна пулăшсах тăмалла. Пурăнма хулана илсе килес — пĕчĕк пӳлĕмре тепĕр кравать лартма вырăн çук.

Çак нушаллă пурнăç тата нумай çула тăсăласса малтанах пĕлсе тăрас тăк мĕн тăватчĕ-ши асаплă халăх? Юрать, ыранхи куна пĕлсе тăмалла туман. Малашлăхра та пулин пурнăç лайăхланасса шанатăн та — чăтатăн, шăла çыртса тӳсетĕн.

Республикăра ĕçсĕрлĕх, чухăнлăх, нуша хуçаланаççĕ. Яла çитетĕн-и, хулара çӳретĕн-и — çынсен сăнĕсем пур çĕрте те тĕксĕм те салху. Пĕтĕм пурнăç пăтранчăк кӳлĕ пек туйăнать. Хаçат-журнал мĕнпур çитменлĕхшĕн коммунистсене айăплать, радиопа телевидени те çав юррах юрлаççĕ. Вулакансем çакăнпа килĕшесшĕн мар.

Ангелина çырусен пайĕнче ĕçленĕ май вулакансем мĕн тери кăмăлсăр пулнине уççăн курса тăрать. «Малашне те çак политикăнах тытса пыратăр пулсан сирĕн хаçата çырăнма пăрахатпăр. Кирлĕ мар пире кунашкал хаçат», — тесе уççăнах çыраççĕ çынсем. Çакăн йышши çырусене Ангелина кунсерен регистрацилет. Вĕсене хаçатра пичетлемеççĕ, пичетлес те çук. Кун пирки хаçатра ятарлă пĕлтерӳ те тухрĕ. «Редакци пичете йышăнман çырăва никам та вăйпа пичетлеттерме пултараймасть. Унччен ыйтуллă çырусен пысăк пайĕ çине хуравлама тĕрлĕ органсене ярса панă. Халĕ çапла тума пăрахатпăр, редакци коллективĕ тăвакан кирлĕ мар ĕçрен хăтăлатпăр», — тенĕ çав пĕлтерӳре.

Журналистсен ĕçĕ те урăхланчĕ. Халĕ вĕсен интереслĕ темăсемпе геройсем шырамалла мар, хаçат çырăнтармалла, укçалла мухтав материалĕсем пи-

четлемелле. Тираж чакса пынăран тĕп редактор приказ çырсах районсем тăрăх хăвалать. Ыйткаласа çӳресси тем пек килĕшмесен те каймах тивет. Чунне хытарсах Ангелина пĕр кунхине Йĕпреç районне тухса кайрĕ. Унăн тĕп тĕллевĕ — вулакансемпе тĕл пулмалла, вĕсене хаçат çырăнма ӳкĕтлемелле. Совет саманинчи пек клуб тулли халăх пуçтарăнмасть халĕ, çынсемпе тĕл пулас тесен йĕтем çине, правление е машина-трактор паркне çитмелле. Пĕр тĕлпулăвне Ангелина уйра ирттерчĕ, тепри колхоз правленийĕнче пулмаллаччĕ. Фотограф унта-кунта ӳкеркелерĕ те Ангелинăпа пĕрле правление пычĕ. Пӳлĕмре пĕтĕмпе те тăватă-пилĕк çын çеç ларать. Никамах та килмен тесе тухса каяймастăн вĕт. Ангелина «Самана» хаçат çинчен кĕскен каласа панă хыççăн шурă çӳçлĕ, чĕрĕ куçлă арçын çапла ыйтрĕ:

— Сирĕн хаçатра ĕçлекен Воронин корреспондентăн кабинечĕ миçемĕш хутра? Форрестол чирĕн паллисем пур пулас унăн.

Форрестол чирĕ çинчен халиччен илтмен Ангелина ним калама аптăрарĕ.

— Мĕншĕн ун пек ыйтатăр?

— Коммунистсенчен хăраса чӳречерен сиксе ан вилтĕр тетĕп-çке, — те шӳтлет, те чăн калать хайхи арçын. — Иккĕмĕш е виççĕмĕш хутри кабинетран сиксен аманĕ, анчах вилсех каймĕ. Тата çӳлерехри хутран сиксен вара никам та çăлса хăвараяс çук. Воронин пек журналистсене пула сирĕн хаçат тиражĕ ӳсме мар, чакса кăна пырĕ. Халăха хирĕç кайрăр эсир. Сирĕн хаçата ĕненес пулсан çĕр çинче тар тăкса ĕçлекенсем те кулаксем кăна пулнă, ыттисем хăйсен кахаллăхне пула чухăн пурăннă. «Колхозсене патшалăх пулăшăвĕ пани — укçа-тенке тĕпсĕр шăтăка пăрахниех», — тесе çыратăр. Çав колхозсем вăрçăра тăшмана çĕнтерме пулăшнă, арканнă çĕршыва ура çине тăратнă. Халăх хаçачĕ мар, карма çăварсен хаçачĕ пулса тăчĕ сирĕн «Самана».

— Хаҫат-журналта тӗрлӗ шухӑш калама ирӗк панӑ халӗ. Воронин хӑй шухӑшне калать. Хӑй мӗн ҫырнишӗн вулакансем умӗнче вӑл хӑй яваплӑ, урӑхларах ҫыракансем те пур-ҫке, — текелерӗ Ангелина. Воронин паянхи чухӑнлӑх сӑлтавӗсене пурне те коммунистсемпе колхозсем ҫине йӑвантарни ӑна хӑйне те килӗшмест. Анчах редакцире перестройка прорабӗсем хуҫаланаҫҫӗ, урӑхларах шухӑшлакансене хаҫатра вырӑн памаҫҫӗ.

Ангелина ҫак кӑмӑлсӑр калаҫӑва тӑсас темерӗ, йышлӑ мар вулакансене тӗлпулӑва килнӗшӗн тав турӗ те вӗсемпе сывпуллашрӗ.

Шупашкара ҫитсен Ангелина Пичет ҫуртне мар, иккӗмӗш сыпӑкри тетӗшӗ ӗҫлекен больницӑна кӗчӗ. Форрестол паллисем ҫинчен пӗлес килчӗ унӑн.

— Медицина терминӗ мар вӑл, политика терминӗ, — терӗ Ангелинӑна унран чылай аслӑрах тетӗшӗ. — Форрестол Америкӑн оборона министрӗ пулнӑ. Вырӑс коммунисчӗсем тапӑнса кӗресрен хӑраса паранойя чирӗпе чирлесе кайнӑ. Вашингтон урамӗпе пушар машини иртнине курнӑскер: «Вырӑссем килеҫҫӗ! Вырӑссем килеҫҫӗ! — тесе кӑшкӑрса янӑ, коридор тӑрӑх: — Пире ҫавӑрса илчӗҫ!» — тесе чупнӑ.

— Ав епле иккен! Чӑнах та чӳречерен сикнӗ-и вара ҫав ухмах?

— Ӑсран тайӑлнине кура ӗҫрен кӑларнӑ ӑна, госпитале вырттарнӑ. Вӑл унта вун улттӑмӗш хутри чӳречерен сиксе вилнӗ. Ку вӑл тахҫанах пулнӑ, манӑҫа та туха пуҫланӑ. Форрестол синдромӗ ҫинчен аслӑ ӑрури ҫынсем лайӑх пӗлеҫҫӗ, мӗншӗн тесен хӑй вӑхӑтӗнче ҫав параноик ҫинчен сахал мар карикатура пичетленетчӗ. Хӑйӗнчен тӗнчене култарнӑ этем сана мӗн тума кирлӗ пулчӗ тата?

Ангелина колхозри тӗлпулу ҫинчен каласа пачӗ.

— Куртӑн-и, мӗнлерех ӑслӑ ҫынсем пурӑнаҫҫӗ ялта, — терӗ тетӗшӗ.

«Çивĕч ăслă та вара вулакансем! Авă кампа танлаштараççĕ вĕсем çынна коммунист пулнăшăнах таптаса тăкма хатĕр журналистсене», — тĕлĕнсе шухăшларĕ Ангелина. Ыран унăн планеркăра хăй района мĕнле кайса килни çинчен каласа памалла. Форрестол синдромĕ çинчен сăмах та тапратмĕ вăл. Каласа пăх-ха, паянхи Форрестолсем тӳрех сăмахпа çапса хуçаççĕ. Пĕр-ик çул каялла пулнă ун йышши пăтăрмах редакцире. Парти билетне кăларса пăрахман ватăрах журналистпа демократсен урапи çине сиксе ларнă сĕмсĕр тавлашса кайнă та — ватти килне çитнĕ-çитмен вилсе выртнă, хытă тарăхнă та — чĕри чăтайман. Инфаркт мĕн сăлтавпа пулнине тĕпчекен тупăнмарĕ.

## Вуниккĕмĕш сыпăк

Аванти паян килте пĕчченех. Нина ирех куç курманнисен обществине кайрĕ, часах таврăнаймастăп тесе хăварчĕ. Виталий Иванович килмеллеччĕ те, Аванти çавна кĕтсе ниçта тухмасăр ларать. Вăл сĕтел-пукан тăвакансен бригади валли çынсем те тупса хатĕрленĕ ĕнтĕ, Виталий Иванович мĕнпур документа туса хатĕрленĕ пулсан ĕçе пуçăнма та юрать.

Алăка такам хыттăн шаккарĕ.

— Акă çитрĕ те пулас кĕтнĕ çын, — хăйпе хăй калаçса илчĕ кил хуçи. — Питĕрмен, кĕрĕр! — хыттăн сас пачĕ Аванти. Килекенни пĕччен маррине ура сассинченех уйăрса илчĕ вăл. Иккĕн пулас.

Хăнасем вăтанса тăраканнисем пулмарĕç. Пушмакĕсене хывса та чăрманмарĕç вĕсем, çаплах шалалла иртрĕç.

— Авантей Юманова шыратпăр эпир. Вăл эсĕ-и?

— Эпĕ. Паян никама та кĕтменччĕ, хăвăр камсем пултăр-ха? Мĕн ĕçпе çӳретĕр?

— Пире сан патна банк янă. Пирĕн ĕç — парăма

кёнӗ ҫынсенчен укҫа пухасси. Эс вара — парӑмра. Пысӑк парӑмра.

— Мӗнле парӑм пирки калаҫатӑр эсир? Мана такампа пӑтраштаратӑр пулас. Эп никамран та кивҫен укҫа илменччӗ-ҫке.

— «Ылтӑн алӑ» фирмӑна эс уҫнӑ-и?

— Иккӗн уҫнӑ эпир ӑна. Директорӗ — Мартынов. Пӗчӗк фирма валли директор кӑштах кредит илетӗп тенӗччӗ. Анчах документсене Виталий Иванович хӑй ячӗпе тӑватӑп тенӗччӗ. Тата укҫана тавӑрса пама вӑхӑт та ҫитмен-ха.

— Кредита никам ячӗпе те мар, сан ятпа илнӗ, уйӑхран тавӑрса пама шантарса договор ҫырнӑ. Укҫи сахалах мар, унпа ҫур хваттер илме пулать.

— Ниҫта та алӑ пусман вӗт эпӗ, апла тӑк мӗнле майпа яваплӑ пулам-ха?

— Алӑ пуснӑ ҫав. Алӑ пусман тӑк эпир сана шыраса килес ҫукчӗ.

— Инвалидсен налук ҫӑмӑллӑхӗ пур тесе директор мана хӑйӗн ҫумӗ пулма сӗнчӗ, ӗҫе илме ыйтса заявлени ҫыртарчӗ. Ҫавӑнта кӑна алӑ пуснӑ эпӗ.

— Заявлени ҫине мар, укҫа кивҫен илни ҫинчен калакан документ ҫине алӑ пуснӑ эс.

Куна илтсен Аванти чӗри хӗсӗнсе ыратса килчӗ. Анчах хӑй ултав серепине ҫакланнине ҫаплах ӗненес килмерӗ-ха унӑн.

— Эсир тем пӑтраштаратӑр. Виталий Ивановичпа тӗл пулса калаҫмасӑр та ӗненместӗп эпӗ сире.

— Кирек кампа тӗл пулса калаҫма пултаратӑн, анчах укҫана тавӑрса пама тиветех. Хальлӗхе асӑрхаттарса хӑваратпӑр. Парӑма татма укҫа шыра.

Кӗтмен хӑнасем кайнӑ хыҫҫӑн Аванти директор патне хваттере шӑнкӑравларӗ. Трубкӑна вӑл хӑй мар, темле ватӑ хӗрарӑм тытрӗ.

— Виталий Иванович тек кунта хваттерте тӑмасть. Ӗнерхи поездпа Мускава тухса кайрӗ, лерен тата таҫти хулана ҫитмелле терӗ, астуса юлаймарӑм.

— Хӑҫан... таврӑнатӑп те...рӗ? — ырӑ мара сиссе хумханнипе Авантин сасси тытӑнчӑклӑн тухрӗ.

— Эсир мана ӑнланмарӑр пулас. Вӑл Шупашкартан яланлӑхах тухса кайрӗ. Япалисемпех.

Хӑй хӑрушла инкеке лекнине ӑнланса илнӗ Юманов тек нимӗн те чӗнеймерӗ, трубкӑна хучӗ те диван ҫине лаплатса ларчӗ. Ҫак самантра чӗри ҫурӑласла хытӑ ыратса килчӗ те, арҫын чӑтаймасӑр пӗчӗк минтер ҫине ӳпӗнчӗ, унтан тӑн ҫухатса урайнелле тӗшӗрӗлсе анчӗ...

Нина паян кунӗпех тӗрлӗ организаци тӑрӑх ҫӳрерӗ. Куҫ курманнисен ачисене пӗчӗк парне те пулин парса хавхалантарма спонсор шырарӗ. Кӗҫех Пӗлӳ кунӗ ҫитет, ачасем валли рюкзак, кӗнекесем, атӑпушмак, костюм туянмалла. Инвалид укҫипе мӗн илеен? Паллах, ашшӗ-амӑшӗсенчен пӗри инвалид пулсан та тепри ӗҫе ҫӳрет. Анчах заводсемпе фабрикӑсем хӑйсем те аран-аран тытӑнкаласа тӑраҫҫӗ, ҫынсем вӑхӑтра шалу илейми пулчӗҫ. Кун пек нушаллӑ вӑхӑтра ачасене пушшех шел.

Кун каҫипе ҫӳресе тем те илтрӗ Нина: пӗрисем пулӑшайманшӑн каҫару ыйтаҫҫӗ, теприсем ятласа кӑларса яраҫҫӗ, виҫҫӗмӗшсем укҫана кӑшт каярахпа куҫарса пама шантараҫҫӗ, анчах туять Нина, унран хӑпас тесе кӑна ҫапла калаҫҫӗ. Ҫынсем ҫапах та чунсӑрлансах юлман иккен. Шкула каякан ачасем валли укҫа куҫарса пама килӗшекен темиҫе ҫын тупрӗ-тупрех Нина. Апла тӑк пуринчен те чухӑнрах пурӑнакансене пулӑшма май пулатех. Халӗ киле таврӑнма та юрать. Те ывӑннӑран, те кунӗпе выҫӑ ҫӳренӗрен каҫалапа унӑн чунне ӑнланмалла мар салхулӑх пусса илчӗ. Ӑш вӑркани киле ҫитиччен те иртсе каймарӗ. Ҫав териех пӑшӑрханма сӑлтав та ҫук пек ӗнтӗ, пурпӗрех чун канлӗ мар. Алӑк умӗнче упӑшкин пушмакӗсене курсан Нина кӑшт лӑпланнӑ пек пулчӗ: Аванти килтех иккен-ха, ытти-хытти — хӑямата.

— Эс паян мана кӗтсе ывӑнтӑн пуль ӗнтӗ, — калаҫа-калаҫа иртрӗ вӑл шалалла. — Киле таврӑнсан пӗҫеретӗп тесе ирхинех апат хатӗрлесе хӑвараймарӑм, хам вара кӑнтӑрла та пушанаймарӑм. Хырӑму хыр тӑрнех хӑпарса кайрӗ пуль?

Упӑшки хирӗҫ чӗнменнине кура Нина сисчӗвленчӗ: «Мӗн сас памасть вара ку? Ҫывӑрать-ши ӗнтӗ? Тӑр кӑнтӑрлах хуп турттаракан марччӗ-ҫке». Хӗрарӑм алӑк умӗнчен залалла ярса пусрӗ. Аванти диван ҫинче мар, ун ҫумӗнче урайӗнче пӗкӗрӗлсе выртнине курсан мӑшӑрӗ патне чупсах пычӗ.

— Аванти, мӗн пулчӗ? Тем ыратать-им сан? — Нина упӑшкине ҫӗклесе тӑратас тесе ӑна аллинчен ярса тытрӗ те хӑранипе шари! кӑшкӑрса ячӗ. Авантин алли сип-сивех.

...Мӑшӑрӗ вилни Нинӑна хуҫсах хӑварчӗ. Куҫ курманнисен клубне ҫӳреме мар, ҫывӑхри лавккана тухса кӗме те хал ҫук унӑн. Сӗтел хушшине ларсан апат анмасть, ҫывӑрма выртсан ыйхӑ килмест, телевизор е радио ярсан — нимӗн те пуҫа кӗмест. Сӗтел ҫинче Авантин хура хӑюпа ҫавӑрнӑ портречӗ. Нина ӑна алла илсе кӑкӑрӗ ҫумне тытрӗ.

— Мӗншӗн хӑвӑн сӑмахна тытмарӑн-ха, Аванти? Эсӗ вӗт мана: «Тӑхӑрвун тӑхӑр ҫула ҫитетӗп, хампа пӗрле сана та пурӑнтаратӑп, ниҫта та тарса каяймӑн», — тенӗччӗ. Халӗ акӑ мана пӑрахса хӑвартӑн, — йӗре-йӗре калаҫать Нина. — Мӗн пулчӗ-ши сана? Мӗн ҫурса пӑрахрӗ чӗрӳне? Хӑвна пусса тӑракан хуйхуна мӗншӗн манпа пайламарӑн? Ик чӗре пӗр инкеке чӑтса irттеретчех.

Ӑша ҫунтармалли Аванти пурнӑҫӗнче сахал мар пулнӑ. Пурне те каламан кӑна вӑл мӑшӑрне. Кулянтарас темен. Операцисем пурте ӑнӑҫсӑр вӗҫленнӗ, хӑй ӗмӗрлӗх суккӑрланса юлнине пӗлнӗ хыҫҫӑн вилсен те шел мар тесе ӗҫкелеме пуҫланӑ иккен вӑл. Ҫинӗ-ҫимен пурӑнаканскерӗн сывлӑхӗ хавшасах кайнӑ. Ун чухне ӑна больницӑна выртарнӑ, ҫӑлса хӑвар-

ма пултарнӑ. Ҫакӑн пирки Нина Аванти вилнӗренпе тӑхӑр кун ҫитсен тин пӗлчӗ. Тӑванӗсем аса илсе калаҫса ларчӗҫ. Халӗ вара инфаркт пулмалӑх мӗн сиксе тухнӑ-ши ун тӗллӗн? Нина ҫук чухне мӗн пулса иртнӗ килте?

Аванти вилӗмӗн сӑлтавне Нина укҫа шыраса илекенсем тепӗр хут килсен тавҫӑрса илчӗ. Суккӑр ҫын ячӗпе кредит илнӗ директор унӑн мӑшӑрне пысӑк парӑмра хӑварса тухса тарнӑ. Нимӗн те мар, ҫавӑ — йӗксӗк этем ултавӗ — ҫапса хуҫнӑ ӑна.

Инкек пӗччен ҫӳремест теҫҫӗ. Мӑшӑрне ҫухатни ҫитмен, халӗ акӑ вӗсем иккӗшӗ пӗрле пурӑннӑ ҫурта та сутма тивет. Авантин парӑмне арӑмӗнчен ыйтаҫҫӗ. Ун вара мӗн укҫи пултӑр?

Вера Терентьевна та, Авантин тӑванӗсем те пӗр шухӑшах каларӗҫ: «Парӑма тӳлесе татмасан хӑвна тем туса хурӗҫ. Тата... Процентчӗсем пысӑк пирки парӑм ҫав тери хӑвӑрт ӳссе пырать. Ҫурта сутмах тивет, урӑхла май ҫук. Ҫапла тусан хуйха чӑтса иртерме те ҫӑмӑлтарах пулӗ тен. Кунта кашни утӑм Авантие аса илтерет».

Атӑл хӗрринчен инҫе мар вырнаҫнӑ ҫурта туянакан хӑвӑртах тупӑнчӗ. Нина Аванти ҫуртне сутса амӑшӗн хваттерне таврӑнчӗ. Мӑшӑрӗпе иккӗшӗн ӑшӑ йӑва пулнӑ ҫуртран куҫҫулӗпе ҫӑвӑнса тухса кайрӗ вӑл. Чунӗ пуш-пушӑ халь унӑн. Нимӗн патне те алӑ пымасть. Нимӗн те илӗртмест. Авантие хӑй мӗн тери хытӑ юратнине халӗ кӑна ӑнланса илчӗ вӑл. Хисеплесе, анчах хӗрӳллӗн юратмасӑрах, суккӑр ҫынна тиркесе кӳрентерес мар тесе качча тухнӑччӗ вӑл. Пӗрле пурӑнма пуҫласан мӑшӑрӗ ӑна ытларах та ытларах килӗшме пуҫларӗ. Аванти сӗтел хушшинче ӗҫлесе ларнӑ чух Нина ӑна аякран сӑнаса тӑма юрататчӗ. Ҫавӑн пек самантсенче унӑн упӑшкине пырса ыталас килетчӗ, анчах вӑл туйӑмӗсене ирӗке яма вӑтанатчӗ. «Юрататӑп», — тесе пӗрре те каласа курман вӑл ҫумри арҫынна. Ун вырӑнне тутлӑрах

çимĕç пĕçерсе савăнтаратчĕ. Аванти уйрăмах икерчĕ юрататчĕ. Упăшки вуласа е çырса ларнă хушăра Нина тĕпелте икерчĕ пĕçерме пуçлатчĕ те, лешĕ çатма шăршине туйсанах пĕтĕм ĕçне пăрахса кухньăна пырса ларатчĕ, хăй умне турилкке лартса парасса ача пек чăтăмсăррăн кĕтетчĕ...

Мăшăрĕн сăнарне куç умне кăларса сехечĕ-сехечĕпе шăпăрт ларма пултарать Нина.

— Атя, Нина, урама. Тем, пуç ыратма пуçларĕ, тухса уçăлса кĕрер пулĕ, — тет амăшĕ хĕрĕ нимĕнпе те интересленменнине курса.

Нина тăрса шăппăн тумланать. Урамра та шăппăнах çӳрет, амăшĕ мĕн те пулин ыйтсан та кĕскен кăна хуравлать. Ним тума аптăранипе Вера Терентьевна куç курманнисен обществине çитсе килчĕ.

— Йывăр инкек хыççăн пусса илнĕ салхулăха ĕç кăна сирсе яма пултарать, — терĕç Нинăн юлташĕсем. — Мĕн те пулин шутласа тупăпăр.

Яваплă ĕç Нина валли кĕçех тупăнчĕ. Суккăррисенчен пĕрин амăшне шалкăм çапнă иккен. Больницăра выртать пулсан та куллен ун çумĕнче ларакан çын кирлĕ. Пушă вăхăтра ачисем пăхаççĕ, анчах вĕсен кăштах канмалла та-çке.

— Пĕтĕм шанчăк сан çинче. Пулăшсам, тархасшăн, чирлĕ çын кравачĕ çумĕнче кунсерен вицтăват сехет те пулин ларсам, — ӳкĕтлет Нина патне ятарласах пынă çын. — Апат-çимĕç, мĕн кирлине, хамăр туянатпăр, эсĕ кĕнеке е журнал илсе пыр, сасăпа вуласа парăн. Çапла тусан хăвна та ун çумĕнче ларма кичемех пулмасть.

Кам та пулин хăйĕнчен пулăшу ыйтнă чух аюк теме хăнăхман Нина. Уйăх ытла, кăштах самайланнă чирлĕ çынна тăванĕсем киле илсе тухиччених, больницăна çӳрерĕ вăл. Кăмăлĕ те кăштах уçăлчĕ. Сывлăхĕ вара... Авантие пытарнă хыççăн çинĕ-çимен пурăнса вар-хырăмĕ чирлесе кайрĕ-ши ĕнтĕ, Нина ăшĕ пăтраннипе аптăрама пуçларĕ. Вăл хăсни-

не курса Вера Терентьевна хытах пăшăрханса ӳкрĕ.

— Вилнĕ çын хыççăн шăтăка сикейместĕн, хĕрĕм, чĕррисен пурăнас пулать. Аванти вилнĕренпе икĕ уйăх та çитрĕ, эс çаплах апат йĕркеллĕ çиейместĕн. Ыранах кай больницăна, унсăрăн хăвна ху пĕтеретĕн, — ятламаллипех ятларĕ вăл хĕрне.

— Каятăп, анне, анчах ыранах мар. Ыран Чăваш наци конгресĕн Мăн Канашĕн пухăвĕ пулать. Мана çавăнта чĕнчĕç. Чăвашсем таçти-таçти тăрăхран та пуçтарăнаççĕ, Чĕмпĕртен килекенсем те пур терĕç. Шутсăр кайса курас килет. — Нина сумкинчен темле хутсем туртса кăларчĕ. — Акă йыхрав хутне те, пуху программине те пачĕç.

— Ун пек пухусене çӳрекен марччĕ-çке эсĕ.

— Конгресс çыннисенчен пĕрне ăнсăртран Пичет çуртĕнче куртăм. Авантие палланăскер мана та пĕлет. Йыхрав хутне çавă пачĕ. Чăваш тумĕпех пыма каларĕ.

— Юрĕ апла. Тен, кăштах уçăлăн, кайса çӳрех, анчах сывлăхна тĕрĕслеттересех пулать.

Мăн Канаш ларăвĕ икĕ куна пычĕ. Пухăннисем наци политикин, чăваш шкулĕн, чăвашла тухса тăракан массăллă информаци хатĕрĕсен малашнехи аталанăвĕ пирки хĕрсе кайсах калаçрĕç, Чăваш Республикин Конституцийĕн проекчĕсене сӳтсе яврĕç, республика тулашĕнчи культура автономийĕсене пулăшса тумалли ĕçсене палăртрĕç. Çак ыйтусенчен хăшне-пĕрне конгресăн çитес съездĕнче пăхса тухмалла, саккун шайне çитерме республикăри Патшалăх Канашĕн сессийĕнче сӳтсе явмалла. «Авă епле чăрмавлă ĕç иккен ку. Юрать-ха, конгресра халăхшăн тăрăшакан, саккунсене лайăх пĕлекен пуçаруллă çынсем пур», — шухăшлать Нина, пурне те тимлĕн итлесе ларакanskер. Пухăва килсе уява та лекрĕ вăл. Малтанхи ĕç кунĕ вĕçленсен пурне те пысăк автобуса лартрĕç те театра илсе кайрĕç. Унта паян пысăк концерт пулать. Пурте юратакан «Уяв» ансамбль юрласа пĕтерсен Нина чăтса лараймарĕ,

залран тухрĕ те хыçалти алăкпа сцена çине хăпарчĕ.

— Ирĕк паратăр пулсан эпĕ Наци конгресĕн хăнисене Чĕмпĕр тăрăхĕнчи чăвашсен авалхи юррипе саламласшăн. Кунта паян Чĕмпĕртен килнĕ хăнасем те пур. Вĕсемшĕн те кăмăллă пулĕ, — терĕ вăл уява ертсе пыракана, хăйĕн хушамачĕпе ятне пĕлтерчĕ.

— Пĕрремĕш çаврине мана шăппăн кăна юрласа кăтартăр-ха, — ыйтрĕ лешĕ. Нина концерта ертсе пыраканпа калаçнă хушăра сцена çинчи çын сăмахне вĕçлесе зала анса кайрĕ.

Конферансье халăх умне тухрĕ.

— Хисеплĕ туссем, хаклă хăнасем, Сире саламлама чăваш халăх юррисене юратакан Нина Юманова тухать.

Чĕмпĕр тăрăхĕнчи чăвашсен капăр тумне тăхăннă Нина сцена çине тухрĕ.

— Çак çĕр çине аннесĕр поэт та, сухаçă та, инженер та — никам та çуралаймасть. Юратăр, упрăр аннĕр чĕлхине. Сире, чăвашлăхшăн тăрăшакансене, тав туса юрлатăп çак юрра, — терĕ те юрласа ячĕ:

— Кĕçнерникун çунă шур юр çине
Мулкачă таптанă йĕр юлнă.
Пăхăр-халĕ анне чĕрçи çине,
Ача чух таптанă йĕр юлнă.

Упа упаленет хăй çуришĕн,
Çурине шăтăкран кăларасшăн.
Атте-анне çунать хăй ачишĕн,
Ачине çын çине кăларасшăн.

Нина купăссăрах юрлать пулин те залри çынсем сывламасăр тенĕ пек итлеççĕ. Уява чăваш халăх пултарулăхне лайăх пĕлекен, хаклакан çынсем пуçтараннă. Анчах вĕсем те ку юрра халиччен ниçта та илтмен. Хальлĕхе кам та пулин юрлакан, анчах кĕçех çухалма пултаракан ытарайми юрăсем мĕн чухлĕ-ши Чĕмпĕр, Тĕмен, Сарă ту, Хĕрлĕ çыр, Ĕрĕнпур тăрăхĕсенче, ытти çĕрте? Чăвашсем таçта та са-

ланнă вĕт, çак тĕнчере вĕсем пурăнман вырăн та çук. Çухалма памалла мар вĕсен сăмах хальлĕн упранса юлнă пултарулăхне. Çыра-çыра илмелле. Чăвашсем пурăнакан вырăнсене юрăççене илсе каймалла. Çакă вĕсене хăйсене те пĕчĕк ансамбльсем йĕркелеме хавхалантарĕ. Аякра пурăнакан чăвашсем патне тăван чĕлхепе пичетленнĕ хаçат-журнал, кĕнекесем çитермелле, май килсен вырсарни шкулĕсем уçмалла. Акă мĕншĕн кирлĕ конгресс хастарĕсем сӳтсе явакан малашлăх çул-йĕрĕ.

Тăван халăх малашлăхĕшĕн çунакан маттур çынсене курса хавхаланнă Нина иккĕмĕш кунне те кайрĕ Мăн Канаш пухăвне. Хăна шучĕпе кăна пынă пулсан та вăл тухса калаçакансен сăмахĕсене чĕре варрине хурса йышăнать. Çакăнта мĕн калаçни йăлтах пурнăçа кĕрсен мĕн чухлĕ ырă улшăну пулмалла, тăван культура малалла çирĕппĕн ярса пусмалла.

Пуху программинче те çукчĕ — таçтан сиксе тухрĕ пĕр кăткăс ыйту. Чăваш Патшалăхĕн символĕсене çирĕплетнĕ пулсан республика ялавне мĕншĕн правительство çурчĕ çине çакмалла мар? Тухса калаçакансем хушшинче хĕрӳ тавлашу пуçланса кайрĕ. Пĕрисен шучĕпе, унта Раççей Федерацийĕн ялавĕ çеç çакăнса тăмалла, мĕншĕн тесен республика ун тытăмне кĕрет. Теприсен шучĕпе, правительство çурчĕ çийĕн республика ялавĕ вĕлкĕшмелле. Виççĕмĕшĕсем харăсах ик ялавне те çакма сĕнеççĕ. Çынсем йăлт хирĕçсе-тавлашса кайрĕç. Пĕрисем трибуна патнелле ăнтăлаççĕ, теприсем вырăнтанах кăшкăраççĕ.

— Ай-яй-яй! Килĕшӳсĕр капла вăрçăнни. Мĕн хирĕçмелли пур кунта? Ачи-пăчи çитĕнсе çитсен уйрăм кил-çурт çавăрса пурăнма пуçлать. Унта вĕсем хăйсем хуçа. Ашшĕ-амăшĕ вĕсем патне пырса хуçаланмасть вĕт. Ман шутпа, ку ыйтăва татса панă чух та çак шухăшах тĕпе хумалла. Республика ялавне ăçта çакассине хамăрăн татса памалла. Саккун йышăнса. Правительство çурчĕ çийĕн Раççей Федерацийĕн яла-

вёпе пёрле республика ялавӗ те вӗлкӗштӗр, — сасӑпах калать Нина та хӑй шухӑшне.

— Эсӗ куна ура ҫине тӑрсах кала-ха, — тет юнашар ларакан ҫын.

Нина ура ҫине тӑрса каласҫма пуҫларӗ ҫеҫ, малта ларакannisem: «Кунта тух, трибуна умне!» — тесе кӑшкӑрма тытӑнчӗҫ. Трибуна патне ҫитиччченех каясшӑн марччӗ-ха Нина, ӑна ҫавӑтсах илсе тухрӗҫ те микрофон тыттарчӗҫ. Хӑйӗн шухӑшне пурте илтмелле каланӑ хыҫҫӑн пӗр хӗрӳллӗ сӑвӑҫ сиксе тӑчӗ те: «Вӑт ку — чӑн-чӑн чӑваш хӗрарӑмӗ! Маттур. Ыйтӑва татса та пачӗ!» — тесе кӑшкӑрса ячӗ. Зал алӑ ҫупма пуҫларӗ.

Ҫапла майпа Нина Наци конгресӗн Мӑн Канашӗн ӗҫне хутшӑнса курчӗ. Тек шавлӑ пухусемпе канашлусене ҫӳремен. Пухусем тӑрӑх ҫӳрессипхӗрарӑм ӗҫӗ мар вӑл. Унӑн вара... Унӑн... Ах, сасӑпа калама та хӑрать вӑл хӑйӗн ӗмӗчӗ ҫинчен. «Йывӑр ҫын эсӗ. Ачу тӑхӑр эрнере ӗнтӗ. Юрать-ха, хальтерех килнӗ, унсӑрӑн кая юлма та пултараттӑн», — терӗ тухтӑр унӑн карточкине уҫкаласа пӑхнӑ хыҫҫӑн. Пӗрмаях больницӑсем тӑрӑх ҫӳреме тивнӗрен Юмановӑн карточки самаях хулӑн.

Тухтӑр мӗн каласшӑн пулнине Нина тӳрех ӑнланчӗ:

— Вилетӗп-и, чӗрӗ юлатӑп-и — хам варта тӗвӗленнӗ ачама ҫурататӑпах. Ку манӑн татӑклӑ сӑмах, — терӗ вӑл ҫирӗппӗн.

Амӑшӗ хирӗҫ пуласса Нина халех пӗлсе тӑрать. Анчах ку ӑна халӗ пачах та кулянтармасть. «Аванти, чӗрӗ эсӗ, вилмен. Ман чӗре айӗнче сан ачу ӳтленет. Унра Юманов юнӗ чупать», — шухӑшларӗ вӑл.

Килӗ еннелле Нина чӗре тулли савӑнӑҫпа утрӗ.

*2017*



# ПУРНĂÇ ПУРНЕ ТЕ АВАТЬ

## *Калав*

Кивĕ барак алăкĕ кĕç-вĕç йăтăнса анасла кисреннипе вăранса кайрăм. Такамсем ăна атă кĕлипе тапсах кĕмсĕртеттереççĕ.

— Уçăр часрах! Милици! Уçăр алăка!

«Çĕр хута мĕн сиксе тухнă-ши? Милицие мĕн кирлĕ кунта?» — канăçсăррăн шухăшлатăп эпĕ.

Пысăк пӳлĕмре Шура аппан пружиналлă кравачĕ чăкăртатса илчĕ, унтан çара ура сассисем илтĕнчĕç. Хваттер хуçи алăк уçма çенĕк пеккине кайрĕ. Лампа çутăлса каясса кĕтмерĕç милиционерсем, алăри хунарĕсемпе çутă пайăркисем ывăта-ывăта такама шырама пуçларĕç. Пĕри чаршава сирсе ман кравать вырнаçнă пĕчĕк пӳлĕме кĕрсе тăчĕ. Хунар пайăрки тӳрех пит çине ӳкрĕ.

— Тăр, гражданка! Кам эсĕ?

— Студентка, — тетĕп, хушаматăма, ятăма, ăçта вĕреннине калатăп.

— Гражданка, документ кăтартăр! — çавăнтах пӳлет мана тĕреклĕ милиционер.

Çурăм тăрăх сивĕ чупса иртет. Ют çын куçĕ умне аялти кĕпепе тухса курманскер аванмарланса утияла сиретĕп, сивĕпе тата хăранипе сиксе чĕтресе сумкăран паспортпа студент билечĕ туртса кăларатăп, вĕсене милиционера тăсса паратăп. Хунар пайăрки пĕрре паспорт çинчи сăнӳкерчĕк çине, тепре ман пит çине ӳкет. Паспорт çине... Ман çине... Студент билечĕ çине... Пит çине... Тин ĕненчĕ пулмалла милиционер хăйсем шыракан çын эпĕ маррине. Тепĕр пӳлĕмри милиционер та никама та тупаймарĕ. Тем калаçрĕç вĕсем Шура аппапа, пăлханнипе ним те ăнланса юлаймарăм. Милиционерсем мĕнле шавлăн килнĕ, çавăн пекех шавлăн тухса кайрĕç. Шура аппапа иксĕмĕрсĕр пуçне кунта никам та çук, пулман та. Кама шыраççĕ вĕсем?

— Ан хăра эс вĕсенчен, Аня, сана тивмĕç милиционерсем, — лăплантарать мана вĕсем хыççăн алăк хупса кĕнĕ Шура аппа. — Кунта манпа пĕрле Зина ятлă хĕр пурăнатчĕ. Колониреччĕ вăл. Ачине курма янă пулнă иккен ăна, вăл вара каялла таврăнман. Çавна шыраççĕ. — Шура аппа кăштăртатса кравачĕ еннелле утрĕ. — Зина ирĕкре иккен-ха апла... Кунта килсе курăнман, ăçта çӳрет-ши ĕнтĕ? — хăйпе хăй мăкăртатрĕ вăл.

— Шура аппа, колоние çав хĕр мĕншĕн лекнĕ?

— Хăй ухмаххипе. Хăй ухмаххипе хĕр пуçăн ача çуратрĕ. Çуратрăн пулсан пăх ачуна. Унăн вара ни сăпка сиктерес, ни кипке çăвас килмерĕ пулас, ачине пăрахнă та хăварнă урамри сак çине.

— Ой-ой! Мĕнле-ха капла, Шура аппа? Мĕнле хĕрхенмен вара вăл хăйĕн пепкине?

— Çамрăк-ха эс, Аня. Пурнăçра мĕн кăна пулмасть пуль. Нумай ярăнса çӳреймерĕ Зина, тытрĕç ăна. Тытрĕç те колоние ăсатрĕç, пепкине ача çуртне пачĕç.

— Мĕншĕн тӳрех ача çуртне? Зинăн тăванĕсем илме килĕшмерĕç-им?

— Çук унăн тăванĕсем. Тата... Тин çуралнă ачана мĕнпе тăрантаран? Ăна кăкăр сĕчĕ кирлĕ. Ача çуртĕнче вара выçă вилме памаççех.

— Милиционерсем Зинăна мĕншĕн сирĕн хваттерте шыраççĕ?

— Зинăпа амăшĕ хăмаран çапса тунă пӳртре пурăнатчĕç. Засыпушка текеннинче. Ун пек çуртсем Шупашкар çырмисенче тем чухлех. Амăшĕ ĕçкелетчĕ. Ӳсĕрскер электрокăмака çутнă та хăй çывăрса кайнă. Пушарта пĕтрĕ Зинăн амăшĕ. Юрать-ха, хĕрачи килте пулман, унсăрăн... — Шура аппа калама чарăнса ассăн сывласа илчĕ. — Манăн ывăл авланса урăх хваттере куçнăччĕ те, Зинăна хам пата илтĕм. Хĕрхентĕм тăлăха. Вара вăл кунтах пурăнса кайрĕ. Шел, йĕркеллĕ качча тухса мар, хĕр пуçăн ача çуратрĕ. Амăшĕ пек. Улми йывăççинчен аякка ӳкмест тени тĕрĕсех пуль çав... Атя выртса çывăр. Сан ир тăмалла.

Ăçта унта çывăрма? Манăн паçăрах ыйхă çĕтнĕччĕ, халĕ ак каллех тĕлĕнмелли тупăнчĕ. Кăкăр ачине урамри сак çине мĕнле пăрахса хăварăн-ха? Йĕпенсен е хырăмĕ выççан чарăнми йĕрет вĕт вăл. Йăмăкăмсене сахал мар пăхнă эпĕ, пĕлетĕп. Тата милиционер каланă «гражданка» сăмах хăлхара янăраса тăрать. Хамăн пурнăçра пĕрремĕш хут гражданка терĕç мана. Епле сиввĕн, юттăн илтĕнет иккен çак сăмах.

Зинăпа часах паллашрăм. Пĕр кунхине университетран таврăнтăм та... Пӳртре чĕлĕм тĕтĕмĕ явăнать, эрех-сăра шăрши, шăв-шав тăрать. Шура аппа патне «тус-юлташĕсем» пухăннă, уяв тăваççĕ. Хăнасенчен пĕрне кăна, кил хуçи хĕрарăмĕн ывăлне, паллатăп. Эп хваттере вырнаçнă кун амăшĕ патне килсе кайнăччĕ вăл. Çемйипе хулан урăх хĕрринче пурăнать. Тепĕр икĕ арçынĕ ĕçке ярăннăскерсем пулас, йăлт шыçăнса кайнă. Сарă çӳçлĕ, хăмăр куçлă хĕр мĕнле лекнĕ-ши кунта? Чиперскер, çамрăкскер мĕн тăвать çак ăçтиçуксем хушшинче?

— Аня, ирт кунталла, ан вăтан. Лар сĕтел хуш-

шине, — чĕнчĕ мана Шура аппа. Хăй самаях хĕрĕнкĕ. — Паян уяв пирĕн, пенси пачĕç.

— Тавтапуç. Мансăрах савăнăр. Эп кăштах канамха, — текелесе хама уйăрса панă пӳлĕме иртетĕп.

Ятарлă пӳлĕм теме те çук ăна. Кравать кăна лартнă унта. Пуç вĕçĕнче — чӳрече, ура вĕçĕнче — кăмака. Чӳрече патĕнчен кăмака патне çити хăма çапса уйрăм пӳлĕм тунă, алăк вырăнне чаршав карнă. Кăмака леш енче — тепĕр пӳлĕм. Пӳлĕмĕ-мĕнĕ... Ăна та хăмапа çапкаласа çеç картланă. Унта та кунта шăтăк-çурăк. Кушак мăрлатни те илтĕнмелле. Çав пӳлĕмри сĕтел çинче пĕчĕк плита ларать. Кухня пекки ку.

— Шура, ку тата кам? — ыйтать арçынсенчен пĕри ман пирки.

— Ялтан килнĕскер. Студентка. Хулара тăванĕсем çук та — шеллерĕм, хваттере ятăм, — ăнлантарать Шура аппа. — Эп çавнашкал ырă кăмăллă çын, пурне те хĕрхенетĕп, пулăшма тăрăшатăп.

«Кун пек «уявсем» час-часах пулаççĕ-ши Шура аппа патĕнче? Ну, тупрăм та иккен хам валли хваттер, — кăмăл пăсăлчĕ манăн. — Тӳрех кулянса ӳкес мар-ха. Ялан эрехпе иртĕхмеççĕ пуль ĕнтĕ».

Ĕçкĕçсем умĕпе иртсе çӳрес килмест пулин те кухньăна кĕрсе тухрăм. Унти сĕтел айĕнче пушаннă кĕленчесем самаях пухăннине асăрхасан чун тата ытларах салхуланчĕ. Çак шавлă ушкăн саланиччен апат пĕçерсе аппаланас килмерĕ. Столовăйне çӳреме укçа ирĕклĕ мар. Ĕçекенсем çинчен шухăшлас мар-ха тесе кĕнеке туртса кăлартăм, пурпĕрех вĕсен кашни сăмахĕ хăлхана кĕрет. Хаваслăн ихĕлтетсе кулакан хĕре «Зина» тесе кăна тăраççĕ. «Акă кам иккен колоние таврăнмасăр тарса çӳрекен ача амăшĕ», — тавçăрса илтĕм эпĕ. Тем пек вулас тетĕп, нимĕн те пуçа кĕмест.

Мĕн пайлаймарĕç-ши хăнасем, пĕр-пĕринпе хирĕçсе кайрĕç. Малтан киревсĕр сăмахсемпе перкелеше-

кенскерсем кĕҫех тытăҫса ӳкрĕҫ. Кĕмсĕр-кĕмсĕр туса пукансем йăвана-йăвана кайрĕҫ. Пӳртре кăшкăрашу-янрашу пуҫланчĕ.

Хăвăрт тăрса тумланатăп та сумкăна йăтса чаршава уҫатăп. Каймалла кунтан. Халех. Чим, эрехпе анранăскерсем Шура аппана, ватăскерне, тем туса хурĕҫ. Кухньăри ҫĕҫĕсене, пуртта пытармалла. Пуртти кунтах, кăмака умĕнчех, выртать. Ăҫта пытарасши? Кăмака сивĕ, апла, Шура аппа паян вут хутман. Пуртта кăмакана чиксе хуратăп та питлĕхне хупатăп. Кухньăри хачăсемпе ҫĕҫĕсене унти кивĕ диван айне тĕртсе кĕртетĕп. Ал айне ан лекчĕр. Халĕ тухса каймa та юрать. Ӳсĕрсем ҫапăҫнине пăхса тăма хал ҫук, чарма вăй ҫук. Хăранипе сиксех чĕтрекенскер урама тухатăп.

Ăҫта каяс, кам патне? Тин кăна ялтан килнĕскерĕн Шупашкарта пĕр паллакан ҫын та ҫук. Ку хваттере те аран-аран шыраса тупнăччĕ. Ура ăҫталла утнă, ҫавăнталла сĕнкĕлтететĕп. Хуллен. Васкамасăр. Мана ниҫта та кĕтмеҫҫĕ. Хам пурăнакан баракран кăшт анатарах ларакан мунча патне ҫитсе тухрăм. Каялла ҫаврăнса утатăп. Пуҫа пĕр ыйту пăралать: кун пек пурăнса малалла вĕренме пултараятăп-ши? Эп ăҫта пурăннине атте-анне пĕлес пулсан ыранах килсе киле илсе кайнă пулĕччĕ. Вĕренме кĕме заявлени панă чухне чухăн ҫемьесенчен килнисене общежитире вырăн паратпăр тесе савăнтарнăччĕ. Мана валли ҫитмерĕ вырăн. Вĕренме кĕнĕ чух нумай балл пухнине те, нумай ачаллă ҫемьерен килнине те шута илмерĕҫ. Вĕренме пăрахса ăҫта та пулин ĕҫе вырнаҫмалла марши? Унта, тен, общежитире вырăн парĕҫ. Укҫа ĕҫлесе илме пуҫлăп. Чим-ха, мĕнле пырса ҫапрĕ ку шухăш ман пуҫа? Вĕренес пулать. Атте епле савăнчĕ эпĕ вĕренме кĕрсен. Университетран пăрахса кайса кулянтарас килмест ăна. Чăтмалла. Хваттер хĕрарăмĕ ĕҫкĕ туса ĕрлешнине атте-аннене каласа пăшăрхантарас та мар.

Хваттертен мунча еннелле, унтан каялла пĕр сехете яхăнах хутлатăп ĕнтĕ. Хырăм çатăртатса илет. Кĕлеткене те сивĕ çапа пуçларĕ. Кĕрхи каççем ăшах мар çав. Кăмăл темле туртмасан та барак еннелле сĕнкĕлтететĕп. Ĕçкĕççем çĕрĕпе янрашса ларас пулсан та ман çавăнтах кĕрес пулать.

Ман телее, уяв туса савăнакансем саланнă. Шапшурă çӳçлĕ Шура аппа хăйĕн кравачĕ çинче юрă ĕнĕрлесе выртать:

— Может, завтра больничная койка
Успокоит навеки меня.

Ку юрра эпĕ халиччен илтмен. Ялти халăх уяврамĕнре чăвашла юрлать. Ман анне вара чăлха çыхнă е кĕнчеле арланă чухне юрăпа йăпанать. Атте пĕрмаях аякка ĕçлеме кайнăран-ши, аннен юррисем тунсăхлă, пурпĕрех илемлĕ.

Питĕ çиес килет. Апат пĕçермелле. Ыран ирпе çисе кайма та нимĕн те çук. Хывăнса кухня еннелле утатăп. Шалта такамсем калаçни илтĕнет. Нивушлĕ ӳсĕрсем кунта пухăнса ларнă? Алăка уçмасăрах хамăн пӳлĕме таврăнатăп. Ним тума та çук, паян выçăллах çывăрма тивет.

— Зина, ан хăра, сана кӳрентерме памастăп, — илтĕнет кухньăран арçын сасси. Ку — Шура аппан ывăлĕ. Тытăнчăклăрах калаçать вăл. — Ку вĕт сан кил те. Леш квартиранткăна ыранах кăларса ывăтатпăр.

Ку сăмахсене илтсен чĕре йăштах турĕ. Квартирантки — эпĕ. Мана ыранах кăларса яраççĕ. Хĕле хирĕç ăçта хваттер тупмалла-ши ĕнтĕ?

Кăшт хускалсанах çатăртатакан диван çинче çĕр каçрĕç кил хуçи ывăлĕпе Зина. Эпĕ те ирчченех куç хупаймарăм.

...Мана никам та хваттертен хăваласа кăларса ямарĕ. Зина вара каллех çухалчĕ. Çĕр çăтнă пек. Тек милиционерсем те килсе чăрмантармарĕç.

Хваттерте çакăн хыççăн лăпкă пурнăç пуласса

кăлăхах шантăм эпĕ. Барака «хăна» килмен кун сайра. Шура аппа тепĕр эрнерен хваттершĕн уйăх маларах тӳлесе хума ыйтрĕ. Апла тăк унăн пенси укçи пĕтнĕ.

Пĕрле вĕренекен тантăшсемпе çывăхрах паллашнă хыççăн мана урăх хваттере чĕнчĕç. «Пĕр кравать çинче иккĕн çывăрмалла пулать. Килĕшетĕн пулсан атя. Хваттер хуçи — тутар хĕрарăмĕ — кăмăллăскер», — терĕ хамăрпа пĕр курсра вĕренекен Надя. Килĕшрĕм. Пружинăллă кравать çинче иккĕн çывăрма кансĕр, паллах, çапах та урăм-сурăм янрашакансем патĕнче сехрене хăпартса пурăнни мар.

Иккĕмĕш курсра Надьăпа иксĕмĕре те общежитие вырнаçтарчĕç.

...Зинăна тепĕр хут çирĕм икĕ çул иртсен тĕл пултăм. Проект институчĕ хыçĕнчи çав вăрăм баракăн, кăшт анатарах вырнаçнă мунчан йĕрри-палли те юлманччĕ ĕнтĕ. Шура аппа патĕнчи ухтарупа çапăçу çав вырăнтан иртнĕ чух аса килкелетчĕ.

Икĕ ачипе шăкăл-шăкăл калаçса пыракан çӳллех мар хĕрарăма куртăм та пĕррехинче, куç умне тӳрех кивĕ барак тухса тăчĕ. Зина тĕслех ку хĕрарăм. Çавă мар-ши? Лешĕ тулĕк çав тери хаваслăскерччĕ. Сапсарă çӳçне хулпуççи таран ӳстерсе янăскер, хăмăр куçлăскер сăнĕпе питĕ чиперччĕ. Çамрăк чух йăрăсрах пулнăран-ши, çӳллĕрех те курăнатчĕ вăл. Çак хĕрарăм Зинах пулсан ăçта кайса кĕнĕ унăн хаваслăхĕ, чиперлĕхĕ? Вăл мар пуль... Хĕрарăм сĕт туянма ачисемпе пĕрлех килнĕ. Сĕт черечĕсем вă-ăрăм. Сĕтне тиесе киличчен халăх пасарти пек пухăнать. Çын пуçне пĕр литрлă пĕр пачка параççĕ. Сĕт нумайрах кирлĕ чухне çемьерен иккĕн-виççĕн черете тăратпăр. Пурне те тарăхтарать çак йĕркесĕрлĕх, çавăнпа та сĕт черечĕ çитиччен мĕн кăна илтместĕн пулĕ.

— Колхозсене, вĕсемпе пĕрле фермăсемпе комплекссене пĕтерсе хунăранпа пуçланса кайрĕ çак нуша! — ятлаçать пĕри. — Борис патша пире черете

пётеретпӗр тесе шантарчӗ. Хайне тăратасчӗ ҫакăн пек черете.

— Ун валли ятарлă ферма тытаҫҫӗ, — хуравлать тепри. — Шупашкарта ӗҫ ҫукран ман кӳршӗ Мускаври стройкăсене кайса ҫӳрет. Темле майпа Борис патшан дачине, гараж хăпартнă ҫӗре, лекнӗ. «Унта вӗсем сӗтпе ҫăвăнманни кăна. Ытлашши сӗте шеллемесӗрех тăкаҫҫӗ», — тесе каласа паратчӗ.

— Чикӗ леш енчи ҫӗршывсене ҫитейместпӗр ҫав эпир, — калаҫăва хутшăнать тепри. — Ман хӗр Испание качча тухрӗ. Вӗсем картон коробкăсене тултарнă сӗте ешчӗкӗпех туянаҫҫӗ те балконра тытаҫҫӗ. Ал айӗнче яланах сӗт пур.

— Йӳҫмест те-и? — ӗненесшӗн мар юнашар тăракансем.

— Виҫӗ-тăвата эрне таран упранать, — каласа тӗлӗнтерет леш хӗрарăм. Вăл хăйӗн хӗрӗ ют ҫӗршыв ҫыннине качча тухнипе мухтанни сисӗнет.

Зина сăнлă хӗрарăм калаҫăва хутшăнмарӗ, ачисемпе пӗрле виҫӗ литр сӗт илсе тухрӗ.

— Икерчӗ пӗҫерсе парăп сире паян, — терӗ вăл ывăлӗсене. — Ку сӗт ыран валли те ҫитет.

Тепӗр темиҫе кунтан каллех куртăм хайхи хӗрарăмпа ачисене. Унтан татах… Татах… Кашнинчех тӗттӗм пӗчӗк пӳлӗм, милиционер ман ҫине яр-р та яр-р ывăтакан хунар ҫути аса килет. Чăтаймарăм пӗррехинче, лавккара хам умрах черетре тăракан хӗрарăмпа калаҫу пуҫартăм. Хальхинче пӗчченех пынăччӗ вăл.

— Эсир Зина ятлă мар-и?

— Ҫапла. Ăҫтан пӗлетӗр?

— Шура аппа патӗнче пурăнаттăрччӗ. Проект институчӗ хыҫӗнчи баракра.

— Сенякова патӗнче-и? Шура аппа вилнӗренпе виҫӗ ҫул иртрӗ ӗнтӗ.

— Тăпри ҫăмăл пултăр.

— Маншăн тăван пекехчӗ вăл.

— Ывăлĕ ăçта? Сывах-и?

— Малтанах хваттер пурччĕ унăн. Çавăнтах пурăнать. Чимĕр-ха, эсир мана пĕлетĕр пулсан мĕншĕн эпĕ хăвăра палламастăп?

— Аня ятлă эпĕ. Шупашкара вĕренме килсен пĕр вăхăт Шура аппа патĕнче хваттерте пурăнтăм.

Зинăна хам ăçтан пĕлнине кĕскен каласа паратăп.

— Авă мĕн… Эпĕ сире астумастăп.

Ăна пула пăтăрмаха лексе сехрене хăпартман пулсан эпĕ хам та пĕрре çеç курнă çынна асра хăварас çукчĕ.

— Çавăн чухне нумайччен шырарĕç-и сире?

— Çук. Çĕнĕ Шупашкарта тытрĕç, çулталăк хушса пачĕç.

— Сире икĕ ачапа куратăп час-часах. Çемьеллĕ пулас.

— Иккĕ çеç мар, пилĕк ача амăшĕ эпĕ. Çемьеллĕ. Халĕ манăн пурте йĕркеллĕ. Хама телейллĕ тесе калама та пултаратăп. Упăшка слесарь пулса ĕçлет. Хам картиш шăлса тирпейлетĕп. Самана саланса кайиччен çак ĕçренех хваттер илсе ĕлкĕртĕм. Икĕ пӳлĕмлине. Пысăках мар пахча та пур. Çав тăрантарать те пире. Пахча çимĕç йăлтах хамăр ӳстеретпĕр, улмаçырла та пасартан илместпĕр.

— Пилĕк ачапа икĕ пӳлĕмлĕ хваттерте тăвăртарах пуль ĕнтĕ.

— Пирĕнпе кĕçĕннисем иккĕшĕ çеç пурăнаççĕ. Ыттисем ӳссе çитĕннĕ.

— Каçарăр та… Лешĕ, ун чух пăрахса хăварнă ачăр, ăçтине пĕлетĕр-и?

— Аслă ывăл-и? Вăл тахçанах çемьеллĕ. Хĕр те качча кайрĕ. Вăталăх ывăл урăх хулара вĕренет, общежитире пурăнать.

— Качча тухсан аслă ывăлна йывăр килмерĕ-и? Хăйĕнчен çуралман ачана пăхса ӳстерме килĕшекен арçын сахал. Е вăл ача çуртĕнчех ӳсрĕ-и?

— Çук, хамăрпа пĕрлех пурăннă. Ман упăшка То-

ля ача çуртӗнче ӳснӗ. Ашшӗ-амӑшӗ пулнӑ-ха унӑн, анчах ӗçкӗпе иртӗхнӗ. Çавӑншӑн вӗсенчен ашшӗ-амӑшӗн прависене туртса илнӗ, ывӑлне ача çуртне ӑсатнӑ. Ӳссе çитерехпе шыраттарнӑ вӑл ашшӗпе амӑшне, тупса вӗсем патне тухса кайнӑ. Лешсем, Чулхула облаçӗнче кӗтӳ пӑхаканскерсем, ывӑлне каникул тӑршшӗпех ӗнесем хыççӑн уттарнӑ. «Хӑйсем ӗçетчӗç те кайса выртатчӗç. Юрать-ха, кӗтӳççене ӗнесен хуçисем черетпе тӑрантараççӗ. Унсӑрӑн выççах вилмелле. Интерната çӗтӗлсе пӗтнӗ лӑстӑр-лӑстӑр çи-пуçпа таврӑнтӑм», — тесе каласа панӑччӗ Толя. Ун хыççӑн тек ашшӗ-амӑшне шыраса çӳремен вӑл. Ачалӑхне аса илме те юратмасть. Çемье ӑшшисӗр пурнӑçа питӗ аван пӗлет, çавӑнпа та манӑн аслӑ ывӑла тӑван мар ача вырӑнне хумарӗ, пӗрлешсенех хӑй çине çыртарчӗ. Хальхи ӑспа пулсан урӑхларах пурӑнмалла пулнӑ та çав... Çамрӑк пуç ухмах çав. Турра шӗкӗр, халӗ ман пурнӑç йӗркеленсе кайнӑ.

Калаçа-калаçа черет çитни те сисӗнмерӗ. Сӗт илсе тухрӑмӑр. Зинӑн пӗр еннелле каймалла, манӑн — тепӗр еннелле. Утнӑ май каялла çаврӑна-çаврӑна пӑхатӑп. Зина кивӗ пальтопа, çӑмран çыхнӑ калпакӗ те кивӗскер кӑна. Чаплӑ пурӑнманни пӗрре пӑхсах курӑнать. Çапах та пурнӑçне ӳпкелесе калаçмарӗ вӑл. Çамрӑклах тӗрмере ларса курнӑскер хӗрарӑм телейӗ пуянлӑхра, савӑшуллӑ ӗçкӗ-çикӗре пулманнине аван ӑнланнӑ пулас. Амӑшӗн сӗчӗпе ӑс кӗменнине качака сӗчӗпе ӑс кӗрес çук тени пур чухне те тӳрре килмест иккен. Пурнӑç пурне те авать, çамрӑк чухне тунӑ йӑнӑш пӗрне хуçать, тепринне — ӑс-тӑнне уçать.

*1994*

## ТУПМАЛЛИ

МĂШĂР ÇУНАТ. *Повесть* . . . . . . . . 3

ПУРНĂÇ ПУРНЕ ТЕ АВАТЬ. *Калав* . . . 182

*Литературно-художественное издание*

Для детей старшего школьного возраста

**Матвеева (Антонова) Галина Алексеевна**

**МĂШĂР ÇУНАТ**

**ДВА НАДЕЖНЫХ КРЫЛА**

**Повесть, рассказ**

*На чувашском языке*

Редактор *О.М. Иванова*
Художник *Е.В. Енькка*
Художественный редактор *И.Е. Калентьева*
Технический редактор *Л.К. Егорова*
Корректоры *Л.Д. Васильева, О.П. Рубцова, Э.В. Шельтямова*
Компьютерная верстка *Е.Ю. Ермолаевой, М.В. Филипповой*

16+ Информаци продукцийĕн палли (436 № ФЗ. 29.12.2010).
Знак информационной продукции согласно ФЗ от 29.12.2010 г. № 436-ФЗ.

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—95 3003. Подписано к печати 25.01.19. Формат 84×108 $^1/_{32}$. Бумага офсетная. Гарнитура Школьная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 10,08. Тираж 1000 экз. Заказ № К-5784. Изд. № 5.

АО «Чувашское книжное издательство»,
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.
www.chuvbook.ru, e-mail: chuvbook@mail.ru, chuvbook@cap.ru
Тел./факс (8352) 28-85-51.
Отпечатано в АО «ИПК «Чувашия»,
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.